**Ю.М. Виноградов**

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

**10–11-мӗш классем валли**

*Чӑваш Республикин*
*Вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министерстви шкулсенче усӑ курма сӗннӗ*

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2022

## Ятарлă паллăсем

➤ – теори материалĕ;

▲– асра тытмалли правилăсем;

⦿ – çĕнĕ темăна ăнланма харпăр хăй тĕллĕн тумалли ĕç;

⭘ – вĕреннине аса илмелли ĕç;

🕮 – хуравлама йывăр ыйту е кăткăс ĕç;

◆ – çыхăнуллă пуплеве аталантармалли, творчествăллă ĕç;

✪ – хутшăну хăнăхăвĕсене аталантармалли ĕç;

?! – шухăшлатпăр, ăслатпăр, ĕнентеретпĕр;

✪✪ – мăшăрпа тумалли ĕç;

✪✪✪ – ушкăнпа тумалли ĕç;

– Интернетпа усă курса тумалли ĕç;

* – хăнăхтару çумне хушса панă ĕç;

тивлет[1] – фонетика тишкерĕвĕ тумалли сăмах;

тавçăрулăх[2] – пулăвне тата тытăмне тишкермелли сăмах.

**Виноградов Ю.М.** Чăваш чĕлхи: 10-11-мĕш классем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2022 – _____ с.

**10-МĔШ КЛАСС**

## Чĕлхе çинчен пĕтĕмĕшлĕн калани. Чăваш чĕлхи расна шайра тăракан хатĕрсен системи пулни

### 1. Чĕлхе тата общество

- Эсир шкулта вĕренсе чăваш чĕлхи çинчен, ун фонетики, лексики, грамматика, пуплев тĕсĕсем, текст тытăмĕ çинчен нумай пĕлетĕр ĕнтĕ. Çакă, паллах, чĕлхемĕрте мĕн те пулин урăххи тупăнмасть тенине пĕлтермест-ха. Чĕлхене ĕмĕр тăршшĕпех вĕренме, тĕпчеме пулать, çапах пĕтĕм вăрттăнлăхне тупса пĕтерме йывăр. Чĕлхе чăнлăха ăнланса илме май паракан универсал система шутланать, çавнашкал ытти системăсене алла илмелли хатĕр пулса тăрать.

Чĕлхе вăл – хутшăну хатĕрĕ. Хутшăнусăр вара ăслăлăха, литературăпа культурăна, уйрăм çыннăн, обществăн пурнăçне аталантарма çук. Чĕлхе çыннăн шухăшне, кăмăл-туйăмне ытти çын патне çитерекен чĕрĕ пуплеве тĕрĕс йĕркелеме май парать. Пуплев тексчĕсем ăçта та пулин çырăнса историре юлаççĕ, унчченхи опытпа паллаштарса мĕн те пулин çĕннине тупма пулăшаççĕ. Чăвашла калаçакан çын чăвашлах шухăшлать. Пуплевĕ тĕрĕс пултăр тесен кирек мĕнле професси çынни те чăваш чĕлхин мĕн пур енне (лексикине, фонетикине, сăмах тытăмĕпе пулăвне, морфологийĕпе синтаксисне) лайăх пĕлме тивĕç. Чĕлхе тытăмне, пуплев культурине лайăх чухлакан çын ытти çынсене аван ăнланать, хăй те уçăмлă ăнлантарать, чăвашла калаçса тата çырса мĕн ватăличченех çĕнĕ информаци, пĕлӳ илсе пурăнать, хăй шухăшне халăха пĕлтерме пултарать. Тĕрĕс те илемлĕ калаçма тата çырма пĕлни малашне профессире ăнăçу тума, çынсене хисеплеттерме питĕ кирлĕ пулĕ.

Чĕлхене пĕлекен çын информаци хатĕрĕсемпе лайăх усă курать, ку е вăл текста лару-тăру мĕнлине кура çăмăлах улăштарма

пултарать. Текст мĕнле тытăмлă пулмаллине чухлакансем ку е вăл йăнăша вăхăтра асăрхаççĕ, тӳрлетӳ тутараççĕ е хăйсем тӳрлетеççĕ, çынсене, халăха тĕрĕс информаципе тивĕçтереççĕ.

**2. Чĕлхе тата культура. Халăхсен хутшăнăвĕ чĕлхере палăрни**

➤ Çын пĕлӳлĕхе хутшăнни чĕлхере çирĕпленет. Çавна май чĕлхе çыннăн обществăра пурăннă опытне, халăхăн историпе культура пĕлĕвĕпе хăнăхăвне пухса упракан хатĕр пулса тăрать.

Çынсен хутшăнăвне асра тытма май паракан хăватпа пуянскер, чĕлхе халăх пурнăçĕпе культурин хăйне майлă тĕкĕрĕ пулса тăрать. Чĕлхере çын пурăнакан чăнлăх кăна мар, халăхăн йăли-йĕрки, ăс-хакăлпа кăмăл-сипет пуянлăхĕ, тĕнчене епле курни (менталитечĕ) палăрать. Çавна пула чĕлхе хальхи ăрăва унчченхи ăрусемпе çыхăнтарать. Авалхи культура, ку е вăл халăх ытти халăхпа епле хутшăнса паяна çити епле пурăнни чĕлхе пулăшнипе халăх сăмахлăхĕнче, илемлĕ тата ăслăлăх литературинче сыхланса юлаççĕ. Халăх историйĕ, ытти халăхпа хутшăнса пурăнни чĕлхене хăйне те витĕм кӳрет, уйрăмах ун лексикинче палăрать. Çав вăхăтрах пирĕн чĕлхен йĕрĕсем урăх чĕлхесенче пурри те паллă. Кирек епле чĕлхе те ку е вăл наци культури пекех хăйне майлă, мĕншĕн тесен чĕлхе çын епле шухăшланипе, чăнлăха епле ăнланнипе тачă çыхăннă.

**1. Текста вулăр та унăн темине, тĕп шухăшне калăр.**

Чĕлхе – халăх пурнăçĕ, халăх шухăшĕ, халăх философийĕ. Эпир хамăр чĕлхене мĕн чул аван пĕлетпĕр, çавăн чухлĕ пурнăçне те аван пĕлетпĕр. *(Тимухха Хĕветĕрĕ.)*

**2. Халăх юррисене танлаштарăр. Чăвашсем пурнăç çинчен мĕн шухăшланă? Икĕ юрра мĕн çыхăнтарать?**

**Атăл урлă каçмасем хывнă**

Атăл урлă каçмасем ай хывнă иккен –
Эпир каçмасăрах та юлнă иккен, ай юлнă иккен,

Эпир каҫмасӑрах та юлнӑ иккен.
Пирӗн ҫамрӑк ӗмӗрсем иртнӗ иккен,
Эпир сисмесӗрех те юлнӑ иккен, ай юлнӑ иккен,
Эпир сисмесӗрех те юлнӑ иккен.

**Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать**

Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать те,
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать.
Шыв юхать те,
Шыв юхать те, чул юлать.
Шыв юхать те,
Шыв юхать те, чул юлать.
Шухӑшлӑр-ха, тӑвансем те,
Шухӑшлӑр-ха, тӑвансем:
Ӗмӗр иртет,
Ӗмӗр иртет – кун юлать.
Ӗмӗр иртет,
Ӗмӗр иртет – кун юлать.

*** *Ӗмӗр иртет – кун юлать* тенине мӗнле ӑнланмалла?**

**3. Паллӑ чӑваш ученӑйӗ чӑвашсен чи авалхи йӑхӗсем тата хальхи чӑвашсем урӑх халӑхсемпе епле хутшӑнни ҫинчен мӗн ҫырнине вулӑр. Автор хутшӑнакан халӑхсен чӗлхисенчен хӑшне сӑмах параканни тесе палӑртать? Сӑмахсем пирӗн чӗлхене хӑш-хӑш чӗлхерен кӗнӗ?**

Ҫынпа ҫын пӗрлешсен ҫӗнӗ ҫемье ҫуралнӑ пекех, халӑхпа халӑх пӗрлешсен те тепӗр чух ҫӗнӗ халӑх ҫуралать. Историксем каланӑ тӑрӑх, чӑвашсем те пӗр 500–600 ҫул каялла кӑнтӑртан хӑпарнӑ пӑлхарсемпе ку тӑрӑхра пурӑнакан мари (ҫармӑс) йӑхӗсем пӗрлешнипе пулса кайнӑ.

Вырӑссем те ҫавнашкалах. Вӗсен тахҫан авал ҫӗрӗ те хальхи пек аслӑ, йышӗ те хальхи пек пысӑк пулман. Вырӑссем тӗрлӗ халӑха хӑйсен йышне йышӑннӑ. Ҫавна пула халӑх йышӗ ӳссе, ҫӗрӗ сарӑлса пынӑ. Паянхи кун та чылай халӑх вырӑсланса пырать.

Чӑвашсен сӗм авалхи аслашшӗсем тӗрӗксем пулнӑ. Вӗсем Байкал кӳлли тӑрӑхӗнче пурӑннӑ. Ку тӗрӗксене тӗпчевҫӗсем кӗскен прототюрксем теҫҫӗ. Прототюрксем пирӗн эрӑчченех икӗ пысӑк ушкӑна уйрӑлса кайнӑ – огузсем тата огурсем.

*Огуз, огур* – пӗр тымарлӑ сӑмахсемех. Вӑкӑр тенине пӗлтереҫҫӗ. Ҫапла вара, авалхи тӗрӗксен ӑру тотемӗ вӑкӑр пулни курӑнать. (Авалхи йӑхсем хӑйсене пӗр-пӗр чӗр чунтан пулса кайнӑ тесе шутланӑ. Ҫав чӗр чуна ӑслӑлӑхра тотем теҫҫӗ.)

Огузсемпе огурсем пӗри теприне чӗлхе тӑрӑх та уйӑрса илнӗ пулмалла. Огузсем [з, с] тата [ш]-па, огурсем [р]-па тата [л]-па калаҫнӑ пулас. Ҫак паллӑсене тӗпчевҫӗсем пӗрисене **зетацизм, сегматизм**, теприсене **ротацизм, ламбдаизм** теҫҫӗ. Чӑваш чӗлхи ытти тӗрӗк чӗлхисенчен паян кун та ротацизм, ламбдаизм паллисемпе уйрӑлса тӑрать.

Атӑл Пӑлхар тапхӑрӗнче те (IX – XIII ӗмӗрӗсенче) чӑвашсен ватӑ аслашшӗсем (пӑлхарсем) тухӑҫ халӑхӗсемпе – арабсемпе, перссемпе хутшӑнма пӑрахман. Вӗсенчен ҫав тапхӑрта чӑваш чӗлхине чылай сӑмах кӗрсе юлнӑ: *авал, айван, айӑп, ахах, вӑхӑт, ӗмӗр, капӑр, лайӑх, масар, меслет, намӑс, сунтал, телей, тӗнче, халӑх* – кусем араб чӗлхинчен; *асамат, ансат, ӗмӗт, кӗсье, йӗтӗн, кахал, кашӑк, начар, нарӑс, сурпан, хаяр, чаршав* – кусем перс чӗлхинчен.

Пӑлхар чӑвашсем Атӑл ҫинчи Пӑлхар вӑхӑтӗнчех вырӑссемпе те хутшӑнӑва кӗнӗ. Ҫав вӑхӑтра чӑваш чӗлхине вырӑссенчен *кӑмпа, кӗнчеле, ыраш* сӑмахсем кӗрсе юлнӑ.

Чăваш чĕлхинче мари сăмахĕсм те пур: *шалча, шăчă, пӳрт, йĕлтĕр, тенкел, пукан, чĕкеç, шаланкă* т. ыт. те. Вĕсене чăвашсем хăйсен хальхи вырăнне килсе вырнаçсан йышăннă.

XVI ĕмĕртен пуçласа чăвашсем ытларах чух вырăссемпе хутшăнма тытăннă. Çавăнтанпа пирĕн чĕлхене вырăс сăмахĕсем кĕме тытăнаççĕ. Вĕсем малтанласа пурте калаçу урлă кĕрсе пыраççĕ. Çавна май вырăс сăмахĕсене чăваш пуплевĕ хамăрăнни пек улăштарса йышăнать (*кĕрепле, сахăр, катка пичке, мачча, пĕрене, витре* т. ыт. те). Каярахпа çыру урлă кĕрекеннисем вырăсла хальлĕнех юлаççĕ (*завод, промышленность, радио, музыка, грамматика, физика* т. ыт. те), шучĕпе çулсерен ӳссе пыраççĕ. Шучĕ ӳссех пынипе çĕнĕ сăмахсене пуплев хăйĕн яланхи кĕввине лартса çитерейместь. Ку вара чăвашла пуплевĕн сăн-сăпатне чылаях улăштарать. Чĕлхере сăмахсем икĕ тĕрлĕ пулса тăраççĕ: пĕрисем хамăрăннисем евĕрлĕ, теприсем вырăссенни евĕрлĕ. *(И. Андреев.)*

**4. Текста вуласа тухăр. Автор мĕн çинчен калать?**

...Марийский язык дольше всех других находился во взаимодействии с чувашским. Последствия этого процесса весьма ощутимы, поэтому большинство чувашских корней в марийском языке имеют обилие производных форм. В нашем словаре даны те слова, морфологический облик которых прямо указывает на чувашские словообразовательные или словоизменительные элементы: чув. *танлаштар* – мар. *тангастараш;...*чув. *тантăш* – мар. *танаш...*

В словаре чувашских заимствований в марийском языке мы приводим около 1352 слов... *(М. Федотов.)*

**5. *Энтриел* тата *Энтрияль* ял ячĕсем мĕн енчен пĕрешкел, мĕн енчен уйрăм? Этимологи словарĕсенчен илнĕ икĕ статьяна вуласа**

**тухăр та Мари Республикин ятĕнче *(Мари Эл)* чăваш сăмахĕ пуррине ĕнентерĕр.**

**1**

**ЯЛ**I уст. «народ», «общество»; ял кулать «народ осуждает чей-л. поступок»; *ял кулли пултăм* «я стал посмешищем народа»; др. тюрк. *ел, ил* «народ», «племенной союз»; кирг. *ел* «племенной союз». «племя», «род», «страна», «государство»; казах. *ел* «население», «народ», «страна»; азерб., тур. «народ», «племя», «страна»; турк. *ил* «народ», «родина». *(В. Егоров.)*

*** Халăха тата вăл пурăнакан вырăна *ял* сăмах тата ун тӳр килĕвĕсем пек пĕлтерес пахалăх («народ», «общество», «племенной союз»; «страна», «государство») чăваш чĕлхишĕн кăтартуллă пулнине географи объечĕсен ячĕсем çине таянса ĕнентерĕр.**

**2**

**ял** > мар. **ял** деревня, село; мар. **ел** страна < тат. **ил**; др.-тюрк. Мал, 379 **ил** государство; народ; племенной союз; алт., тел., к.-кирг. Радл I, 333 **аил** юрта (алт.); деревня; **аул** (тел., к.-кирг.) = **ауыл, аjыл, аул, ал, ыал**. *(М. Федотов.)*

Кĕскетӳсем: *др.-тюрк* – авалхи тĕрĕк чĕлхи; Мал. – Малов С.В; *мар.* – мари чĕлхи; *к.-кир* – хура кăркăс чĕлхи; Радл – Радлов В.В.; *тат.* – тутар чĕлхи; *тел.* – алтай чĕлхин телеут диалекчĕ; *як* – якут чĕлхи; > – «куçнă»; < – «кĕнĕ».

**6. Вырăс чĕлхин этимологи словарĕсенче *жемчуг, овраг, серьга, хозяин* сăмахсен статйисене тупăр. Ку сăмахсене вырăссем урăх чĕлхесенчен йышăннипе йышăнманни паллă-и?**

**3. Хальхи чăваш чĕлхинче пулса иртекен пулăмсем. Чăваш чĕлхипе пуплевĕн тасалăхне сыхласси**

➤ Тĕпчевçĕсем ĕнентернĕ тăрăх, нумай чĕлхе пĕлни (нумай чĕлхелĕх) – усăллă пулăм: ытти чĕлхене вĕренме пулăшать, халăхсем

тĕнчене мĕнле курнине ăнланма май парать, çавна пула ăс-хакăла аталантарать.

Çав вăхăтрах нумай чĕлхелĕхĕн япăх енĕсем те пур, мĕншĕн тесен пĕр чĕлхепе усă курнă чухне тепĕр чĕлхе витĕмĕпе чĕрĕ пуплевре е çырура йăнăшсем пулаççĕ. Вĕсем, тĕпрен илсен, пуплев тата грамматика йăнăшĕсем. Пуплев йăнăшĕсем вырăс сăмахĕн пĕлтерĕшне палăртма чăвашла сăмах тупайманипе пулаççĕ. Тĕслĕхрен, пичетре тата калаçура вырăссен *растеряться* глаголĕн пĕлтерĕшĕпе час-часах *çухалса кай* сăмах майлашăвĕпе усă кураççĕ, çынна пытарнă чухне вырăссен *прощай* сăмахне тивĕçтеретпĕр пуль тесе *сыв пул* теççĕ. Вырăссен «çухалса пĕт, çĕтсе пĕт» пĕлтерĕшлĕ *растеряться* галагол та, «аптраса ӳк» пĕлтерĕшли те пур. Çавăнпа чăвашла каланă чухне *аптраса ӳк, ним ăнланми (чухлайми) пул* йышши сăмах майлашăвĕсем вырăнлă. Вилнĕ çынна чăвашсем *юлашки çула ăсатаççĕ, Тăпру çăмăл пултăр!* теççĕ.

Грамматика йăнăшĕсем вырăс грамматикин витĕмĕпе пулаççĕ. Акă пичетре, радиопа телевиденире час-часах *Эпĕ тăван шкулта пулса иртекен тĕрлĕ мероприятисене хутшăнатăп* йышши пуплев сыпăкĕсене курма е илтме пулать. Тĕрĕссипе чăвашла *Эпĕ тăван шкулта пулса иртекен тĕрлĕ мероприятие хутшăнатăп* темелле. Вырăссем виçене пĕлтерекен *много, мало, пять, двадцать восемь* йышши сăмахсем хыççăн тăракан япала ячĕсене нумайлă хисепре калаççĕ: *много книг, мало деревьев, пять тетрадей, двадцать восемь панфиловцев.* Пирĕн – пĕрреллĕ хисеп формипе усă курмалла: *нумай кĕнеке, сахал йывăç, пилĕк тетрадь, çирĕм сакăр панфиловец.*

Пирĕн тăван чĕлхере – авалхи чăвашсем талăка икĕ пая пайласа *Ыр каç пултăр! Ыр кун пултăр!* тесе ыр сунни сыхланса юлнă. Çакна пĕлменсем вырăссем хыççăн кайса талăкăн виççĕмĕш

пайне те тупаççĕ: *Ырă ир пултăр!* Сунăм пĕлтерĕшнĕ кăтартмасăр *Ыр каç! Ыр кун! Ыр ир!* текенсем тата та нумай. Сунăма чăвашла хушу наклоненийĕнчи глагол кăна кăтартать. Çавăнпа *Ыр каç пултăр! Ыр кун пултăр!* темелле. Ыр суну предложенийĕнче *ир* сăмах пулмалла мар.

Чăваш пичечĕ хамăр чĕлхере тивĕçлĕ сăмах пур çинче вырăс сăмахĕсемпе усă курассинчен хăтăлма тăрăшать, анчах халь кĕрекен сăмахсемпе ĕçлемест – словарьсенче çирĕпленнĕ сăмахсене çĕнетме пăхать. Çитменнине, çĕнĕ сăмах сĕнекенсем сăмах пулăвĕн йĕркине пăсаççĕ. Тĕслĕхрен, *библиотека* сăмах вырăнне кĕртнĕ *вулавăш* сăмах чăваш чĕлхин тытăмне пăхăнмасть, мĕншĕн тесен пирĕн чĕлхере ***-ăш(-ĕш)*** аффикс паллă ячĕпе глагол тĕпĕсем çумне кăна хушăнма пултарать: *тарăнăш, сарлакăш, анлăш, çивĕчĕш; тупăш, кулăш, пĕлĕш. Вĕрен* глагол çине таянса «урок» пĕлтерĕшпе сĕнннĕ *вĕренев* сăмах та грамматикăна хирĕçлет. Пулăвĕ енчен тĕрĕс сăмах – *вĕренӳ* сăмах, анчах пĕлтерĕшĕ унăн пачах урăхла.

Хăй вăхăтĕнче, ученăйсем чăваш чĕлхине тĕпчесе çитерейменнипе пулас, журналистсем пичете *канашлу* сăмаха кĕртсе хăварнă.

Вырăс чĕлхинчен кĕрекен сăмахсен йышĕ малашне ан ӳстĕр тесен – тӳрех чăвашлатма тăрăшас пулать.

Пуплев тасалăхĕпе тĕрĕслĕхĕ çинчен сăмах ку е вăл темăна вĕреннĕ май малашне тата та пулĕ.

**7. Теори текстне вуласа тухнă хыççăн эсир тĕрĕс калаçас тата çырас пирки мĕн шухăшлатăр? Пуплев йăнăшĕ мĕншĕн пулать? Грамматика йăнăшĕсен сăлтавĕ мĕн? Йăнăшран хăтăлма мĕн пулăшать? Тăван чĕлхен тытăмне лайăх курса тăма пирĕн пысăк тивĕç пуррине ĕнентерĕр.**

**8. Вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшне чăвашла мĕнле сăмахсемпе палăртас пирки шухăшлăр та предложенисене чăвашла куçарăр. Кам епле куçарнине ушкăнпа тишкерĕр. Хăш куçару тĕрĕс пулнипе пулманнине палăртăр.**

1. Учащиеся все задания по русскому языку **выполнили** хорошо. 2. В воскресенье руководитель нашего класса **организует** культпоход в Чебоксары. **Организатором** культпохода является учитель чувашского языка и литературы. 3. В 2019 году в Чувашской Республике отметили 550-летие со дня **основания** столицы республики города Чебоксары. 4. Текст **разделите** на 3 части. Ребята **разделились** на две группы и начали играть в хоккей. 5. Море **волнуется.** Всякий артист на сцене **волнуется.** 6. Молодого хоккеиста приглашают **играть** в команде мастеров. На скрипке **играет** учитель сельской школы Вячеслав Салаев.

**9. Вырăс сăмахĕ вырăнне чăваш сăмахĕ тума пулăшăр. Эсир сĕннĕ сăмах чăн чăвашла пултăр. Сĕннĕ вариантпа килĕшетĕр пулсан, ăна та çырăр.**

| Вырăсла | Чăвашлатма çын сĕннĕ вариант | Чăвашлатма эсир сĕннĕ вариант |
|---|---|---|
| лагерь | уйлăх | |
| ластик | хураткăç | |
| линейка | тӳрешке | |
| мороженое | сивлек | |
| ручка | калем | |
| тетрадь | типтер | |
| урок | вĕренев | |
| футболка | кĕпешке | |

*(А. Белов.)*

**10. Чăваш чĕлхинче ыйтăва палăртакан мелсем предложенин хăш пайĕнче вырнаçаççĕ? Тĕслĕхсенче панă вариантсенчен тĕрĕссисене суйласа илĕр.**

1. Ку хайлава калав е юмах темелле? – Ку хайлава калав темелле-и, юмах темелле-и? Ку хайлав калав-и, юмах-и? Ку хайлав мĕн: калав-и, юмах-и? 2. Юрий Васильевичра ахальтен-и чăвашлăх туртăмĕ çирĕп упранать? – Юрий Васильевичра чăвашлăх туртăмĕ ахальтен çирĕп упранать-им?

**11. Чăваш чĕлхинче çуклăха палăртакан мелсем предложенин хăш пайĕнче вырнаçаççĕ? Тĕслĕхсенче панă вариантсенчен тĕрĕссисене суйласа илĕр.**

1. Мăшăрăма сан çинчен эпĕ сахал мар каласа парсаттăм. – Мăшăрăма сан çинчен эпĕ сахал каласа памарăм. Мăшăрăма сан çинчен эпĕ нумай (чылай, пайтах, чылай хут та) каласа патăм. 2. Мĕнле тĕрĕс мар пултăр ĕнтĕ? – Мĕнле йăнăш пултăр ĕнтĕ? Мĕнле тĕрĕс ан пултăр ĕнтĕ? 3. Маншăн тунсăхлатăн-и? Çук пуль. – Маншăн тунсăхламастăн пуль. Çук, маншăн тунсăхламастăн пуль. 4. Фронтăн малтанхи лининйĕнче тем те пур: вут та, çулăм та, кăвар та. Çавна эсир ăнланатăр-и е çук? – Çавна эсир ăнланатăр-и, ăнланмастăр-и?

**12. Нумайлăха палăртнă чухнехи йăнăшсене тӳрлетсе çырса илĕр.**

1. Кайăксем çинчен чăваш писателĕсемпе поэчĕсем нумай хайлавсем çырнă. 2. Паянхи урокра эпир тĕрлĕ чарăнусенче пулса курăпăр. 3. Чунра йывăр чухне маншăн çак тĕнчере вуншар, çĕршер çул чĕнмесĕр ларакан йывăçсем çывăх иккенне туятăп та савăнатăп.

**13. *Саламла* глагола пăхăнса тăракан сăмахсенчен хăшĕсене тĕрĕс теме пулать?**

1. Эпир аттене 50 çул тултарнипе саламларăмăр. – Эпир аттене 50 çул тултарнă ятпа саламларăмăр. 2. Эпир аннене юбилейпа саламларăмăр. – Эпир аннене юбилей ячĕпе саламларăмăр. 3. Сире пурсăра та республикăн 100 çулхи юбилейĕпе

саламлатпăр. – Сире пурсăра та республикăн 100 çулхи юбилейĕ ячĕпе саламлатпăр.

**14. Паллă тунă сăмах формисенчен хăшĕ тĕрĕс?**

1. **Лирикăлла** герой вăл – сăвăра каласа кăтартнă ĕç-хĕле хутшăнакан тĕп персонаж. – **Лирика** геройĕ вăл – сăвăра каласа кăтартнă ĕç-хĕле хутшăнакан тĕп персонаж. 2. Ку вăл – **обществăлла** япала – политика. – Ку вăл – **общество** пулăмĕ – политика.

**15. Литературăра, ӳнерте, музыкăра, ăслăлăхра паллă йĕр хăварнă çынсен çуралнă е вилнĕ кунне палăртнă май культура учрежденийĕсемпе вулав çурчĕсенче паллă датăна халалласа тĕрлĕрен стенд хатĕрлеççĕ. Акă 2019 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕ тĕлне пĕр библиотекăра хатĕр стенда вырăсла «Михаил Сеспель – 120» ят панă. Ĕçтешĕсем библиотекаре чăвашла çакнашкал вариантсем сĕннĕ:**

«Çеçпĕл Мишши – 120»,
«Çеçпĕл Мишшши çуралнăранпа 120 çул»,
«Çеçпĕл Мишшши çуралнăранпа 120 çул çитрĕ»,
«Çеçпĕл Мишшши çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май»,
«Çеçпĕл Мишшши 120 çул тултарчĕ».

**Эсир чăн чăвашла тесе хăш варианта(сене) суйласа илĕттĕр? Ытти вариант, сирĕн шухăшăрпа, мĕншĕн юрăхлă мар? Сирĕн хăвăрăн вариантăр епле?**

**16. Чăваш пурнăçĕпе çыхăннă çулталăк кĕнекине илĕр те пĕр-пĕр паллă датăпа çыхăнтарса статья (информаци, очерк тата ытти жанрпа çырнă материал) ячĕсене çырăр. Ятсен конкурсне ирттерĕр.**

**4. Чăваш чĕлхи расна шайра тăракан хатĕрсен системи пулни**

**4.1. Чĕлхе единицисем. Чĕлхен расна шайра тăракан единицисен çыхăнăвĕ**

➤ Чĕлхе единицисем вĕсем – чĕлхе тытăмĕн тĕрлĕ функци тата расна пĕлтерĕш пуррипе палăрса тăракан пайрăмĕсем.

Чĕлхе системин чи аял шайĕ – фонетика шайĕ чи ансат единицăсенчен – фонемăсенчен тăрать. Фонемăсем пĕр карт çӳллĕрех шайра тăракан морфемăсен тытăмне кĕреççĕ. Морфемăсенчен çӳллĕрех карта лексемăсем йышăнаççĕ, чĕлхен лексикине тăваççĕ. Лексика шайĕн единицисем морфемăсенчен тăраççĕ. Лексика единицисем чи çӳллĕ шая – синтаксис шайне кĕреççĕ. Синнтаксис единицисем сăмахсемпе сăмах майлашăвĕснсен тăраççĕ.

Чĕлхе единицисене уçăмлă курма предложение вакрах пайсене пайлас пулать. Акă *Тавралăха тĕттĕм хуплларĕ* (Е. Енглаев.) предложени шухăш енчен икĕ пайран тăрать: *Тавралăха* Т/ Р*тĕттĕм хупларĕ*. Предложенин тема ушкăнĕ *тавралăха* сăмахран, рема ушкăнĕ подежащипе сказуемăй пек çыхăнакан сăмахсенчен (*тĕттĕм хупларĕ)* тăрать. Тема ушкăнне кĕрекен сăмах икĕ пайран тăрать: сăмах тĕпĕнчен *(тавралăх)* тата пару падеж аффиксĕнчен ***(-а)***. Аффиксĕ – <**а**> фонема. Сăмах тĕпĕнче икĕ пай курăнать: *тавра* тата *-лăх*. ***-Лăх*** – япала ячĕ тăвакан аффикс, <**л**>, <**ă**> <**х**> фонмăсем пĕрлешнипе пулнă. *Тавра* пай – хăй иккĕмĕшле сăмах: сăмах тымарĕ–*тав(ă)р* глагол, ***-а*** – паллă ячĕ тăвакан афффикс. Аффиксĕ каллех уйрăм <**а**> фонемăпа тӳр килет. *Тав(ă)р* глагол <**т**>, <**а**> <**в**>, <**ă**> тата <**р**> фонемăсенчен тăрать (<**ă**> фонеми тухса ӳкнĕ). Çак майпа фонемăсем таран предложенин рема ушкăнне те пайлама пулать.

**17. *Тавралăха тĕттĕм хупларĕ* предложенин рема ушкăнне чĕлхе единицисене кăтартса фонемăсем таран пайлăр.**

**18. *Халĕ ĕнтĕ тырă вырма та юрать* (Л.Сачкова) предложение чĕлхе единицисене кăтартса пайлăр.**

**4.2. Чӗлхе ӑслӑлӑхӗн пайӗсем**

➤ Кашни чӗлхе единицине ятарласа чӗлхе ӑслӑлӑхӗн пӗр-пӗр пайӗ тӗпчет: фонемӑсене – фонетика, фонологи; морфемӑсене – сӑмах тытӑмӗпе пулӑвӗ, морфологипе морфемика; сӑмах майлашӑвӗпе предложенисене – синтаксис. Сӑмах лексика единици шутланать пулсан та ӑна лингвистикӑн кирек хӑш пайӗнче те тӗпчеҫҫӗ: лексикологире те, лексикографире те, фонетикӑра та, фонологире те, сӑмах тытӑмӗпе пулӑвӗнче те, морфлогире те, синтаксисра та. Ҫапла вара, чӗлхе ӑслӑлӑхӗ ҫак пайсенчен тӑрать: фонетика, фонологи; сӑмах тытӑмӗпе пулӑвӗ, морфологипе морфемика; синтаксис. Вӗсене тепӗр хут пайӑррӑн аса илӗпӗр.

**19. Сирӗн шухӑшӑрпа, чӗлхе ӑслӑлӑхӗнче сӑмах хӑйне майлӑ вырӑн йышӑнни мӗнрен килет?**

## Фонетикӑпа орфоэпи. Графикӑпа орфографи

### 1. Фонема ӑнлав. Чӑваш чӗлхин фонемисем

➤ Фонема (гр. phoneme) – чӗлхен сасӑ тытӑмӗн тӗп единици. Фонемӑсем абстрактлӑ пулаҫҫӗ, хӑйсем тӗллӗн ҫӳремеҫҫӗ, сӑмах е морфема тытӑмне кӗреҫҫӗ. Фонемӑсене чӗрӗ пуплевре вӗсемпе тӳр килекен сасӑсенчен кӑна палласа илме пулать.

Фонемӑн, ытти йышши единицӑсенни пекех, хутшӑну тума кирлӗлӗхӗ пур. Тӗслӗхрен, пӗлтерӗшӗ пулмасан та фонемӑсем морфемӑсене, сӑмахсене пӗр-пӗринчен уйӑрма кирлӗ. Акӑ *Тавралӑха тӗттӗм хупларӗ* предложенин *тӗттӗм* сӑмахӗнче <**ť**> фонема пӗччен мар – унӑн йӗкрешӗпе пӗрле куратпӑр. Йӗкӗреш <**ť**> фонема *тӗттӗм* сӑмаха *тӗтӗм* сӑмахран уйӑрса илме май парать. *Пур* тата *пӳр* сӑмахсене варринче тӑракан <**у**> тата <**ӳ**> фонемӑсем уйӑраҫҫӗ. *Кӑмӑл* тата *кӑҫал* сӑмахсем иккӗмӗш сыпӑкӗсем <**мӑ**> тата <**ҫа**> фонемӑсемпе пуҫланнипе расна. *Шутсӑр* сӑмахӑн ***-сӑр***

аффиксĕ *шутлă* сăмахăн **-*лă*** аффиксĕнчен <**ă**> умĕнче <**с**>, хыçĕнче <**р**> фонемăсем тăнипе уйрăлса тăрать.

**20. Фонемăсем сăмахсемпе морфемăсене уйăрма кирлине ĕнентерĕр.**

Эпĕ те каятăп. Çимун кайма пуçтарăнчĕ. Эх, манса кайнă! *(Л. Сачкова.)*

**21. *Савăн, ӳкер* глаголсене таблицăна лартса пурлă тата çуклă формăсенче хальхи вăхăтра сăпатлăр та формисене фонемăсем уйăрнине ĕнентерĕр.**

| Хисеп | Сăпат | Пурлă форма | Çуклă форма |
|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1<br>2<br>3 | <br><br>*савăн-ать-V* | <br><br>*савăн-мас-ть-V* |
| Нумайлă | 1<br>2<br>3 | | |

- Мĕнле те пулин фонема шутне кĕрекен сасăсем пуплевре ăçта тăнине кура ăрасна илтĕнме пултараççĕ. Унашкал сасăсене аллофонсем е фонемăн варианчĕсем теме йышăннă. Тĕслĕхрен: *калăп – калă[б]а; килĕп – кисĕп (ки[з]ĕп) – кизĕ[б]е; шăпчăк – шăрчăк; тус – тӳс; пар – пер.* Ку сăмахсенче хупă сасăсем янăравлăх тата çемçелĕх енчен уйрăлса тăраççĕ, анчах пĕр фонемăпах тӳр килеççĕ: *калăп – калă<п>а, ки<с>ĕп – ки<с>ĕ<п>е, шăпчăк – шăр<ч>ăк; <тус> – <тӳс>; <пар >– <пер>.*

**Асăрхăр:** *атă – атя, тулăх – выльăх, ана – хуньăм* йышши сăмахсен варринче тĕл пулакан хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ вариантлăх тумаççĕ – кашни хăй тĕллĕн фонема картне ларать. Ку фонемăсем сăмахăн ытти вырăнĕнче те тĕл пулаççĕ: *мăкăль, мăкăнь, вулать, тьăх-тьăх, тяппа, ням-ням.*

**22. Вуласа тухăр. Калăр: хупă фонемăсен аллофонĕсем ăçта-ăçта тĕл пулаççĕ?**

1. Самант та вăхăт иртмерĕ – пуç тăрринче каллех çăтăр-çатăр аçа çапрĕ. *(В. Элпи.)* 2. Пўртре кăмакара шатăртатса вут çунать. Ялкăшакан вут умĕнче Алтынке капăртма пĕçерет. *(Л. Сачкова.)* 3. Пирĕн выльăхсемшĕн çимелли нимĕн те çук кунта. Шурă юр, кăтьăр-катьăр йывăçсем, пĕчĕк ката. Туратсем кăшлакаласа пĕр хуша качака пурăнкалĕ ĕнтĕ. Ытти выльăх – лаша, ĕне, сурăх, сысна – кунта виçĕ кун та чăтаяс çук. *(Хв.Уяр.)*

➤ Кирек мĕнле чĕлхери пекех, чăваш чĕлхинче те фонемăсене пĕр-пĕрне хирĕç тăракан икĕ ушкăна уйăраççĕ: уçă фонемăсем, хупă фонемăсем. Çакнашкал уйăрма фонемăсемпе пуплевре тўр килекен сасăсем май параççĕ. Сасăсем функци, артикуляци тата акустика енчен расна. Акă функци енчен уçă сасăсем сăмахăн сыпăкĕсене никĕслеççĕ, хупă сасăсем – никĕслеймеççĕ. Артикуляцие илес тĕк – хупă сасăсене каланă чухне сывлăш чăрмавсемпе тĕл пулать, уçă сасăсен артикуляцийĕнче чăравсем çук. Акустика янравлăхпа çыхăннă: уçă сасăсем – чи янравлисем; хупă сасăсем хăйсем икĕ тĕрлĕ (ялан янравлисем, шавлисем) пулаççĕ пулин те янравлăхĕпе уçă сасăсене çитмеççĕ.

Хальхи литература чĕлхинче 9 **уçă фонема**. Вĕсем пĕр-пĕринчен ретлĕх, çĕкленĕш тата тутапа каланипе каламанни енчен уйрăлса тăраççĕ. Куна çак таблицăра курма пулать (П.Я. Яковлев чĕлхеçĕ тĕслĕхне шута илсе ўкернĕ):

<table>
<tr><td rowspan="4">Çĕкленĕш</td><td colspan="4">Ретлĕх</td></tr>
<tr><td colspan="2">мал</td><td colspan="2">кай</td></tr>
<tr><td colspan="4">туталăх</td></tr>
<tr><td>тутапа пулни</td><td>тутапа пулманни</td><td>тутапа пулни</td><td>тутапа пулманни</td></tr>
<tr><td>çўл</td><td>И</td><td>Ў</td><td>Ы</td><td>У</td></tr>
</table>

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| вăта | Э Ĕ | | Ă | (О) |
| аял | | | А | |

П.Я. Яковлев тĕпчевçĕ çырнă тăрăх, уçă сасăсен ***ретлĕхĕ*** тесе чĕлхе çăварта горизонтальпе куçнине калаççĕ. Чĕлхе <и, ӳ, э, ĕ> фонемăсене каланă чухне малта пулать, <ы, у, а, ă, о> фонемăсене каланă чухне – хыçал енче.

**23. Предложенин-предложенин çырса илĕр. Уçă сасă мĕнле иккенне паллă тăвăр: мал рет фонемисемпе тӳр килекеннисене – пĕр йĕрпе, кай рет фонемисенне – икĕ йĕрпе.**

***Тĕслĕхрен:*** выльăх-чĕрлĕх

1. Выльăх-чĕрлĕх хăраса ӳкрĕ, мĕкĕрсе те çухăрса, хӳрине тăратса тĕрлĕ еннелле тара пуçларĕ. *(Л. Сачкова.)* 2. Ырă çын ырă çын патне хăнана килнĕ. *(Н. Терентьев.)* 3. Анне мана виçĕ тӳмеллĕ пĕчĕк çеç купăс туянса парсаччĕ. *(«Хыпар»).* 4. Пултарулăх тупăшăвĕсем çыракан тата çырма пултаракан çамрăксем пуррине кăтартса параççĕ. *(О. Васильева.)*

➤ ***Çĕкленĕш*** чĕлхе çăварта вертикальпе куçнинчен килет. Таблицăра кăтартнă тăрăх, чĕлхе чи аялта чухне <а> фонемăпа тӳр килекен сасă пулать, вăта çĕкленĕшре чухне – <э, ĕ, ă, о> фонемăсемпе тӳр килеккеннисем, чи çӳле çĕкленсен – <и, ӳ, ы, у> фонемăсен тӳр килĕвĕсем.

**24. Предложенисене вуласа тухăр та тытăмĕнче тĕл пулакан уçă фонмăсен тӳр килĕвĕсем çĕкленĕш енчен хăш ушкăна кĕнине шута илсе сăмахсене çак схема ăшне вырнаçтарăр. Пĕр сăмахрах расна уçă сасă пулсан сăмаха харăс темиçе çĕре çырмалла. Çекленĕше тивĕçтерекен уçă сасă паллине йĕр туртса паллă тăвăр.**

| Сăмахра тĕл пулакан уçă фонемăн çĕкленĕшĕ | Сăмахсем |
|---|---|

| | |
|---|---|
| çӳл | ç**у**лсерен |
| вăта | çулс**е**р**е**н, ч**ă**ваш |
| аял | чăв**а**ш |

1. Çулсерен Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен библиотеки «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» конкурс ирттерет. Конкурс вĕçленсен çĕнтерӳçĕсен ĕçĕсене пĕрле пухса сборник хатĕрлесе кăлараççĕ. *(О. Васильева.)* 2. Çĕре çирĕп тымар яракан нихăçан та аптраман. *(Н. Захаров.)* 3. Тур кĕтесĕнче ларакан çамрăк мăшăр çинчен куçа илес килмест. Шур пĕркенчĕк айĕнчи Рая пушшех шуррăн, тасан курăнать. *(Л. Сачкова.)*

➤ ***Тулалăх*** вăл уçă сасă пулăвне тутана малалла тăсса каланипе каламаннинчен килет. Тутана тăсса калакан сасăсем шутне <ӳ, у, о> сасăсем кĕреççĕ. Ытти уçă сасăсене каланă чухне тута тăсăлмасть.

**25. Тутапа калакан уçă сасăсем пур сăмахсене тупса çырса илĕр. Уçă сасси хăшĕ-хăшĕ пулнине сас паллисене йĕр туртса кăтартăр.**

***Тĕслĕхрен:*** вулакан, ...

1. Вулакан сахалланни кĕнеке кирлĕ маррине пĕлтермест. Пылесос шухăшласа кăларнăранпа никам та шăпăрпа усă курма пăрахман вĕт. *(О. Австрийская.)* 2. Пĕтĕмпех санран килет. Пĕр-пĕрне юрататăр пулсан – чĕрӳ хушнине ту. *(С. Павлов.)* 3. Тӳрех палăртмалла: çарта пулни чăн малтан ӳт-пĕве, кĕлеткене çирĕплетме пулăшать. Çар пурнăçĕ яваплăха туйма, тĕллев лартса ăна пурнăça кĕртме вĕрентет тени те – ӳстерсе калани мар. *(Ю. Артемьев.)*

***Уçă фонемăсене тишкермелли йĕрке***

Фонемине каламалла. 2. Рет. 3. Çĕкленĕш. 4. Тутапа каланипе каламанни.

***Тĕслĕх:*** *Аптратăп калама* (Н. Терентьев) предложенин *аптратăп* сăмахĕнче чи пирвайхи уçă фонема <а>, кайри рет, аял çĕкленĕш, тутапа каламан. Иккĕмĕш уçă фонема та – <а>. Виççĕмĕш (юлашки) уçă фонема – <ă>, кайри рет, вăтам çĕкленĕш, тутапа каламан.

**26. Предложенисене вулăр та черетпе кашни сăмахăн уçă фонемисене тишкерĕр.**

Врачсем сĕннипе Михаил çĕрекен урине операци тутарма килĕшнĕ. Ачча арĕ терт-асапа тӳссе çĕнтерессе шаннă. Çамрăк организм çĕнтернĕ. Михаил ура çине тăнă-тăнах, протезпа утма хăнăхнă. Следстви пуçланнă. Тыткăнра пулнăскере никам та ĕненесшĕн пулман. Юрать-ха, партизансен отрядне хăварнă документсем тупăннă. *(Виталий Ачча.)*

➤ **Хупă фонемăсене** тăвата паллă тăрăх ушкăнлаççĕ: 1) сасăпа шав шайĕ, 2) хăш вырăнта пулни, 3) хытăлăхпа çеçелĕх, 4) мĕнле мелпе пулни.

Хупă фонемăсемпе тӳр килекен сасă ушкăнĕсене çак таблица кăтартать (П.Я. Яковлев таблицине тĕпе хунă):

| Мĕнле мелпе пулни | Хăш вырăнта пулни | | | | | | | Сасăпа шав шайĕ |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | тута | хыç чĕлхе | мал чĕлхе | вар чĕлхе | мал чĕлхе | хыç чĕлхе | тута | |
| Питĕрĕнчĕк | п | к | т | | т | к | п | Шавлă |
| Хĕсĕнчĕк | (ф) | х | с<br>ш | ç | ш | х | | |
| Хутшăнчăк | | | (ц) | ч | | | | |
| Тавра, чĕлхе çумĕ | | | л | | л | | | Сон |
| Тавра, сăмса | м | | н | | н | | м | |
| Хĕсĕнчĕк | в | | | j | | | в | |

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Чĕтренчĕк | | | р | | р | | | орлă |
| | Хытă | | | Нейтраллă | Çемçе | | | |

**27. Таблицăна тимлĕ пăхăр: чăваш чĕлхинче хупă фонемăсем мĕн чухлĕ? Вырăс сас паллийĕсемпе палăртнă фонемăсем пур-и? Ку мĕне пĕлтерет?**

➤ Таблицăна тĕпе хурсан хупă фонемăсен ретне хытă тата çемçе тӳр килӳсене кăна кĕртмелле: *хура – хӳре, тымар – тимĕр, ухă – ӳхĕ, шут – шӳт, пул – пӳл, карăк – кĕрĕк* т. ыт. те. Шавлă фонема янравлăх туянни аллофон (вариант) тăвать: *пух – пухăн, ут – утăм, тăс – тăсать, кисĕп – кисĕпӳ, хĕскĕч – хĕскĕчĕ, çĕвĕç – çĕвĕçĕ.*

<Ф> тата <ц> фонемăсене вырăсран кĕнисем тесе шутламалла. Йышăннă тесе вырăссен ытти хупă фонемисем пирки калаçма сăлтав çук.

**28. Хальхи çыру нормипе икĕ тĕрлĕ çырма юрать: *музей – музейăн* е *музейĕн, музейра* е *музейре; юбилей – юбилея* е *юбилее, юбилейра* е *юбилейре*; *еврей – еврейăн* е *еврейĕн*, *еврейла* е *еврейле.* Çакна, сирĕн шухăшăрпа, чăваш консонантизмĕн (хупă фонемăсен тытăмĕн) хăш уйрăмлăхĕпе çыхăнтарма пулать?**

***Хупă фонемăсене тишкермелли йĕрке***

1. Хупă фонема пулнине кăтартса фонемине каламалла. 2. Хăш вырăнта пулни. 3. Мĕнле мелпе пулни. 4. Сонорлă-и, шавлă-и? 5. Çемçе-и, хытă-и?

***Тĕслĕхрен:*** *Пурнăç малалла* (Л.Сачкова) предложенин *пурнăç* сăмахĕн пирвайхи хупă фонеми – <п>, тутапа калакан, питĕрĕнчĕк, шавлă, хытă.

**29. Предложенисене вулăр та кашни сăмахăн хупă фонемисене черетпе тишкерĕр. Хупă фонемăсене фонетика тишкерĕвĕ тăвăр.**

Чĕкеçпе йăмăкĕсем паян кăнтăрла вăрмантан çĕр çырли пуçтарса килнĕччĕ. Халĕ хĕр тăм чашăк çине сивĕ сĕт ячĕ те ăна çырлапа пăтратрĕ. Кунтан тутлă та сиплĕ апат тата мĕн пур-ши çĕр çинче?! *(Л. Сачкова.)*

**30. Кашни сăмахăн уçă тата хупă фонемисене тишкерĕр.**

Хула хĕррине вырнаçнă пĕчĕк пӳрт картишĕ уçса хунипех-мĕн. Палюк чĕри карт сикрĕ. Кĕмех тăнăччĕ ват çын – пăхрĕ те тап! чарăнчĕ. Ак тамаша, алăк умне турчăка тăратса хунă тем? *(Хв. Уяр.)*

**2. Сыпăк ăнлав. Сыпăк тĕсĕсем**

➤ Сыпăк – пуплев юхăмĕн пĕлтерĕшсĕр пĕчĕк пайĕ, çавăнпа пуплев единици шутланать. Сыпăка уçă сасă тăвать. Уçă сасăмпе хупă сасăсем сыпăкăн хăш пайĕнче тăнине кура сыпăксен тăвату тĕсне уйăраççĕ: 1) уçă сыпăксем: *ка-ча-ка, тĕ-ве, пу-те-не* (уçă сасăпа пĕтеççĕ); 2) хупă сыпăксем: *кăм-рăк, тăш-ман, кĕс-мен, тим-лĕх* (хупă сасăпа пĕтеççĕ); 3) витĕнтермен сыпăксем: *ар-кă, а-чаш, ӳ-ле* (уçă сасăпа пуçланаççĕ); 4) витĕнтернĕ сыпăксем*: çу-нат, те-лей, пуш-мак* (хупă сасăпа пуçланаççĕ). Çапла вара, уçă тата хупă сыпăксене юлашки сасă мĕнле сасă пулнине кура кăтартаççĕ; витĕнтернипе витĕнтернисене – сыпăкăн малтанхи сасси хупă пулнипе пулманнине кура. Акă *и-лем* сăмахăн малтанхи сыпăкĕ уçă, витĕнмен, иккĕмĕшĕ – хупă, витĕннĕ.

Чăваш сăмахĕн сыпăкланăвĕнче йĕрке пур. Пĕрремĕшĕнчен, икĕ хупă сасă уçă сасăсем хушшинче тăнă чух сыпăк чикки хупă сасăсем хушшинчен иртет: *ап-па, ан-не, пуш-мак, тет-те.* Иккĕмĕшĕнчен, харăс виçĕ хупă сасă тăрсан сыпăклав икĕ тĕрлĕ пулать: *шул-тра* е *шулт-ра*; *вăр-ттăн* е *вăрт-тăн; вĕл-трен* е *вĕлт-рен; шалт-лат* е *шал-тлат.*

**31. Сăмахсен сыпăкĕсене уйăрăр, кашнин уйрăмлăхне ăнлантарăр.**

1. Санăн утту – Акăш юххи. Кăмăлăр – чечек пуххи. *(В. Сергеев.)* 2. Виççĕмĕш хут шăнкăрав пачĕç *(В. Элпи.)* 3. Киле çитсе ӳкиччен тата темиçе кун иртет. *(Хв. Уяр.)* 4. Ывăллăха илтĕмĕр сана! *(Л. Сачкова.)*

**3. Чăваш пуплевĕн орфоэпийĕ**

➤ П.Я. Яковлев чĕлхеçĕ çырнă тăрăх, орфоэпи (*орфоэпи* термин – грек сăмахĕ: *orthos* «тӳрĕ, тĕрĕс», epos «калаçу») сасăсен, пусăмпа сингармонизмăн пуплев тĕрĕслĕхне йĕркелет. Ученăй шухăшĕпе, «орфоэпи нормисем çырулла наци чĕлхи аталанса кайсан тин пула пуçлаççĕ». Çавăнпа та уйрăм çын пуплевĕ, ял калаçăвĕ, диалектра сарăлнă калаçу пĕтĕм халăха çырлахтаракан нормăпа тӳр килсен те, килмесен те пултараççĕ.

Литература чĕлхин чĕрĕ калаçу нормисем фонетикăпа тата орфографипе çыхăннă. Çавăнпа хальхи пуплев нормисем И.Я. Яковлев тунă çыруран пуçланнă. Çакă чи малтан ун чухнехи çыравçăсем сăмахсен диалектсенче тĕл пулакан варианчĕсене суйласа илнинче палăрать.

И.Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем çĕнĕ çырăва фонема принципĕ çине таянса тунă. Ку вара орфоэпие нормăлама ансатлăх кӳнĕ. Чăваш орфоэпийĕн никĕсĕ мĕнле пуласси, паллах, Пăла тăрăхĕнче пурăнакан чăвашсен калаçăвĕнчен килнĕ, мĕншĕн тесен ку тăрăхран çĕн çырăва тăвакан çын И.Я. Яковлев тухнă.

И.Я. Яковлев орфоэпийĕ Совет тапхăрĕнче шкултан пухусене, сцена çине, радиопа телевидение сарăлать, тури чăваш калаçăвĕн элеменчĕсемпе пуянланать.Тĕслĕхрен, пусăм йĕрки <ă>, <ĕ> фонемăсем пуррине кура улшăнать; анатра калакан çемçе <т> евĕр

фонема вырăнне <ч> фонемăпа, çемçе <с> вырăнне <ç> калама тытăнаççĕ; *пурăнăç вĕлтĕрен* йыши сăмахсен <ă>, <ĕ> фонемăсăр варианчĕсем вăй илеççĕ.

Орфоэпи нормăланса çитнĕ тесе калама паян кун та пултараймастпăр. Çитменнине, çирĕпленнĕ нормăсене пăхăнманни пур. Кунашкал лару-тăрăвăн сăлтавĕсем, П.Я. Яковлев ĕнентернĕ тăрăх, çаксем: 1) чăваш чĕлхипе усă куракан талккăш пысăк марри; 2) чăваш литература чĕлхи çамрăк пулни; 3) калаçу норисене шкулта тытса пыманни; 4) вырăсларан кĕнĕ сăмахсен орфоэпине çирĕплетменни тата ытти те. Паллах, вырăсран кĕнĕ сăмахсен орфоэпийĕ пирки ятарласа шухăшламалла, çапах мĕн çирĕпленнине манма юрамасть. Чăваш сăмахĕсене калană чухне ансатшăн И.А. Андреев профессорăн çырăва тĕпе хума калană сĕнĕвне шута илмелле. Тĕслĕхрен, *ĕмĕтленетĕп* тесе çырма йышăннă тăк *ĕмĕтленетĕп* тесех каламалла. Апла, *ĕмĕтленеп* вариант орфоэпи норми шутланмасть.

И.А. Андреев профессор ĕнентернĕ тăрăх, *мунча, калча, çулçă* йышши сăмахсене пăхса **[ç, ч]** хупă сасăсем хăйсем умĕнхи хупă сасăсене çемçетеççĕ тени тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен çемçелӳ *пурçăн, хурçă, шăрчăк, шăпчăк, пахча* йышши сăмахсенче палăрмасть.

**32. Текст сыпăкĕсене сăмахсен орфоэпине пăхăнса вулăр.**

1. Пасарта халăх кĕпĕр-р! пухăнчĕ. Ши! те ши! шăхăраççĕ. Пĕр тĕлĕнсе, пĕр аптраса. Шаккум питне кăтартасшăн мар – пăркаланать, камсулĕпе хупланать. Намăс сăмахсем каласа вăрçса тăрать. *(Л. Сачкова.)* 2. Эпир Эçукпа пĕрне пĕри хавхалантарса маяксем – улăм кĕлтисем лартнă çул тăрăх киле утатпăр. Пирĕн аннесем тепĕр чухне шкула каймасан та юрĕ тесе килте ларма сĕнеççĕ. Ун пек шухăша эпир парăнмастпăр вара: урокран юласси е вĕренӳ кунне сиктерсе хăварасси пĕртте пирĕн кăмăла каймасть.

Çанталăкĕ тем пек урса кайсан та эпир шкулах чупатпăр. *(А. Талвир.)*

**4. Графика**

- **Графика** (*graphike, graphõ* терминсем чĕлхе ăслăлăхне грек чĕлхинчен кĕнĕ, «çыратăп, чĕретĕп, ӳкеретĕп» пĕлтерĕшлĕ) – çырура усă куракан хатĕрсен системи: сас паллисем, чарăну паллисем, параграф, номер паллисем, цифрăсем, техникăпа математика йышши тĕрĕс ăслăлăхсенче усă куракан паллăсемпе формулăсем т. ыт. те. Сас паллин ялан усă куракан пĕлтерĕшне алфавитра çырнă ячĕ тăрăх пĕлме пулать: **а** [а], **п** [пă], **р** [рă], **ӳ** [ӳ], **ц** [цă] т. ыт. те.

Яланхи çыру паллисемпе епле усă курмаллине орфографипе пунктуаци правилисенче ăнлантараççĕ.

**33. Текстасене вуласа тухăр та унта тĕл пулакан графика хатĕрĕсене сăмахне скобкăра çырса таблицăна вырнаçтарса кăтартăр. Пĕр палла икĕ е ытларах хут çырмалла мар.**

**1**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ГАЖДАНСЕН СЫВЛĂХНЕ СЫХЛАССИ ÇИНЧЕН» САККУНĔН 8 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН**

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2020 çулхи ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă

**1 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче граждансен сывлăхне сыхласси çинчен» 2012 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнче 59 №-лĕ саккунĕн («Республика» хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 10 №-сем; 2014, 12 №; 2016, 10 №; 2017, 2, 9 №-сем» «Республика» хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ;

2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ) 8 статйин 1-мĕш пайĕн 101-мĕш пунктне улшăну кĕртес, «I, II тата VI типлă мукополисахаридоз чирĕпе,» сăмахсем хыççăн «çирĕплетмен апластизм анемийĕн чирĕпе, юн кĕвелменнипе çыхăннă чирĕн II (фибриноген), X (Стюарт-Прауэр) факторĕсемпе чирлĕ çынсене,» сăмахсем хушса хурас.

**2 статья**

Çак Саккуна ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕртес.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха

пурнăçлакан **О. Николаев**

Шупашкар хули, ака 16, 24 №. («Хыпар»)

**2**

36§. Ударениллĕ ***а, я, о*** сас паллисемпе пĕтекен сăмахсем чăвашла пур формăра та вырăсла пекех юлаççĕ: *слюда – слюдан, слюдапа; кино – кинора, киноран; кафе – кафен, кафере; статья – статьян, статьяра.* (Чăваш чĕлхин орфографи правилисем.)

| Сас паллисем (алфавит йĕркипе) | Чăрăну паллисем | Ятарлă паллăсем |
|---|---|---|
| | | |

**5. Чăваш орфографийĕн тĕп пайĕсем, вĕсен принципĕсем**

➤ **Орфографи** (*орфографи* термин – грек сăмахĕ: *orthos* «тӳрĕ, тĕрĕс», *grapho* «çыратăп») нумай пĕлтерĕшлĕ: 1) пурнăçра кирлине шута илсе йĕркеленĕ çыру, 2) тĕрĕс çырмалли правилăсем, 3) йышăннă правилăсене пăхăнни, 4) чĕлхе ăслăлăхĕн сăмахсене тĕрĕс çырассине тĕпчесе йĕркелекен пайĕ.

Чăваш орфографийĕн пайĕсем – улттă: 1) сăмахсен фонема тытăмне палăртасси; 2) вырăс чĕлхинчен калаçупа тата çырупа кĕнĕ сăмахсене çырасси; 3) пĕрле, уйрăм тата дефиспа çырасси; 4) сăмаха пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси; 5) сăмахсене кĕскетесси тата кĕскетсе çырасси; 6) çыракан сăмахăн пайĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

Сас паллиллĕ çырăвăн тĕп тĕллевĕ чĕрĕ пуплеври илтĕнекен сасăсене шута илсе ку е вăл сăмахăн фонемисене çырура палăртасси пулса тăрать. Çавăнпа орфографи сас паллисемпе епле усă курассине кăна тĕпчемелле пек, анчах çыракан умне, тĕпрен илсен, сăмах тухса тăрать. Çавна май орфографин тĕп пайĕ çумне ытти пайсем хушăнаççĕ. Кашни пай чĕлхемĕрĕн пĕр-пĕр енĕпе çыхăннă та çав енĕн уйрăмлăхне шута илекен принцип пуррипе палăрать.

Сăмахсен фонема тытăмне палăртасси, каламасăрах паллă, ***фонема принципне*** пăхăнать. Ку прицип туллин чăн чăваш сăмахĕсене тата вырăсларан калаçу витĕмĕпе йышăннă сăмахсене çырнă чух палăрать: *вăрман, çăлтăр, тинĕс, пăшал, кăмпа, пĕрене, витре.* Вырăс чĕлхипе танлаштарсан пирĕн çырăвăн тĕп пайĕ чылай ансат, мĕншĕн тесен аллофонсем чăрмантармаççĕ.

**34.** ***А, ă, у, ы*** **тата** ***е, э, ĕ, ÿ,*** **и сас паллисене мĕншĕн çырнине ăнлантарăр.**

Тарăхнипе  
Чĕмсĕрлĕхрен  
Эп аслати хирсе  
Кăлартăм.  
Йăвашлăха çиçĕмсемпе  
Тирсе  
Хаярлăха  
Вăратрăм.

Манра халь йăвашлăх  
Çуккă пĕртте!  
Айванлăха эп сиртĕм  
Пырши-маршипе.  
Ман пеккисем, мала  
Оркестрпа иртетпĕр.  
Чĕмсĕррисем, ураланăр  
Вĕсен маршĕпе! *(В. Сергеев.)*

**35.** ***Е, ю, я*** **сас паллисене мĕн тĕллевпе çырнине ĕнентерĕр.**

1. Ырă кун пултăр, Светлана! Па**я**н хулан культура керменĕнче чăваш эстрада юрăçисен концерчĕ пулать. Ун пирки сана иртнĕ эрнерех пĕлтернĕ терĕç. Манса кайман-и? Концерт репетицийĕ вун икĕ сехетре пуçланать. Ка**я** ан юл – кĕтетпĕр. Хăвăн **ю**рă кĕввисене çырнă флэшкăна илме ан ман. *(Ара Мишши.)* 2. Сантăрпа Марь**е** кĕлете куçарса килсе нимелле хăпартса лартас терĕç. 3. Кĕр **е**нне кайсан Сантăр темиçе хутчен те Элĕк пасарне кайса пăхрĕ, анчах Ухтивана тĕл пулаймарĕ. 4. Тепĕр хыпар та çӳрет иккен: Ухтивана салтака илнĕ. Кун пек пулсан **ю**рĕччĕ-ха: тен, хăçан та пулин ка**я**лла çаврăнса килĕ. 5. Пирĕн па**я**н кĕлетрех çывăрмалла-и? Хăçан илсе ка**я**ççĕ кĕлете? *(З. Никонорова.)*

* ***Й*** **сас паллиллĕ сăмахсене тупăр. Вĕсенче** ***е, я, ю*** **сас паллисемпе мĕншĕн усă курман?**

**36. Паллă тунă сас паллисем мĕншĕн пĕрешкел?**

1. Калистрат хăйĕн кăмăлне кайнă сă**вв**а таса тетрадь листи çине çырса хучĕ. Ăна, ансăр ка**сс**а хатĕрленĕскерне, хытă хутăн пĕр е**нн**е çыпăçтарчĕ. Çав хытă хута çурма**лл**а хутлатрĕ те мал е**нн**е: «Зинăна Калистратран», – тесе çырчĕ. *(В. Константинов.)* 2. Уйăх хы**çç**ăн уйăх иртрĕ. Савнă ка**чч**ипе уйрăлнăранпа çулталăк та çитрĕ, анчах та Ирина пĕтĕмпех асра тытать. Вăхăт иртет – хĕре пĕр**тт**е çăмăл мар. *(Э. Портнова.)*

➤ Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсене, тĕпрен илсен, ***цитата принципне*** пăхăнса çыратпăр: *радио, магнит, аптека, циркуль, фейк, пандеми, расписани, власть.* Çакă *агитаци, революци* йышши сăмахсене шута илмесен уйрăмах сăмахсен тĕп форминче палăрать. Нумай сăмахăн пĕтмĕшĕ мĕнле те пулин аффикс йышăннă чухне çав-çавах чăвашланать, çапах улшăнман пая вырăс орфографине пăхăнса çыратпăр: *булка – булкăн,*

*булкăшăн, булку, булкăллă; Марокко – Мароккăна, Мароккăра, Мароккăччен; промышленность – промышленноçăн, промышленоçа, промышленноççăр, промышленноçшăн; металл – метала, металтан* е *металран.*

Чăваш сăмахĕсемпе аффиксĕсене чăвашла, вырăсран çырупа йышăннă сăмахсене вырăсла çырнăран чăваш орфографине ***икĕ системăллă*** теме йышăннă.

**37. Вырăс чĕлхинчен çырупа кĕнĕ сăмахсене тупăр та сăмахĕсем чăнах та çырупа кĕнине орфографи паллисем çине таянса ĕнентерĕр.**

1. Миçе тĕрлĕ самолетпа вĕçме тӳр килмен пулĕ Николай Гавриловăн?! Сызраньте çар авиацийĕн летчикĕсене хатĕрлекен аслă училищĕре вертолетсемпе вĕçме хăнăхнă. Çамрăк офицер пулин те Афганистан вăрçин çулĕсенче экипаж командирĕнчен пуçласа вертолетсен эскадрилйин командирĕ таран ӳснĕ. *(П. Лаштай.)* 2. Театроведени ăслăлăхĕ XIX ĕмĕр вĕçĕнче Германире пуçланса кайнă. Берлин университетĕнче литература уйрăмĕнче ĕçлекен Макс Герман çĕнĕ ăслăлăха – театроведени наукине никĕслет. *(Н. Кириллова.)*

* **Мĕншĕн *эскадрилйи* (*ь* паллă лартмасăр) çыратпăр?**

**✪✪✪📖 38. Псевдонимсен варианчĕсенчен хăшĕсемпе чăвашла текстра, хăшĕсемпе вырăсла текстра усă курма май пуррине, хăшĕсемпе нимле текстра та усă курма май çуккине таблицăна кĕртсе кăтартăр. Икĕ вариант та юрăхлă пулсан – юнашар çырмалла.**

**Ĕçе икĕ ушкăна уйрăлса тăвăр. Кашни ушкăн пĕр-пĕрин ĕçĕпе паллаштарса кĕске доклад тутăр. Ĕçлеме хăш псевдонимпа анасат, хăшĕнпе йывăр пулнине ĕнентерĕр.**

**1**

Агивер, Акивер, Акивэр, Агиверь, Акиверь; Азамат, Асамат; Айги, Айхи; Айдаш, Айташ; Алагер, Алакĕр, Алагерь; Алга, Алка;

Алендей, Аленьдей, Алентей, Элентей; Ангер, Ангерь, Анкĕр, Анкер, Анкерь, Анкĕрь; Атай, Аттай; Атил, Атиль, Аттил; Эндебе, Энтепе, Агах, Ахах, Агун, Ахун; Вазан, Васан; Вася Аниси, Васься Анисьси, Васся Аниссси, Ваçça Аниççи; Васянка, Вазянга, Ваçанкка, Ваçанка; Вуколов-Эрлик, Вуколов-Эрьликь; Ижедер, Ижедерь, Ишетер; Ижендей, Иженьдей, Ишентей; Ильбек Мигулай, Ильбекь Мигулайе, Илпек Микулайĕ; Кервень, Керьвень, Кервен; Кибек, Кибекь, Кипек, Кипекь.

**2**

Пегиль, Пехил, Пехиль; Рзай, Рсай; Садай, Сатай; Садур, Сатур; Сарби, Сарпи; Сениэль, Сениель, Сениел; Силэм, Силэмь, Силемь, Силем; Теветкель, Теветькель, Теветкел; Хузангай Педэр Хузангай Петр, Петр Хузангай, Петĕр Хусанкай, Хусанкай Петĕрĕ; Ыдарай, Ытарай; Эктель, Экьтель, Эктел; Эльби, Элпи, Эльпи; Эльгер, Эльгерь, Элкер, Элькерь; Эльмень Улькка, Эльмен Улькка, Элмень Улькка, Эльмень Улька, Элмен Улькка, Элмен Улькки; Эндип, Эньдипь, Энтип; Яккусен, Яккусень, Якусень; Ялгир, Ялгирь, Ялкир, Ялкирь; Янгас, Янкас; Яндаш, Янташ; Ярандай, Ярантай.

| Чăвашла текстра усă курмалла | Вырăсла текстра усă курмалла | Нимле текстра та усă курмалла мар |
|---|---|---|
| | | |

➤ Пĕрле, уйрăм тата дефиспа çырассин принципĕ – ***лексика принципĕ.*** Ку принцип тăрăх, сăмахсене пĕр-пĕринчен уйрăм çырмалла. Апла пулсан – çыракан çын чăваш лексикине аван пĕлме тивĕç.

Ăнлава, сăмах пекех, сăмах майлашăвĕ те пĕлтерме пултарать. Çитменнине, чылай сăмах майлашăвĕ вырăссен уйрăм сăмахĕ вырăнĕнче çӳрет: *çăвар маччи* – *нёбо*, куç хупанки – веко, *хула*

*çынни — горожанин, шухăшласа пăх — подумать, кăларса яр — выпустить.*

Вырăссен тенĕрен, пирĕн пуплевре сăмах майлашăвĕн пайĕсем интонаци енчен пĕрлештерекен вăй витĕмĕнче тăраççĕ. Вырăс пуплевĕнче пайсем пĕр-пĕринчен ирĕклĕ. Кунсăр пуçне чăвашла калаçнă чухне сасă тĕп сăмах çинче çĕкленет, вырăсла пуплевре интонаци енчен вăйлăраххи пăхăнакан сăмах пулать:



уçă сывлăш                    свежий воздух

XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчех асăрханă тăрăх, сăмах майлашăвне кĕрекен сăмахсен сыпăк шучĕ виççĕрен иртмесен сăмахсем интонаци енчен уйрăмах тачă пĕрлешеççĕ: *çур аки, кĕр аки, çăм атă, хĕр ача, хут купăс, сар амак, Мăн кун, шурăм пуç, чуп ту.* Пауза сыпăк шучĕ виççĕрен иртсен палăрма тытăнать: *çурхи ака, кĕрхи ака, сăран атă, ывăл ача, сĕрме купăс, хура амак, Аслă кун, Мăн Канаш, чăпăл ту.*

Ку тăхтава пĕри туять, тепри туймасан та пултарать. Çавăнпа çыру интонацие пăхăнтарсассăн йывăр та хирĕçӳллĕ пулса тухать. Ун пек ан пултăр тесе грамматика тĕпчевçисем (Тимухха Хĕветĕрĕ, Т.М. Матвеев, А.И. Иванов, И.А. Андреев, И.П. Павлов, Н.И. Егоров т.ыт. те) çырура сăмаха тепринчен уйăрнине тĕпе хума чĕнеççĕ. Ку йĕрке шăп та лăп чĕлхемĕрĕн тытăмĕпе тата орфографин принципĕпе килĕшсе тăрать. Апла пулсан, чăвашла çыраканăн чăваш чĕлхин синтаксисне те чухламалла.

Çырăва ансатлатма аслисен ку е вăл сăмах майлашăвне пĕрле çырас хăнăхăвĕ чăрмантарма пултарать. Акă кун ячĕсене пĕрле, каç ячĕсене уйрăм çырнине (*вырсарникун — вырсарни каç* т. ыт. те) ăслăлăх енчен нимле те тӳрре кăларма çук. Сăмах май, ик сăмахлă

кун ячĕсене XIX ĕмĕрĕн вĕçĕнчен пуçласа XX ĕмĕрĕн 30 мĕш çулĕсемччен И.Я. Яковлев кĕнекисенче те, «Хыпар» хаçатра та уйрăм çырнă.

Дефиспа тĕрĕс усă курас тесен сăмах пулăвĕпе тытăмне, морфологи уйрăмлăхĕсене шута илес пулать. Тĕслĕхрен, *çĕр-шыв* сăмах тытăмĕпе пулăвĕ енчен *атте-анне, шăм-шак, атă-пушмак* сăмахсем пекех. Ку сăмахсем, тĕрĕссипе, мăшăр сăмахсем.

**39. Вуласа тухăр. Юлашки икĕ репликăна мĕншĕн тулли мар предложенисем темелле? Вĕсенче тĕл пулакан *хĕр* тата *ывăл* сăмахсем мĕншĕн сказуемăй пулаççĕ? Подлежащи пулакан сăмаха тупăр.**

Тоня каллех ĕçе тухнине пуринчен малтан Игорь асăрхарĕ тейĕн.

– Тем сиксе тухмарĕ пулĕ? – пырса ыйтрĕ вăл арăмран. – Курăнми пултăн эс.

– Ача чирлерĕ-ха,– тĕрĕссине каларĕ Тоня.

– Ача та пур-и сан?

– Пур çав.

– Хĕр-и, ывăл-и вара?

– Хĕр. *(С. Павлов.)*

*** *Хĕр* тата *ывăл* сăмахсем подлежащи пулакан сăмаха пăхăнттарса сăмах майлашăвĕсем тăвăр. Вĕсем орфографипе мĕн енчен çыхăннă?**

**40. *Ар* сăмах кирек епле çыхăнура та уйрăм сăмах вăйне çухатманнине ĕнентерĕр. *Ар* сăмахăн пĕлтерĕшĕ пирки мĕн калама пулать?**

1. Ачаран ар тунă вырăн, час кураймăп, сывă пул! *(П. Хусанкай.)* 2. Сана тепре куриччен алри ачам ар пулĕ. *(Ю. Скворцов.)* 3. Арпа арăм вăрçĕç те, çураçĕç те – çичĕ ют хушша ан кĕтĕр. *(А. Емельянов.)* 4. Канаш çĕрĕн маттур арĕ Н.Ф. Гаврилов.

*(П. Лаштай)* 5. Арĕ пур – йышĕ çук. *(Ч. х. с.)* 6. Тăван ял аталантартăр, илемлентĕр тесе нумай ĕç тăвать маттур ар. *(Р. Анатольева.)* 7. Ĕлĕкрен килекен йăлапа хĕр ятне ашшĕ калать, ар ача ятне – амăшĕ. *(В. Станьял.)*

*** 7-мĕш тĕслĕхре сăмах çитĕннĕ хĕр çинчен пырать-и, ача çинчен-и? Ар ача çитĕннĕ çын-и, ача-и?**

*** Тутарсемпе пушкăртсем *ир кеше* сăмах майлашăвĕпе (ир – «ар», кеше – «çын») усă кураççĕ. Ку сăмах майлашăвĕпе чăваш чĕлхинче епле сăмах майлашăвĕ тӳр килет?**

*** Вырăссен женщина смахĕ пĕлтерĕшне тутарсемпе пушкăртсем *хытын кыз* теççĕ. Чăвашла тӳр килĕве епле каламалла тата çырмалла?**

**41. Паллă тунă сăмахсем подлежащипе сказуемăй пек çыхăннине ĕнентерĕр. Тĕп членсем хăш пуплев пайĕнчен пулнă?**

1. Мĕн кирлине пурне те илсе кил. *(А. Талвир.)* 2. Культура пур халăх вилмест. *(В. Кервен.)* 2. Урăх çыннăн е ачан налук парăмĕ пурри-çуккине мĕнле тĕрĕслемелле-ши*? («Хыпар».)* 3. Мĕн пуррипе çуккине иккĕш те ыйтмасăрах ăнланаççĕ. *(В. Сатай.)* 4. Хĕвел аннă пулин те таса уйра çухрăма яхăнпранах мĕн-мĕн пурри курăнать *(Ç. Элкер.)* 4.Мĕн пуррипе савăнма пĕлменнисем çеç тăван çĕрĕнчен тухса тарма ĕмĕтленеççĕ. («Хыпар».) 5. Мĕн пур пек укçана пуçтартăмăр та апат илмешкĕн Таньăпа икĕ Володьăна лавккана ятăмăр. *(Е. Енглаев.)* 6. Мĕн пур асапне те, телейне те пĕрле чăтмалла пулнă та... *(Н. Ишентей.)*

**42. Вырăссем калакан *Мне всё равно!* предложение чăвашла мĕнле-мĕнле предложенисемпе куçарма пулать – çырса хурăр. Вырăс предложенийĕпе чăваш предложенийĕсен тĕп членĕсене йĕрсем туртса кăтартăр. Вырăсла педложенин тĕп членĕсене тупма *Перед***

***Богом все равны*** **предложени пулăшĕ. Чăвашла предложенисен тĕп членĕсем хăш пуплев пайне кĕреççĕ?**

**43. Сăмах майлашăвĕсен речĕсене малалла тăсăр.**

1. Пансионат шкул,...
2. Хĕрарăм бухгалтер,...
3. Хĕр салтак,.....
4. Эндокринолог врач,...
5. Космлнавт летчик,...
6. Юман йывăç,...
7. Фронтовик писатель,..
8. Филолог учитель,..

**44. Пичетре тĕл пулакан йăнăшсене тӳрлетĕр.**

1. Акă пăхăр: пирĕн Атăл-аттемĕр еплерех хăватлă?! 2. Чиперленчĕ çĕр-анне. 3. Лахенали – чечек-светофор. 4. С.В Коморный художник-график, сăмахран, «Чăваш Ен тӳпи» ярăмпа тăхăр ĕç турĕ.

🕮 **45. Ӳсен-тăрана, чĕр чунсене, пулăсене тата кайăксене ку е вăл ят панин сăлтавĕ пирки эсир мĕн шухăшлатăр?**

Мулкач хăлхи, качака сухалĕ, упа лаппи, чавка пу(çĕ), тилĕ хӳри, кушак хӳри, пăру хӳри, ĕне хӳри, вăкăр хӳри; сарă пуç, хура пуç, утмăл турат; йĕке хӳре, кай ура, тукмах хӳре, хĕрлĕ куç, хĕрлĕ çунат, ай çăвар; катăк хӳре, шур кут, кукăр сăмса, лаптăк сăмса.

**46. Çынсене палăртакан сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшне, вĕсемпе хăçан усă курнине ăнлантарăр.**

Тӳр пилĕк, яка пыр, кукăр алă, карма çăвар, тăм пуç, выçă куç.

➤ Дефиспа, тĕпрен илсен, мăшăр сăмахсене тата сăмахсене икĕ хут каланине кăтартма усă кураççĕ: *шăм-шак, ача-пăча, усал-тĕсел; кăшкăра-кăшкăра чуп, чикелене-чикелене кай, кăлтăр-кăлтăр ту*

Кунсăр пуçне дефис междометисенче тата евĕрлев сăмахĕсенче тĕл пулать, уçă тата хупă сасса тăсса каланине пĕлтерет: *утăрья-а-а! ы-ых! вăр-р-р, чаш-ш-ш.*

***Асăрхăр:*** Вăхăта е вырăна яхăнлатса пĕлтернĕ чухне лартакан тире – орфографи палли мар, пунктуаци палли: *Вун сакăр – çирĕм*

*çухрăмра вăрманта пĕр кăмăллă кăна утарçă старик пурăнать.* (Ю. Скворцов.)

**47. Вуласа тухăр, дефиспа усă курнин сăлтавне кăтартăр.**

1. Салтаксем ушкăн-ушкăн пухăнса халап яраççĕ *(Ç. Элкер.)* 2. Хăш чух, хĕлле, шыв-шур шăнсассăн, пăрланнă Атăл анинче Çавра кӳлленчĕк асăрхатăн. Вăл çап-çутах хĕл каçиччен. *(П. Хусанкай.)* 3. Çĕрĕм-шывăм, Чăваш çĕрĕ-шывĕ, юррăмпа саламлатăп сана! *(Ю. Сементер.)* 4. Утнă май Варканеш пуçне тĕрлĕ шухăш пыра-пыра кĕчĕ. «Кашниех хăй çуралнă çĕре-шыва юратать», – шухăшларĕ вăл. *(Юхма М.)* 5. Ян-н! Чăн-чан-н-н! Чăнтăл-л-чантăл-л-чан-н! Чăнкăл-л-чанкăл-л-чанкăл-л-чан-н! Чăн-н-чан-н! Чан-н! кĕрлет, шавлать çӳлте. *(В. Кузьмин.)* 6. Ы-ы-ы! Хăрушă!.. Хăрушă!..*(Хумма Ç.)* 6. Ферма енчен, аякранах, хыттăн му-ук! му-ук! туса ĕне мĕкĕрни илтĕнет. *(В.Алентей.)*

**⭘◆ 48. Аса илĕр: аффикс хушас умĕн дефис хăçан лартаççĕ-хисеп ячĕ хыççăн-и, пысăк сас паллисемпе çырнă кĕскетӳ хыççăн-и? Сахалтан та икĕ тĕслĕх шухăшласа тупса çырăр.**

➤ Сăмахсене пысăк е пĕчĕк сас паллинчен пуçласа çырасси ***семантикăпа синтаксис принципĕсене*** пăхăнать. Пайăр мар ятсене пĕчĕкрен пуçласа, пайăр ятсене пысăкран пуçласа çыратпăр. Пысăкран çырас йĕрке предложени пуçламăшĕнче те пур. Тĕслĕхрен: *Музыка тата театр ĕçĕпе кăсăкланнă, пĕр вăхăт Шупашкар районĕн Шемшер ял театрĕн труппине ертсе пынă Федор Павлович Павлов комозитор 1922 çулта çырнă статья чăваш театр искусствин вăйне уçса парать.* (Н. Кириллова.)

Примечание [ПЮ1]:

**49. Сăмахсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырнин сăлтавне каласа парăр.**

1. Станислав Павлович Владимиров – артист, эстрада юрăçи, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ, 1990 çултанпа Çеçпĕл

Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче ĕçленĕ, 60 яхăн комедипе драма сăнарĕсене калăпланă. Вĕсен шутĕнче – Володя («Кĕтрĕм сана кĕтрĕм», Николай Сидоров), Иртис («Урасмет», Борис Чиндыков) тата ыттисем те.

Станислав Владимиров юрăсем çырать, хăйĕн концерчĕсене хăех хатĕрлесе irттерет.

Чăваш Республикин Вăрнар районĕн Çăкаллă Явăш ялĕнче 1965 çулта çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче çуралнă. *(«Тăван Атăл».)*

* **Асăрхăр: *хăйĕн* (*й* саспаллипе) çырнă. *Й* сас палли *хăех* сăмахра мĕншĕн çук?**

* ***Çăкаллă* сăмахра мĕншĕн икĕ лл çырнă?**

* **Хисеп ячĕсене мĕнле палăртнине тата епле çырнине сăнăр. Мĕн калама пултаратăр?**

**50. Хăвăр лайăх пĕлекен çыннăн – аçăр-аннĕрĕн, тăванăрăн, артистăн, юрăçăн, предпринимателĕн, фермерăн тата ыттин биографине 4–5 предложенипе çырса парăр.**

➤ Сăмахсене кĕскетсе çырассин принципĕ ***правилăсенчен*** паллă. Вĕсем çаксем: 1) сăмаха хупă саспаллипе пĕтерсе кĕскетмелле*:* ***ур. к.*** *– урăхла каласан;* ***ват. сăм.****– ваттисен сăмахĕ,* ***с.*** *– страница; 2)* пĕр пек хупă сас паллисем юнашар чухне пĕрне катертмелле: ***пĕр. х.*** *– пĕрреллĕ хисеп,* ***грам. йăн.*** *– грамматика йăнăшĕ;* юнашар сас паллисем расна чухне иккĕшне те хăвармалла: ***танл.*** *– танлаштарăр,* ***çукл.*** *– çуклăх.* Нумай сăмахлă ятсене кĕскетес туртăм пур (*ЧПГĂИ – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăлăхĕсен институчĕ, ЧППУ – Чăваш патшалăх педагогика университечĕ*), анчах пирĕн çырура вăйлă аталанман. Çитменнине, кĕскетӳсене асра тытма, мĕн пĕлтернине уяма йывăр.

Сӑмах пайӗсене пӗр йӗркерен теприне куҫарнӑ чухнехи принцип вӑл – ***сыпӑк принципӗ.*** Ҫавӑнпа сӑмахсен сыпӑкӗсене уйӑрма пӗлмелле: *ҫӗнӗ -лле* е *ҫӗнӗл-ле*; *ҫӑр-ттан* е *ҫӑрт-тан.* Практикӑра *ҫӑ-рттан* куҫару та тӗл пулать.

**51. Куҫару чиккисене дефис лартӑр, куҫару варианчӗсем пулсан юнашар скобка уҫса тепре ҫырса парӑр. Ӑҫта куҫару тума ҫук – ӑнлантарӑр.**

Миккуль аллинчи нухайккине ывӑтса ячӗ те Ҫимун пӳртне кӗрсе кайрӗ, ҫенӗке тапчанӗ ҫине выртрӗ. Суранӗ вара хытах ыратса кайрӗ те, ҫыхнӑ пир витӗр юн сӑрхӑнчӗ. *(Л. Сачкова.)*

➤ Сӑмахӑн е морфемӑн диалектсенче, кулленхи калаҫура тӗл пулакан варианчӗсенчен хӑшне норма тесе пӑхмаллине, грамматика енчен хӑшӗ тӗрӗссине уҫӑмлатакан правилӑсем орфографи правилисем шутне кӗмеҫҫӗ.

**52. Вуласа тухӑр. Правило мӗншӗн орфографи правили мар – шухӑшӑра хӑвӑр тӗслӗхӗрсемпе усӑ курса ӗнентерӗр.**

42§. ***Ӑ, ӗ*** сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсене пару падежӗнче ҫакна шута илсе ҫыралла:

1. Сӑмах вӗҫӗнчи ***ӑ, ӗ*** сасӑсем тухса ӳкеҫҫӗ, ***-а(-е)*** падеж аффиксӗ хупӑ сасӑ ҫумне хушӑнать: *пулӑҫӑ – пулӑҫа; карланкӑ – карланка; тимӗрҫӗ – тимӗрҫе; тенкӗ – тенке, евчӗ – евче; пӗрчӗ–пӗрче; каччӑ – качча.*
2. Вырӑсларан йышӑнакан сӑмахсенче юлашки ***ӑ, ӗ*** ҫумне ***-на(-не)*** хушмалла: *общество – обществӑна; кофе – кофӗне.*

**53. Чӑваш чӗлхин «Тӗрӗс ҫырмалли правилисене» тишкерӗр. Вӗсенчен литература чӗлхине тӑвассипе ҫыхӑннине пӗрне суйласа илӗр те вӑл орфографипе ҫыхӑнманнине ӗнентерӗр.**

**54. Хаçат-журналта тунӑ йӑнӑшсене тупса тӳрлетсе çырса илĕр. Йӑнӑш орфографипе çыхӑннӑ-и, литература чĕлхин нормине пĕлменнипе-и?**

1. Пирĕн ялтан вӑрçӑна 150 çын тухса кайнӑ. 2. Магни какайра, бананра, мӑйӑрта, кӑмпара, çĕр улмире, хĕрлĕ кӑшманра, томатра, кĕрпере пур. 3. Киле таврӑнтӑм, сывлӑх лайӑх марне туйнӑран Патӑрьеле кайрӑм. 5. Парафин пахча çимĕçе çĕресрен сыхлать, типме памасть. 6 Тирпейлĕ хуçа арӑмĕсем тĕпелте икĕ ал шӑллирен кая тытмаççĕ. 7. Пахча çимĕçрен мĕн кӑна ӑсталаман-ши: пукане, выльӑх, чечек, чĕрĕп... 8. Федор Иванович – пӑшине вӑтӑр метртан персе антарнӑ.

***«Фонетикӑпа орфоэпи. Графикӑпа орфографи» темӑна вĕренннине аса илмелли ĕçсем***

**55. Уçӑ фонемӑсене тупӑр, хӑш йышши пулнине кӑтартса таблицӑна вырнаçтарӑр, скобкӑра фонема хӑш сӑмахран иккенне кӑтартӑр. Ку е вӑл фонема темиçе сӑмахра та пулсан – сӑмахĕсене пĕр скобкӑна пухмалла.**

**Шӑлан**

Тĕмĕн-тĕмĕн ларакан шӑлан
Çурӑлать сенкеррĕн те шупкан.
Пĕчĕк шуçӑм тейĕн эс ӑна:
Илемпе вӑл илĕртет чуна.
Кĕркунне çырли пулса çитсен
Этеме сиплет вӑл чир-чĕртен. *(Ю. Сементер.)*

| Чĕлхе çĕкленĕвĕ | Мал рет | | Кай рет | |
|---|---|---|---|---|
| | тутапа | тутапа | тутапа | тутапа |

| | пулни | пулманни | пулни | пулманни |
|---|---|---|---|---|
| çӳл | | | | |
| вăта | | | | |
| аял | | | | |

*** Сăвă сыпăкĕнче чăваш чĕлхине кăтартуллă мĕнле уçă фонема тĕл пулмасть? Ăна таблицăн хăш кĕлеткине вырнаçтарăттăр?**

*** *Кĕркунне* сăмах *сиплет* сказуемăй туртăмĕнче тăнине чарăну паллипе епле кăтартмалла? Пĕр паллă вырăнне теприпе усă курма юрать-и? Мĕншĕн?**

**56. Предложенисене вуласа тухăр. Кашни сăмахăн сыпăкĕсене тупăр та мĕнле сасăпа пĕтнине тата пуçланнине кура таблицăна çырăр.**

1. Кĕлетре тирпейлĕ те ирĕклĕ. Çакна курсан Сантăр чĕри рехетленсе тапать, пуçĕнче ырă ĕмĕт явăнать. *(З. Нестерова.)* 2. Тухтăр тăма ирĕк панăранпа пĕр вырăнта лармасть старик. Чирлĕ çынсенчен ырă энерги тухмасть тесе час-часах хĕвел çине тухса ларать, хăй пекех ураланнисемпе калаçу çăмхине сӳтет. *(Е. Мустаева.)*

| Сăмах | Сăмахăн сыпăкĕсем | Сыпăк пуçламăшĕ | Сыпăк пĕтмĕшĕ | |
|---|---|---|---|---|
| | | | уçă сыпăк | хупă сыпăк |
| кĕлетре | кĕ-, -лет-, -ре | витĕнтернĕ | кĕ-, -ре | -лет-, |
| | | витĕнтермен | | |

**57. Сăвва пусăм йĕркине шута илсе вулăр.**

Сар кĕр килчĕ çиçĕнсе.

Çук, пĕтмерĕ чĕрлĕх тĕсĕ:

Тип чечекĕн куçĕнче

Хĕм пĕрчи пек çĕнĕ тĕшĕ.

Хăй тĕпренчĕк пек кăна.

Çуркунне çитсессĕн курăн –
Кĕр çаратнă вырăна
Йăл çутма хăвачĕ пур ун. *(А. Воробьев.)*

*** Юлашки предложение мĕншĕн хутлă темелле? Хутлă предложенин тытăмĕ мĕнле? Схемине ӳкерме пултараятăр-и – тăрăшса пăхăр-ха.**

**58. Чăваш орфографийĕн пайĕсене аса илĕр. Вăл пайсене йĕркелекен правилăсене мĕнле-мĕнле принципа пăхăнса çыраççĕ – тĕслĕхсем тупса ĕнентерĕр.**

?! **59. Сирĕн шухăшăрпа, орфографи правили йышне пуплевпе грамматика нормисене тăваканнисене мĕншĕн кĕртнĕ?**

**60. Тест ĕçĕсене тăвăр.**

1-мĕш вариант

1. Хăш фонемăна пĕр позицире пĕр сас паллипе, тепĕр позицире тепĕр сас паллипе палăртатпăр?

а) [ы] фонемăна б) [ӳ] фонемăна
ă) [э] фонемăна в) [и] фонемăна

2. Мĕншĕн *мешчен* (*шч* лартса) çырмалла?

а) алфавитра ***ш*** тата ***ч*** сас паллисем икĕшĕ те пур пирки
ă) сăмаха вырăссенчен калаçупа йышăннă пирки
б) сăмаха вырăссенчен çырупа йышăннăран
в) алфавитра ***щ*** сас палли çукран

3. Чăвашла тĕрĕс çырнă псевдонимсем ăçта?

а) Сарпи, Теветкел, Ахмане, Ытарай, Хирпӳ, Урташ, Силĕм, Ишентей
ă) Эсхель, Вэскер, Эктель, Ялгир, Ырзем, Агивер, Кервень, Рзай, Янгас
б) Сениэль, Ыдарай, Кибеч, Айдаш, Урдаш, Хирбю, Ахманэ, Сарби
в) Силэм, Агивер, Хузангай, Ордем, Эльгер, Эльмен, Ижендей

4. Йăнăш ăçта пур?

а) вăйă, вăййи; статья, статьи б) кĕвĕ, кĕвве; кĕсье, кĕсйӳ

ă) хăйă, хăййа; çемье, çемьем в) тилĕ, тиллĕн; платье, платьем

5. Йăнăш пур йĕркене кăтартăр.

а) нумаях мар, сулахаялла, пустуях, часовойăн

ă) кинемейĕн, кинемее, хăйех, каяймастăп

б) тайăн, туя, суяна, сийĕн-сийĕн висте

в) вăя хурса ĕçле, пĕр пăт таякан пул, самаях ĕшен

2-мĕш вариант

1. Хăш фонемăна пĕр позицире пĕр сас паллипе, тепĕр позицире тепĕр сас паллипе палăртатпăр?

а) [ы] фонемăна б) [ӳ] фонемăна

ă) [и] фонемăна в) [э] фонемăна

2. Мĕншĕн *ешчĕк* (*шч* лартса) çырмалла?

а) алфавитра ***ш*** тата ***ч*** сас паллисем икĕшĕ те пур пирки

ă) сăмаха вырăссенчен çырупа йышăннăран

б) сăмаха вырăссенчен калаçупа йышăннă пирки

в) алфавитра ***щ*** сас палли çукран

3. Чăвашла тĕрĕс çырнă псевдонимсем ăçта?

а) Хузангай, Ордем, Эльгер, Эльмен, Ижендей, Силэм, Агивер

ă) Эсхель, Вэскер, Эктель, Ялгир, Ырзем, Агивер, Кервень, Рзай, Янгас

б) Ыдарай, Кибеч, Айдаш, Урдаш, Хирбю, Сениэль, Ахманэ, Сарби

в) Ахмане, Ытарай, Хирпӳ, Сарпи, Теветкел, Урташ, Силĕм, Ишентей

4. Йăнăш ăçта пур?

а) кĕвĕ, кĕвве; кĕсье, кĕсйӳ б) хăйă, хăййа; çемье, çемьем

ă) вăйă, вăййи; статья, статьи в) тилĕ, тиллĕн; платье, платьем

5. Йăнăш пур йĕркене кăтартăр.

а) кинемейĕн, кинемее, хăйех, каяймастăп

ă) нумаях мар, сулахаялла, пустуях, часовойăн

б) туйăну, туя, суяна, сийĕн-сийĕн висте

в) вăя хурса ĕçле, пĕр пăт таякан пул, самаях ĕшен

Тĕрĕс хуравсем

| Ĕç номерĕсем | | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Хуравсем | 1-мĕш вариант | ă | ă | а | а | ă |
| | 2-мĕш вариант | в | б | в | ă | а |

## Лексика. Фразеологи лексики. Лексикографи

### 1. Чăваш чĕлхин лексика тытăмĕ

➤ Чăвашла пуплевре усă куракан тата чăвашла словарьсенче тĕл пулакан пĕтĕм сăмах йышне чăваш чĕлхин ***лексики*** теççĕ. (*Лексика* термин – грексен «сăмах» пĕлтерĕшлĕ *lexikos* сăмахĕнчен пулнă.)

*Лексика* терминăн пĕлтерĕшĕ тĕрлĕрен: *пĕтĕм халăх усă куракан лексика, ятарлă лексика, диалект лексики, литература чĕлхин лексики, писатель лексики* т. ыт. те.

Ăслăлăхăн лексикăна ятарласа тĕпчекен енĕсем пур: лексикологи, семасиологи, ономасиологи. Лексикăна пĕлтерĕше кура кăна мар, грамматика тытăмне кура ушкăнлакан ăслăлăха морфологи теççĕ.

Лексика – сăмах йышĕ пулсан – сăмах хăй мĕн-ши?

***Сăмах*** – чĕлхен тĕп единици. Çавăнпа пуплеве сăмах патне çитиччен пайласа тишкереççĕ. Сăмаха ăнлава палăртакан единица тесе пăхаççĕ, словарьсене кĕртеççĕ. Ăнлава пĕлтерекен единица тесе пăхма йышăннă пулин те сăмахсем пĕлтерĕшсĕррисем те пур. Вĕсем шутне союзсем, хыç сăмахсем, татăксем кĕреççĕ. Акă *Люда тивĕçлĕ*

*канăва тухнă хыççăн та тӳрех повар ĕçĕнчен уйрăлмарĕ* (В. Кириллова) предложенире *хыççăн* лексема хыç сăмах пулать, *та* сăмах – татăк, *-ех* – татăк аффикс, ытти сăмахсем пурте – пĕлтерĕшлĕ сăмахсем, ăнлава палăртаççĕ.

Лексика – уçă тата пĕр вырăнта тăман система. Çакна лексика çĕнĕ сăмахсемпе вĕçĕмсĕр пуянланса пынипех ĕнентерме пулать: *йăхташ, ĕçтеш, управăш, ӳнерçĕ, космонавт,* волонтер, *чат, коронавирус, пандеми.* Вĕсем самана таппине кăтартаççĕ. Çав вăхăтрах ку е вăл сăмахпа пĕр-пĕр истори тахăрĕнче усă курма пăрахни те пулать, анчах çакă сăмах чĕлхерен тухса ӳксе çухалнине пĕлтермест, мĕншĕн тесен кĕнекесенче, хаçат-журналта, халăх сăмахлăхĕнче сыхланса юлать.

**61. «Хыпар» хаçатăн 2020 çулта ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче тухнă номерĕнче (1 стр.) пичетленнĕ «Хамăртан мĕн килнине йăлтах тăватпăр» статьян кӳртĕм пайне вулăр та самана паллине кăтартакан сăмаха тупăр.**

Ака уйăхĕн 27-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре коронавируспа *463 çын чирленĕ.  Вĕсенчен 47-шĕ сывалса тухнă. Хальхи вăхăтра медиксем 1522 çынна тĕрĕслесе тăраççĕ: 997 çынна килте сиплеççĕ, ыттисене (18-ăшĕ – çул çитмен ачасемпе çамрăксем) больницăна хунă.

**62. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшне «Чăвашла-вырăсла словарьпе» усă курса тупăр та тетрадĕрсене çырса хурăр.**

1. Хĕрарăма *чĕм* кĕчĕ. 2. Вун ултă *ридван* çаврăнмалăх сарлака картиш. 3. Акă *нухайкки* те пур. 4. Антунипе Çимун пĕшкĕнсех виле тумне тимлĕ сăнарĕç: унăн тимĕр *куякĕ* пит кăсăклантарчĕ. 5. *Сĕлтертен* кайнă хĕр утă купи айне тăн çухатса персе анчĕ. *(Л. Сачкова.)*

➤ Сăмахсене тĕпченĕ чухне вĕсен пĕлтерĕшне, хăçан пулса кайнине, ăçта-ăçта усă курнине, усă куру тăтăшлăхне шута илеççĕ.

**2. Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ. Пĕр пĕлтерĕшлĕх, нумай пĕлтерĕшлĕх. Сăмахăн тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕ**

➤ Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ вăл – сăмах палăртакан ăнлав. Акă *каврăç* япала ячĕ питĕ хытă вулăллă, çинçе те вĕтĕ çулçăлă йывăçа палăртать. *Мăклăх* сăмаха илтсен чăваш ăсĕнче «мăк ӳсекен шурлăхлă вырăн» ăнлав çуралать. *Килентер* глаголпа пуплевре «ырă туйăм хускатса чуна йăпат, канăç кӳр» ăнлавшăн усă куратпăр.

Асăннă сăмахсем, асăрхарăр пулĕ, пĕр пĕлтерĕшлĕ. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем те пур. Тĕслĕхрен, «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекинче» (2-мĕш том, 2014. – 326 с.) *кисрев* сăмахăн икĕ пĕлтерĕш пур тесе палăртнă: **1.** Вăйлă чĕтрени, силлентерни; чĕтрев. *Çĕр чĕтревĕ.* **2.** Канăçсăр вăхăт; пăлхану, пăлхав, пăтрав. *Пулать кисрев – пăлханĕ Атăл.* (М. Удалов.).

**63. «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекинчен» (3-мĕш том, 2016. – 215–216 сс.) илнĕ *мăран, мăрăлтат* сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тата вĕсене уçăмлатакан тĕслĕхсене сăнăр. Пĕлтерĕшĕсем миçе?**

**МĂРАН 1.** Çаврăнăçусăр та кăнттаммăн хускалакан; вĕселенчĕк, йăраланчăк, мĕшĕлти. *Пăхма мăран курăнсан та Александр Петрович çав тери йăрă çын.* (Хв. Уяр.) ‖ Лăпкă, тӳлек(кĕн); майĕпе, вăрах(хăн), васкамасăр. *Выл лапамĕпе тĕтре мăраннăн упаленет.* (А. Волков.) **2.** Ӳркенчĕк, кахал, наян; мăнттай, ханттар, услап. *Пĕр юлташ пур манăн...Тӳсме çук мăран вăл, Тӳсме çук кахал.* (А. Ĕçхĕл.) **3.** Туйăмĕсене кăтартман е çынсемпе хутшăнма юратман; туйăмсăр, сӳрĕнкĕ, ӳрĕк-сӳрĕк. *Иван Петровичпа паллашнă чухне вăл сиввĕн пăхакан, мăран çын пек курăнать.* (В. Паймен.)

**МĂРĂЛТАТ 1.** Уçăмсăррăн кала; мăкăртат, мăкăлтат. *Тукташ хаçат хатĕрленĕ вăхăтрах çĕнĕ рифмăсем шыраса мăрăлтатса ларатчĕ.* (В. Паймен.) **2.** Кăмăлсăррăн мăкăртат; йăсла, лăрка, нăрла. *Ман сирĕн хыççăн тата урай мунчали йăтса çӳремелле-и?* (А. Савельев–Сас.) **3.** Çăвара уçи-уçми çурма сасăпа юрла; ĕнĕр, ĕнĕреш. *Райцентртан тухсанах Василий Петрович пĕр хушă пĕрре мăрăлтатса, тепре шăхăрса юрласа пычĕ.* (Тихăн П.) **4**. Кушак пирки: янравсăр, чĕтренкĕрех сасă кăлар; мăрла(т). *Ула кушак Эриван ури çумне тĕршĕнсе мăрăлтатма пуçларĕ.* (П. Афанасьев.)

🕮 **64. «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекинче» (3-мĕш том, 2016. – 225–226 сс.) *мăшла, мăшлат* сăмахсен тымарĕсем пĕр пулни пĕлтерĕшсенче палăрнипе палăрманнине сăнăр.**

**МĂШЛА** Шавлăн сывла, мăшăлтат, мăшлат; хашка, пашка. *Автомобиль пек мăшласа пырса кĕтĕм хайхи хула мунчине.* (И. Мучи.)

**МĂШЛАТ 1.** Лăпкă сасăпа тикĕс те тӳлеккĕн сывла; мăшăлтат. *Витере ĕнесем мăшлатса кавлени кăна илтĕнсе тăчĕ.* (Д. Гордеев.) **2.** Шавлăн сывла, ассăн сывла, хашлат; пӳлĕнсе сывла, хашăлтат, хашка. *Хыттăн мăшлатса сас паллисене аран-аран кукăрта-кукăрта хуратчĕ Юкур.* (В. Алентей.)

➤ Нумай пĕлтерĕшлĕх сăмахăн тӳрĕ пĕлтерĕшĕсем пĕрлешнипе те куçăмлă пĕлтерĕшĕсем пĕрлешнипе те пулма пултарать. Маларах пăхса тухнă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекинче» нихăшне те куçăмлă темен.

Словарьте ку е вăл пĕлтерĕшĕ куçăмлă тесе кăтартнă сăмахсем те пур. Тĕслĕхрен, Словарĕн 2-мĕш томĕнче (2014. – 285 с.) *кĕслеçĕ* сăмахăн икĕ пĕлтерĕшне кăна кăтартнă: **1.** Кĕсле калакан (е ăна тăвакан) ăста: *Кĕслеçĕсем кĕслине тытаççĕ те тухаççĕ, пуçлаççĕ те юрлаççĕ.* (Г. Кр.–Кĕçĕнни) *Эс кĕслеçĕ пулсан та, кĕсле хĕлĕхне*

*янратми пултăн.* (П. Осипов.) **2.** Илемлĕ юрлакан кайăк пирки: юрра ăста кайăк, юрăçă кайăк: *Халĕ сахалланчĕç çав кĕслеçĕ кайăксем.* (В. Алентей.) Вĕсенчен 2-мĕшĕ, каламасăрах паллă, куçăмлă, мĕншĕн тесен çынна пĕлтерекен сăмахпа кайăка палăртнă.

🕮 **65. Нимле словаре пăхмасăр калама пулать-и: *кивел* сăмахăн 8 пĕлтерĕшĕнчен хăшĕсем тӳрĕ, хăшĕсем куçăмлă? Куçăмлă пулнипе пулманнине таблицăна номерĕсене лартса кăтартăр.**

1. Вăхăт иртнипе малтанхи капаша çухат; çĕрĕш, муртаклан: *Пӳрт çинче кивелнĕ улăм Сийĕн-сийĕн сĕвĕнет* (С. Тимпай.) 2. Тăтăш усă куринипе ванса-çĕмĕрĕлсе юрăхсăра тух: *Комбайнсем вăрçă вăхăтĕнче кивелсе-ванса пĕтнĕ.* (А. Ĕç.) 3. Нумай е тирпейсĕр тăхăннипе юрăхсăра тух; касăл, хăршăл: *Сар çип тутăр ай кивелчĕ* (Чăваш хал. сăмахлăхĕ.) 4. Йӳçсе кай, пăсăл, кăмăскалан: *Сăра та пурччĕ те, кивелнĕ.* (И. М.−Кошкинский.) 5. Япăх куракан пул: *Куçĕ кивеле пуçларĕ мучин.* (В. Чебоксаров.) 6. Туйăмсем çинчен: вăхăт иртнипе малтанхи çивĕчлĕхе çухат: *Юрату ман ан кивелтĕр* (П. Вашават.) 7. Самана е вăхăт иртнипе пĕлтерĕше çухат, пурнăçра усă курма юрăхсăр пул: *Халăх валли çырнă юрă нихăçан та кивелмест* («Хыпар».) 8. Çынсемпе чĕр чунсем пирки: малтанхи сăн-сăпата çухат; ватлăха сулăн, ватăл: *Матка ватăлчĕ, кивелчĕ.* (В. Петров.)

| Тӳрĕ пĕлтерĕшсем | Куçăмлă пĕлтерĕшсем |
| --- | --- |
| | |

➤ Сăмах куçăмлă пĕлтерĕш йышăнасси ăнлавпа тӳр килекен кĕрет чăнлăх (япала, паллă, ĕç) тепĕр чăлăхпа (япалапа, паллăпа, ĕçпе) епле çыхăнура тăнинчен килет. *Акă Иркка вучах шăпланса çунасса, вут **чĕлхисем** пĕчĕкленессе кĕтсе тăчĕ* (М. Ухсай.) предложенире *чĕлхисем* сăмах çулăм татăкĕсене пĕлтерет. Çулăм татăкĕ формипе çын çăварĕнче вырнаçнă чĕлхе майлă тăслака, чĕлхе евĕр вылять. Çак евĕрлеве кура пулнă пĕлтерĕше ***метафора*** теççĕ.

(*Метафора* термин грексен «куçарни» пĕлтерĕшлĕ *metaphora* сăмахĕпе çыхăннă.)

Куçăмлă пĕлтерĕш тумалли мелсем тата та пур. Вĕсем – синекдоха тата метоними.

***Синекдоха*** вăл – япалан (ĕçĕн) пай ятне пĕтĕм япалана (ĕçе) палăртма усă курнă чухнехи пĕлтерĕш. (*Синекдоха* термин грексен «майлаштарни» пĕлтерĕшлĕ *sinekdoche* сăмахĕпе çыхăннă.) Тĕслĕхрен, хăш-пĕр калаçура хӳри мĕн евĕрлине кура кашкăра *тукмак* теççĕ: *Тукмаксем пит ĕрчесе кайнă çулсем те пулчĕç çав.* Çавнашкалли *Штаба тăшман чĕлхийĕ Тытса килес пулать* (П. Хусанкай.) предложенире те пур. Унта *чĕлхе* сăмах штаба кирлĕ информацие каласа пама кирлĕ нимĕç çар çыннине пĕлтерет.

***Метоними*** вара – пĕр-пĕринпе çыхăннă япалапа ĕçрен пĕрин ятне теприне палăртма усă курнă чухнехи куçăмлă пĕлтерĕш. (*Метоними* термин грексен «тепĕр хут ят пани» пĕлтерĕшлĕ *metonumia* сăмахĕпе çыхăннă.) Акă Муркаш шывĕн хĕрринче вырнаçнăран шыв ятне халăх çынсем пурăнакан вырăна – *Муркаша* панă. Юнкă шывĕн ячĕллĕ *Юнкă* ял пур. Метоними *Хамăрăнах пуян чĕлхемĕр пур иккен!* (А. Афанасьев); *Ăслăлăхпа ăсталăх чĕлхипе ирĕклĕ калаçма пултаракан çеç чăн-чăн телейлĕ* (П. Осипов) предложенисенче усă курнă *чĕлхе* сăмахра та палăрать.

*Чĕлхен шăмми çук* (Ч. х. с.) предложени хăй куçăмлă пĕлтерĕшлĕ («Калаçма тытăнсан тем те калаçма пулать»), çапах *чĕлхе* сăмахăн пĕлтерĕшĕ тӳрĕ. Çавăнпа нимле метафора та, синекдоха та, метоними те çук.

***Пĕлетĕр-и:*** *сĕрен* ***самахăн пĕлтерешĕ епле пулнă?***

Ваттисем каланă тăрăх, Калăм кунĕнче вилнĕ тăвансен чунĕсем пурăнма юлнисене курма яла таврăнаççĕ иккен, Сĕрен кунĕччен хăналанаççĕ. Сĕрен кунĕ иртсен масар-çăва çине таврăнма

вăхăт çитет. Хăнасен çулĕ лайăх курăнтăр тесе çамрăксем ту çине улăхса вут чĕртнĕ, сĕрен ятлă музыка инструменчĕн кăра сассине те кăларнă.

«Сĕрен!» – тесе кăшкăрас, сĕрен сассине кăларас йăла чăваш пăлхарсен пин çул каяллах та пулнă. Ун чухне мăн асаттесен аслашшĕсен çапăçура тăшмана хăваласа ярас, хăвалаканнисене хавхалантарас тĕллев лартнă.

Авалхи çапăçу йăли каярах тăванлăх йăлине куçнă. Хăрату сăмахĕ музыка инструменчĕн ячĕ пулса пирĕн вăхăта çитнĕ. *(В. Чернов.)*

**66. *Чĕрĕ* сăмахăн пĕлтерĕшĕсене синоним, антоним сăмахсемпе усă курса калăр. Пĕлтерĕшсем мĕн иккенне (метафора-и, синекдоха-и, метоними-и?) предложени номерĕсене таблицăра çырса кăтартăр.**

1. Кам пĕлет: те *чĕрĕ*-ха пиччӳ, те тахçанах пуçне хунă? *(Л.Агаков.)* 2. Чăваш ялĕн куллен кунхи пурнăçĕнченех тухса пыракан *чĕрĕ* калаçусем инçете илтĕнмелле янăраççĕ. *(П. Хусанкай.)* 3. *Чĕрĕ* сывлăшра пуйăс кăшкăртни илтĕнет. *(Хв. Уяр.)* 4. Ачасен юлашки ĕç юлчĕ: аквариум валли *чĕрĕ* пулă тытмалла *(К.Турхан.)* 5. *Чĕрĕ* куçлă типшĕм карчăк хăй çывăхнерех ларма сĕнет. *(Хв. Уяр.).* 6. Эпир тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк тытатпăр та *чĕрĕ* кĕтес тăватпăр. *(К. Турхан.)* 7. Офицер ним тăвайман енне *чĕрĕ* хулă ярса тытрĕ... *(А. Талвир.)* 8. Ялта партизансемсĕр пуçне çаплах пĕр *чĕрĕ* чун та курăнмасть-ха. *(Хв. Уяр.)* 9. Питĕ *чĕрĕччĕ*-ха пĕчĕк хĕр – халь тем амак пулчĕ? *(М.Трубина.)*

| Тӳрĕ пĕлтерĕш | Куçăмлă пĕлтерĕш | | |
|---|---|---|---|
| | Метафора | Синекдоха | Метоними |
| | | | |

**67. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшĕ мĕн иккенне метафора-и, синекдоха-и е метоними- предложени номерĕсемпе кăтартăр.**

1. Тата капла пӳрт стени те тикĕсрех, мăк хушăкĕсем те хĕсĕкрех. Кунта Çтаппан каллех хăй *аллине* сисет. Савăнать. *(А. Ĕç.)* 2. Кăçал тата ывăла та мăшăр тупса патăмăр, кин *кĕртрĕмĕр. (Ст. Аслан.)* 3. Ухиме Валентинăна сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ те вĕçĕмсĕр алăкăн-тĕпелĕн *кумма* тытăнчĕ: пĕрре чей тултарать, тепре турилккепе çăмарта, хăйма, çу киле-киле лартать. *(А. Талвир.)* 4. Çавă çав, Ăçти çук Таçукăн чĕлхи-çăварĕ *пыл та çу. (А. Ĕç.)* 5. Эсир килнĕ *ятпа* хăна пуçтараççĕ. (Хв. Уяр.) 6. Эпĕ сана та киле кайма сунмастăп, а мĕн унта ытлашши *пыр* пулса пурăнма? *(Ç. Элкер.)* 7. Мĕнле *пуçпа* тухăп эпĕ ун пек çынна? *(П. Осипов.)* 8. *Хут* пĕлменни пĕтерет. Сантăр куккана *хута* вĕрент тесе мĕн чул тилмĕрмен пулĕ эпĕ?! *(В. Элпи.)* 9. Хăй вăл пуçне çĕклемесĕрех шут шăрçине *шĕкĕлчет. (А. Ĕç.)* 10. Ман хыççăн тата тăватă шăллăмпа пĕр йăмăк пурччĕ. Тăрантар-ха çавăн чухлĕ *çăвара! (Л. Агаков.)* 11. Кĕрет Михаля *милици* хваттерне. *Милици* те çук. *(М. Трубина.)*

| Метафора | Синекдоха | Метоними |
|---|---|---|
| | | |

**68. Паллă тунă сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕш тĕсне – метафора-и, синекдоха-и, метоними-и тупăр.**

1) *ял* çывăрать, 2) *хаклă* хăна, 3) митингра *сăмах* кала, 4) тавралăх *тĕлĕрет*, 4) *çĕмĕрт* куç, 5) Петĕр – вăйă *пуçĕ*, 6) хĕвел *ури*, 7) хушпу *кĕмĕлĕсем* чăнкăртатаççĕ, 8) *пуклак* сăмах; 9) пуçлăх *пуканне* шанса пар; 10) çăвар *маччи*, 11) пит *çăмарти*, 12) ура *хырăмĕ,* 13) чӳрече *янахĕ,* 14) çăкăр *сăмси,* 15) *çил* çунат, 16) *тимĕр* шапа.

### 3. Омонимсем, синонимсем, антонимсем, паронимсем

➤ ***Омонимсем*** – пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. (*Омоним* термин «пĕрешкел» пĕлтерĕшлĕ *homos* тата «ят» пĕлтерĕшлĕ *onoma* пайсенчен тăракан грек сăмахĕпе çыхăннă.) Вĕсене словарь реестрне кăлараççĕ, статьясен пуçламăшне лартаççĕ,

ытти сăмахсем пекех кашнине уйрăм хулăн сас паллисемпе пичетлеççĕ, анчах цифрăсемпе палăртаççĕ: **АС**[1] (асра тыт), **АС**[2] (ас летчик), **АС**[3] (çил асать). Ку виçĕ омонимран малтанхи иккĕшĕ – япала ячĕсем: пĕри чăваш сăмахĕ, тепри вырăсларан йышăннăскер. Виççĕмĕш сăмах – чăваш глаголĕ.

**✪✪ 69. Чĕлхе словарьне илĕр те омонимсем тупăр. Омоним сăмахсен статйисем омоним маррисеннинчен уйрăлса тăнипе тăманнине сăнăр: омоним сăмахсен пĕлтерĕшĕ нумай-и, шучĕпе пурин те пĕр пек-и, пĕр пек мар-и? Куçăмлă пĕлтерĕшсем тĕл пулаççĕ-и? Омонимсем мĕншĕн расна пĕлтерĕшлĕ? Омонимсем хăш-хăш пуплев пайне кĕреççĕ? Хăвăр шухăшăра юлташăрсене каласа пама хатĕрленĕр.**

➤ Пуплев пайĕсем енчен пĕрешкел пулнипе пулманнине кура омонимсене икĕ пысăк ушкăна уйăраççĕ: тулли омонимсем тата тулли мар омонимсем.

***Тулли омономсем*** пĕр пуплев пайне кĕреççĕ:

**ĂВĂС**[1] Шупка симĕс хупăллă, чĕтренкĕ çулçăллă хăвăрт ĕрчекен йывăç тата унăн пĕрени.

**ĂВĂС**[2] **1.** Пыл хурчĕсем карас тума кăларакан шупка сарă тĕслĕ япала. **2.** Пушă карас, пыл карасĕ.

***Тулли мар омонимсем*** расна пуплев пайне кĕреççĕ, виçĕ ушкăна уйрăлаççĕ: омоформăсем, омофонсем, омографсем. Терминсен пĕрремĕш пайĕ грексен «пĕрешкел, пĕр пек» пĕлтерĕшлĕ *homos* сăмахĕпе çыхăннă. Phone, grapho пайсем те тымарĕсене вырăс чĕлхи урлă грек чĕлхине илсе каяççĕ. *Форма* пай – тымарне латин чĕлхин *forma* сăмахĕнчен илнĕ. ***Омоформăсем*** – тĕрлĕ пуплев пайне кĕрекен сăмахсен тан формисем: *сӳре* (япала ячĕ), *сӳре* (глагол): *Атте мотоблокпа сӳре сӳрет.* **Омофонсем** – тĕрлĕрен çырсан та пĕрешкел илтĕнекен сăмахсем: *кил* (чăваш сăмахĕ) – *киль* (вырăс чĕлхинчен çырупа кĕнĕ сăмах); *сут* (чăваш глаголĕ) –

*суд* (вырăс чĕлхинчен çырупа кĕнĕ япала ячĕ); *Илпек* (пайăр ят) – *илпек* («пархатарлă, ырă, нумай» пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕ).

***Омографсем*** пĕрешкел çырнă сăмахсенчен пулаççĕ: *тир* (выльăх тирĕ, чăваш сăмахĕ) – *тир* (пăшал пемелли вырăн; вырăссенчен çырупа йышăннă сăмах); *касса тат – касса ĕçлемест.*

**✪✪✪ 70. Словарьсенче омономсене тупăр. Вĕсем хăш-хăш ушкăна кĕнине калăр, шухăшăра словарь материалĕпе усă курса ĕнентерĕр.**

**?! 71. Уйăха, унăн пĕр-пĕр кунне кăтартнă чухне хăш-пĕр уйăхăн чăвашла ячĕсем хыççăн тӳрех число калама юрать: *кăрлачăн вун пĕрмĕшĕ, нарăсăн çирĕм пĕрмĕшĕ, раштавăн вăтăр пĕрмĕшĕ.* Çав вăхăтрах ăс-тăншăн *пуш, ака, çу, утă, çурла, юпа, чӳк* сăмахсем хыççăн *уйăх* сăмах калани вырăнлă пек: *юпа уйăхĕн иккĕмĕшĕ, чӳк уйăхĕн саккăрмĕшĕ* т. ыт. те. Çакă омонимипе çыхăнман-ши?**

➤ ***Синонимсем*** лексикологире – пĕр тан е çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. (Терминĕ грексен *sinonimos* «пĕр ятлă» сăмахĕпе çыхăннă.)

Пĕлтерĕшсем тан е мĕн таран çывăх пулнине кура синономсене икĕ ушкăна уйăраççĕ: тулли синонимсем, тулли мар синонимсем (ăнлав е идеографи синонимĕсем).

***Тулли синономсемпе*** пĕр-пĕрин вырăнне усă курма пулать: *сăлтав, йӳтĕм, çăмăл, йĕк, май, тӳрĕ, хайла; калаçу, пуплев, сăмах-юмах, халап, юмах, сăмах-пуплев; лайăх, аван, ырă, хӳхĕм, селĕм; имĕр, ир, тӳ; ишĕлтер, иш, ват, аркат, тустар* т. ыт. те.

***Тулли мар синоноимсене*** пĕр-пĕринпе мĕнле те пулин контекстра кăна ылмаштарма пулать. Вĕсене Е.Ф. Васильева чĕлхеçĕн «Чăваш чĕлхинчи синонимсен словарĕнче» (Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2014) *кал.* (калаçу сăмахĕ), *ырлам.* (ырламан сăмах), *кăнт.* (кăнттам сăмах), *вăрç.* (вăрçу сăмахĕ) йышши паллăсемпе кăтартнă. Тĕслĕхрен: *сăн, сăн-пуç, сăн-сăпат, сăнар, тĕс,*

*пĕр* (диал.), *манер; пичче, тете* (кал.); *пулăш, çĕкле* (куç.); *сиен, сăтăр, сарăп* (кив.).

Пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ сăмахсем ***синоним ретне*** тăваççĕ. Ку ретĕн чи пирвайхи сăмахне ***тĕп сăмах*** теççĕ, синоном словарĕнче чи мала вырнаçтараççĕ, пысăк сас паллисемпе пичетлеççĕ: ПИТĔР, çаклат, кĕлеле; КАРТ, сăхă, тăмха; СИЛЛЕ, лăска, лăка т. ыт. те.

Синоноим сăмахсен пĕлтерĕшĕпе сăмах майлашăвĕсемпе предоженисем те çӳреме пултараççĕ: СИЕНЛЕ, сарăпла, сиен кӳр (*е* ту), сăтăр (*е* сарăп) ту; УТИЯЛ, çи витти; ЧАПЛА, мухта, мухтава (чапа) кăлар; ЫЙХĂЛА, сĕнк, тĕлĕр, кăтăш пул, ыйхă пусрĕ.

Синонимсем сăмаха çине-çине темиçе хут каласран хăтараççĕ, чĕрĕ пуплевпе çырăва сăнарлăх кӳреççĕ.

**✪✪✪ 72. Е.Ф. Васильевăн синоноимсен словарьне илĕр те стиль паллиллĕ кирек епле статьяна тупăр. Ăна пĕтĕмпе вуласа тухăр. Стиль палли е урăх паллă лартнă синоним сăмах ытти синоноимсенчен мĕн енчен уйрăлса тăнине, вĕсемпе мĕн енчен пĕрешкел пулнине ăнлантарăр.**

**73. Паллă тунă синонимсене мĕнле пĕлтерĕш пĕрлештерсе тăнине тупăр. Уйрăмлăх пĕлтерĕшсенче епле палăрать?**

1. Сăмаха хыпаланса тимлĕн *калаçакан* Муççа яланах кирлĕ те вырăнлă ĕçсем çинчен çеç *пуплеме* юратать. Выляса е пули-пулми сăмахсемпе *пакăлтатса* вăхăта ирттернине чăтма пултараймасть. *(Ç. Элкер.)* 2. Васкасса *васка* та ытлашши ан *хыпалан* тенĕ ваттисем *(А. Артемьев.)* 3. Çавăнпа халь Партас та пĕтĕм чунтан ашшĕ пилне *ăмсаннă,* ашшĕ сайне *хапсăннă,* ашшĕ пекех пуян пулса пĕтĕм таврана хăйĕн чапне сарас тесе *ĕмĕтленсе* пурăннă. *(Ст. Аслан.)* 4. Ут çулакансене: «Çарану *илпеклĕ* пултăр, курăку *тухăçлă* пултăр, утту *перекетлĕ* пултăр!» – те. *(Г. Волков.)*

*** Паллă тунă сăмахсем синони ретне кĕнине синоним словарĕпе тĕрĕслĕр.**

➤ ***Антонимсем*** – хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. (*Антоним* термин грек чĕлхин *ant(i)* «хирĕç» тата *onoma* «ят» сăмахĕсем çинче никĕсленет.) Ученăйсем антонимсене чăваш чĕлхин хăй пĕлтерĕшлĕ кашни пуплев пайĕнче пур тесе ĕнентереççĕ: *телей – инкек, тус – тăшман, ай – çи* (япала ячĕсем), *ырă – усал, лайăх – начар, урлă – тăрăх* (паллă ячĕсем), *ан – хăпар, кĕр – тух* (глаголсем), *ĕлĕк – халĕ, хăвăрт – хуллен (наречисем).* Кирек епле пуплев пайне кĕрсен те антоним сăмахсем пахалăх пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа пуплеве сăнарлăх кĕртсе илĕртӳллĕ тăваççĕ. Предложенисем, тĕпрен илсен, пайĕсем расна тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă е сыпăнуллă хутлă пулаççĕ: *Тăшман йăпăлтатса хур тăвать, тусу тавлашса ыр тăвать.* (Ч. х. с.)

Антонимсен икĕ тĕсне уйăраççĕ: чĕлхе (лексика) антонимĕсем, пуплев (контекст) антонимĕсем. ***Чĕлхе антонимĕсен*** пĕлтерĕшĕ контекстсăрах паллă: *савăнăç – хуйхă, тăр – вырт.* ***Пуплев антонимĕсем*** контекстра кăна палăраççĕ: *Хуппи* ***сарă*** *та – тĕшши* ***хуртлă****; Чĕлхере –* ***пыл****, чĕрере –* ***пăр.*** (Ч. х. с.)

**74. Антонимсем чĕлхе антонимĕсем-и, пуплев антонимĕсем-и? Шухăшăра ĕнентерĕр.**

1. Мĕнле калăн ĕнтĕ, пурнăç савăнăçлă та хуйхăллă, кулăшлă та илемлĕ, асаплă та телейлĕ. *(В. Алентей.)* 2. Пĕри шырлăхра асапланнă чухне тепри ырлăхра киленме пултараймасть. *(А. Ĕç.)* 3. Тĕнчере чи йывăр, чи кăткăс «механизм» этем пулĕ-çке. Вăл пĕр вăхăтрах ачаш та, хаяр та чее те, тӳрĕ те; ăслă та, ухмах та; вăрă та, ăна тытаканни те; айăплаканни те, тӳрре тухаканни те. *(Хв. Уяр.)* 4.Эсрел те эсĕ, пирĕшти те. *(П.Хусанкай.)*

*** 3-мĕш тĕслĕхре сăмах майлашăвĕпе уйрăм сăмах хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулнине асăрхăр.**

➤ Антонимсен ретĕнче уйрăм сăмахсемпе юнашар сăмах ушкăнĕсем те тăма пултараççĕ.

**75. Антонимсене тупăр. Хирĕçле пĕлтерĕш сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсем хушшинче пулнине кăтартăр.**

Вутланатăп хаяр сивĕре,
Шăрăхра шăнса кӳтетĕп шутсăр
Е сĕм каç куратăп витĕрех,
Е кун çутинче пулатăп суккăр. *(Ю. Петров.)*

◆ **76. Ылтăн кĕрпе хура кĕр çинчен синонимсемпе тата антонимсемпе усă курса пĕчĕк сăвă е прозăллă хайлав çырăр. Вуласа парăр. Класра чи лайăх тесе палăртнă хайлава Интернетпа «Тантăш» хаçата е «Самант» журнала ярса парăр.**

➤ ***Паронимсем*** – пĕр тымартанах пулнă, пĕр евĕрлĕрех илтĕнекен, пĕр пуплев пайнех кĕрекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем (*пароним* термин грексен *para* «патĕнче, юнашар, çумĕнче» тата *onyma* «ят» сăмахĕсенчен пулнă, вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ): *сăмса – сăмсах, тăварак – тăварлак, хушăн – хутшăн, çаран – çерем, çӳпĕ – чӳпĕк – чĕлпĕк, яшă – ешĕл.* Сăмах варианчĕсенчен *(пĕрме, пĕрне; патвар, патмар)* тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ пулнипе уйрăлса тăраççĕ, омонимсенчен – пĕр тĕпрен пулса кайнипе.

**77. Паронимсем мĕн енчен пĕрешкел, мĕн енчен уйрăм пулнине ĕнентерĕр.**

1. Çӳхе çеç кĕпе тăхăннă хĕр самаях шăнма пуçларĕ пулас – ман çумарах *пăчăрăнчĕ. (А. Емельянов.)* 2. Пĕрремĕш шăраннă çăвĕ çине пăхсан...таса, сап-сарă, вăлча пек *пăчăрланса* тăрать. *(И. Мучи.)* 3. Эпĕ те хама пит кансĕр туятăп. Чун *пăчăрланать. (Ст. Аслан.)* 4. Вăл хĕре *пăчăртаса* илчĕ... *(Б. Васильев.)* 5. Салугин çамки çине шултра

тар тумламĕсем *пăчăртанса* тухрĕç *(Г. Краснов.)* 6. Сиксе ӳкме хатĕрленнĕ пек *пăчăртанчĕ* Исмаил. *(Г. Анкер.)*

**78. «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекин» 3-мĕш томĕнче (Шупашкар: Чăваш кĕнекеизд-ви, 2016) *лаплат* тата *лаплаттар* сăмахсене тупăр та вĕсем паронимсем пулнине ĕнентерекен иллюстраци тĕслĕхĕсене çырса илĕр. Асăрхăр: пĕлтерĕшсем тӳр килнĕ чухне пароним çинчен калаçма май пур-и?**

**79. *Ăнкар, ăнлан* сăмахсене пароним теме май паракан пĕлтерĕш номерĕсене таблицăна çырса хурăр.**

**ĂНКАР** 1. Япалан е пулăмăн тупсăмне чухла; тавçăр, ăнлан, тĕшмĕрт. *Хăвăрт ăнкар. Тĕплĕн ăнкар. Кăштах ăнкар. Çĕнĕлле ăнкар. Кĕвĕ-çемме ăнкар. Çут çанталăк саккунĕсене ăнкар. Мĕн тумаллине ăнкар. Шахвăртнине ăнкар. Ăнкарса юл. Ăнкарса çитер.*

¤ *Тăм хăватне эпĕ сакăр çултах ăнкарса илтĕм пулас.* (А. Емельянов.) ‖ Тепĕр чĕлхепе калаçнине ăнлан; тĕшмĕрт. *Вырăс чĕлхине, ют чĕлхене ăнкар. Вырăс учитель те чăвашла ăнкара пуçланă пулас.* (И.Петрова.)

2. Пулассине тĕрĕс палăрт; сис, туй, сĕмлен. *Хăрушлăха ăнкар. Малашлăха ăнкар. Мĕн хушасса ăнкар. Сисĕмпе ăнкар. Чун-чĕрепе ăнкар.* ¤ *Сăмах ăçталла куçасса Пухвир ăнкарса илчĕ ĕнтĕ.* (Н. Максимов.)

3. Ăна кĕр, тăна кĕр, чухлама пуçла. *Минренĕ Чакка ăнкармасăрах Сикет те тăрать, тавра пăхкалать.* (Ç. Элкер.)

**ĂНЛАН** 1. Япалан е пулăмăн пĕлтерĕшне ăс-тăна хыв, тупсăмне уçăмлă ту. *Вăрттăнлăха ăнлан. Йăнăша ăнлан. Çур сăмахранах ăнлан. Майĕпен ăнлан. Йăлтах ăнлан. Ăнланса ил. Ăнланса çит. Ăнланма пуçла. Ăнланма тăрăш.* ¤ *Вăйран сулăннă моряк боцман хушăвĕсене те тĕрĕс ăнланаймасть.* (В. Чебоксаров.)

| Сăмахсем | Пĕлтерĕшсем |
|---|---|
| ĂНКАР | |
| ĂНЛАН | |

- ***Вариантлă сăмахсем*** вĕсем сăмахăн пĕлтерĕшне витĕм кӳмен, анчах сасă енчен кăшт урăхларах тӳр килӳ пур сăмахсем. Вĕсем шутĕнче тĕпчевçĕсем, тĕпрен илсен, <ă> е <ĕ> фонемăсем тухса ӳкекен тата кĕрсе ларакан сăмахсене пăхаççĕ: ***сас(ă)*** *– уçă сасă, сас палли;* ***тул(ă)*** *– сарă тулă, хура тул;* ***ик(ĕ)*** *кĕнеке вула;* ***эп(ĕ)*** *вуннăмĕш класра вĕренетĕп; телейлĕ* ***пур(ă)нăçпа*** *пурăнмалла пултăр; вăрăм* ***турч(ă)ка.***

*Сехет – сахат, эрĕм – арăм, çулçă – шулчă, çăкăр – çăккăр* йышши вариантсенчен литература чĕлхин норми тесе пĕрремĕшне анчах йышăннă. Çав вăхăтрах местоименисенче *эпир – эпĕр, эсир – эсĕр* вариантсем пурте литература чĕлхинче усă курма юрăхлă шутланаççĕ. *Ку* местоимение пару падежĕнче *куна* вариантпа та, *кăна* вариантпа та калама (çырма) юрать. *Ху* местоименин тĕп падежех *хăв* вариантлă.

Единица ячĕсенче, *вуннă* тата *аллă* хисеп ячĕсенче хупă сасă йĕкĕрленнипе йĕкĕрленменни тулли вариантлăх тумасть, мĕншĕн тесен вариантсем пĕр-пĕрне ылмаштарма пултараймаççĕ. Вариантлăх хисеп ячĕ сыпăнуллă е пăхăнуллă çыхăнура мĕнле сăмахсен картинче тăнинчен килет: *пĕ**рр**емĕш – вун пĕ**р**мĕш, çирĕм пĕ**р**мĕш; а**лл**ă кайса кил – а**л**ă страница; и**кк**ĕ кала – и**к**ĕ хут кала.*

Сăмахăн варианчĕсенчен хăшĕ усă курма юрăхлипе юрăхлă маррине орфоэпи, орфографи, куçару, ăнлантару тата норма тăвакан словарьсене вуласа пĕлме пулать. Вуласа тата калаçăва итлесе пĕлтерĕш туйăмне аталантармалла.

**80. Вариантсенчен тĕрĕссисене суйласа илсе çырăр. Икĕ вариант та тĕрĕс пулсан иккĕмĕш варианта скобкăна хупăр.**

1. Эс (ху, хӑв) айӑплӑ. *(А. Талвир.)* 2. Сазонов иксӗмӗре те пӗрле курас пулсан (пиртен, пирӗнтен) хӑпма пӗлес ҫук. *(А. Артемьев.)* 3. Людмила Александровна мана (хӑйпе, хӑйӗнпе) пӗрле (илсе, исе) кайрӗ. *(Ст. Аслан.)* 4. Халӑх, (кашнийӗнех, кашнинех) ывӑл-хӗрӗ, мӑнукӗ пирӗн Юван пек хӑюллӑ та паттӑр пултӑр! *(В. Ухли.)* 5. − Ӗмӗтсем тенӗрен, вӗсем санӑн (нумай-и, нуммай-и)? − Ытлашши (нумаях, нуммаях) мар. *(М. Росскова, В. Семенова.)* 6. Ҫӗр (ҫумӗпе, ҫуммипе) тӗтре шӑвать. *(Т. Петрова.)*

**81. Хисеп ячӗсене сӑмахпа ҫырӑр.**

**Республика уй-хирӗнче**

2020 ҫулӑн ҫу уйӑхӗн 12-мӗшӗ тӗлне Елчӗк районӗн хуҫалӑхӗсем ҫурхи культурӑсене акмалли плана ытти районсенчен маларах тултарнӑ. Шӑмӑршӑ тӑрӑхӗн процентчӗ − 85.

Республикӑра пӗрчӗллӗ ҫурхи культурӑсене 114 пин гектар ҫинче акнӑ. Ку вӑл процентпа 59 пулать. Ҫу культурисем 4 пин ытла гектар йышӑнаҫҫӗ. Ҫӗр улми 596 гектар лартнӑ, пахча ҫимӗҫӗ акнӑ-лартнӑ лаптӑк − 190. Пӗр ҫул ӳсекен тӗрлӗ курӑк 8,6 пин гектара ҫитнӗ, нумай ҫул ӳсекеннисем − 2,2 пин гектара. *(«Хресчен сасси».)*

Примечание [ПЮ2]:

**4. Чӑваш лексикине пулса кайни енчен ушкӑнлани**

➤ Хальхи чӑваш лексикине пулса кайни енчен икӗ пысӑк ушкӑна уйӑраҫҫӗ: тӗп чӑваш сӑмахӗсем, урӑх чӗлхесенчен йышӑннӑ сӑмахсем.

***Тӗп чӑваш сӑмахӗсем*** виҫӗ ушкӑнне кӑтартаҫҫӗ: 1) пӗрлехи тӗрӗк сӑмахӗсем, 2) чӑваш чӗлхинче тата хӑш-пӗр тӗрӗк чӗлхинче тӗл пулаканнисем, 3) чӑваш чӗлхинче хӑйӗнче пулса кайнисем.

***Пӗрлехи тӗрӗк сӑмахӗсем*** пӗлтерӗш тата сасӑ енчен улшӑннӑ, ҫапах ытти тӗрӗк сӑмахӗпе тӑван. Танлаштарӑр:

| чӑвашла | тӗрӗкле |
|---|---|

| | |
|---|---|
| пуç | баш, бас, паш |
| хул | кол |
| хурăн | кайын |
| пĕлĕт | болут, болот |
| тинĕс | тенгиз |
| пулă | балык |
| тилĕ | тилки |
| чăрăш | чырыш |
| ылтăн | алтын |

Пĕр тĕрĕк сăмахĕсене чылай пуплев пайĕнче курма пулать.

Япала ячĕсем пĕлтерĕшĕпе тĕрлĕрен ушкăна кĕреççĕ:

1) анатоми терминĕсем: *алă, ура, куç, çăвар, хăлха, пит, çӳç, мăй. ĕнсе, пилĕк, шăмă, чĕре;*

2) ăру-тăванлăх сăмахĕсем: *хурăнташ, атте, анне, ывăл, хĕр, аппа, инке, кин, пуçана, хăта, хăна, пултăр, тăхăм;*

3) çут çанталăк пулăмĕпе япалисен ячĕсем: *çĕр, хĕвел, уйăх, çăлтăр, хĕл, çур, кун, каç, ир, çумăр, çил, тăпра, сăрт;*

4) чĕр чунсемпе ӳсен-тăран ячĕсем*: ĕне, лаша, ут, вăкăр, така, тына, путек, йытă, чăх, хур, кашкăр, калта, пилеш, чие, улма, кишĕр;*

5) апат-çимĕç ячĕсем: *сĕт, уйран, хăйма, пăтă, çĕмарта, пыл, сăра, шыв;*

6) кил-çурт тавраш япалисен, ĕç хатĕрĕсен ячĕсем: *алăк, пӳлĕм, вучах, кĕл, вутă, тӳшке, кĕскĕ, чӳлмек, хуран, мунча, пăчкă;*

7) тăхăнмалли япаласен ячĕсем: *кĕрĕк, çăпата, сăхман;*

8) пир-авăр ячĕсем: *çип, йĕке, хултăрч;*

9) пулă тытмалли хатĕр ячĕсем: *атма, вăлта, сĕреке;*

10) чир-чĕр ячĕсем: *амак, шалкăм;*

11) çĕр пурлăхĕн ячĕсем: *ылтăн, кĕмĕл, тимĕр, кӳкĕрт, хăйăр, пурă.*

Паллă ячĕсем: *хĕрлĕ, кăвак, сарă, чĕрĕ, сывă, йӳçĕ, тутлă, суккăр, тăвăр, çĕнĕ, чухăн, наян, çемçе, çӳхе.*

Хисеп ячĕсем: *пĕрре, иккĕ,.. вуннă, çирĕм, вăтăр, хĕрĕх, аллă, çĕр, пин.*

Местоименисем: *ман, сан, вăл, унăн, хăшĕ, кам, мĕн, миçе.*

Глаголсем: *ĕçле, çи, ĕç, кур, çӳре, чуп, сис, тăр, кас, тарла, чĕрĕл, сăвăр, тыт, пиç.*

Асăннă сăмахсем тытăмĕпе ансат, усă курас енчен тăтăшлăхпа палăрса тăраççĕ. Çавăнпа асра тытма, ытти тĕрĕксене ăнланма, вĕсемпе хутшăнăва кĕме вĕренме меллĕ.

***Чăваш чĕлхинче тата хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхинче тĕл пулакан сăмахсем*** ытти тĕрĕк чĕлхисенче иккĕш–виççĕшĕнче кăна тĕл пулаççĕ, йышĕпе те нумай мар.

| **Чăваш чĕлхинче** | **Тĕрĕк чĕлхисенче** | |
| --- | --- | --- |
| | ***Хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхинче*** | ***Ытти тĕрĕк чĕлхинче*** |
| упа | оба *(хакас)* | аю, айы, адыг |
| тута | додаг *(азербайджан),* дудак *(туркка*), додак *(туркмен)* | ирен, эрин |
| пăр | боз *(тутар, пушкăрт),* муз *(уйгур),* муус *(якут)* | долы, долгу |
| тĕтре | тот (туркмен) | туман, думан *(вырăсран илнĕ)* |
| хум | ком *(алтай чĕлхи)* | тулкын, долгун, толкун |

***Чăваш чĕлхинче хăйĕнче пулса кайнă сăмахсем*** ытти тĕрĕк халăхĕн сăмахĕсемпе çыхăнман, хайсем тĕллĕн тĕвĕленсе аталаннă, çавăнпа *чăн чăваш сăмахĕсем* ят илнĕ. Ку сăмахсен йышĕ чылай пысак: пĕр тĕпрен пулнисем (*ача, çын, сăмса, çамка, çурăм, кăвапа, кĕтес, вите, карта, кĕвенте, хăма, çатма, çĕçĕ, япала, хăйă* т. ыт. те); ик сăмах сасă енчен улшăнса пĕрлешнипе пулнисем *(асатте, асанне,*

*кукамай, кукаçей (кукаçи), картиш, урай, тĕпел, Нарспи, Айпи, Савтепи* т. ыт. те*);* сăмахсем мăшăрланнипе пулнисем *(атте-анне, ӳсен-тăран, ача-пăча* т. ыт. те); аффикс хушăнса пулнисем *(чулçă, хăмлаçă, утарçă, арманçă, куçлăх, аттелĕх, аннелĕх, лӳпперлĕх, тарăнăш, ĕçтеш* т. ыт. те).

**✪✪ 82. *Шелепи, Пинерпи, Селепи, Северпи* йышши ятсем чĕлхе историйĕнче сăмах майлашăвне кĕрекен сăмахсем сасă енчен улшăннипе пулнă. Çав вăхăтрах чăвашсем *Сарпике, Шăмапике, Туйпике, Кĕлпик*е йышши ятсемпе те усă курнă. Çак ятсем тăрăх *Шелепи, Пинерпи, Селепи, Северпи* ятсем маларах епле илтĕннине куç умне тăратăр. Сăмах майлашăвĕсене чи малтанхи пек туса çĕнетĕр.**

➤ Сăмахсем сасă енчен улшăнса пĕрлешнисĕр пуçне сăмах пулăвĕн ытти мелĕсем паян кун та тухăçлă.

Сăмах тăвакан аффикса уйрăм сăмах майлашăвĕ кăна мар, темиçе сăмахлă пĕрлешӳ те йышăнма пултарать: *никама пăхăнманлăх, çĕнĕ сăмах тăваслăх, сăмах тĕпĕ çумне хушăнаслăх, пĕчĕк ачалан, хĕрĕх чĕрнелен* т. ыт. те. Ку вара сăмах майлашăвĕ ăнлава сăмах пекех пĕлтернĕрен килет. Сăмах ушкăнĕ сăмах тăвакан аффикс йышăннине чăваш чĕлхин хăйне майлă уйрăмлăхĕ тесе пăхма тивет.

***Урăх чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем*** вĕсем пирĕн чĕлхере, тĕпрен илсен, – вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем. Вĕсем – тĕп вырăс сăмахĕсем тата вырăс чĕлхи ытти чĕлхесенчен йышăннисем. Кунсăр пуçне мари, тутар, араб, перс, монгол тата ытти чĕлхесене кăтартмалла. Сăмахсене йышăнасси халăхсем истори тапхăрĕнче тачă хутшăнса пурăннинчен килнĕ паллах.

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Н.А. Андреев (Урхи) тĕпчевçĕ каланă тăрăх, *минтер* сăмах пирĕн чĕлхене тутарсем урлă кĕнĕ. *Мин* «утлан» тата *дэр* пайсенчен тăрать.

*Мин* сăмах тутарла «утлан» пĕлтерĕшлĕ (*лаша утлан, ут утлан*). *Дэр* – тутар чĕлхине монгол чĕлхинчен кĕнĕ «пуç айлăхĕ» пĕлтерĕшлĕ сăмах. Çапла вара, *минтер* сăмах истори тапхăрĕнче «лармалли пуç айлăхĕ» пĕлтерĕшлĕ пулнă теме юрать.

Ту ен чăвашĕсем *минтер* сăмах вырăнне *çытар* тата *кӳпчек* сăмахпа усă кураççĕ. М.Р. Федотов тата Л.П.Сергеев профессорсем çырнă тăрăх, *кӳпчĕк* сăмах «кӳпĕн, тулса кай» пĕлтерĕшлĕ *кӳптĕрĕк* сăмахран пулса кайнă. *(Н. Захарова-Кульева.)*

| **Чăваш чĕлхи йышăннă сăмахсем**<br>(хăш чĕлхерен кĕни тăрăх) | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Вырăс | | Мари | Тутар | Араб | Перс | Монгол |
| Вырăссен тăван сăмахĕсем | Вырăссем ютран илнĕ сăмахсем | | | | | |
| **Калаçу урлă кĕнĕ *(X ĕмĕрччен)*** кăмпа кĕнчеле ***X-XIII ĕмĕрсем:*** вырăс ыраш Мускав Кейӳ ***XIV - XIX ĕмĕрсем*** ĕскĕрт (скирда) суха | **Çыру урлă кĕнĕ *(XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчен тытăнса)*** ***Грек сăмахĕсем:*** алфавит, ангел лампа лексика манах металл магнит планета синтаксис | лутка (катка) тетел пушкар пĕкĕ пӳрт кăшкар ленкес пĕрне сӳсмен çурла тенкел кĕтес<br><br>аçам шхлкеме шупăр | ***Малта [йа, йу] тăни:*** ялан янах юлташ юлхав ***малта [йă, йĕ] тăни:*** йăваш йăлăн йăмран<br><br>***Малта [а] тăни:*** | авал айван асап ахах вăхăт кала калăп капăр лайăх масар мĕскĕн мыскара намăс перекет салам самана сехет | ансат асамат ĕмĕт кĕсье йĕтес кахал кашăк кимĕ начар пай патша сăнчăр сехре сиен çăхан тар тараса | **XII–XIV ĕмĕрсенче кĕнĕ:** евчĕ илпек меркĕн нăхта нĕкĕр пăлтăрка пăлчав путене тилхепе тум хачă хăта хурал хурчăка хӳхĕм |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| кĕрепле<br>авăн<br>лапатка<br>тăпач<br>(дубец)<br>кĕлет<br>çенĕк<br>путвал<br>чашăк<br>куршак<br>катка<br>сăмавар<br>сĕтел<br>шкап<br>утиял<br>мачча<br>апат<br>пĕремĕк<br>кĕрпе<br>салат<br>пиншак<br>карттус<br>шарăх<br>шлепке<br>перчетке<br>чăлха<br>шапа<br>кушак<br>сайкка<br>ăру<br>çемье<br>ратне<br>мăнук<br>ярмăркка<br>лавкка<br>кире<br>пăт<br>пăтавкка<br>çитсă<br>шкул<br>шут<br>чернил<br>кĕсле<br>Марье | талант<br>скамье<br>кравать<br>***Латин:***<br>актив<br>депутат<br>лекци<br>министр<br>республика<br>админи-<br>страци<br>экскурси<br><br>***Француз:***<br>абажур<br>батальон<br>бульвар<br>гарнизон<br>артиллери<br>дуэль<br>жюри<br>десант<br>актер<br>балет<br>суфлер<br>рояль<br>тротуар<br>одеколон<br>админист-<br>раци<br>***Нимĕç:***<br>блок<br>верстак<br>кран<br>кухня<br>маляр<br>ефрейтор<br>орден<br>штаб<br>рота<br>слесарь<br>шнур<br>штурм<br>галстук | çытма<br><br>кукăль<br>юсман<br><br>шĕкĕ<br>кăткă<br>лĕпĕш<br>нăрă<br>ӳпре<br>шашкă<br>шаланкă<br><br>мăян<br>шăлан<br>шăпкан<br><br>ĕмĕлке<br>капăр<br>каччă<br>тунката<br>турпас<br>лапра<br>лĕкĕ<br>пакарта<br>шампа<br>шĕлкĕш<br><br>лутра<br>мăнтăр<br>кача<br>пăчă<br>шупка<br>*т. ыт. те* | акăш<br>*анчах*<br>алăк<br><br>**[Р] мар, [с] калани:**<br>тăкăс<br>(тăвăр)<br>тикĕс<br>(такăр)<br>тинĕс<br>(тенкер)<br><br>**[З] мар, [р] калани:**<br>хĕр<br>(кыз)<br>т. ыт.те | сунтал<br>телей<br>тĕнче<br>хак<br>халăх<br>хисеп<br>хут<br>элек<br>этем<br>*т. ыт. те* | тăшман<br>тус<br>тӳшек<br>хăяр<br>хуçа<br>чаршав<br>чĕлĕм<br>чĕрĕк<br>чипер<br>шӳрпе<br>эрне<br>*т.ыт. те* | |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Ванюк<br>Микула<br>Михаля<br>Васук<br>Тарье<br>Кӗркури<br>пурмис<br>вулăс<br>кӗпӗрне<br>уретник<br>уес | ***Акăлчан:***<br>бокс<br>спорт<br>футбол<br>вагон,<br>вокзал<br>клумба<br>рельс<br>***Итал:***<br>альт<br>бас<br>тенор<br>либретто<br>мандолина<br>флейта<br>опера<br>***Чăн вырăс сăмахӗсем:***<br>самолет<br>вездеход<br>газопровод<br>колхоз<br>совхоз<br>спутник | | | | | |

**83. Чăваш чӗлхи йышăннă сăмахсен таблицине тишкерӗр. Ыйтусене хуравлăр, хушнă ӗҫсене тăвăр.**

**1.**

Таблицăра чăваш чӗлхине сăмахсем тӳррӗн панă миҫе чӗлхене кăтартнă? Сăмахсене пӗр чӗлхерен теприне куҫарас енӗпе хăш чӗлхене хушă (посредник) чӗлхе тесе пăхма юрать?

**2.**

Тематикипе пурнăҫăн хăш енӗпе те пулин ҫыхăннине кура ушкăнлама май пур тесе хăш-хăш чӗлхерен кӗнӗ сăмахсем ҫине таянса калама май пур? Сăмахӗсене ушкăнлас пулсан мӗнле-мӗнле темăсем ҫырăттăрччӗ?

**3.**

Сăмахсем вырăс чĕлхинчен çырупа пĕр вĕçĕмсĕр кĕрес юхăм хăçан пуçланать? Юхăм паллине мĕнпе ĕнентерме пулать – таблицăра ик–виç тĕслĕх тупса кăтартăр. Çырупа кĕнĕ сăмахсен йышĕнче чăн вырăс сăмахĕсем те, ютран кĕнĕ сăмахсем те пуррине паян кун анлă усă куракан сăмахсемпе ĕнентерĕр.

**5. Чăваш лексикине халăх йышĕ усă курни тăрăх ушкăнлани**

➤ Усă курас енчен чăваш сăмахĕсене икĕ ушкăна уйăраççĕ: 1) пĕтĕм халăх усă куракан сăмахсем, 2) халăхăн пĕр-пĕр пайĕ усă куракан сăмахсем.

***Пĕтĕм халăх усă куракан сăмахсене*** кирек хăш çĕрте пурăнакан чăваш та пĕлет. Çавăнпа сăмахĕсене чăваш литератури чĕлхине тăвакан никĕс тесе пăхаççĕ. Ку никĕс çакнашкал сăмахсенчен тăрать:

1) ăрупа тăванлăх сăмахĕсем *(атте, анне, асатте, асанне, кукаçи (кукаçей), кукамай, пичче, аппа, шăллăм (-у,-ĕ), йăмăк);*

2) анатоми терминĕсем *(куç, пуç ,чĕлхе, çăвар, хăлха, сăмса, алă, ура, кăкăр, чĕре, ӳпке, çурăм);*

3) кил-çурт тавраш япалисен, ĕç хатĕрĕсен ячĕсем (*пӳрт, çурт, сарай, картиш, вите, хапха, пахча, сĕтел, пукан, пуртă, çăпала, кăмака, витре, кашăк);*

4) хуçалăхра тытакан выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк ячĕсем *(путек, пăру, така, вăкăр, тына, качака, автан, чăх, хур, кăвакал);*

5) тискер кайăк, кайăк-кĕшĕк ячĕсем *(кашкăр, мулкач, тилĕ, курак, кăвакарчăн, кăсăя, чĕкеç, куккук, çерçи, тăри);*

6) пахча çимĕç ячĕсем *(купăста, хăяр, кишĕр, кăшман, кавăн, сухан, ыхра, салат);*

7) йывăç-курăк ячĕсем *(чăрăш, хурăн, юман, вĕрене, йăмра, тирек, хурама, пилеш, çĕмĕрт, улмуççи);*

8) тум ячĕсем *(пальто, костюм, кĕпе, çĕлĕк, карттус, тăлăп, кĕрĕк, пиншак);*

9) апат-çимĕç ячĕсем *(çăкăр, кулач, аш, сĕт, хăйма, çу, турăх, тăпăрч(ă), яшка, шӳрпе, сăра, кăвас, чей);*

10) çут çанталăк пулăмĕсемпе япалисен, тĕнче уçлăх объекчĕсен ячĕсем (*хĕвел, уйăх, пĕлĕт, çумăр, тĕтре, çил, юр, пас, çăлтăр);*

11) япала е ĕç паллине пĕлтерекен сăмахсем *(пысăк, пĕчĕк, хура, шурă, сарлака, тăвăр, капăр, хитре, илемлĕ);*

12) ĕçе-хĕле пĕлтерекен сăмахсем *(ĕçле, вула, çыр, кай, кил, ут, чуп, çӳре, вĕç, ярăн, юрла, ташла);*

13) халăх ячĕ*сем (чăваш, вырăс, тутар, пушкăрт, мăкшă, ирçе, нимĕç, акăлчан, казах, кăркăс, узбек);*

14) вĕренӳпе çыхăннă пулăмсемпе япаласен ячĕсем *(шкул, учитель, парта, урок, тетрадь, кĕнеке, доска, ручка, кăранташ);*

15) обществăпа политика терминĕсем *(конституци, республика, администраци, район, министерство, дирекци, сесси, съезд, конференци, онлайн).* Т. ыт. те.

***Халăхăн пĕр пайĕ усă куракан сăмахсем вĕсем*** – диалект лексики, ятарлă лексика тата професси сăмахĕсем.

***Диалект лексиски*** вăл – уйрăм вырăнта кăна усă куракан сăмахсем. Вĕсемпе вырăнта çеç усă курнине литература чĕлхинче çирĕпленнĕ тӳр килӳсемпе танлаштарса кăна пĕлме пулать. Тĕслĕхрен, Пушкăрт Республикин Йĕкен шывĕпе çыхăннă ялта *мăкайăн* сăмахпа усă кураççĕ: *Макайăн, каçпа тăм ӳкет.* Предложенин содержанийĕ тата çырура хӯреллĕ пăнчă лартса уйрăмлатнă тăрăх, *мăкайăн* сăмах кӳртĕм сăмах пуль тесе ăнкарса илме пулать. Пĕлтерĕшне тĕп Чăвашран тухнă çыншăн тӳрех калама йывăр, мĕншĕн тесен икĕ ваиант сиксе тухать: 1) *паллах* сăмахпа кăтартаканни; 2) *пулас, пуль, пулмалла, няк, курăнать* сăмахсенче

палăраканни. Ку пĕлтерĕшсенчен иккĕмĕшне çеç илмеллине калаçăва лайăх тĕпченĕ е çак диалетпа калаçса ӳснĕ çын анчах калама пултарать.

Чĕлхе ăслăлăхĕнче фонетика диалектизмĕ, грамматика диалектизмĕ, пĕлтерĕш диалектизмĕ çинчен калаçни те тĕл пулать, анчах вĕсем лексика диалектизмĕсем мар. Акă *тутăр, кукăр* тес вырăнне ту ен чăвашĕсем *тоттăр, коккăр* тени – фонетика диалектизмĕ шутланать. Диалект картинче хальхи вăхăта кăтартса *вулаттăр, каяттăр* тени вара грамматика диалектизмĕ пулса тăрать. Вырăнти клаçура *тĕкĕр* сăмах вырăнне *куçлăх* сăмахпа усă курнине семантика диалектизмĕ темелле, мĕншĕн тесен литература чĕлхинче *куçлăх* сăмахпа «куç лайăх куртăр тесе сăмса çине лартакан хатĕр» пĕлтерĕшĕшĕн анчах усă кураççĕ.

Лексика диалектизмĕсем, ытти жиалектизмсем пекех, литература текстне чĕрĕ калаçу сĕмне кĕртеççĕ, сăнарлă тăваççĕ.

**84. Вуласа тухăр. Текст сыпăкĕнче диалект сăмахĕсем те, фонетикăпа грамматика диалектизмĕсем те пур. Эсир диалект сăмахлă предложенисене кăна çырса илĕр.**

Те хĕр, те хĕр арăм хиклетсе кулса ячĕ.

– Чăвашах-çке! Эп те сире вырăс поль тесеччĕ. Сер темиçе чĕлхепе ть йорлаттăр та...

– Эппин, чăвашлах калаçар.

– Литературни попляма пĕлмес çав эп – пиçмест ман чăвашла. Сер ав пет йосо попляттăр.

– Мĕнлерех калаçаççĕ вара сирĕн енче?

– Перн панче-и? «Сысн поснă, яшк пçернĕ» – терĕ те Эльвира çăвар тулли кулса ячĕ.

– Апла, пĕлтĕм эсир хăш енчине... Эпĕ сирĕн ен улах юррине ас тăватăп.

Хавасланнӑ Айдаров пианино клавишӗсем ҫине икӗ пӳрнипе пускаласа пӗр ҫавра юрласа илчӗ:

«Окошкине хопинӑ та

Краҫҫыннине ть сонтернӗ...»

Иккӗшӗ те ахӑлтатса кулса ячӗҫ.

– Пет йосо! – ӑнланмалла мар чӗлхепе кӑшкӑрса ячӗ Эльвира.

– Чӑвашла калӑр-ха.

– Чӑвашлах-ҫке. Пит лайӑх тетӗп. Ком пек йорӑ илтменччӗ – хӑр шотласа кӑлартӑр поль? *(А. Артемьев.)*

* **Эльвира репликисене литература чӗлхине пӑхӑнса тӳрлетӗр те тӳрлетӗве тӗпе хурса пӗтӗм сыпӑка вуласа кӑтартӑр. Ҫӗнӗ текст автор текстӗнчен уйрӑлса тӑрать-и?**

* **Асӑрхӑр: автор хӑй каланӑ чухне тата Айдаров пуплевӗнче диалектизмсемпе усӑ курать-и? Ку мӗнпе ҫыхӑннӑ?**

➤ ***Ятарлӑ лексика тата професси сӑмахӗсем*** чӑваш лексинче хӑйне майлӑ сий тӑваҫҫӗ. Ку сий сӑмахӗсемпе пӗчӗк ушкӑнсем усӑ кураҫҫӗ, ӑнланасса та уйрӑм ҫынсем кӑна ӑнланаҫҫӗ. Ятарлӑ лексика шутне тӗрлӗ ӑслӑлӑх терминӗсем тата професси сӑмахӗсем кӗреҫҫӗ. Вӗсене терминсем теҫҫӗ. Ҫавӑнпа филологие кӗрсен те чӗлхе ӑслӑлӑхӗн терминӗсене литература ӑслӑлӑхӗн терминӗсенчен уйӑрса илме пулать. Акӑ *лингвистика, лексика, лексема, фонетика, фонема, морфологи, морфема, аффикс, синтаксис, синтаксема* терминсем чӗлхе вӗрентӗвӗн терминӗсем шутланаҫҫӗ. Литературоведение *сюжет, персонаж, калав, повесть, юптару, проза, поэзи*, *драматурги* йышши терминсем кӑтартуллӑ. Ҫав вӑхӑтрах *текст, метафора, метоними, синекдоха, тема, идея* йышши терминсемпе чӗлхеҫӗсем те, литераторсем те усӑ кураҫҫӗ.

Ӑслӑлӑх терминӗсемсӗр пуҫне чӑваш лексикинче ку е вӑл ӑсталӑхра усӑ куракан терминсем те пур. *Нота, до, ми, соль, минор,*

*мажор, сопрано, баритон, бас, романс, опера* терминсене музыкантсен ĕç калаçăвĕнче илтме пулать. *Платник, маляр, штукатур, крановщик* евĕр терминсемпе çурт-йĕр ăстисем усă кураççĕ.

Терминсем вĕсем уйрăм сăмахсем кăна мар, сăмах майлашăвĕсем те. Çавăнпа ăслăлăхра тата тĕрлĕ професси ĕçĕнче сăмах терминсемпе пĕрле сăмах майлашăвĕ терминсемпе те усă кураççĕ: *сăмах тымарĕ, сăмах майлашăвĕ, хутсăр предложени, шухăш тĕшши, сас палли, чарăну палли, ваттисен сăмахĕсем.*

**85. Усă курнă терминсем мĕнле ăслăлăхпа çыхăннă?**

**1.**

Республикăн карантин объекчĕсенчен пĕри – *нематода.* Вăл çĕр çинче *глободероз* чирне пуçарать. Çавна май тухăçа 30–80 процент таран çухатма пулать. *Нематода* вирусĕсем 15 çул таран упранаççĕ.

Чир ан сарăлтăр тесен çĕр улми лаптăкĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Ку ĕçе Чăваш Ен тата Ульяновск облаçĕн управлени специалисчĕсем *фитосанитари* зонинче малашне те туса пырĕç. *(«Хресчен сасси».)*

**2.**

1–8 классенче *вĕренекенсем* 2020 çулăн çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа *каникулта* канĕç. Раççей çут ĕçĕн министерстви йышăнăвĕпе 9-мĕш класс ачисем кăçал *экзамен* тытмĕç, апла пулин те *аттестат* илĕç. *ППЭне* те пур ача та тытмасть – тĕрĕслеве аслă *шкула* вĕренме каяс текенсен кăна иртмелле пулĕ. *(«Хресчен сасси».)*

**3.**

Чăваш патшалăх *оперăпа балет* театрне уçнăранпа кăçал çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче 60 çул çитет. 60 çул маларах театр Чăваш

*музыкăпа драма* театрĕ ятпа çӳренĕ. *Театра* пуçарса яраканĕ Борис Марков пулнă. *(«Хресчен сасси».)*

*** Паллă тунă терминсем тăрăх мĕне палăртма пулать: текст темине-и, ăслăлăх стильне-и?**

➤ ***Пĕлтерĕшне тата улшăну парадигмине çухатнă сăмахсем*** чĕлхере нумай мар, çитменнине, ытти сăмахсемпе çыхăнăва пит кĕресшĕн мар. Кунашкал сăмахсен пĕлтерĕшне этимологсем шыраççĕ.

Пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмахсен пĕчĕк çеç, анчах нумай тавлаштаракан пĕр ушкăнне кунпа каç ячĕсем тăваççĕ. Вĕсем çаксем: *тунти, ытлари, юн, кĕçнерни, эрне, шăмат, вырсарни.* Вĕсем харăсах кунпа каç ячĕсем пулни мĕнрен килет-ха? Авалхи чăвашсем уйăхпа хĕвел календарĕпе усă курнинчен. Ку календарьпе халь усă курмастпăр ĕнтĕ, анчах кив календарь йĕрĕ чĕлхемĕрте сыхланса юлнă. Григорян календарьне йышăнсан чăвашсем талăка икĕ пая (каçа тата куна) пайлассине пăрахăçланă та, григорян календарĕпе пурăнакан вырăссем пекех, тĕп вырăна куна хума тытăннă курăнать. Апла пулин те чĕлхемĕрте тата тĕрлĕрен калаçура каç ятне палăртакан *тунти каç, ытлари каç* йышши сăмах майлашăвĕсем тата кун ячĕсене *кун* тата *каç* сăмахсемпе çыхăнтармасăр калас йĕрке сыхланса юлнă. Çапла вара, каç ячĕсем чăвашсен пур, вырăссен – çук. *В ночь с субботы на воскресенье* йышши сăмах çыхăнăвĕсем – *понедельник, вторник, среда* йышши ятсен шайĕнче тăмаççĕ.

Пĕлтерĕшĕ паллă мар тата уйрăм сăмах майлашăвĕнче кăна тĕл пулакан сăмахсем пирĕн тата та пур: *аçа* ***тукка,*** *ват* ***кĕрхĕ, кахăр*** *çӳçе,* ***кахăр*** *чул,* ***танти*** *кĕпçи,* ***суйăр*** *чулĕ,* ***тука*** *ту,* ***сая*** *яр,* ***юла*** ***юп;*** *урай* ***сарри****, ура* ***сырри****, аçа* ***çаппи,*** *çиçĕм* ***çиççи*** т. ыт. те.

*Яр* глагол тăрăх *сая яр* сăмах майлашăвĕн пăхăнакан пайне *сай* сăмахăн пару падежĕнче тăракан форми теме юрать.

*Урай сарри, ура сырри, ал шăлли, пит шăлли, аçа çаппи, çиçĕм çиççи* сăмах майлашăвĕсен тĕп компоненчĕсем япала ячĕсен 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă темелле. *Сар, сыр, шăл, çап, çиç* сăмахсем вара – глаголсем. Глагол тĕпĕ нимле причасти аффиксĕ йышăнмасăр сăпат аффиксне мĕншĕн йышăннă-ши? Ку вăл хăй вăхăтĕнче ят сăмахсемпе глаголсем пĕр-пĕринчен уйрăлса çитменнипе çыхăннă пулас. Пирĕн пата авал-авал пулнă, анчах хăйĕн вăйне çухатнă парадигмăн ванчăкĕ кăна çитнĕ курăнать.

-***И*** аффикс *куç кĕски* сăмах майлашăвĕнче те пур, анчах унта *кĕскĕ* сăмах япала ячĕ. Ăна *(козге)* тутар чĕлхинчен илнĕ теме юрать. *Кĕскĕ* сăмаха чăвашсем нимле чĕлхерен йышăнман текен шухăшлă çынсем те пур.

**86. *Юла юп* сăмах майлашăвĕ çинчен этимологи словарĕсенче мĕн çырнине вуласа тухăр та калăр: икĕ сăмахран хăшĕн пĕлтерĕшĕ уçăмланать? (Оригинал текста кĕскетнĕ.)**

**ЮЛА / ЙОЛА** кляуза, клевета: ***юла юп-*** / *йола йоп-* жилить, клеветать, кляузничать. *Мĕн мана юла юпса калаçан* Что ты взводишь на меня напраслину (*Ашм.* Сл. IV, 317. Тюркские соответствия: алтайский, телеутский диалект алтайского языка, казахский, команский *йала* пеня, штраф (алтайский); вина, обвинение, хула, бесславие, несчастие... (*М.Р. Федотов.* Этимологический словарь чувашского языка, том 2. С–Я. Чебоксары: Чувашский государствнный институт гуманитарных наук, 1996. – С. 483)

**ЮЛА** *уст.* клевета, кляуза; отдельно не употребляется; ***юла юп*** клеветать, кляузничать; притворяться; лукавить; киргизский, казахский, кара-калпакский *жала жап* клеветать, возводить на кого-

либо ложное обвинение, доносить... (*В. Г. Егоров.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары: Чувашское книжное изд-во, 1964. – С. 347.)

*** М.И. Скорцов редакциленӗ «Чӑвашла-вырӑсла словарӗн» (Мускав: «Русский язык» издательство, 1983, 1985) *юла* сӑмах статйинче *юла юпса калаҫ* сӑмах майлашӑвӗ тӗл пулать. Ӑна вырӑсла икӗ пӗлтерӗш кӑтартса куҫарнӑ: 1) клеветать, возводить напраслину; 2) врать; запираться, не сознаваться *в чем-л.* Ку пӗлтерӗшсем *юптар* сӑмахӑнни майлӑрах (намекать, делать намеки, говорить намеками, загадками; обманывать, проводить; надувать *разг.)* пулнине асӑрхӑр.**

* ***Юпса*** **тата** ***юптар*** **сӑмахсен тымарӗсем пӗрех теме пултаратпӑр-и?**

* ***Юп*** **тата** ***юла*** **сӑмахсем пӗлтерӗш енчен ҫывӑх-и, ҫывӑх мар-и?**

**6. Чӑваш лексикине усӑ курас тӑтӑшлӑха кура ушкӑнлани**

➤ Усӑ курас тӑтӑшлӑха кура чӑваш сӑмахӗсене икӗ пысӑк ушкӑна уйӑраҫҫӗ: 1) ялан усӑ куракан сӑмахсем, 2) сайра усӑ куракан сӑмахсем.

***Ялан усӑ куракан*** сӑмахсем вӗсем – чӑвашсем пурте куллен усӑ куракан сӑмахсем. Кунта халӑхӑн тӗп ушкӑнӗ усӑ куракан сӑмахсем те, уйрӑм ушкӑнсем усӑ куракан сӑмахсем те (ку е вӑл ӑслӑлӑх картинче усӑ куракан терминсем, ку е вӑл ал ӑсталӑхӗпе пултарулӑхра кирлӗ профессионализмсем) кӗреҫҫӗ. Ку сӑмахсем манӑҫа тухмаҫҫӗ, йӑхран йӑха куҫса пыраҫҫӗ: *уй, хир, ҫырма, кӳлӗ, урапа, ухӑ, вӑрҫӑ, тӑнӑҫлӑх, вӗҫев, урок, тӗрӗслев, карап, трактор, экзамен, юрӑ, ташӑ, балет, опера, мюзикл* т. ыт. те.

**Сайра усӑ кураканнисем** шутне кивелнӗ сӑмахсем, ҫӗнӗ сӑмахсем кӗреҫҫӗ. ***Кивелнӗ*** сӑмахсем усӑ куру талккӑшӗнчен майӗпен тухса пыраҫҫӗ, анчах хӑй вӑхӑтӗнче пичетленнӗ хаҫат-журналта, кӗнекесенче, словарьсемпе ал ҫырӑвӗсенче сыхланса

юлаççĕ, хальхи ятарлă словарьсене кĕме пултараççĕ. Архаизм – япалапа пулăма палăртакан синонимсенчен манăçа тухни. Акă авал усă курнă *элем* сăмах усă курас тăтăшлăхне *ялав* сăмах витĕмĕпе çухатнă. Историзм – палăртакан япалипе пулăмĕ пурнăçран кайнă май хутшăнуран тухнă сăмах. Тĕслĕхрен, Совет саманиччен Раççей территорине кĕпĕрнесене пайланă, çавăнпа *кĕпĕрне* сăмах чăвашшăн час-час усă куракан сăмах пулнă. Октябрь революцийĕ кĕпĕрне тытăмне аркатать те, *кĕпĕрне* сăмахпа час-час усă курмалли сăлтав юлмасть. Кивелнĕ сăмахсем, вăхăт иртнĕçемĕн, ялан усă куракannисен ретне куçма пултараççĕ: *тăлмач* «куçаруçă», *хурав* «ответ», *çӳлевĕç* «рысь», *несĕл* «ăру, йăх». Кивĕ шутлансан та хăш-пĕр сăмах ик-виç сăмах майлашăвнĕн тытăмĕнче паян кун та тĕл пулать. Тĕслĕхрен, *амак* сăмаха *тытан амак, хура амак, сар амак* сăмах майлашăвĕсен тытăмĕнче курма пулать. Калаçура *Тем амак пулчĕ мана?* йышши предложенисемпе те усă кураççĕ.

***Çĕнĕ сăмахсем*** чĕлхене çĕнĕ пулăмсене, япаласене палăртма килеççĕ. Вĕсем шутне чăваш чĕлхин мелĕсемпе пулнисем (*калав, çыравçă, çĕнтерӳçĕ, ĕçтеш, тĕрленчĕк)* тата вырăсран йышăннисем *(маркетинг, монитор, принтер, чат, онлайн, коронавирус, пандеми, ревакцинаци, регион*) кĕреççĕ. Чылай сăмаха писатель-поэт тăвать: *чăрлату* (Ю. Скворцов), *тиевçĕ* (П. Осипов.), *ентеш* (Митта В.).

Сайра усă куракан сăмахсене çакнашкал таблицăра ушкăнласа кăтартма пулать:

**Сайра усă куракан сăмахсем**

| Кивелнĕ сăмахсем | | Çĕнĕ сăмахсем | |
|---|---|---|---|
| Архаизмсем | Историзмсем | Чĕлхе неологизмĕсем | Автор (стиль) неологизмĕсем |
| ант (тупа) | уес (уезд) | хаçатçă | ахăлтату *(П. Хусанкай)* |
| хуç (хĕрес) | вулăс (волость) | ăмсануçă | чĕлхесĕрле *(П.* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | *Хусанкай)* |
| амак (чир) | пурмис (бурмистр) | шухăшлавçă | янташ– ентеш *(Митта В.)* |
| антăх (тупа ту) | страшник (стражник) | кĕнекеçĕ | |
| сыхчă (хурал) | кĕренкке (фунт) | кануçă | |
| | мăскал (золотник) | меслетлĕх | |

Сайра усă куракан сăмахсем çыравçăсене пурнăçа чăн вăхăтпа çыхăнтарса кăтартма май параççĕ.

**87. Кивелнĕ тесе пăхмалли сăмахсене тупăр та архаизмсене пăнчă пунктирпа, историмзене кĕске йĕр пунктирпа паллă тăвăр. Паллă тунă сăмахсене архаизм е историзм тесе пăхасси мĕнрен килнине ĕнентерĕр.**

1. Альпи, карăнтăк патне хăлхипе лăпчăнса, урамра мĕн калаçнине итлеме пуçларĕ. *(К. Турхан.)* 2. Хăйăсем çутнă. Çĕрле пулнă. (Хумма Ç.) 3. Ака уйăхĕн ачаш кунĕсем. *(Ç. Элкер.)* 4. Атсан атă пулать, пуссан пушмак пулать. *(Ч. х. с.)* 5. Эсĕ хут пĕлекен хĕр пулăн. Сан ăрăсу урăхларах пулма тивĕç. 6. Ял пухăвĕ пухмалла каллех: уес чиновникĕпе вулăс старшини килсе çитеççĕ паян. *(Л. Сачкова.)* 7. Яла каллех кантур йыттисем пычĕç. Мукаçи кĕлетне тырă пуçтараççĕ. *(Хв. Уяр.)*

**88. Неологизмсене хумлă йĕрпе паллă тăвăр та неологизм теме мĕнле сăлтав пуррине ăнлантарăр**.

1. Чăваш Енре COVID-19 чирĕпе чирлекенсене сиплеме виçĕ медицина организацийĕ хушма вырăнсем уйăрма хатĕр. Коронавируслă пациентсем валли 1267 вырăн пур. *(В. Багадерова.)* 2. «Яхтинг» предприяти урана хӳтĕлемелли ятарлă атă-пушмак туса кăларать. Эпидеми чăрмантарат пулин те «Яхтингра» тĕп продукцие

хатĕрлесе кăларнисĕр пуçне медицина маски çĕлес тĕлĕшпе çĕнĕ инвестици проектне хута янă. Апла, пандемие парăнтарасса чăннипех шанма пулать. *(В. Петрова.)* 3. Тен ĕмĕрлĕхе, Йăмăксем халь ӳстереççĕ Ыр нарспилĕхе?.. *(Г. Айхи.)* 4. Константин Васильевич Ивановăн çавра çулне халалласа сăвă фестивалĕсене, вулав конкурсĕсене ирттерчĕç, флешмобсем ăсталарĕç. *(Чăваш телевиденийĕ.)*

➤ Сăмах майлашăвĕнче тата предложенисенче пĕлтерĕшĕ енчен тĕрлĕ сăмах пулма пултарать. Сăмахĕсем куçăмлă е куçăмсăр пулни, пĕлтерĕшĕ паллă пулнипе пулманни, хăш сăмах та пулин кивелнипе кивелменни, сайра сăмахпа çыхăнăва кĕни ку е вăл сăмах майлашăвне е предложение ыттисенчен уйăрса ятарлă ушкăн (тĕслĕхрен, фразезеологи сăмах майлашăвĕ) тумаллине пĕлтермест. Лексикологире сăмахсем çинчен кăна калаçмалла.

**6. Фразеологи лексики**

➤ Чĕлхе ăслăлăхĕнче фразеологи çинчен калакан вĕрентӳ пур. Вăл пирĕн ăслăлăха вырăс чĕлхи вĕрентĕвĕнчен килнĕ. Вырăс ученăйĕсем фразеологи çинчен калаçма французсем хыççăн тытăннă. Французсем фразеологи ыйтăвне илемлĕ литераура хайлавĕсен сăнарлăх мелĕсене тишкернĕ май тапратнă.

Фразеологие пурте тенĕ пек сăмахсен пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă сăмахсен пĕрлĕхĕ тесе пăхаççĕ. Тачă çыхăнăва пĕрисем сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшĕпе, теприсем пĕлтерĕш çуккипе çыхăнтараççĕ. Куçăмлă пĕлтерĕш тени нумай чухне йăнăш çул çине пăрса ярать. Тĕслĕхрен, *çурт ту* сăмах майлашăвĕн икĕ пайĕ те тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ, *кăмăл ту, ыр ту, чыс ту, чăпăл ту* сăмах майлашăвĕсенче *ту* сăмахăн пĕлтерĕшĕ ăнлантаркан сăмахсем пуррипе кăна уçăмланать. Ку пулăма хальхи ученăйсем (тĕслĕхрен, И. А. Андреев профессор) фразеологипе мар, чĕлхере анлă

пĕлтерĕшлĕ сăмахсем *(ту, пул, пуçла, кай, яр; хушă, ай, çи, ум, хыç, тăрă; тăрăх, урлă, витĕр)* пуррипе çыхăнтараççĕ: (кăçал) *хута янă (*шкул), *уяв умĕнхи* (хавха), *пӳрт хыçне* (пытан), *урам урлă* (каç), *тĕтре витĕр* (кур). Çакна йышăнмасан кирек епле сăмах майлашăвне те фразеологи сăмах майлашăвĕ тесе пăхма тивĕччĕ.

Ăслăлăх историйĕнче фразеологизмсем тесе ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене те *(Амăш сĕчĕпе кĕмен ăса качака сĕчĕпе кĕртес çук; Пуçĕ çинче юпа шĕвĕртсен те ăнланас çук)* пăхнă, анчах ку шухăша нумай тĕпчевçĕ йышăнмасть.

Фразеологи мĕн пулнине кăтартнă чухне тĕп вырăна уйрăлми тачă çыхăну тени тухса тăрать. Çак енчен пăхсан хальлĕхе фразеологи сăмах майлашăвĕсем шутне вĕсен ку е вăл сăмахне словарьсенче икĕ точкăпа палăртнисене е палăртма сăлтав пуррисене кĕртме юрать. Вĕсем, тĕпрен илсен, пĕлтерĕшĕ паллă мар е форми хытса ларнă сăмахлă ушкăнсем. Тĕслĕхрен: *хĕвел* ***антти,*** *хĕвел* ***ларри****, вар* ***витти,*** *ал* ***шăлли; ахăр*** *самана,* ***шĕл*** *кăвар,* ***ыт*** *ахаль,* ***юлан*** *ут,* ***юмăх*** *тăвар;* ***тунти, ытлари, юн, кĕçнерни, эрне, шăмат, вырсарни*** *(кун)* т. ыт. те.

Сăмах çыхăнăвĕ пулнине пĕле тăркач фразеологизмсене лексикăна кĕртни е унпа пĕрле вĕрентни, паллах, чĕлхеçĕсене шухăшлаттарать, малашне тĕплĕ тĕпчев тумаллине пĕлтерет.

**Пĕлетĕр-и эсир?**

Карачайсемпе балкарсен кун ячĕсем тĕлĕнмелле: *баш кюн, георге кюн, бараз кюн, орта кюн, байрым кюн, шабат кюн, ыйых кюн.* Кун пек тата хăш халăх калать-ши? *(Л. Петров.)*

**89. Пысăк чăвашла-вырăсла словарь илĕр те икĕ точкăпа паллă тунă сăмах статйисене (пилĕк статья) тишкерĕр. Унта панă сăмах майлашăвĕсемпе предложени тупăр.**

**Тĕслĕхрен, «Чăвашла–вырăсла словарĕн» иккĕмĕш кăларăмĕн (Мускав: «Русский язык», 1985.–582 с.) *чăлăм* сăмахăн статйинче *Çĕрĕпе те чăлăм куç хупмарĕ* тĕслĕх панă. Ку тĕслĕх çине таянса. *Йăмăк чирлесен анне чăлăм куç хупмарĕ* предложени çырма юрать.**

**7. Лексикографи**

➤ *Лексикографи* термин вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ, lexikos «сăмах» тата graph «çыратăп» пайсенчен тăрать, чĕлхе ăслăлăхĕн словарьсем тăвассин теорийĕпе практикине ăнлантаракан пайĕ шутланать. Словарьсем вĕсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: чĕлхе (лингвистика) словарĕсем тата энциклопеди словарĕсем. Лингвистика словарĕсене тĕллевне кура тĕрлĕ ушкăна уйăраççĕ: куçару, тӳнтер, ăнлантару, термин, орфографи, орфоэпи, этимологи, синонимсемпе антонимсен словарĕсем т. ыт. те. Куçару словарĕсенче икĕ е ытларах чĕлхепе усă кураççĕ, ыттисенче, тĕпрен илсен, – пĕр чĕлхепе.






















Халь анлă усă куракан куçару словарĕсенчен М.И. Скворцов профессор редакцилесе кăларнă 40 пине яхăн сăмахлă «Чăвашла-вырăсла словаре» (Мускав: «Руский язык» издательство, 1-мĕш кăларăм 1983, 2-мĕш кăларăм 1985 çулта тухнă, 712 с.), çак чĕлхеçĕ икĕ томран тăракан *40* пин сăмахлă «Чăвашла вырăсла словарье» (1 том. –Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2021. – 638 с.; 2 том. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2021. – 655 с.) тата М.И. Скворцовах хатĕрленĕ 32500 сăмахлă «Вырăсла-чăвашла словаре» (1 том. –Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. – 638 с.; 2 том. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. – 655 с.) палăртмалла.

Республикăра халь чăвашла тухса пыракан словарьсенчен чи палли «Чăваш чĕлхин ăнлантарулла сăмах кĕнеки» шутланать. Вăл 7 томлă пулмалла.

Чăваш лексикографийĕ историе тĕрĕк чĕлхисен чи пирвайхи этимологи словарьне (*В.Г. Егоров.* Этимологический словарь чувашского языка. – Чебоксары: Чувашское книжное изд-во, 1964. – 356 с.) кăларнипе кĕрсе юлчĕ.

Эпир 4 томлӑ «Чӑваш энциклопедийӗ» (Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1 том (А–Е), 2006 (590 с.), 2 том (Ж–Л), 2008 (494 с.), 3 том (М–С), 2009 (686 с.), 4 том (С–Я), 2011 (798 с.), хамӑр чӗлхе ҫинчен ҫырнӑ «Чӑваш чӗлхи» энциклопеди словарӗ (Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2004. – 223 с.; хатӗрлекенӗ – *Л.П. Сергеев* професор) пуррипе мухтанма пултаратпӑр.

**90. Ӳкерчӗкре кӑтартнӑ статьясем тӑрӑх словарӗн тӗсне (чӗлхе, энциклопеди словарӗ), хӑш ушкӑна (куҫару, ӑнлантару, орфографи, этимологи т. ыт. те) кӗнине пӗлӗр.**

**1.**


**ПУКАН, тенкел** стул
*Путӗр-путӗр пукане, путь Хусана каять пуль хыҫлӑ* ***пукан*** *илмешкӗн* (Чӑваш халӑх юрри). *Улмуҫҫисем, чие йывӑҫҫисем айне хыҫлӑ* ***тенкелсем*** *лартнӑ* (Хв. Уяр. Сук хӗрринче).
**ПУЛА, кура** благодаря
*Платниксем, шӑмат куна* ***пула****, иртерех саланнӑ-мӗн* (В. Ухли. Пирвайхи сӑвӑ). *Сӑмах тупайманнине* ***кура*** *арӑмӗ пушшех хӑтӑра пуҫларӗ* (Е. Еллиев. Суйласа илнисем).
**ПУЛӐМ, явлени** явление
*Пуринчен ытла медицина тӗлӗшпе тата ҫут ҫанталӑкри* ***пулӑмсем*** *ҫинчен хӗрӳ сӑмах пынӑ* (П. Осипов. Элкей тавраш ӗ). *Пӗлӗт ҫинче пулса пыракан* ***явленисемпе*** *ҫынсем яланах интересленнӗ* (Чӑваш календарӗ).

**2.**


**ПӐРҪА** I 'горох'; полов. *бурчак* 'град'; уйг. *почак*, казах., калп., ног. *буршак* 'горох'; 'град'; башк. *борсак*, тат. *борчак*, алт. В *пырчак, мырчак*; уйг. Син. *пурчак* 'горох'; калм. *бурцг* то же. Катаринский (башк.), Остроумов (тат.) производят от глагола *бор, бур* (см. *пӑр* II); следовательно, *пӑрҫа*, по их мнению,— 'вьющийся'(?).
**ПӐРҪА** II 'блоха'; уйг. *бӱргә*, узб. *бурга*, кирг. *бӱргӧ*, казах., к. калп. *бӱрге*, ног. *бүьрше*, азерб. *бирә*, башк. *бӧрсә*, тат. *борча*, полов., карач.-балк. *бӱрче* 'блоха'.

**3**

**своди́ть,** *будущ.* свожу́, сводишь; *сов.*, *кого* илсе кайса кил; **сводить детей в театр** ачасене театра илсе кайса кил

**сво́дка,** -и, *ж.* **1.** сводка, пухă (*тĕрлĕ цифрăсен, хыпарсен*); **составить сводку** сводка пухса хатĕрле; **сводка о военных действиях** çапăçу хыпарĕсен пуххи; **сводка погоды** çанталăк сводки

**4.**

**тӳнтер** *(пал.)*; -ĕн, -е, -пе, -ĕ, -не; -ри, -рине, -тереххине, -ле, -рĕн

**тӳнтер;** -етĕп, -местĕп, -ет, -еççĕ, -ччĕр

**тӳнтерĕш;** -ĕн, -е, -ре, -сĕр, -шĕн

**5.**

302

2. Апрук (*апрук*), vectigal, оброк. *Ст. Чек.* Тимĕрçен-сем апрук тӳлесе пурăннă. Тимерсянцы платили оброк. *V.* утіл, утілні.

Апруç, demin. a voce Апрам, ласкат. имя Абрама. *Сред. Юм.*

Апсит (*Ап*$_c$*ит*), a v. Arab. ابوسيد, nom. loci in praef. Buensi. Название урочища в Буин. у.

**6.**

• ИЕ КУРĂКĔ ÇИНĔ (чăмланă т.ыт. те). *Сивл., тиркешт. Кам?* 1. Аскăнланса кайнă, алхасас шухăш тытнă.

2. Чарусăрланса, пуçтахланса кайнă; ‖ чыса маннă. *Ие курăкĕ чăмланă пулĕ ку, ним чаракне пĕлмест* (Хал. калаç.).

• ИЕ КУРĂКĔ ÇИТЕР (чăмлаттар т.ыт. те). *Кама?* Аскăнлантарса яр; чыс-тирпее мантар; ‖ чараксăрлантар.

**7.**

**ЙЁЛЕ́Н** [йьле́н'] – женский праздничный кафтан, приталенный, со складками. Изготавливали из тонкого сукна, тёмного сатина, украшали позументом, вышивкой, монетами. Преимущественно встречается у чувашей Приуралья, носят его в незастёгнутом виде; имеет сходство с башкирским жен. халатом е л е н.

*Г.Б. Матвеев.*

**8.**

**УРӐМ-СУРӐМ / ОРӐМ-СОРӐМ** состояние невменяемости, что указывает на силу стихийного явления; бурно, бешено; нечистый дух (Ашм. Сл. III, 277).

Тюркские соответствия: кирг., к.-кирг., тур., бар. *арам* = араб. حرام нечистый, запрещенный шариатом, возбраняемый; осмК. (т.е. тур.) *арам-сарам* перемешать (Радл. Сл. 1, 263).

См. Федотов МИЭСЧЯ, 143.

**9.**

**ҫунӑх** горе́ть жела́нием; **ирӗклӗх-шӗн ~** жа́ждать свобо́ды; **хӑнасене ~са кӗт** с нетерпе́нием ждать госте́й

**ҫункав** стру́жка *и* стру́жки; щепа́, ще́пка *и* ще́пки; **йывӑҫ ~** **плита** древесностру́жечная плита́; **тимӗр ~** металли́ческая стру́жка

**10.**

**КОНТЕ́КСТ** (лат. *contextus* «çыхăнтарни, çыхăну») — сăмах пĕлтерĕшне ăнланма кирлĕ текст сыпăкĕ. К. текста кĕрекен сăмахăн е предл. пĕлтерĕшне туллин палăртма пулăшать. Ăна предл-ре те, абзацра та, пĕтĕм текстра та палăртма пулать. К. пĕлтерĕшĕ чĕлхен кашни шайĕнчех (фонологире, грам-ра, семантикăра, синтаксисра) пур.

*Лит.:* Розенталь Д.Э., Теленкова М.А. Словарь-справочник лингвистических терминов. М., 1985; Русский язык. Энциклопедия. М., 1979.

*М.Г.Данилова.*

11.

**ВАЛАК 1.** Шыв юхтармалли çаврака е тӳрĕ кĕтеслĕ лупашка. *Вара валакран йăр юхса выртакан шыва ӳпĕнсе ĕçрĕ.* П. Осипов. *Çывăхрах валак тăрăх пĕве шывĕ шавласа юхать.* Г. Краснов.

**2. = Валашка** (1). *Тарасаллă пусă, вăрăм валак выльăхсене шыв ĕçтерме хатĕр.* В. Кр.-Асли.

**3.** Пĕрене чавса тунă мăн савăт; курите. *Витере ĕнене апатламалли юман валак выртать.*

**4.** *куçăм.* Çан-çурăм çинчи путăк вырăн; ӳт лупашки. *Çурăмĕ çине патăр-патăр тапса тухнă шултра тар çурăм шăмми валакĕпе юхать.* А. Емельянов.

**91. Чăвашла çырнă пĕр-пĕр словаре илĕр те ун тытăмĕ çинчен ик-виç минутлăх пĕчĕк презентаци хатĕрлĕр.**

***«Лексика. Фразеологи лексики. Лексикографи» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем***

**92. Ыйтусене хуравлăр.**

1. Мĕне лексика теççĕ? Сăмах лексикăран мĕн енчен уйрăлса тăрать? Лексика уçă тата пĕр вырăнта тăман система тенине епле ăнланмалла? Шухăшăра тĕслĕхсемпе усă курса ĕнентерĕр.

2. Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ мĕн? Нумай пĕлтерĕшлĕх, куçăмлă пĕлтерĕшлĕх епле пулса каять? Шухăшăра хăнăхтарусенче тĕл пулнă тĕслĕхсемпе усă курса ĕнентерĕр.

3. Куçăмлă пĕлтерĕш мĕнле сăлтавсене пула тата мĕнле мелсемпе пулать? Хуравăрта кирек епле тĕслĕхпе те усă курма юрать.

4. Метафора синекдохăпа метонимирен мĕн енчен уйрăлса тăрать? Метоними мелне синекдохăран уйăрса илме мĕншĕн йывăр? Хуравăр тупнă тĕслĕхсемпе усă курăр.

5. Омономсем – мĕнле сăмахсем? Каланине ĕнентерме тĕслĕхсемпе усă курăр.

6. Синонимсем антонимсемпе мĕн енчен пĕр пек, мĕн енчен уйрăм? Тĕслĕхсемпе усă курса ăнлантарăр.

7. Паронимсен текстра епле те пулин усси пур-и – ĕнентерĕр.

8. Вариантсене пĕр-пĕринпе ылмаштарма яланах пулать-и? Хуравлама тĕслĕхсемпе усă курăр.

9. Пулса кайни енчен чăваш лексикине епле ушкăнлаççĕ? Хуравăрта тĕслĕхсемпе усă курăр. Чăваш чĕлхинче ытти чĕлхе сăмахĕсем пурри мĕн çинчен калать? Чăваш чĕлхинчен сăмах йышăннă чĕлхесем пур-и?

10. Халăх йышĕ усă курни тăрăх чăваш лексикине епле ушкăнлама май пур? Каланине тӳрре кăларма юрăхлă тĕслĕхсем тупăр.

11. Усă курас тăтăшлăх енчен чăваш лексики вырăс чĕлхи лексискинчен уйрăлса тăрать-и? Историзмсене архаизмсенчен

уйăрса илме çăмăл-и? Неологизмсем расна йышши пулнине ĕнентерĕр.

12. Неологизм яланхи сăмахсен ретне кĕнипе кĕменнине пĕлмелли епле те пулин май пур-и? Каланă чухне тĕслĕхсем илĕр.

13. Сăмах майлашăвĕ сăмах тăвакан аффикс йышăнма пултарни чăваш чĕлхин хăйне майлă уйрăмлăхĕ пулнине вырăс чĕлхипе танлаштарса ĕнентерĕр.

14. Сăмах тăвакан аффикс сăмах ушкăнĕ çумне хушăннине çĕнĕ сăмах тунипе танлаштарма мĕншĕн май çук? Шухăшăра тĕслĕхсем çине таянса ĕнентерĕр.

15. Словарьсене – мĕнле критерисемпе ушкăнлаççĕ? Пирĕн мĕнле йышши словарьсем пур?

**93. «Тавралăх» пĕлтерĕшлĕ *çĕр-шыв* сăмах «патшалăх» пĕлтерĕше мĕнле мелпе йышăннă – метонимипе-и, синекдохăпа-и?**

**94. «Пĕлетĕр-и эсир?» текста (52 стр.) тепĕр хут вулăр. Авалхи пăлхар чăвашсем çапăçура тăшмана хăвалакă чухне: «Сĕрен!» – тесе кăшкăрнипе *сĕрен* ятлă музыка инструменчĕ хушшинче епле çыхăну пур? *Сĕрен!* междомети музыка инструменчĕн ятне мĕнле мелпе кусна – метонимипе-и, синекдохăпа-и? *Сĕрен!* междометие паян кун архаизм темелле-и, историзм темелле-и?**

**95. Чăваш чĕлхинче шыв ячĕпе çыхăннă ял ячĕсем чылай: *Арапуç, Ăхпуç, Пăлапуç, Йĕкенпуç* (шыв ячĕсем – *Ара, Ăх, Пăла, Йĕкен*) т. ыт. те. Ял ячĕсем мĕнле пулса кайнă – метонипе-и, синекдохăпа-и? *Пуç* сăмах юхан шывăн хăш пайне пĕлтерет? Апла, ял юхан шывăн хăш пайĕнче вырнаçнă? Ял ячĕсене сăмах темелле-и, сăмах майлашăвĕсен шутне кĕртмелле-и? Куçăмлă пĕлтерĕш йышăнаканни мĕн – шыв ячĕ-и, *пуç* сăмах-и?**

**96. Словарьсенче *вăрă* сăмахсем омоними тунине кăтартаççĕ:** ***1) лаша вăрри – лаша вăрлакан; 2) ыраш вăрри, сухан вăрри; 3) шыв***

***вăрри, Атăл вăрри*** **Чăваш Республикинче *Сĕнтĕрвăрри* ятлă хула пур. Вăл Сĕнтĕр шывĕ Атăла юхса тухнă çĕрте вырнаçнă. Хула ячĕ синекдоха мелĕпе пулнă-и, метоними мелĕпе-и? Куçăмлă пĕлтерĕше *Сĕнтĕр* сăмах йышăннă-и, *вăрă* сăмах-и?**

**97. М.И. Скворцов редакциленĕ е хатĕрленĕ пĕр-пĕр «Чăвашла-вырăсла словаре» илĕр те *Ю* сас паллипе пуçланакан статьясене пăхса тухăр. Шутлăр: пурĕ миçе статья? Статьясен пуçламăшĕнче омоним сăмахсем пур-и? Вырăс чĕлхинчен тата ун урлă кĕнĕ сăмахсем миçе? Ку сăмахсенчен миçе сăмаха калаçупа кĕнĕ теме пулать?**

**98. XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăвашпа вырăссен çын ячĕсем калаçупа çырура епле майпа сарăлнине сăнăр. Чĕхепе чĕлхе пĕр-пĕрне витĕм кӳни епле палăрать?**

– Николай Варсонофьевич, – ачасене хăйпе паллаштарчĕ учитель.

«Учительсен ячĕсем çапла вăрăм та хитре пулаççĕ-мĕн», – шухăшласа илчĕ хăй тĕллĕн Лявкка.

– Сирĕн ятăрсене мĕнле çырар-ха? – ун шухăшне пĕлнĕ пекех ыйтрĕ учитель.

– Лявкка ман ят.

– Николаев Леонтий тесе çырăпăр эппин, – журналне уçрĕ учитель.

– Эпĕ Чĕкеç ятлă.

– Апла тен-ха... Мария тесе çырăпăр вара. Николаева Мария. *(Л. Сачкова.)*

*** Чи юлашки репликăра тĕл пулакан *тен* сăмах калаçу палли пулнине ĕнентерĕр.**

**Сăмах тытăмĕ тата сăмах пулăвĕ**

**1. Чăваш сăмахĕсен тытăмĕ**

➤ Чăваш сăмахĕсене пĕлтерĕшлĕ пайсен хисепне кура (тытăмĕ тăрăх) икĕ пысăк ушкăна уйăрма пулать: 1) пĕлтерĕшлĕ пайсене пайланман сăмахсем *(куç, пуç, ура; хура, шурă, таса; пĕрре, пиллĕк, вуннă, вăтăр; кай, кил, лар)*; 2) пĕлтерĕшлĕ пайсене пайланакан сăмахсем *(куç-сăр, куç-лăх, ура-ран, ура-лан; шурă-па, таса-шăн, таса-лăх; лар-ат-ăп, лар-у, лар-у-ра).* Пĕлтерĕшлĕ пайсем хăйсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: тымар морфемăсем тата аффикс морфемăсем (morphe – «форма» пĕлтерĕшлĕ грек сăмахĕ). *Тымар* морфема сăмахăн тĕп пайĕ шутланать. Тĕслĕхрен, *кулăшла* сăмахăн *кул* пайĕ – тымар морфема, *-ăш* тата *-ла* пайсем – аффикс морфемăсем.

***Морфема*** вăл – чĕлхен пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк единици. Морфемăсенчен чи кирли сăмах тымарĕ шутланать.

**99. Сăмахсен тымар морфемисене тата афффикс морфемисене пĕр-пĕринчен дефис лартса уйăрса кăтартăр.**

1. Тин-тин-тин-н! янăрать шăнкăрав. Сасси ытла уçă. Ăнланатăп сана, шăнкăравăм. Эсĕ пире, студентсене, вĕренӳ кунĕ вĕçленнине систеретĕн. Вуннăмĕш хут илтрĕм сан сассуна паян. *(В. Элпи.)* 2. Çуллахи ăшă çумăр чăлан тăрринчен, калай çинчен ачашшăн шăпăртатса юхать, ыйха ярать, канлĕх кӳрет... Вăраха пымасть çуллахи çумăр, анчах сывлăша уçать, чĕрĕлĕх кӳрет. *(Л. Сачкова.)* 3. Ниме халăхĕ апатланса тухсан эпир пĕр лав çине вăрлăх тиерĕмĕр, теприн çине Эрнеслу инкене лартрăмăр. Кристин ниме апачĕ хатĕрлеме киле юлчĕ. *(А. Талвир.)*

➤ *Тымар* кашни сăмахăн пулать, *сăмах тĕпĕпе* тӳр килме пултарать: ***ача****-лăх-ра,* ***ача****-сем-пе,* ***ача****-сем-шĕн;* ***тевет****-лĕх,* ***тевет****-пе;* ***кур****-ăм-лăх,* ***кур****-мас-т-ăп,* ***кур****-ма-ссерен;* ***сав****-ăн-ăç-у,* ***сав****-ăн-ат-ăн;* ***сăна****-в-çă,* ***сăна****-(а)тт-ăн;* ***тав****-лаш-у-па,* ***тав****-шăн;* ***пур****-(ă)н-ăç-ра,* ***пурр****-и,* ***пурр****-и-пе;* ***сип****-лĕх-ле-т-п-ĕр,* ***сип****-ĕ,* ***сип****-ĕн-чен;* ***танкăр****-тат-тар-ма-лла; та-****кам****-па, ни-****хăçан****, те-****мĕн****-ле-скер.*

**100. Сăмахсен тымарне тупăр. Тымарсенчен хăшĕ сăмах тĕпĕпе тӳр килет?**

1. Пӳрт ăш-чикки хуп-хурах. Маччи те, пĕренисем те пĕтĕмпех хăрăмпа витĕнсе ларнă. Унта-кунта турат куçĕсенчен сухăр тумламĕсем ирĕлсе тухнă та хура йăлтăрккасем пек йăлтăртатаççĕ. *(Уйăп М.)* 2. Эпĕ, разведкăра йĕпенсе ĕшеннĕскер, утă сарнă нар çине выртсанах тарăн ыйха путнă. Çутă пайăркасем курăнакан вырăнтан шурă мĕлке килнĕн туйăнчĕ. Мĕлке мана кăчăк туртса хăй еннелле йыхравларĕ. Эпĕ тĕлĕннĕрен хамăн куçа шанмарăм: умра анне тăрать! Ун патне нар çинчен сиксе тăрса васкарăм. Патмар тирек патне çитсен çĕр пӳрт умне снаряд ӳксе шартлатса çурăлчĕ. Ун ванчăкĕсем шăхăрса-сас кăларса тирек çумне пырса çапăнчĕç. *(Н. Богданов.)*

➤ Чăваш чĕлхинче сăмах тымарĕ ытларах чухне уйрăм сăмахпа тан: ***тăван**лăх*, ***купăс**çă*, ***кул**ăш*, ***шыв**ак*, ***пуш**анка*, ***çилхе**мес*, ***вĕç**кĕн*, ***вĕлтĕр**кке*, ***купа**ла*, ***таш**ла*, ***хура**т*, ***хитре**лет*, ***лар**т*, ***сав**ăш*, ***шак**ка.*

Уйрăм сăмахпа тӳр килмен тымарсене ***çыхăнчăк тымарсем*** теççĕ: ***ва**т* (чул ват), ***ва**н* (кантăк ванать), ***ва**к* (вак укçа); ***сус**ăр* (сусăр пул), ***ирс**ĕр* (ирсĕр çын), **путь**сĕр ача.

**101. Хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупăр (*ача-пăча* мăшăр сăмаха илмелле мар), вĕсен тымарĕсемпе тĕпĕсне кăтартăр. Сăмах тĕпĕсем çыхăнчăк пулнипе пулманнине ăнлантарăр.**

### Хыт суха çийĕ

Çав вăхăтсенелле пирĕн хыт сухана тухаççĕ. Ыраш акса хăвармалли хире сухалаççĕ. Этем турăран çумăр кĕтет. Çумăр пулмасан ăна епле те пулин ыйтса илесшĕн: е пупа кĕл тутарать, е хăй пĕлнĕ пек чӳклет. Ача-пăча çерçи чӳкĕ тăвать. «Çумăр çутăр!» – тет. Ваттисем: «Тырă пултăр!» – теççĕ. Вун икĕ çул ирттерсе Чăпăрлăра тăхăр ял чӳкĕ тăваççĕ.

Çумăр пулманни халăх чунне ялан пăшăрхантарать. *(Г. Тимофеев.)*

* ***Ыраш акса хăвар* тата *лаша тăвар* сăмах майлашăвĕсенче тĕл пулакан *хăвар* тата *тăвар* глаголсем тытăм енчен пĕрешкел теме мĕнле сăлтав пур? Çыхăнчăк тымар çинчен калаçма пулать-и? Мĕншĕн?**

* ***Пăлхантарать* сăмахăн тытăмне ăнлантарăр.**

*⭘ **Хăш сăмахсене пĕрремĕшле, хăшĕсене иккĕмĕшле темелле – тĕслĕхсем тупса ĕнентерĕр. Пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсене текстра тупăр.**

➤ **Аффикссем** сăмах е форма тăваслăх енчен икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: сăмах тăваканнисем, форма тăваканнисем.

***Сăмах тăвакан аффикс*** сăмах тымарĕ е тĕпĕ çумне хушăннипе çĕнĕ лексика единици пулать. Танлаштарăр: *сахал – сахал**ăш**, сахал**лан**, сахаллан**тар**, сахал**лат**, сахаллат**тар**, сахал**лăх**.* Сăмах майлашăвĕ сăмах йыăнне çӳреме пултарать, çавна май сăмах тăву аффиксне йышăнаять: *çул çӳре – çул çӳре**в**, çул çӳрев**çĕ**; тĕл пул – тĕл пул**у**; мăн кăмăл – мăн кăмăл**лан**, мăн кăмăл**лăх**.*

**102. Вуласа тухăр. Сăмах тăвакан аффикссене тупăр, вĕсене йышăнакан чĕлхе единицисене калăр.**

Чăваш пуласлăхĕ тĕтреллĕ, уçăмлă мар. Ĕнтĕ хамăрăн авалхи тĕнче курăма ăнланма пулăшакан чăн чăвашла пурлăх-япала тахçанах çухалса пĕтрĕ, юлнă юлашкисем те вăхăт иртнĕçем улшăнчĕç, пĕлтерĕшне улăштарчĕç. Çавăнпах чăваш çыннин тĕнчепе тăван халăхне кураслăхĕ те тĕпрен улшăнса урăхланчĕ. Пур пек пахалăха улăштарни вара, чĕлхене улăштарнă е халăх пĕрлĕхне çухатнă пекех, халăхăмăрăн пĕлтерĕшне аркатать. Чăвашсем сăн-сăпатне улăштарнипе пĕрлех урăх халăх пулса тăрас хăрушлăх пур. *(С. Сатур.)*

*✪ **Хутлӑ предложенисен (пуҫламӑшӗнчен иккӗмӗш тата чи юлашки) тытӑмне пӗтӗмлетсе кӑтартакан схемӑсем ӳкерӗр.**

*✪ ***Чӑваш ҫыннин тӗнчепе тӑван халӑхне кураслӑхӗ*** **сӑмахсем епле ҫыхӑннине схемӑласа кӑтартӑр.**

➤ Сӑмах тӑвакан аффикссене тӑтӑшлӑха пӑхса тата тухӑҫлӑха пӑхса ушкӑнлаҫҫӗ.

Пӗтӗм сӑмахӑн пысӑкрах ушкӑнӗнче тӗл пулакан аффикссем ***тӑтӑш аффикссем*** шутланаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, япала ячӗ тӑвакан аффикссенчен тӑтӑшшисем шутне ***-лӑх(-лӗх), -ҫӑ(-ҫӗ), -у(-ӳ)*** аффикссем кӗреҫҫӗ: *пур**лӑх**, тӗрӗс**лӗх**; кӑмпа**ҫӑ**, ҫӗвӗ**ҫӗ**; пух**у**, пӗл**ӳ**.*

***Тухӑҫлӑ аффикссем*** тесе паян кун та сӑмах тума усӑ куракан аффикссене калаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, ҫавнашкал аффикслӑ тесе Г.А. Дегтярев тӗпчевҫӗн «Ӗмӗрсен чиккинчи чӑваш чӗлхи: ҫӗнӗ сӑмахсемпе терминсем тата пайӑр ятсем» кӗнекинче (*Г.А. Дегтярев.* – Шупашкар: Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗ, 2014. – 140 с) кӑтартнӑ ҫак сӑмахсене калама пулать: *сыват**ӑш*** – больница; *калӑплав**ҫӑ*** – верстальщик; *сапӑрла**в*** – воспитание тата ытти те (131 – 132 С.).

**✪✪✪ 103. Хальхи «Чӑвашла-вырӑсла» словарьте чӑваш сас паллийӗсенчен (Ӑ, Ӗ, Ӳ, Ҫ) пӗринпе пуҫланакан иккӗмӗшле сӑмахсене страницӑсене пӗр-пӗрин хушшинче пайласа ҫырса илӗр. Сӑмахӗсене мӗнле аффикспа пулни тӑрӑх ушкӑнлӑр. Ку е вӑл ушкӑн пӗтӗм пухнӑ сӑмахӑн миҫе процентне йышӑннине шутласа пӗлӗр. Аффикссене тӑтӑшлӑх йӗркипе вырнаҫтарӑр.**

**Асӑрхӑр! Харӑс темиҫе аффикслӑ сӑмахсенчен уйрӑм ушкӑн тума тивет. Тӗслӗхрен, *кӑмӑлсӑрлӑх* сӑмахра икӗ аффикс – *-сӑр* тата *-лӑх. Кипетсӗрлӗх* сӑмах *кӑмӑлсӑрлӑх* сӑмахпа пӗрешкел. Ҫавӑнпа сӑмахӗсем пӗр ушкӑна кӗреҫҫӗ.**

**104. Çĕнĕ сăмахсем тума усă курнă аффикссене тупăр. Вĕсене тăтăшлăх енчен мĕнле йĕркепе вырнаçтарма пулать?**

Сапăрлăх – воспитанность; хапхаçă – вратарь, голкипер; саккунçă – законодатель; ĕçтеш – коллега; хураткăç – ластик; шăваркăç – лейка; сивĕтмĕш – холодильник, шăнтмăш – морозильник; иленӳ – хобби; ăшăткăç – обогреватель; çыруçă – переписчик; тиевçĕ – погрузчик; ĕçтеркĕç, шăваркăç – поилка; путăш – поплавок; иртнĕлĕх – прошлое; састаш – рифма; ертӳлĕх – руководство; сăмахташ – собеседник; сăмахсар – словарь; шутлавçă – счетчик; сыхлавçă, сыхчă – телохранитель; вĕтеткĕç – терка; тирпейçĕ – уборщица; кăтартмăш – указатель.

➤ ***Форма тăвакан аффикссем*** икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: категори аффиксĕсем, категори аффиксĕ маррисем.

***Категори аффиксĕсем*** вĕсем ку е вăл пуплев пайĕшĕн кăтартуллă, мĕншĕн тесен ку е вăл пуплев пайне кĕрекен пĕтĕм е ытларах сăмахĕнче тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, япала ячĕсене сăпат, хисеп, падеж аффиксĕсем пурри кăтартать. Акă *юлташ-ăм-сем-пе* япала ятĕнче ***-ăм*** – сăпат категорийĕн 1-мĕш сăпачĕн аффиксĕ, ***-сем*** – нумайлă хисеп аффиксĕ, ***-пе*** – пĕрлелĕх падежĕн аффиксĕ. Глаголсене ытти пуплев пайĕсенчен çуклăх, наклоненипе вăхăт формисем уйăрса тăраççĕ. Сăмахран, *ташла-мас-т-ăп* глаголта ***-мас*** – çуклăх аффиксĕ, ***-т*** – кăтарту наклоненийĕн хальхи вăхăт аффиксĕ, ***-ăп*** – 1-мĕш сăпат аффиксĕ.

***Категори аффиксĕ пулман аффикссем*** вĕсем ку е вăл пуплев пайĕн пĕчĕк ушкăнĕнче кăна тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, падеж аффиксĕсен системине кĕмен ***-лă(-лĕ), -ллă(-ллĕ), -ла(-ле), -лла(-лле), -лăх(-лĕх), -чен(-ччен), -серен*** аффикссем çавнашкал. Акă ***-чен(-ччен)*** аффикс вăхăт тата вырăн талккăшне пĕлтерекен япала ячĕсем çумне кăна хушăнать: ***каç****чен,* ***ир****ччен, уявччен;* ***Тупах****чен*

(танлаштарăр: *Тупах ялĕччен*), ***Мускав**ччен.* Çын ячĕпе хушамачĕсем, тĕпрен илсен, ***-чен(-ччен)*** аффикса йышăнасшăн мар – истори тапхăрне палăртнă чухне кăна ирĕклĕ: ***Хаяр Иван**ччен, **Сталин**ччен, **Путин**ччен.* ***-Чен(-ччен)*** аффикса хăш-пĕр наречи йышăнма пултарать: ***ĕнер**ччен, **паян**ччен, **ыран**ччен, **халь**ччен (**халĕ**ччен).* Çав вăхăтрах ***-ччен*** аффкса кашни глаголăн е глагол ушкăнĕн пули-пулми аффиксĕ хыççăн лартма юрать: ***сивĕни**ччен, **типи**ччен, **ывăни**ччен, **çывăрса кайи**ччен, **ĕç пĕтери**ччен.* Танлаштару аффиксĕ паллă ячĕсемшĕн категори аффиксĕ (***лайăх**рах, **хитре**рех, **ăшă**рах, **сивĕ**рех)* шутланать тĕк – япала ячĕсенче категори тумасть, пĕр-ик сăмахра анчах ***(ача**рах, **тих**арах)* тĕл пулать. Çапла вара, пĕр аффиксах пĕр пуплев пайĕнче категори тăвакан аффикс шайĕнче тăрать, тепринче – тăмасть.

Чăваш чĕлхинче аффикссене сăмахăн хăш пайĕнче тăнине кура та ушкăнлама май пур: сăмах тымарĕ **умĕнче** тăраканнисем, сăмах тымарĕ **хыççăн** тăраканнисем. Танлаштарăр: ***та**-кам, **те**-мĕн, **ни**-хăçан; пул-**ас-лăх-шăн**, тархас-**ла-т-ăп**; **ни**-мĕн-**ле**.*

**105. Вуласа тухăр. Сăмах тăвакан тата форма тăвакан аффикссене тупăр. Тишкерекен аффикс чăнах та эсир каланă пекки пулнине урăх тĕслĕх тупса ĕнентерĕр. Тĕслĕхрен:** *тĕк**ке**ле – çыр**ка**ла; таш**ла** – юр**ла**.*

1. Çумăр ÿккеле пуçланă иккен. Шăрăхлатса пăхакан хĕвеле кăвак пĕлĕтсем карса илме тытăннă. *(Л. Сачкова.)* 2. Теприсен хатĕрленмешкĕн пĕр-икĕ кун пулать. Вара, ял çийĕн, пусăрăнчăк сывлăша хускатса салтак юрри янăрама пуçлать. *(А. Казанов.)*

*🕮 ***Çумăр*** **сăмаха** ***пусмăр*** **сăмахпа танлаштарăр. Танлаштаракан сăмахсен тытăмĕ пĕрешкел пулнине ĕнентерĕр.**

*● ***Вара, ял çийĕн, пусăрăнчăк сывлăша хускатса салтак юрри янăрама пуçлать*** **предложенире** ***ял çийĕн*** **сăмахсене запятойсем**

**лартса мĕншĕн уйрăмлатнă? Уйрăмлатмасан предложение мĕнле ăнланмалла?**

**106. Вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсен сăмах тĕпĕ хыççăнхи аффиксĕсем категори аффиксĕ пулнипе пулманнине калăр.**

1. Миккульпе ывăлĕ *пĕренелĕх* юмансене çивĕч пуртăпа вуллинчен паллă туса *тухрĕç.* Унтан, ĕçе *вăраха* ямасăр, *куçланă* юмансене тĕпрен касса *йăвантарма* пикенчĕç. *(Л. Сачкова.)* 2. Августăн *малтанхи* кунне пурте Малтанхи спас теççĕ. Матанхи спасра хăшĕ-хăшĕ *кĕлле* каять: «Илсе кайса вăрлăх пиллеттерес», – тет. Хăшĕ ним те кулянмасть, кĕлле те *каймасть. (Г. Тимофеев.)*

* ***Пĕренелĕх*** **тата *вăрлăх* сă**махсем **тытăмĕпе мĕн енчен пĕрешкел, мĕн енчен уйрăм?**

➤ Аффикссене çыхăну тунипе тума пултарнине кура та ушкăнлаççĕ: çыхăнтаракан аффикссем тата çыхăнтарманнисем. Çыхăнтаракан аффикссене хăйсене ушкăнлама пулать. Ушкăнĕсене çак таблица кăтартать:

**Çыхăнтаркан аффикссем**

| Ушкăнсем | | Аффикссем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| Ят тата глагол синтагмăсен пайĕсене çыхăнтараканнисем | Падеж | ***-ăн(-ĕн, -н)*** | *сан**ăн** кĕнекӳ, пир**ĕн** вĕренмелле, анн**ен** çырăвĕ* |
| | | ***-а(-е)*** | *ял**а** юрат, лайăх**а** кĕт, вунн**а** икк**е** пайла, сываласс**а** шан* |
| | | ***-ра(-ре), -та-(те)*** | *вăрçă**ра** пул, типографире ĕçле* |
| | | ***-ран(-рен), -тан(-тен)*** | *шăнас**ран** сыхлан, хал**тан** кай, ман**ран** ан уйрăл* |
| | | ***-па(-пе),*** | *каçпа вырт, ир**пе** тăр* |
| | | ***-сăр(-сĕр)*** | *каççăр ан таврăн, шутлама**сăр** ан калаç, хĕвел анма**сăр** каç пулмасть* |
| | | ***-шăн(-шĕн)*** | *сывлăх**шăн** кĕреш* |
| | | ***-ранпа(-ренпе), танпа(-тенпе)*** | *ĕмĕр**тенпе** пыракан йăла, эпир хамăр тăванпа пĕлтĕр**тенпе** тĕл пулаймастпăр; Çемен аслă шкул пĕтернĕ**ренпе** çулталăк иртрĕ* |
| | Падеж системне кĕменнисем | ***-лă(-лĕ), -ллă(-ллĕ)*** | *вăрман**лă** вырăн, виç кĕтес**лĕ** конверт; вăрăм ура**ллă** йытă* |
| | | ***-ла(-ле), -лла(-лле)*** | *тус**ла** пулăш, ăшă**лла** çи, çĕнĕ**лле** ĕçле, пыршă тухас**ла** çухăр, пытанма**лла** выля; никам* |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | илтмесле калаç |
| | | | -ашкал(-ешкел) | пирешкел халăх, манашкал вула, санашкал çын, унашкал чуп; |
| | | | -алла (-елле) | вăрманалла ут, инçетелле пăх |
| | | | -чен(-ччен) | каçчен уйра пул, ирччен лар, ыранччен кĕт, хальччен манăçа тух; пенсие тухиччен ĕçле; ватăличчен пурăн; пичче салтакран таврăниччен пĕр уйăх юлчĕ |
| | | | -шар(-шер) | пăтшар тырă ил, икшер тетрадь пар; |
| | | | -мĕш | пĕрремĕш трактор, вун пĕрмĕш класс, ал пĕрмĕш çурт, çĕр пĕрмĕш кун |
| | | | -ри,-ти, чи,-хи, -скер | каникулти студет, ирхи сывлăм, хальхи пурнăç, хитрескер тетте, пăшăрханса ӳкнĕскер, анне пире илтмест |
| | | | -серен(-ссерен) | ялсерен çĕнĕ клуб лартаççĕ; ирсерен радио итле; яла килмессерен ташă каçĕсенче пул; çил тухмассерен çанталăк пăсăлать |
| | | | -лăх(-лĕх) | виç кунлăх апат, пӳртлĕх йывăç, эрне пурăнмалăх çăкăр пĕçер; çынсем çӳремелĕх каçма хыв |
| | | | -ăн(-ĕн) | ахахăн ялтăра, кĕмĕлĕн чăнкăртат, лайăххăн калаç, сиввĕн пăх, иккĕн кил, çирĕм виççĕн тухса кай, хĕвел анассăн туйăнмасть |
| | | | -çем | вăрмана кĕнĕçем хăрăк тата çĕрĕк йывăççем нумайланса пыраççĕ, вăхăт иртнĕçем чун ыратăвĕ лăпланать |
| | Сăпат | | -м, -ăм(-ĕм); -у(-ӳ); -ĕ, -и | манăн тусăм, ман аппам, сан аçу, санăн кĕнекӳ çын сăмахĕ, ĕç çынни, аппан ачи |
| Глагол синтагмăсен пайĕсене кăна çыхăнтараканни сем | Инфинитив | | -ма(-ме) | вĕренме ĕмĕтлен, тĕл пулма калаçса татăл, çынсем пĕлме радиопа хыпар ту |
| | Причасти | яланхи | -ан(-ен) | пурнан пурнăç, иртен ĕмĕр, юхан шыв, вĕçен кайăк |
| | | иртнĕ | -нă(-нĕ) | ватăлнă çын, иртнĕ ĕмĕр, кивелнĕ тум, кĕтнĕ хăна, ăнман пурнăç; хĕвел аннă вăхăтра пĕтĕм тавралăх шăпланать |
| | | хальхи | -акан(-екен) | юрлакан ача, ĕçлекен пенсионер, çунакан шĕвек, хăй тĕллĕн вĕçекен аппарат; ман аппа ĕçлекен предприяти |
| | | пулас | -ас(-ес) | çитес вырсарни, инçе çула тухас çын, Слакпуçне кайса курас |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | *шухăш, врачра ĕҫл**ес** ĕмĕт; эпир шкул пĕтер**ес** кунччен нумай вăхăт юлмарĕ* |
| | | пули-пулми | ***-и*** | *пĕл**и**-пĕлм**и** калаҫ, кур**и** пул* |
| | Деепричасти | | ***-а(-е)***<br><br>***-са(-се)***<br><br>***-сан(-сен),***<br>***-сассăн(-сессĕн)*** | *вул**а** пуҫла, лар**а**-лар**а** кан, кан**а**-кан**а** ĕҫле; пӳрт тăрринчен шыв юх**а**-юх**а** пичке тулсах кайнă*<br>*калаҫ**са** ан ҫӳре, тĕлле**се** пер, тунă ĕҫе пысăка хур**са** хакла, ĕҫле**се** ил; куккук авăт**са** пĕттĕм вăрмана ян каять*<br>*шухăшла**сан** хурав тупма пулать, ывăн**сассăн** выртса кан; вăрмана йывăҫсем симĕслен**сен** кай* |

Ытти аффикссем ҫыхантармаҫҫĕ. Тĕслĕхрен, *Амăшĕ ачисемпе клаҫать* предложенире *ачисемпе* сăмахпа *калаҫ* сăмах хушшинчи ҫыхăнăва тума ни 3-мĕш сăпат аффиксĕ (**-и**), ни нумайлă хисеп аффиксĕ ***(-сем)*** кирлĕ мар. Камăнлăх форми *амăшĕ* сăмахра та пур. Ку вăл – ***-ăш(-ĕш)*** аффикс, анчах вăл пăхăнуллă ҫыхăну тумасть, ăнлавсем («анне», «ача») шухăш енчен килĕшсе тăнине кăна палăртать. Ҫыхăну вăйĕ ***-ĕ*** палăрту аффиксĕн те ҫук.

**107. Вуласа тухăр, паллă тунă сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсем мĕнле мелсемпе ҫыхăннине ăнлантарăр. Ку мелсенчен хăшне-хăшне падеж системине кĕмен аффикссем тесе пăхмалла? Пăхăнтаркан сăмахсем хăшĕсем пулнине аялтан йĕр туртса палăртăр.**

**1**

**Ҫĕпĕрте** атте **юлташĕсем**пе пĕрле **вырăн**тан **вырăн**а куҫса ялсем тăрăх ҫӳренĕ. **Ҫул ҫӳреме**лĕх, хырăм **тăрантарма**лăх укҫа е ҫăкăр тупасчĕ тесе хресченсене **тырă вырса**, **авăн ҫап**са панă. **Тахăш ҫĕр**те вара **хăйсем куҫса пыма**лли вырăна та **палăрт**са хунă. *(Уйăп М.)*

**2**

Ейӳ **эрне**рен ҫеҫ тамалчĕ. **Лачака**ра **лар**акан ял тата тепĕр эрне те, ик эрне те **ҫур**хи хĕвел питтинче кушăрхарĕ-ха. **Улăм вит**нĕ ҫĕр пӳртсем **юшкăн**па хупланчĕҫ. Урам **хушш**и шурлăхланчĕ. **Ейӳ**

**сарăл**нă Аслă Пăла улăхĕнче **каярах**па çăра симĕс курăк чăшăл! **шăт**са тухрĕ. *(Л. Сачкова.)*

**3**

Ун чухне эпир Польшăраччĕ. Çĕнĕ çул умĕн пире **театр**а илсе кайрĕç. Хамăр çĕр-шывран артистсем килнĕччĕ. **Вĕ**сен пултарулăхĕ **пир**е питĕ килĕшрĕ. **Ялта ӳс**нĕ чăваш хĕрĕ **чăн-чăн сцена ăсти**сен ăсталăхне **хăй кусĕ**пе хăçан **кур**ма пултарнă-ха?!

Ман савăнăç **хывăнма**лли пӳлĕме çитсен **ирхи тĕтре**лле сирĕлчĕ. Шинеле такам **вăрла**са кайнă. **Шинель шыракан**сен йышĕнче генерал та пурччĕ. **Чун хурланни**пе ĕсĕклесе ятăм. Командир **ман**а пĕчĕк ачана лăплантарнă пек лăплантарать:

– Тупнă кулянмалли. Салтаксем валли шинель паян тесен паян **туп**ма пултаратăп. **Генералпа мĕн тумаллин**е пĕлместĕп-ха. Кунта вара ĕç **пуç ватма**лăх çитет.

**Тепĕр кунн**е мана акăлчансен вĕр çĕнĕ шинельне тыттарчĕç. *(В. Ачча.)*

***** ***Улăм витнĕ*** **тата** ***ейӳ сарăлнă*** **пăхăнакан пайсем мĕн енчен пĕрешкел, мĕн енчен расна пулнине ăнлантарăр.**

***🕮 2-мĕш текстăн юлашки предложенийĕнче тĕл пулакан** ***каярахпа*** **сăмахăн тытăмне кăтартăр. Ăнлантарăр:** ***кай*** **япала ячĕ (танлаштарăр:** ***мал ен, кай ен; мала кай, кая юл*****) паллă ячĕ пек танлаштару аффиксĕ** ***(-рах)*** **йышăнасси, сирĕн шухăшăрпа, мĕнрен килет?**

**108. Текста вуласа тухăр. Паллă тунă мелсем падеж системине кĕмен ятарлă аффикс пулнипе пулманнине, хăш-хăш сăмахсене çыхăнтарнине калăр.**

1. Сикки**пе** пыракан ут кĕтĕвĕ çап**ла** Нухай каçç**и** патне çитсе Пăла шыв**ĕ** урлă каç**ма** пуçларĕ. Утсем шыв сирпĕт**се** сĕвек вырăн**па** Пăла шывн**е** пыр**са** кĕчĕç. Çур**хи** шыв тахçанах хухнă ĕнтĕ. Çулла**хи** вăхăт**ра**, ăшăх вырăн**та,** лаша путма**лăх** та шыв çук. Пăла

кукăр**ё**сен**че** вара шыв авăр**ё**сем явăнаççĕ. Унта пӳ яр**сан** та çитме çук. Тепĕр çĕр**те** тилхепе яр**са** çитме**н** вырăнсем те пур. Ут кĕтĕв**ĕ** тапăртат**са**, шыв сирпĕт**се** шыв**ран** тухрĕ те çыран енн**елле** ыткăнчĕ. *(Л. Сачкова.)* 2. Хĕр васкама**сăр** ура çине тăчĕ. Калистрат**ăн** алл**и** сумкă**ри** хытă хут**а** шырарĕ... Чĕрийĕ сик**се** тухас**ла** кăртлат**са** тапрĕ. Клас**а** Йăкăнат кĕр**се** тăчĕ. Хăй савăнăçлă, йăл-йăл çиçет. Калистратпа Зинăн**а** кур**сан** Йăкăнат чарăн**са** тăчĕ. Зина Калистрат па**нă** хытă хут**а** учитель сĕтелĕ çин**е** хучĕ те клас**ран** шăпп**ăн** тухрĕ. Йăкăнат хĕр хыççăн васкарĕ. Йăкăнатпа Зина шкултах алл**а** алл**ăн** тытăнса ут**акан** пулчĕç. Тăхтав вăхăтĕн**че** коридор вĕçн**е** кай**са** тăраççĕ те тем**ччен** калаçаççĕ. *(В. Константинов.)*

**109. Сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене çыхăнтаркан çыхăну мелĕсене тупăр, вĕсем хăш сăмахсене çыхăнтарнине кăтартăр.**

Маша тара тытса пурăнакан хваттершĕн Петя хăй тӳлесе тăрать. Çавăнпа та хваттере кирек хăш вăхăтра та килсе кĕрет. Хальхинче те Шупашкара, яланхилле, çур çĕр иртсен çитрĕ. Çул çинче ывăннăскер, хывăнса, çывăрмалли пӳлĕме васкарĕ. *(В. Кириллова.)*

* **Предложенисем ăшĕнче тĕл пулакан запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.**

**110. Нумай пăнчă лартнă вырăна шухăш енчен килĕшӳллĕ аффикс лартса çырăр. Аффиксĕ пĕр-пĕринпе хăш сăмахсене çыхăнтарнине, ятарлă çыхăну мелĕ пулнипе пулманнине ăнлантарăр.**

1. Кил...шăпăрт çеç кĕтĕм те никам...систермесĕр ура..., хăрах пушмак... пылчăк...тасат... çывăрма выртрăм. Ирхине вăран..., тӳрех, пушмак çукки...ас... илтĕм. Вăр-вар тумланкаларăм та кӳрш... Кĕçтук юлташ пат... каçрăм. Килĕнчех. Ман... юлташ нимĕн те çухатман иккен. Эпĕ кил...кĕтĕм. Мĕн тăвас? Студент укçи... аран-аран хĕстеркеле... тин çеç туян... пушмак... çухат... шел. Хайхи

велосипед çи... утлантăм та пушмак çухат... вырăн...васкарăм. *(Е. Енглаев.)* 2. Кĕçĕн куккан çамрăк мăшăрĕ, пир... çĕнĕ инке, кĕçĕн çын...х тумлан... çӳрет-ха. Хитре аркă...шурă çӳхе катан пир кĕпе тăхăннă, сарă пурçăн саппунпа. Сурпан сырăннă, çутă хушпу тăхăннă. Кăкри умне шӳлкеме, шултра кĕмĕл тенкĕ... ама çакса янă. Утнă чухне шӳлкемепе ама тенкисем чăнкăрт-чăнкăрт ту... янăра...пыраççĕ. Сăнпа-питпе инке тĕлĕнме...чипер. *(Уйăп М.)*

* ***Хитре аркă...шурă çӳхе катан пир кĕпе тăхăннă, сарă пурçăн саппунпа*** **предложенире** ***саппунпа*** **сăмах мĕнле член пулни çинчен, запятой лартнин сăлтавĕ çинчен тимлĕн шухăшлăр. Пĕтĕм предложение синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр.**

➤ Сăмах тытăмĕнче морфемăсем, тĕпрен илсен, çирĕп йĕркепе вырнаçаççĕ: малта – сăмах тымарĕ, ун хыççăн – сăмах тăвакан аффикссем, вĕсем хыççăн – форма тăваканнисем, юлашкинчен – çыхăну аффиксĕсем: *чечек-лен-и-ччен* (*чечек* – сăмах тымарĕ, **-лен** – сăмах (глагол) тăвакан аффикс, **-и** – пули-пулми форма аффиксĕ, **-ччен** – çыхăну аффиксĕ). Çак йĕркене чĕлхе вĕрентĕвĕнче ***агглютинаци*** (*agglutinate* – «çыпçăн» пĕлтерĕшлĕ латин сăмахĕ) теççĕ. Хăш чухне форма тăвакан аффикс сăмах тăвакан аффикс умĕнче тăма пултарать: *пул-ас-лăх, кур-ай-ман-лăх.*

Сăмах тымарĕпе сăмах тăвакан аффикс пĕрлĕхне ***сăмах тĕпĕ*** теме йышăннă (*чечеклен* – сăмах тĕпĕ). Сăмах тăвакан аффикс çук чухне сăмах тымарĕ сăмах тĕпĕпе тӳр килет: *чечек-ӳ-шĕн* (**чечек** – сăмах тĕпĕ тата тымарĕ, **-ӳ** – 2-мĕш сăпат аффиксĕ, **-шĕн** – пирке падеж аффиксĕ).

**111. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшлĕ пайĕсене таблицăн тивĕçлĕ кĕлеткине вырнаçтарса çырăр. Тĕслĕхрен:**

| Сăмах | Сăмах тымарĕ | Сăмах тăвакан | Сăмах тĕпĕ | Форма тăвакан | Çыхăну аффикс |
|---|---|---|---|---|---|

| | | аффикс (сем) | | аффикс (сем) | ĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| тăрăшулăхĕшĕн | тăрăш | -у, -лăх | тăрăшулăх | -ĕ | -шĕн |
| çĕнтерӳçĕсемпе | çĕн | -тер, -ӳ, -çĕ | çĕнтерӳçĕ | -сем | -пе |
| пуласлăхра | пул | -лăх | пуласлăх | | -ра |
| лашана | лаша | | лаша | | -(н)а |
| пулла | пул(ă) | | пулл | | -а |
| тĕрĕслемелле | тĕрĕс | -ле | тĕрĕсле | -ме | -лле |
| калаçса | кала | -ç | калаç | | -са |
| пĕлнĕн | пĕл | | пĕл | | -нĕ, -(ĕ)н |
| | | | | | |

**Чĕкеç ятлă юпах тиха**

Вăрçă вăхăчĕ. Эпĕ тетепе кашни çулах *çурпа кĕр* акисене *хутшăнаттăм.* Кӳршĕ Виттали *акана* икĕ вăкăрпа тухатчĕ.

Пĕррехинче кăнтăр апатне *таврăнатпăр.* Тете ватă лаша çинче утланса пырать, эпĕ – юпах тиха çинче.

Виттали икĕ вăкăртан *пĕрин* çинче ларса пыратчĕ. *Ирĕккĕн* пыракан вăкăрĕ *айккинелле пăрăнчĕ* те, Виттали *хăй аллинчи* пушша мана тыттарса вăкăра лашапа çавăрса килме ыйтрĕ. Эпĕ лашана вăкăр енне пăртăм. Вăкăра çапас тесе *пушăпа* сулса *ятăм,* анчах вăл вăкăра мар, хам утланнă Чĕкеçе лекрĕ. Юпах тиха *ĕрĕхсе* кайрĕ. Эпĕ лашана чарас тесе чĕлпĕре хытах туртрăм. Çавна май лаша мăйĕ çинех шуса кайрăм, пуç хĕрлĕ çĕре ӳкрĕм. Лашан *тăвата* ури мана *сĕртĕнсе* иртсе кайрĕ.

Ура *çине* тăтăм. Чĕкеç *манран* вун пилĕк – *çирĕм* метрта. Ман çине *çаврăнса* пăхса тăрать: «Мĕн пулчĕ-ши?» – *тенĕн* тинкерет. Эпĕ Чĕкеç патне *çывăхартăм,* йĕвен чĕлпĕрне алла илтĕм те пĕр меллĕ вырăнта *утланса* ларса апата *васкарăм.*

Тихана никам та *вĕрентмен,* çапах, ытти выльăх пек, *çынна* пăрахса *каймарĕ.* Мана *çĕр çинчен тăричченех* кĕтрĕ. *(А. Леонтьев.)*

**2. Сăмах пулăвĕ**

➤ Сăмах пулăвне икĕ тĕрлĕ ăнланаççĕ. Пĕрремĕшĕнчен, ку е вăл çĕнĕ ăнлава палăртакан мел теççĕ, иккĕмĕшĕнчен, сăмах пулăвне тĕпчекен ăслăлăх тесе пăхаççĕ.

Сăмах тăвакан мелсем чăваш чĕлхинче çаксем: 1) сăмах тымарĕ умне **та (те), ни** префикссем хушăнни *(**та**кам, **те**м(ĕн), **те**пĕр, **та**çта, **та**хçан, **ни**кам, **ни**мĕн, **ни**çта, **ни**х(ă)çан);* 2) сăмах тымарĕ е тĕпĕ çумне сăмах тăвакан аффикс хушăнни *(сав – сав**ăн** – савăн**ăç**; вĕрен – вĕрен**т** – вĕрент**ӳ** – вĕрентӳ**çĕ**);* 3) сăмахсем мăшăрланни *(уй-хир, атте-анне, çӳп-çап, ĕлĕк-авал).*

Ку виçĕ мелтен ***пĕрремĕшĕ*** местоименисемпе наречисене тăвать.

**112. Префикссем хушăннипе пулнă сăмахсене тупăр, вĕсем хăш пуплев пайĕ çумне хушăннине, иккĕмĕшле сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине калăр.**

**Катя.** Ан чăрманăр, выртса çывăрăр. ... Гера, анне, асатте, сывă пулăр. *(Пурне те чуп туса тухать. Герасима.)* Çапла вăл, пурнăç, Герочка. Каларăм та çав сана... Эсĕ ӳкĕте кĕмерĕн.

**Нина Осиповна.** Мĕне пĕлтерчĕ ку капла? Тĕлĕкри пек. Ниçтан та тăна кĕрейместĕп. *(Герасима.)* Сана вăл нимĕн те каласа кăтартмарĕ-и хăй çинчен?

*Герасим чĕнмест. Тарăн шухăша кайса тăрать.*

**Нина Осиповна.** Темскер пытарнă вăл пирĕнтен. Ку мĕнле капла-ха? Темле водород бомби çинчен калаçрĕ. Ăна тăнпах каларĕши вăл? *(Н. Терентьев.)*

* ***Ӳкĕте кĕр, тăна кĕр*** **сăмах майлашăвĕсен тĕп пайĕ куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулнине** ***кĕр*** **сăмаха тӳрĕ пĕлтерĕшпе каланă тĕслĕхсемпе**

**танлаштарса ӗнентерӗр. Куҫӑмлӑ пӗлтерӗш, сирӗн шухӑшӑрпа, мӗнле мелпе пулнӑ: метонипе-и, синекдохӑпа-и, метафорӑпа-и? Мӗншӗн?**

➤ ***Аффикс мелӗ*** япала ячӗсен, паллӑ ячӗсен тата глаголсен пулӑвӗнче тӗл пулать.

***Япала ячӗ пулӑвӗнче*** тӑтӑш тӗл пулакан тата тухӑҫлӑ усӑ куракан аффикссем шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ:

| Аффикс | Аффикс хӑш хӑш пуплев пайӗ ҫумне хушӑнни | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| ***-лӑх (-лӗх)*** | япала ячӗ, паллӑ ячӗ | ача**лӑх**, куҫ**лӑх**, сӑрт**лӑх**, йӗлме**лӗх**, ентеш**лӗх**, нӳр**лӗх**, тӗшмӗш**лӗх**, ҫамрӑклӑх, ачашлӑх, ҫепӗҫ**лӗх**, хитре**лӗх** |
| ***-ҫӑ (-ҫӗ)*** | япала ячӗ | пулӑ**ҫӑ**, арман**ҫӑ**, бетонҫӑ, калав**ҫӑ,** суйлав**ҫӑ**, ҫӑлтӑр**ҫӑ**, ӑслӑлӑх**ҫӑ**, кӗнеке**ҫӗ**, тӗн**ҫӗ**, элек**ҫӗ** |
| ***-ӑм (-ӗм)*** | глагол | пус**ӑм**, сӑх**ӑм**, ҫӑт**ӑм**, чӑт**ӑм**, вил**ӗм**, иш**ӗм**, сис**ӗм**, пӳл**ӗм**, ӳс**ӗм** |
| ***-ӑҫ (-ӗҫ)*** | глагол | ан**ӑҫ**, тух**ӑҫ,** пур(ӑ)н**ӑҫ**, свӑн**ӑҫ**, шан**ӑҫ**, тив**ӗҫ** |
| ***-у (-ӳ)*** | глагол | тавлаш**у**, уйрӑл**у**, чарӑн**у**, чуп**у**, вӗрен**ӳ**, имен**ӳ**, ҫӗнет**ӳ**, ҫӗнтер**ӳ**, кӗреш**ӳ**, тӗрмеш**ӳ**, тӳрлет**ӳ** |
| ***-в*** | глагол | кала**в**, мухта**в**, сывла**в**, сыхла**в**, хакла**в,** вӗҫе**в**, ӗрче**в**, пупле**в**, тие**в**, тӳле**в** |

Сайра тӗл пулакан, тӑтӑшлӑхпа палӑрман аффикссем шутне япала ячӗ пулӑвӗнче ҫаксене кӗртме пулать:

| Аффикс | Аффикс хӑш хӑш пуплев пайӗ ҫумне хушӑнни | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| ***-а (-е)*** | глагол | пӑр**а**, ҫыр**а**, виҫ**е**, вит**е** |
| ***-ав(-ев)*** | глагол | мухт(а)**ав**, шыр(а)**ав,** ҫӳр(е)**ев**, тӗрӗсл(е)**ев** |

| | | |
|---|---|---|
| ***-ам (-ем)*** | глагол | тумл(а)**ам**, хутл(а)**ам**, çĕкл(е)**ем**, чĕлл(е)**ем** |
| ***-ан (-ен)*** | глагол | ав(ă)т**ан**, сур**ан**, çыр**ан**, çĕм(ĕ)р**ен** |
| ***-ах*** | япала ячĕ | сăм(а)**ах**, хуп**ах**, уртм(а)**ах** |
| ***-аш (-еш)*** | япала ячĕ | кая**ш** (кай аш), мал**аш**, шал**аш**, тул**аш**, тавр(а)**аш** |
| ***-ă (-ĕ)*** | глагол | пус**ă**, çак**ă,** хуп**ă,** вит**ĕ,** тĕк**ĕ** |
| ***-ăк (-ĕк)*** | глагол | сып**ăк,** çырт**ăк**, тат**ăк**, хăс**ăк,** шăй(ă)р**ăк** |
| ***-ăш (-ĕш)***[1] | паллă ячĕ | анл(ă)**ăш**, сарлак(а)**ăш**, тарăн**ăш**, çивĕч**ĕш** |
| ***-ăш (-ĕш)***[2] | глагол | кул**ăш**, туп**ăш**, пĕл**ĕш**, пĕлтер**ĕш** |
| ***-мăш (-мĕш)*** | глагол | йăпат**мăш**, култар**мăш**, тултар**мăш**, тухат**мăш**, йӳтет**мĕш**; |
| ***-кăч (-кĕч)*** | глагол | пăр**кăч**, тыт**кăч**, вĕр**кĕч**, хĕс**кĕч** |
| ***-ска (-ске, -шка,-шке)*** | япала ячĕ | çуна**шка**, пӳрне**ске**, тĕме**ске** |
| ***-ма (-ме)*** | глагол | пус**ма**, çыр**ма**, пĕр**ме**, тĕк**ме** |

**113. Паллă тунă япала ячĕсем мĕнле пуплев пайĕнчен тата мĕнле аффикспа пулнине ăнлантарăр. Таблицăра кăтартман аффикссем пур-и?**

1. Пинеç пĕлет: ун упăшкипе ывăлĕ начар *сунарçăсем* мар: вĕсем килти *тăкака* сунара çуренипе сапласа тăнă. *(К. Турхан.)* 2. Тăван *тавралăх* тăрăх çӳресси – маншăн пысăк *киленĕç*. *(Ю. Скворцов.)* 3. Карачăм асран кайми *сăмсах* тĕлĕнче чарăнса тăчĕ. *(А. Медведев.)* 4. Кай, малтан *тихашкине* йĕркеллĕ кĕтсе ил... *(В. Ржанов.)* 5. Атте учительница тăхăр сехетсĕр пымасть тесе текех *вĕркĕч* умĕнче аппаланать. *(А. Талвир.)* 6. *Йĕпсе* тытнă пӳрнисем Наталин хăвăрт-хăвăрт вылянаççĕ... *(А. Ĕç.)* 7. *Кӳренĕç, тарăху* та *хурлăх* Пĕр харăсах сиксе тухсан – Хăть каç эс çич тинĕс урлă, вĕсем юлмаççĕ хăвăнтан. *(А. Алка.)* 8. Доктор, эпĕ *пурнăçра* тӳссе курнă çын – калăр, пирĕнтен ан пытарăр. Эппин, вăл халь-халь кĕтсе пурăнать-и *вилĕме*? *(Н. Терентьев.)*

➤ ***Паллă ячĕсен пулăвĕнче*** тăтăшлăхпа тата тухăçлăхпа палăракан аффикс тесе пĕр аффикса кăтартаççĕ:

| Аффикс | Аффикс хăш пуплев пайĕ çумне хушăнни | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***-ти*** | евĕрлев сăмахĕ | лапăс**ти**, лĕпĕс**ти**, пакăлти, сӳпĕл**ти**, йăпăл**ти**, мĕшĕл**ти**, сĕнкĕл**ти**, якăл**ти** |

Ытти аффикссем тăтăшлăхĕпе те, тухăçлăхĕпе палăрса тăмаççĕ:

| Аффикссем | Аффикс хăш пуплев пайĕ çумне хушăнни | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***-ак (-ек)*** | япала ячĕ, паллă ячĕ, евĕрлев сăмахĕ | пыл**ак**, шыв**ак**, шĕв**ек**, йӳç(ĕ)**ек,** ящт**ак** |
| ***-ака (-еке)*** | паллă ячĕ | лутр(а)**ака,** çавр(а)**ака**, вĕçл(ĕ)**еке**, шĕв(ĕ)р**еке**, шĕв(ĕ)**еке**, лăст**ака**, яшт**ака** |
| ***-ам (-ем)*** | тĕрлĕ пуплев пайĕ | вăт(а)**ам,** лап(а)**ам**, лачк(а)**ам**, сăртл(ă)**ам,** тӳр(ĕ)**ем,** шарк(а)**ам** |
| ***-анка (-енке)*** | паллă ячĕ | выç(ă)**анка**, пуш(ă)**анка**, ус**анка**, хыт(ă)**анка**, шур(ă)**анка** |
| ***-амас (-емес)*** | япала ячĕ, паллăячĕ | милк(е)**емес**, çăмл(ă)**амас**, çар(а)**амас**, çилх(е)**емес**, çӳçл(ĕ)**емес**, тĕкл(ĕ)**емес**, хăлх(а)**амас**, хĕрл(ĕ)**емес** |
| ***-ăк (-ĕк)*** | глагол | кас**ăк**, кат**ăк**, пут**ăк**, çĕт**ĕк**, çур**ăк**, ус**ăк,** хăр**ăк**, чĕр**ĕк**, шăт**ăк** |
| ***-ăш (-ĕш), -аш (-еш)*** | япала ячĕ, евĕрлев сăмахĕ | ач(а)**аш,** йăк**ăш**, ак**ăш**-мак**ăш**, лăк**ăш**-лак**ăш,** ылм**аш-**тĕлм**еш** |
| ***-кка (-кке), -ка (-ке)*** | паллă ячĕ | мăнтăр**кка**, начар**кка**, çăмăл**кка**, йăлтăр**кка**, кашăр**кка**, лапсăр**кка**, шĕвĕр**кке,** вĕлтĕр**кке**; лепсĕр**кке**; хытан**ка**, лапăр**ка** |
| ***-кă (-кĕ)*** | тĕрлĕ пуплев | лăн**кă,** пушан**кă**, шуран**кă,** лăп**кă,** |

| | | |
|---|---|---|
| | пайĕ | тăкăс**кă,** йӳçлен**кĕ,** силлен**кĕ**, çӳçен**кĕ**, типшĕн**кĕ**, хĕрĕн**кĕ** |
| ***-кăн (-кĕн)*** | глагол | ас**кăн**, çăт**кăн**, тар**кăн**, чуп**кăн**, вĕç**кĕн**, ер**кĕн**, ас**кăн**-тĕс**кĕн** |
| ***-лак (-лек)*** | тĕрлĕ пуплев пайĕ | пăр**лак**, пук**лак**, тăвар**лак**, шуç**лак**, шар**лак**, кĕр**лек**, сив**лек**, тӳ**лек** |
| ***-мак (-мек)*** | тĕрлĕ пуплев пайĕ | кас**мак**, сул**мак**, çатăр**мак**, тăс**мак**, ус**мак**, чар**мак**, арм**ак**-чарм**ак**, шăтăр**мак**, шыç**мак**, пĕр**мек** |
| ***-лă (-лĕ)*** | япала ячĕ | кан**лĕ,** пут**лĕ,** тим**лĕ,** сип**лĕ,** вир**лĕ,** тĕрек**лĕ,** чап**лă,** хăват**лă** |
| ***-сĕр (-сĕр)*** | япала ячĕ | кан**сĕр**, пут**сĕр**, тим**сĕр**, чап**сăр**, хăват**сăр** |

Аффиксне уйăрма çук паллă ячĕсем те пур: *çиллес, ачаш, тĕрккес, хутăш, лаптак, мĕшкăлтăк, пуçтах, хыткан, выçтак, тулли.*

***-Лă (-лĕ) е сăр-сĕр)*** аффикслă сăмахсем паллă ячĕ пулнине ***-тарах (-терех), -рах (-рех)*** танлаштару аффиксне йышăнни е умне *питĕ*, *ытла* йышши сăмаха лартма май пурри тăрăх пĕлмелле: *хăватлă мотор (хăватлăрах мотор, питĕ хăватлă мотор)*, *вăйсăр çын (ытла та вăйсăр çын)*, анчах малта япала ятне ăнлантаркан сăмах пур чухне *(вун ик лаша хăватлă мотор; вун сакăр лаша вăйлă двигатель)* япала ячĕ темелле. Тĕпрен илсен, ***-лă (-лĕ), сăр-сĕр)*** аффикссем сăмахсене çыхăнтараççĕ, япала ятне паллă ячĕ пĕлтерĕшлĕ тăваççĕ: *моторлă кимĕ, аслатиллĕ çумăр, вăрманлă вырăн, хĕвеллĕ кун, пĕр пӳлĕмлĕ хваттер, автономиллĕ республика; пăшалсăр çын, ним шелсĕр тăшан.* Çыхăнчăк тымарсем çумне пырса ларма пултараççĕ: *урлă, вирлĕ, хĕрлĕ, аслă, ятарлă, кирлĕ, тĕрлĕ; харсăр* (< *хар* араб сăмахĕ), *чăрсăр, ирсĕр* (< ир «намăс» пĕлтерĕшлĕ араб сăмахĕ).

Çапла вара, ***-сăр (-сĕр)*** аффикс пур енчен те тенĕ пек ***-лă(-лĕ)*** аффикс евĕр, унтан хирĕçле пĕлтерĕш пуррипе кăна уйăрлса тăрать.

**114. Аффикспа пулнӑ паллӑ ячӗсене тупӑр, вӗсен аффиксӗсене, мӗнле тымар ҫумне хушӑннине кӑтатӑр. Аффикс йышӑнакан ҫыхӑнчӑк тымарсем пур-и? Таблицӑра кӑтартман аффикслӑ паллӑ ячӗ пур-и?**

1. Пичӗ-куҫӗ имшеркке те хыткантарах... *(И. Тукташ.)* 2. Ҫӑвара хаяршак тутӑ ҫапрӗ, шӑла тиврӗ. Ача ҫыртнӑ улмана ҫӑвартан кӑларса шӗшкӗ тӗмӗ урлӑ пӑнлаттарчӗ. *(М. Трубина.)* 3. Юмӑҫӑн вӗҫлеке янахӗ чӗтренсе-туртӑнса илчӗ... *(Илпек М.)* 4. Савӑнӑҫ! Ытла та ҫӑмӑлкка ҫунатлӑ-ҫке эсӗ! *(А. Артемьев.)* 5. Вӗлтӗртетсе ҫунакан ҫӑлтӑрсемпе сырӑннӑ тӳпе тӑрӑх кӑтрашка пӗлӗт ластакӗсем шӑваҫҫӗ. *(Ҫ. Элкер.)* 6. Микула, кам тесе шутлатӑн мана? Ҫав териех ҫӑмӑлттай хӗр тетӗн-им? *(Н. Мранькка.)* 7. Ахаль те хӗрлемес питлӗскер, вӑл тата ытларах хӗрелсе кайрӗ. *(Ҫ. Элкер.)*

➤ ***Глаголсен пулӑвӗ*** аффиксӗсен йышӗпе те, тӑтӑшлӑхӗпе те, тухӑҫлӑхӗпе те чи пуянни шутланать. Чи паллӑ аффикссене таблицӑра кӑтартнӑ:

| Аффикссем | Аффикс хӑш пуплев пайӗ ҫумне хушӑнни | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| **-ал (-ел)** | ят сӑмах | тас(а)**ал**, шур(ӑ)**ал**, сар(ӑ)**ал**, кив(ӗ)ел, ҫӗн(ӗ)**ел**, кӗск(е)**ел**, ҫух**ал** < ҫук**ал**, хӗр(лӗ)**ел** |
| **-ар (-ер)** | ят сӑмах, глагол | кӑк**ар**, пуҫ**ар**, шӑв**ар** < шывар, кӑвак**ар**, куҫ**ар**, пус**ар**, шӑт**ар** |
| **-ат (-ет, -т)** | ят сӑмах, глагол | тумла**т**, сар(ӑ)**ат**, шур(ӑ)**ат**, хура**т**, тӑр**ат** вӗрет, ҫӗн(ӗ)**ет**, лар**т**, тар**т** |
| **-ӑл (-ӗл)** | ят сӑмах, глагол | каҫӑр**ӑл**, самӑр**ӑл**, тӑр(ӑ)**ӑл**, кар**ӑл**, кас**ӑл**, сар**ӑл**, сир**ӗл**, хир**ӗл** |
| **-ӑн (-ӗн)** | ят сӑмах, глагол | ӑш(ӑ)**ӑн**, пуҫ**ӑн**, пур**ӑн**, пӑх**ӑн**, сыр**ӑн**, ҫып(ӑ)**ҫӑн**, ҫыхӑн, турт**ӑн**, ус**ӑн**, |

| | | |
|---|---|---|
| | | чых**ăн**, сив(ĕ)**ĕн**, вĕçер**ĕн**, вит**ĕн**, кӳл**ĕн**, пĕр**ĕн**, пӳл**ĕн**, хир**ĕн** |
| **-ăç (-ĕç)** | глагол | кур(ăн)**ăç**, ман**ăç**, çап**ăç**, тап**ăç**, тыт**ăç**, ер**ĕç**, хир**ĕç** |
| **-ăш (-ĕш)** | глагол | пул**ăш**, сав**ăш**, сап**ăш**, кĕрĕш, кил**ĕш**, тĕк**ĕш** |
| **-ăх (-ĕх)** | ят сăмах | тут**ăх**, выç(ă)**ăх**, сар(ă)**ăх**, вĕч(ĕ)**ĕх**, йӳç(ĕ)**ĕх**, пиç(ĕ)**ĕх** |
| **-ка (-кка, -ке)** | евĕрлев сăмахĕ | вăр**ка**, йăр**ка** (йăр**кка**), лан**кка**, лăр**ка**, лутăрка, мăр**ка**, нăй**ка**, так**ка**, танк**ка**, чак**ка**, шак**ка**, вĕр**ке**, кӳп**ке**, лĕр**ке**, лӳчĕрке, лӳш**ке**, сĕнк**ке**, тӳнкке, тӳп**ке** |
| **-ла (-ле)** | ят сăмах, евĕрлев сăмахĕ | аршăн**ла**, ăслайла, пуç**ла**, капă**рла**, куç**ла**, сăвă**ла**, сыпă**ла**, сум**ла**, çумла, таш**ла**, хупă**ла**, чăн**ла**, юр**ла**, лăр**ла**, мăр**ла**, нăр**ла**, ыр**ла**, ĕнселе, им**ле**, кĕвĕ**ле**, çĕвĕ**ле**, тĕвĕ**ле**, иккĕле, пил**ле**, редакциле, сий**ле**, тим**ле**, ӳкĕт**ле**, элекле, эмел**ле**, ĕрле, кĕр**ле**, лĕр**ле** |
| **-лан (-лен)** | ят сăмах, евĕрлев сăмахĕ | ама**лан**, ас(лă)**лан**, ăн**лан**, вăй(лă)**лан**, йăс**лан**, пыл**лан**, пысăк**лан**, тăкăс**лан**, шуй**лан**, вĕç**лен**, им**лен**, кĕпĕр**лен**, пичет**лен**, сĕлпĕр**лен**, сĕмсĕр**лен**, чипер**лен**, сийлен, тĕлкĕш**лен**, тӳр(ĕ)**лен**, хĕрӳ**лен,** эреш**лен** |
| **-лат (-лет)** | ят сăмах, евĕрлев сăмахĕ | анлă**лат**, вăш**лат**, какай**лат**, кăтра**лат**, мăнтăр**лат**, сайра**лат**, такан**лат**, хак**лат**, мăр**лат**, чăрт**лат**, ыр**лат**, ян**лат**, вĕлт**лет**, ешĕл**лет**, кĕрен**лет**, кӳп**лет**, мĕлт**лет**, тӳнк**лет**, тӳр(ĕ)**лет**, шип**лет**, ӳх**лет**, эх**лет** |
| **-лаш (-леш)** | ят сăмах | сут**лаш**, тав**лаш**, тус**лаш**, тăван**лаш**, мир**леш**, чикĕ**леш** |
| **-т (-ар,** | глагол | макăр**т**, палăр**т**, кул**тар**, кӳп**тер**, |

| | | |
|---|---|---|
| **-ер), -тар (-тер)** | | сӳн**тер,** васка**т,** васкат**тар**, вӗрен**т**, вӗрент**тер**, выля**т**, выля**ттар**, ташла**ттар**, кӑкар**ттар**, питӗр**ттер**, тие**ттер** |

**115. Иккӗмӗшле глаголсен пулӑвне ӑнлантарӑр. Таблицӑна кӗмен аффикссем пур-и?**

1. Цехра шав. Пуҫпа шухӑшласа ӗҫлеме ҫук. *(Н. Терентьев.)* 2. Наҫтуҫ кинеми нӳхрепрен йӳҫӗхмен сӗт илсе кӗрет. *(Г. Харлампьев.)* 3. Ҫу та ҫу кӗпӳне – пӑр ҫинче вак касса алла кӳтӗркеттерни мар ӗнтӗ. *(А. Ӗҫ.)* 4. Тата тепӗр уйӑх пӗрле пурӑнатпӑр. *(Н. Терентьев.)* 5. Каҫик пире сапан туйӗн президенчӗпе паллаштарчӗ. 6. Ҫамрӑксем ташӑ пуҫласа ячӗҫ. *(А. Талвир.)* 7. Ҫурт ҫийӗсемпе типнӗ ҫӗр ҫине шултра ҫумӑр тумламӗсем тӑкӑнса шапӑртатрӗҫ. *(Ҫ. Элкер.)* 8. Кӗрхи ҫамрӑк автансем пӗр-пӗринпе ӑмӑртмалла киккириклетсе авӑтаҫҫӗ. *(Г. Краснов –Асли.)* 9. Ухиме сӗтел ҫине чашкӑрса вӗрекен сӑмавар пырса лартрӗ. *(А. Талвир.)* 10. **Укахви.** Сергеев юлташ авланса Лидӑпа Шупашкара каять тет. **Петя.** Тет, тет!.. Ҫӳретӗн ял тӑрӑх тетлеттерсе! Эс тетлеттермесӗрех пӗлеҫҫӗ. *(И. Максимов–Кщшкинский.)* 11. Юпаллӑ анлӑ ҫул. Унӑн ик айккипе сарӑхнӑ ҫерем кӗҫҫеленсе пырать. *(А. Талвир.)*

*** Иккӗмӗш тӗслӗхе пӑхӑр та шухӑшлӑр: вырӑссем *свежее молоко* тенине *йӳҫӗхмен сӗт* тесе куҫармалла-и, *халь анчах сунӑ сӗт* тесе-и?**

➤ Сӑмах тӑвакан аффикса темиҫе сӑмахран тӑракан синтагма та йышӑнма пултарать, мӗншӗн тесен унӑн та ӑнлава пӗлтерес пахалӑх пур: *никама пӑхӑнманл**ӑх**, пӗчӗк ача**лан**, ҫӗнӗ сӑмах тума пултарасл**ӑх**, ҫул ҫӳре**в**, тӗл пул**у**, япала ячӗ**лен**.* Кунашкал пахалӑх сӑмах ушкӑнӗсен, вӑйлӑн, иртнӗ ӗмӗрӗн 80-мӗш ҫулӗсен вӗҫӗнче – 90-мӗш ҫулӗсен пуҫламӑшӗнче палӑрчӗ. Сӑмах ушкӑнӗ те йышӑнма

пултарнăран, паллах, *сăмах тăвакан аффикс* терминпа çĕнĕ лару-тăрăва шута илсе усă курма тивет.

«Сăмах тăвакан аффикс» умĕн сăпат афиксĕ, глаголăн причасти аффиксĕ, *мар* татăк, *пек* хыç сăмах тăма пултараççĕ: *çĕнĕ сăмах тума пултар***ас***лăх, тĕрĕс* **мар***лăх, пĕр* **пек***лен.*

**116. «Сăмах тăвакан» аффикслă пĕрлĕхсене таблицăна вырнаçтарăр. Аффиксĕ умĕн мĕнле те пулин аффикс пуррипе çуккине кăтартăр.**

| Аффикс йышăнакан сăмах ушкăнĕ | «Сăмах тăвакан аффикс» умĕнхи морфема | «Сăмах тăвакан» аффикс |
|---|---|---|
| çĕнĕ сăмах тума пултар | -ас | -лăх |
| | | |

1.

1. Пĕр шухăшлăх чире парăнтарать. («Хресчен сасси».) 2. Чăвашсем турра ĕненеслĕхпе уйрăмах палăрса тăраççĕ. *(Б. Чиндыков)* 3. 1987 – 1991 çулсенче Шупашкарта демократи идейи, тĕрлĕ шухăшлăх сарăлса пыратчĕç. *(Ю. Михайлов.)* 4. Аттене тек кураймастăп тесе питĕ кулянтăм. Сыв пуллашнă чухне тем каларĕ – халĕ ас тумастăп *(В. Бахматов.)* 5. Иртен вара паян тулта Çумăр çăвать ут куçленсе. *(Н. Карай.).* 6. Поэзи – сăнарлă шухăшлав. *(О. Иванова.)* 7. Урине мана хăйпе тантăш Лукка Марйи патне илсе каять. *(Уйăп М.)* 8. Хăна умĕнче анне кăшт ырă кăмăлланчĕ, сĕтел хушшине лартса, тĕрленĕ ал шăлли тыттарчĕ... *(А. Талвир.)*

2.

1. И.А. Андреев хальхи пайташ япала ячĕленме пултарнине палăртать пулин те, тулли лексикализациленнĕ (туллин япала ятне куçнă) сăмахсен шутне *ыйткалакан* сăмаха кăна кĕртет. Хальхи пайташсемпе çĕнĕ ăнлавсене палăртнă чухне усă курнине асăрхать:

*айăплакан, айăпланакан, пайлакан, пайланакан, каскалакан* «платник», анчах та юлашкинчен панă сăмахсем определени пулаççĕ тесе вĕсем тулли япала ячĕленменнине ĕнентерме тăрăшать. 2. Чылай пайташ хальхи чĕлхере туллин япала ячĕленнĕ: *автан, суран, пиçен, чикен, çĕмрен, ӳсен-тăран, иртен-çӳрен, килен-каян, тăван* т. ыт. те. 3. Хушăран ***-и*** ффикслă пулмалли причастисем япала ячĕленеççĕ те хисеп, падеж тăрăх япала ячĕ пекех улшăнаççĕ: *тупмалли, туртмалли* т. ыт. те. 4. Паллă ячĕ пулакан *çук* сăмах нумайлă хисепре пулма пултарать, япала ячĕленет: *çуксем* «бедняки» (А VII, 205). *(В. Сергеев.)*

➤ Чăваш чĕлхинче сăмах майлашăвĕсем истори тапхăреĕнче сасă енчен улшăнс пулнă *асатте, асанне, кукаçей, кукамай, анкарти, аслати, çăварни, кĕçнерни, вырсарни, улмуççи, армути* йышши сăмахсем пур. Вĕсене И.П. Павлов доцент ***çыпçăнчăк сăмахсем*** тенĕ.

Çыпçăнчăк сăмахсем хăй вăхăтĕнче сăмах майлашăвĕсем пулнине <и> фонемăпа пĕтекен *армути, аслати* йышши япала ячĕсен пару, вырăнпа туху падеж формисем кăтартаççĕ: *армути, армутине, армутинче, армутинчен; аслати, аслатине, аслатинче, аслатинчен; анкарти, анкартине, анкартинче, анкартинчен.*

*Электрохунар, автохуçалăх, ялпо, политçапăçу* йышши сăмахсем вырăссен сăмахĕсене *(электрофонарь, автохозяйство, сельпо, политбой)* ***калькăланипе*** пулаççĕ. Тĕрĕссипе, чăваш чĕлхин тытăмне кăна пăхăнсан уйрăмах çырма та май пур: *электро хунар (электричество хунарĕ), авто хуçалăх (автомобиль хуçалăхĕ), ял по (ял потребитель обществи), полит çапăçу (политика çапăçăвĕ).* Вара чăваш чĕлхинче *электро, авто, по, полит* йышши сăмахсем пуррине йышăнма, вĕсене словарьсене кĕртме тивет.

**117. Çыпçăнчăк сăмахсем мĕнле сăмах майлашăвĕн пайĕсем сасă енчен улшăнса пĕрлешнине тупма тăрăшăр. Тетраде çырса хурăр.**

1. Майра манăн хушаматăмпа ятăма хăйĕн çӳхе тетрадьне çырса хучĕ *(Уйăп М.)* 2. Ырă шыва аякка мар, алкум вĕçнех сапаççĕ. *(В. Элпи.)* 3. Виççĕмĕш бригада çуртрисене пухса пĕтерсе авăн çапать. *(Ст. Лашман.)* 4. Кăнтăрла крыльца çăраççийĕ алăк çумĕнче тăраканччĕ – ăна каçхине çеç кăларса хураттăмăр. *(А. Артемьев.)* 5. Каçалапа кукамай талкăшса çитрĕ. *(М. Трубина.)* 6. Атьăр анкарти хыçĕнчен те пулин лартса каям. *(Н. Терентьев.)* 7. Асанне кăмăлсăр пулчĕ, ун сăмахне эпĕ итлеменшĕн çилленсе мăкăртатма пуçларĕ, анчах асатте картишне тухса лаша кӳлме тытăнчĕ. *(А. Талвир.)*

➤ ***Мăшăр сăмахсем*** мĕн пур пуплев пайĕнче тĕл пулаççĕ, сыпăнуллă çыхăнура тăракан синоним е антоним сăмахсене пĕрлештереççĕ: *уй-хир, кил-çурт, атă-пушмак, сĕтел-пукан, кĕпе-йĕм, çăкăр-тăвар, хĕç-пăшал, çул-йĕр, ăс-тăн, ăс-хакăл, чун-чĕре; ана-çаран, ир-каç, лару-тăру; хура-шурă, вată-вĕтĕ; ӳсен-тăран, каян-килен; хăр-хар, йăр-яр, йăлт-ялт, пăлтăр-палтăр* т. ыт. те. Пăхăнуллă çыхăнури сăмахсем мăшăр сăмах тăваймаççĕ.

Хăш-пĕр мăшăр сăмахăн иккĕмĕш пайĕ пĕлтерĕшсĕр: *урлă-пирлĕ, кӳршĕ-кӳп, тути-маси, сас-хура, карта-хура* т. ыт. те.

Мăшăр сăмахăн пĕлтерĕшĕ ун тытăмне кĕрекен уйрăм сăмахсен пĕлтерĕшĕсенчен анлăрах. Анлă пĕлтерĕш, тĕпрен илсен, синекдоха мелĕпе пулать. Çакă ытларах чух япала ячĕсенче палăрать. Тĕслĕхрен, атă-пушмак шутне атăпа пушмак кăна мар, калуш та, сандали те, туфли те, кроссовка та, кеда та, тапочки те т. ыт. те кĕрет. *Çĕр* тата *шыв* сăмахсем мăшăрланса икĕ ăнлавран («çĕр», «шыв») анлă талккăша пĕлтереççĕ. Ку талккăш пирĕн ăс-

тăнра ту-вăрмана, уй-хире, сывлăша, çул-йĕре, хулапа яла, кил-çурта, тăван-пĕтене, производствăна, экономикăна, патшалăх системине т. ыт. пĕр пĕтĕмлĕх туса пĕрлештерсе тăрать.

▲ Нумай япаларан тăнине пĕлтернĕрен чăваш калаçăвĕнче мăшăр сăмахсемпе пĕрреллĕ хисепе лартса усă курас йĕрке пур: *Хуçалăх магазинĕнче савăт-сапа уйрăмĕ пысăк вырăн йышăнать.*

➤ Мăшăр сăмахсем ытти сăмахсенчен икĕ пайĕ те ку е вăл аффикс йышăнма пултарнипе уйрăлса тăраççĕ*: ир-каç, ирĕн-каçăн; ăс-тăн, ăспа-тăнпа; ал-ура, алли-ури; кил-çурт, килĕм-çуртăм; атте-анне, аçу-аннӳ, ашшĕ-амăшĕ.*

Хăш чухне мăшăрлăха сăмахăн тĕп формисем мар, тĕп маррисем кĕреççĕ: ***çулталăкне-çулне** уя, **çийĕпе-тумĕпе** уйрăлса тăр.*

Пайĕсем рифмăланни, пĕрешкел сасăпа пуçланни е пĕтни мăшăр сăмаха сасă енчен килĕшӳллĕ тăваççĕ, текста илемлĕх кĕртеççĕ:

*Ан макăрăр, кил-йышăм, маншăн,*
*Ан макăрăр, тăван-пĕтен,*
*Ан макăрăр, ыр кӳршĕм-аршăм,*
*Ял-йышăм, эп çĕре кĕрсен.* (П. Хусанкай.)

▲ Мăшăр сăмахăн пайĕсем хушшине çырура кĕске йĕр (дефис) лартаççĕ: *сĕтел-пукан, чашăк-тирĕк, çĕлен-калта, хурт-кăпшанкă, усал-тĕсел, айлă-çийлĕ, армак-чармак, хура-шур, ӳсен-тăран.*

**118. Мăшăр сăмахсене таблцăра кăтартнă пек тишкерĕр. Тишкерекен сăмахсен тĕпĕсем мăшăр сăмах тунипе туманнине чăвашла-вырăсла словаре е орфографи словарьне пăхса пĕлĕр.**

**Мăшăр сăмахсем**

| Сăмахсемпе формăсем | Тĕп формăсем те, тĕп маррисем те мăшăрланаççĕ | Тĕп формă-сем мăшăр- |
|---|---|---|
| | Пайсем пĕлтерĕше кура мĕн пулни | |

| | Ик ăнлавĕ те пĕр ушкăна кĕрет | Сино-ним | Анто-ним | Пай пĕл-терĕшĕ паллă мар | ланай-маççĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| чалăш-чĕлĕш | | | | + | |
| утă-улăм | + | | | | |
| | | | | | |

**1**

1. Çыру хĕрсене чун-чĕререн пăшăрхантарса ячĕ. 2. Хăш-пĕрин тата чараканĕн алли çирĕп. 3. Яруткин начар каччă мар. Кăмăлĕ те ырă. *Сăн-пичĕ* те пур. 4. Кăмака хыçĕнчен чике сухал хĕрт-сурт тухса тăрасран та шикленессĕм пур. Арăш-пирĕш шухăшпа çапла пăтранса выртнă хушăра кăмака çинче сасартăк темскер йăшăлтатса илчĕ. 5. Пĕр ирхине Натюкпа Урине ирех тăрса тумланчĕç. Кăпăл-капăл апат çырткаларĕç те Шăнкаса тухса чупрĕç. Вĕсемпе пĕрлех эпĕ те тăтăм. Анне мана таса *кĕпе-йĕм* тăхăнтартрĕ. Ура сырса ячĕ, çӳç-пуçа тураса тирпейлерĕ. *(Уйăп М.)* 6. Шыв-шур тапранас умĕн лаша вăрлани пĕтĕм яла тĕлĕнтерчĕ. 7. Нумай *юмах-халап* çӳрет Ярмуш пирки пирĕн таврара. 8. Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм: ĕлĕкхи имшертерех йĕкĕт вырăнне халĕ мана матрос пек çирĕп алă-уралла, сарлака *çан-çурăмлă* вăй питти çын ыталаса илчĕ. *(А. Талвир.)* 9. Эпĕ пуян килĕнче мĕскĕн тарçă пек пурăнтăм, *шăм-шак* каниччен çывăрса кураймарăм...10. Крахьян сĕтел таврашĕнче кăштăртатса çӳрерĕ, *чашăк-тирĕк* пуçтарчĕ. 11. Апачĕ те, ытти *тутли-йӳççи* те хăех сĕтел çине пырса ларĕ. *(М. Ухсай.)* 12. Ырри-усалли, вăйли-вăйсăрри, çĕнни-кивви – темĕн те пур ман ăшра. *(Хв. Уяр.)* 13. Ку асар-писер çанталăкра пур те ăсран тухнă пулас. *(Н. Терентьев.)*

**2**

1. Пăх та, асламăшĕн кĕлĕ вуламалли кĕнеки-мĕн. Алăпа çырнă, чăвашла. Кĕнекене, пӳрне хулăнăш тусанпа витĕннĕскере, Йынкка аллинчи çĕтĕкпе шăлкаларĕ те сĕтел çине хучĕ. Çапла май

сăваплă кĕтесре йĕрке туса пĕтерсен турăшсене каялла вырнаçтарчĕ. Кăмăлĕ тулнăскер йĕри-тавралла савăнăçлăн тинкерчĕ. Акă юнашарах хашак ăшĕнче ашшĕпе амĕшĕн пысăклатнă сăн ӳкерчĕкĕсем çакăнса тăраççĕ. Чим, вĕсем те тусан айĕнче-иç. Каллех çуса тасатрĕ Йынкка. Çакăнпа пĕрлех чунĕнче те çуталса-тасалса кайнă пек пулчĕ. 2. Кайран мĕн пулни-иртнине Йынкка пит ыррăнах ас та тумасть. *(Е. Нарпи.)* 3. Тĕлĕнмелле чăнах: халăх татти-сыпписĕр ăçта куçать? *(В. Элпи.)* 4. Анне алăкăн-тĕпелĕн чупкаласа çӳрет. *(А. Талвир.)* 5. Ача-пăча валли ясли-садик, шкулсем тумалла. *(Хв. Уяр.)* 6. «Сăпка» хуçи, пӳрте çын кĕнине туйман-сисмен пек, йăшăл та тумарĕ. 7. Шутлăр-ха: мĕнешкел пысăк чун, хĕрӳ туйăм сӳнми-иксĕлми юрату упранать иккен Валя чĕринче?!*(Ю. Николаева.)* 8. Кашни пулăмрах ыррине курма-тупма тăрăшмалла. *(«Хыпар».)*

*** Паллă тунă мăшăр сăмахсенчен пĕрне суйласа илĕр те пĕлтерĕшĕ куçăмлă пулнине, куçăмлăх синекдоха мелĕпе вăй илнине ĕнентерĕр. Шухăшăра ăслав тексчĕ çырса уçăмлатăр.**

➤ Мăшăр сăмахсемпе пĕр евĕрлĕ пулăм пур Ку вăл – ***сăмаха икĕ хут калани.*** Пĕрешкеллĕх уйрăмах çырура палăрать. Танлаштарăр: *çан-çурăм, ача-пăча, вак-тĕвек, пыршă-аршă, утан-шăван, йăлтăр-ялтăр, тăп-тап* – мăшăр сăмахсем; *çутă-çутă, çап-çутă; кăн-кăвак, йăвалана-йăвалана (кай), тăпăл-тăпăл (ту)* т. ыт. те. – сăмахсене икĕ хут калани. Икĕ хут каланă чухне пайсем, мăшăр сăмахăнни пекех, пĕр-пĕрне пăхăнмаççĕ: *татăк-татăк, ăшă-ăшă, нумай-нумай, çав-çав, тăпăл-тăпăл, ак-ак, ай-ай; катки-катки, ялтан-ялтан, пĕри-тепри, калаçсан-калаçсан; ял-ялĕнче, пĕр-пĕринпе.*

*Ялтан яла, вăхăтран вăхăт, кунтан кун, вĕçрен вĕç* йышшши пĕрлешӳсен пайĕсем виççĕмĕш сăмаха е сăмах ушкăнне иккĕшĕ те харăс пăхăнса тăраççĕ: *киноаппаратурăна* ***ялтан яла куçар,*** *çанталăк*

***кунтан кун ăшăтать, вăхăтран вăхăт*** *çумăр* ***çăвать,*** *шпагат çиппине* ***вĕçрен вĕç тыт****са пайла.* Çавăнпа сăмах çумне ун йĕкрешĕ предложенире ахаль сăмахсен яланхи юнашарлăхĕ пекех пырса ларать.

*Пĕртен пĕр* тĕслĕхе хисеп ячĕ сăмах майлашăвĕ теме юрать. Вăл *лайăхран лайăх, хитререн хитре* йышши паллă ячĕ сăмах майлашăвĕсем майлă. Ку ретре *хальтен халь* пĕрлешĕве пăхма май пур.

Икĕ хут калани сăмахăн лексика пĕлтерĕшне курăмлăрах тăвать е шухăш тĕшши пулнине кăтартать: *Селевер,* ***çутă-çутă*** *сăнлăскер, кĕрсе курман, сăнаман кĕтес хăвармасть. Пĕчĕк чĕлхипе* ***пĕтĕлтете-пĕтĕлтете*** *тем те пĕлесшĕн сăмахлать.* (Г. Максимов.)

**119. Икĕ хут калани сăмах пĕлтерĕшне ăçта курăмлă тунине, ăçта шухăш тĕшшине уйăрнине таблицăра кăтартăр.**

| Икĕ хут калани | Лексика пĕлтерĕшне курăмлă тăвать | Шухăш тĕшшине палăртать |
|---|---|---|
| çутă-çутă | + | |
| пĕтĕлтете-пĕтĕлтете | | + |
| | | |

1. Час-часах кассăн-касăн сивĕ çил вĕрет. *(А. Лазарева.)* 2. Ура салтса, чĕркуççи таран шыва кĕрсе, кармашкаласа пĕр чечекне татрăм-татрăмах. *(М. Трубина.)* 3. Ирхи çилпе хускалнă хумсем инçете-инçете çитсе куçран çухалаççĕ. *(Илпек М.)* 4.Çырма-çатра урлă шăкăр-шакăр çех каçа-каça каятпăр. 5. Манăн часрах машина çулĕн вĕçне тухса чăн-чăн çул çӳреве тытăнас килет. *(Хв. Уяр.)* 6. Çырма тĕпĕнче юхи-юхми шыв йăлтăртатса выртать. *(В. Ухли.)* 7. Тĕллĕн-тĕллĕн кăмака мăрйисем тăлăххăн та хăрушшăн курăнса пыраççĕ. 8. Алешăпа Роза сăпка умĕнче тăраççĕ. Рози пиччĕшне хăвăрт-хăвăрт тем калать. *(Ю. Николаева.)*

➤ ***Пĕр пуплев пайĕ тепĕр пуплев пайĕ вырăнĕнче ç̆ӳрени*** сăмах пулăвĕпе çыхăнман. Тĕслĕхрен, *Пурнăç идеалĕ маншăн улшăнмасть* (Н. Терентьев) предложенире *пурнăç* сăмах *идеал* япала ятне паллă ячĕ пек пăхăнса тăрсан та хăйĕн япала ячĕлĕхне çухатмасть. *Хăйă çути ӳкмесен урамра юр вĕçкелени курăнмасть* (В.Ухли.) предложенире *çутă* сăмах япала ячĕ пек 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă, апла пулин те паллă ячĕ картинчех юлать.

Пĕр пуплев пайĕ тепĕр пуплев пайĕ вырăнĕнче çӳренине И. А. Андреев профессор пирĕн чĕлхемĕрĕн пуплев пайĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлман питĕ авалхи тапхăрпе çыхăнтарать, çав вăхăтран юлнă уйрăмлăх тет.

**120. Паллă тунă сăмахсем хăш пуплев пайĕ пулнине, предложенире хăш пуплев пайĕ вырăнне каланине ăнлантарăр.**

| Сăмах | Хăш пуплев пайне кĕрет? | Хăш пуплев пайĕ вырăнне каланă? |
|---|---|---|
| пурнăç | япала ячĕ | паллă ячĕ |
| çутă | паллă ячĕ | япала ячĕ |
| | | |

1. Хĕл варринче Çĕпĕре тарса кайрăм. Выçлăх *хаярĕ* çапса ӳкерчĕ унталла. *(Хумма Ç.)* 2. Сантăр пичче *кутăнĕшĕн* Анукпа иксĕмĕрĕн телее пĕтерсе лартма памăп. *(Н. Мранькка.)* 3. Кĕр *мăнтăрĕпе* пĕррехинче çирĕм пилĕк çулхи хитре йĕкĕт Каççан арман авăртма кайнă. *(Хв. Уяр.)* 4. Ырă каçпа *ырă* сунатăп, юлташсем! *(И. Макимов-Кошкинский.)* 5. Юман пăхмасть хĕлне те: Ун *сарăх* çулçисем Çаплах ӳкмен, тӳсеççĕ. *(П. Хусанкай.)* 6. Липа алăкран *сĕлкĕш* сăнпа кĕчĕ... *(К. Турхан.)* 7. Пире хирĕç вăтăрсенчен иртнĕ, çаврака сăн-питлĕ, *ялкăш* куçлă хĕрарăм тухрĕ. *(Юхма М.)* 8. Йынкка эпĕ. Герасимов Зинон. Тахçан сирĕн *вĕренекенĕр* пулнăскер. 9. Пĕр-пĕр яваплă ĕç *пуçлакан* яланах *вăйлисенчен* вĕренет. *(Е. Нарпи.)*

*** 8-мӗш тӗслӗхре *сирӗн* сӑмах *вӗренекен* сӗмаха пӗтӗмӗмшлӗн ӑнлантарать-и, унӑн *верен* пайне кӑна-и? Мӗншӗн?**

*** 9-мӗш тӗслӗхре *пӗр-пӗр яваплӑ ӗҫ* смахсем *пуҫлакан* сӑмаха пӗтӗмӗмшлӗн ӑнлантараҫҫӗ-и, унӑн *пуҫла* пайне кӑна-и? Мӗншӗн?**

**-*Акан* аффикс сӑмах ҫумне хушӑнать-и, сӑмах майлашӑвӗ ҫумне-и – ӗнентерӗр.**

*** *Вӗренекен* тата *пуҫлакан* сӑмах формисенчен хӑшӗ иккӗмӗшле сӑмах? Мӗншӗн?**

***«Сӑмах тытӑмӗ тата сӑмах пулӑвӗ» темӑна вӗреннине аса илмелли ӗҫсем***

**121. Ыйтусене хуравлӑр.**

1. Сӑмах тытӑмӗнче мӗнле-мӗнле пай пур? Вӗсем пӗр-пӗринчен мӗнпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ – тӗслӗхсемпе ӗнентерсе парӑр.

2. Аффикс хушнипе сӑмахсене мӑшӑрлатнине пирӗн чӗлхере сӑмах пулӑвӗн тӗп мелӗсем тесе мӗншӗн каламалла? Ку мелсем халь тухӑҫлӑ шутланаҫҫӗ-и?

3. Сӑмах майлашӑвӗ сӑмах тӑвакан аффикс йышӑнасси мӗнпе ҫыхӑннӑ?

4. Пӗр пуплев пайӗ тепӗр пуплев пайӗн пӗлтерӗшӗпе ҫӳренине мӗншӗн сӑмах пулӑвӗ темелле мар?

5. *Хӗрлӗ Чутайсем Республика кунне пысӑк хавхапа кӗтсе илчӗҫ* йышши предложенисенче топоним ҫын ушкӑнне пӗлтерни мӗншӗн сӑмах пулӑвӗ мар? Топоним ҫын ушкӑнне пӗлтерни синекдохӑпа пулать-и, метонимипе-и – ӗнентерӗр.

6. Сӑмаха икӗ хут калани мӗншӗн сӑмах пулӑвӗ мар?

7. Мӑшӑр сӑмах хӑй тытӑмне кӗрекен сӑмахсенчен анлӑрах пӗлтерӗш йышӑнни *(атӑ-пушмак, сӗтел-пукан, чашӑк-тирӗк, апат-*

*çимĕç)* метонипе пулать-и, синекдохăпа-и – тĕслĕхсем тупса кăтартăр.

8. Мăшăр сăмахсене нумайлă хисепре калани мĕн пирки йăнăш шутланать?

**122. Панă сăмахсене тымарĕсене кура ушкăнласа çырăр.**

1) ăнăçу, ăнкар, ăнăçлăх, ăнла, ăнтар, ăнлан, ăнлă, ăнсăр;

2) вĕçев, вĕçер, вĕçкĕн, вĕçле, вĕçтер, вĕçлĕ;

3) каçар, каçă, каçхи, каçчен, каçару, каçлăх;

4) йĕрле, йĕре (ача), йĕрĕн, йĕрке, йĕрӳ, йĕрĕнчĕк;

5) пĕрлĕх, пĕрĕн, пĕрешкел, пĕрке, пĕрлеш, пĕрме, пĕрчĕ.

***Тĕслĕхрен,*** *пăра, пăрăнчăк, пăрлак, пăркăч, пăрлăх, пăрăн, пăрăнăç* сăмахсене тымарĕсем тăрăх *пăр* япала ятне тата *пăр* глагола кура ик ушкăна ушкăнлама пулать: *пăр* (япала ячĕ): *пăрлак, пăрлăх; пăр* (глагол): *пăра, пăрăнчăк, пăркăч, пăрăн, пăрăнăç.*

**123. Паллă тунă аффикссен варианчĕсем пуррине скобкăна тĕслĕх çырса ĕнентерĕр, аффикссене аялта йĕр туртса палăртăр.**

Вăрманта, хуларан, килтĕм, курсассăн, шăшие, ĕнине, урампала, тулла, пăрăвăн, тутăрсене, тутăрсемпе, тутăрун.

***Тĕслĕхрен:*** *декларацие (расписание); юлташун (пĕлĕшӳн), юлташăм (пĕлĕшĕм); пултăм (пултăн, пулчĕ; килтĕм, килтĕн, килчĕ).*

**124. Сăмахсен морфемисене таблицăна аффиксĕсем хăш ушкăна кĕни тăрăх вырнаçтарăр.**

| Сăмах | Сăмах тымарĕ | Сăмах тăвакан аффикс (сем) | Сăмах тĕпĕ | Форма тăвакан аффикс (сем) | Çыхăну аффиксĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| кĕнекесемпе | кĕнеке | | кĕнеке | -сем | -пе |
| çăмăллатмасăр | çăмăл | -лат | çăмăллат | -ма | -сăр |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | |

Пурнăçланчĕ, чăрсăрсемпе, пысăклатмалла, пьесăсенче, калаçтариччен, çĕрĕм-шывăмра, шатăртаттарса, тĕлĕнмеллисем, тĕшĕлерĕмĕр, вирлĕрех.

**125. Сăмах тăвакан аффикссене аялтан туртса паллă тăвăр.**

Пулăм, пĕтĕмлетӳ, вĕлтĕрти, шуйăх, мăрка, яштака, çаклан, ĕмĕрле, калăпăш, сыпăк, çыхă, тăрхала, тулли, тасалăх.

**126. Иккĕмĕшле сăмахсене тупăр та панă схемăна вырнаçтарăр.**

| Текстра тĕл пулакан сăмах | Сăмах тăву аффиксĕсем | Мăшăр сăмах пайĕсем |
|---|---|---|
| çил**лентер**тĕм | **-лен, -тер** | |
| шыв-шур | | шыв, шур |
| | | |

Примечание [ПЮ3]:

1. Анне сăмахĕсем мана сасартăк çӳçентерсе илчĕç. Эпĕ вĕренӳ çулĕ çинчен пачах пăрăнса каятăп-ши вара? Атте мĕн шутлать-ши? Хăй паян тăрса тухнăранпа та пĕр сăмах чĕнмерĕ. Халĕ те салху. Аллинчи сенĕкпе йĕтем хĕрринчи кĕлтесене силлесе шалалла ывăтать те каллех шухăша кайса тăрать. Шуркин арăмĕ мана выçăпа аптратнишĕнех сĕнксе лармалла-ши? Ирхи апата кайнă чух эпĕ юри аттепе каярах юлтăм та малалла мĕн тумаллли çинчен ыйтрăм. 2. Хальхинче Ухик нимĕн те чĕнмерĕ. Сĕтел çинчи хаçачĕсене пухса хул хушшине хĕстерчĕ те хурал пӳртне пухăннă ял-йыша ыр каç сунса вулăса тухса кайрĕ. Ухик хыççăн эпир те урама талпăнса тухрăмăр. Кĕпер патне çитсен эпĕ те асаттене кĕтсе тăтăм. Вăл Ларивана ятласа утать. *(А. Талвир.)*

## Морфологи

### 1. «Морфологи» ăнлавăн содержанийĕ

➤ **Морфологи** (грек сӑмахӗ: morphe «форма», logos «сӑмах, вӗрентӳ») – пуплев пайӗсен грамматика формисемпе грамматика пӗлтерӗшӗсене тӗпчекен ӑслӑлӑх.

Сӑмахӑн грамматика пӗлтерӗшӗ вӑл – грамматика формисем палӑртакан абстракциллӗ пӗлтерӗш. Ку пӗлтерӗш пӗр-пӗр пысӑк ушкӑншӑн кӑтартуллӑ пулать. Тӗслӗхрен, **-ай(-ей)** аффикс гаголсенче кӑна тӗл пулать, пулайӑва пӗлтерет: *кал**ай**марӑм, кал**ай**ӑн-и, ҫит**ей**мерӗм, ҫит**ей**ӗн-и, ӗлкӗр**ей**мерӗм, ӗлкӗр**ей**ӗн-и?* Грамматика пӗлтерӗшӗсене икӗ пысӑк ушкӑна уйӑрма йышӑннӑ: ***категори тӑвакан пӗлтерӗшсем*** тата ***уйрӑм (категори туман) пӗлтерӗшсем.*** Пӗлтерӗшне кура аффикссене те (формӑсене) икӗ ушкӑна уйӑрма пулать: ***категори аффиксӗсем, форма аффиксӗсем.*** Вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрма В.И. Сергеев профессор тӑтӑшлӑх принципӗ сӗннӗ: категори тӑвакан аффикссене ку е вӑл пуплев пайне кӗрекен пӗтӗм сӑмахӑн сахалтан та 50 е ытларах процентчӗ йышӑнмалла иккен. Ученӑй шухӑшӗпе, категори туман аффикссем пуплев пайне кӗрекен пӗтӗм сӑмахӑн 3 пайӗнчен 1 пайӗ ҫумне е ик-виҫ сӑмахӗ ҫумне ҫеҫ хушӑнаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, *пысӑк* паллӑ ячӗ ҫумне хушӑннӑ **-рах** аффикс *(пысӑкрах)* танлаштару категорийӗ тӑвать, *ачарах* сӑмахра – тумасть, форма шутланать, мӗншӗн тесен ик-виҫ япала ячӗ ҫумне кӑна хушӑнать *(курӑкрах, тихарах).*

***Грамматика категорийӗ*** вӑл – грамматикӑн пӗрешкел темиҫе пӗлтерӗш пӗрлӗхӗ. Тӗслӗхрен, мӗн пур падеж пӗлтерӗшӗ пӗрле падеж категорийӗ тӑвать, вӑхӑт формисен пӗтӗм пӗлтерӗшӗнчен вӑхӑт категорийӗ йӗркеленет. Категори ҫинчен калаҫмашкӑн пӗлтерӗш тата ӑна палӑртакан чӗлхе хатӗрӗ (тӗслӗхрен, аффикс) пулмалла. Пӗр-пӗр пӗлтерӗше мӗнле те пулин чӗлхе хатӗрӗпе палӑртман пулсан категори ҫинчен сӑмах ваклама сӑлтав юлмасть.Тӗслӗхрен, пайӑр ятсене пайӑр маррисенчен уйӑракан

нимле аффикс та çук – нумайлă хисепе вара **-сем** аффикс палăртать.

**127.** ***Пĕчĕк*** **сăмах йышăнакан аффикссем категори аффиксĕсем пулнипе пулманнине калама пулать-и?**

Пĕчĕкрех, пĕчĕкки, пĕчĕкскер; пĕчĕке, пĕчĕкрен, пĕчĕкшĕн; пĕчĕккĕн.

**128.** ***Ачаш*** **сăмахăн аффиксĕсем категори пĕлтерĕшлĕ-и, категори пĕлтерĕшлĕ мар-и?**

Ачашрах, ачашши, ачашскер; ачашăн, ачаша, ачашра, ачашран, ачашпа, ачашсăр, ачашшăн; ачашăм, ачашу, ачашĕ.

**129.** ***Çын*** **сăмах тата ун формисем йышăннă аффикссенчен хăшĕсене категори аффиксĕсем, хăшĕсене форма аффиксĕсем темелле? Вĕсен грамматика пĕлтерĕшĕ мĕнле?**

Çыннăн, çынна, çынта, çынтан, çынпа, çынсăр, çыншăн; çынсем; çыннăм, çынну, çынни, çыннăмăр, çыннăр; çынччĕ; çынах.

**130. Панă глаголсен аффиксĕсене уйăрăр, вĕсем мĕнле категори тунине калăр.**

Савăнатпăр, савăнасчĕ, савăнасшăн, савăннăран, савăнмалăх.

➤ Аффикссене (категори аффиксĕсене те, форма аффиксĕсене те) икĕ ушкăна уйăраççĕ – сăмахсене çыхăнтарман аффикссем (морфологи аффиксĕсем), сăмахсене çыхăнтаракан аффикссем (синтаксис аффиксĕсем). Тĕслĕхрен, *вуламастăп, çуреместĕп; утмастăн, çӳреместĕн; утмарĕ, пĕлмерĕ* глаголсем çуклăх форминче. Çуклăха – 1-мĕшпе 2-мĕш сăпатасенче – **-мас(-мес)** аффикс кăтартать, 3-мĕш сăпатра – **-ма(-ме)** аффикс. Ку аффикс сăмахсене çыхăнтармасть, морфологи пĕлтерĕшĕпе кăна çӳрет.

Синтаксис аффиксĕсем тесе сăмахсене çыхăнтаракан аффикссене калама йышăннă. Тĕслĕхрен, *кĕреçепе чаватăп* сăмах майлашăвĕн пайĕсене çыхăнтаркан кĕрет аффикс – пĕрлелĕх падеж

аффиксĕ (**-пе).** Вăл ĕçе мĕнле тунине пĕлтерет. *Юлташ**ăн** кĕнек**и*** сăмах майлашăвĕн пайĕсене харăс икĕ аффикс çыхантарать: камăнлăх падеж аффиксĕ **(-ăн)** тата 3-мĕш сăпат аффиксĕ **(-ĕ)**. Камăнлăх падеж аффиксĕ камăнлăха пĕлтерет, сăпат аффиксĕ – камăнлăх 3-мĕш сăпатпа çыхăннине. Паллах, асăннă аффикссем тĕп меле – сăмахсен вырăнне-йĕркине вăйлатаççĕ, çыхăну пĕлтерĕшне палăртаççĕ.

Çыхăну мелĕсем шутне союзсемпе хыç сăмахсем те кĕреççĕ. Татăксем предложенин шухăш пайĕсене тата шухăш тĕшшине уйăрма кирлĕ. Пулăшу сăмахĕсем – союз та, хыç сăмах та, татăк та – ытти пуплев пайĕсем пекех, морфологин объекчĕ шутланаççĕ, синтаксисра та паллă вырăн йышăнаççĕ.

Çапла вара, морфологипе синтаксис пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, иккĕшĕ пĕрле чĕлхен грамматика тытăмне тăваççĕ. Çак тытăма тĕпчекен ăслăлăха та ***грамматика*** теççĕ.

**131. Панă тĕслĕхсене сăнăр, синтаксис аффиксĕсене тупăр. Вĕсенчен хăвăра килĕшеккеннисене илсе пĕр–ик сăмах майлашăвĕ е предложени тăвăр.**

Ĕнчĕн, ĕнче, ĕнчĕрен, ĕнчĕпе, ĕнчĕсĕр, ĕнчĕллĕ, ĕнчи, ĕнчин, ĕнчине, ĕнчишĕн.

Ĕçченни, ĕçчентерех, ĕçчентерехми, ĕçченĕн, ĕçчене, ĕçченте (ĕçченре), ĕçченĕм, ĕçченĕме, ĕçченĕмрен.

Кĕретĕп, кĕретĕн, кĕтĕм, кĕтĕн, кĕчĕ, кĕме, кĕмелле, кĕри-кĕми, кĕриччен, кĕрсен, кĕрсессĕн.

**132. Морфологи аффиксĕсене тупăр.**

Какăрать, какăрмасть, какăратчĕ, какăрмастчĕ, какăрин, какăрмин, какăрсан, какăриччен, какăрма, какăрмассерен.

Кукăлĕн, кукăле, кукăльшĕн, кукăльсĕр, кукăльлĕ, кукăльсерен, кукăлĕм, кукăлў, кукăлĕ, хуран кукли.

**133. Панă сăмахсен аффиксĕсене тупăр та вĕсенчен хăшĕ морфологи аффиксĕ, хăшĕ синтаксис аффиксĕ пулнине калăр.**

Иксĕлет, иксĕлмест, иксĕлеймест, иксĕлетчĕ, иксĕлместчĕ, иксĕлин, иксĕлччĕр, иксĕлми, иксĕли-иксĕлми, иксĕличчен, иксĕлнĕ, иксĕлсен, иксĕлме, иксĕлмелле, иксĕлмессерен.

Иксĕлĕвĕн, иксĕлĕве, иксĕлӳрен, иксĕлĕвĕм, иксĕлĕвӳ, иксĕлĕвĕ, иксĕлĕвĕнчен.

Им-çамăн, им-çама, им-çампа, им-çамсăр, им-çамĕ, имĕ-çамĕ, им-çамлă.

**134. Орфографи словарьне уçăр та Ç е Ӳ сас паллипе пуçланакан икĕ сăмахăн формисене туллин çырса илĕр, морфологипе синтаксис аффиксĕсене таблицăна уйрăммăн çырса хурăр.**

***Тĕслĕх:***

Çиетĕп, çиейместĕп, çиетĕн, çиет, çимест, çийи-çими, çийиччен, çиме, çимелле, çимессерен

Çурасăр, çураллă, çуралла.

Çимĕкре, çимĕкчен, çимĕксерен

| Сăмах формисем | Морфологи аффиксĕсем | | Синтаксис аффиксĕсем | |
|---|---|---|---|---|
| | Категори аффиксĕсем | Форма аффиксĕсем | Категори аффиксĕсем | Форма аффиксĕсем |
| çиетĕп | -ет, -ĕп | | | |
| çиейместĕп | -ей, -мес, -т, -ĕп | | | |
| çиетĕн | -ет, -ĕн | | | |
| çиет | -ет | | | |
| çимест | -мес, -т | | | |
| çийи | -(й)и | | | |
| шçими | -м, -и | | | |
| çийиччен | -(й)и, | | -ччен | |
| çиме | | | -ме | |
| çимелле | | | -ме, | -лле |
| çимессерен | | | -ме, | -ссерен |
| çурасăр | | | -сăр | |

➤ Аффикссем сăмах тĕпĕ çумне кăна мар, самах тĕпĕпе ун хыççăнхи аффикс пĕрлешĕвĕ çумне те хушăнма пултараççĕ: *тус* –

*туспа (туссем – туссемпе); лайăх – лайăххи (лайăхрах – лайăхраххи, лайăхраххипе); авал – авала, авалтан, авалтанпа.*

Форма тăвакан ку е вăл аффикс ытларах чухне сăмах çумне кăна мар, сăмахпа ăна ăнлантаркан сăмахсен пĕрлĕхĕ çумне пырса ларать. Акă *Пĕррехинче(1) чăвашсем(2) уйра(3) ĕçленĕ(4)* (Иван Мучи) предложенин сăмахĕсен пăхăнакан сăмахĕсем çук. Çавăнпа çыхăну мелĕ уйрăм сăмах çумĕнче тăрать: *уй* япала ячĕ *ĕçле* сăмахпа вырăн падеж аффиксĕпе **(-ра)** çыхăнать, çак падежăн аффиксех **(-че)** *пĕрре* сăмаха падеж системине кĕмен **-хи** аффиксĕпе пĕрле *чăвашсем уйра ĕçленĕ* сăмахсемпе çыхăнтарать. Ĕç тăваканннине пĕлтерекен *чăвашсем* сăмах *уйра ĕçленĕ* сăмахсемпе хăйĕн вырăнĕ-йĕркипе çыхăнать. Сăмахсем епле йĕркепе çыхăннине çак схема кăтартать:

1 2 3 4



*Уй(1) путенисем(2) пĕт-пĕлтĕк(3) туса(4) йăвисене(5) шыраççĕ(6)* (Иван Мучи) предложенире *ту* глаголăн ăна пăхăнса тăракан *пĕт-пĕлтĕк* евĕрлев сăмахĕ пур. Çавăнпа **-са** аффикс *пĕт-пĕлтĕк ту* сăмахсем çумне хушăнать. Пăхăнакан сăмах *путенесем* сăмахăн та пур. Çавăнпа *пĕт-пĕлтĕк туса йăвисене шыра* сăмахсене *путенисем* сăмах мар, *уй путенисем* сăмахсем пăхăнаççĕ, хăйсен вырăнĕ-йĕркипе çыхăнаççĕ. Схемăна пăхăр:

1 2 3 4 5 6



**135. Аффикссем мĕн çумне хушăнаççĕ: сăмах тĕпĕ çумне-и, сăмах тĕпĕпе хыççăнхи аффикссен пĕрлешĕвĕ çумне-и?**

1. Юлтапа, юлташпах, юлташпаччĕ, юлташпаскер, юлташла.

2. Юлташсем, юлташсен; юлташсенни, юлташсеннипе; юлташсемех, юлташсемччĕ; юлташлăх, юлташлăхшăн.

3. Пĕчĕкле, пĕчĕкрен, пĕчĕкренпе.

4. Ача, ачасăр, ачаран, ачапа, ачаранпа, ачалла.

**136. Вуласа тухăр. Çыхăну мелĕсене тупăр, вĕсем ăçта тăнине, уйрăм сăмаха е сăмах майлашăвне çыхăнтарнине калăр. Çыхăну мелĕсенчен хăшĕ кĕрет курăнать, хăшĕ курăнмасть?**

Ял çийĕн çил çаврăнать. Çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ. Çуннă çуртсем çумĕнче çынсем кăткăсем пек йăшăлтатаççĕ. Сӳнсех çитмен пĕренесенчен вут сикет. *(Иван Мучи.)*

* ***Çуннă çуртсем çумĕнче çынсем кăткăсем пек йăшăлтатаççĕ*** **предложенире *пек* хыç сăмаха аффикспа улăштарса пăхăр. Вăл хăш сăмахсене çыхăнтарать?**

**142. Пăхăнуллă предложенисене, вĕсене çыхăнтаракан аффикссене тупăр. Ку аффикссем мĕнле аффикссем: морфологи аффиксĕсем-и, синтаксис аффиксĕсем-и, категори аффиксĕсем-и, форма аффиксĕсем-и? Шухăшăра ĕнентерĕр.**

1. Чĕкеç чылай**ччен** пăхса тăчĕ çак кайăксем çине, вĕсем епле йăва çавăрнипе кăсăкланчĕ. Лешсем те çак хĕр хăйсен йышĕнчен пуласса сунчĕç-ши – унтан пĕртте шикленмерĕç, çуначĕсемпе унăн пуçне е хул пуççине перĕнсех вĕççе çӳрерĕç. 2. Михаил пехетлĕ сывлăша кăкăр туллин сывласа илчĕ те сюртук тӳмисене вĕçертсе ячĕ, кăкăр кĕсйинчен кĕмĕл сехетне кăларса вăхăт пăхрĕ. Ир**хи** вунă сехет иккен. *(Л. Сачкова.)*

*** Паллă тунă аффикссем мĕншĕн категори аффиксĕсем мар?**

* ***Пехетлӗ*** **сӑмахӑн -лӗ аффиксӗ сӑмах тӑвать-и, сӑмаха улӑштарать-и? Мӗншӗн?**

**2. Чӑваш сӑмахӗсене пуплев пайӗсем тӑрӑх ушкӑнласси**

➤ Пуплев пайӗсене уйӑрма чӗлхе вӗрентӗвӗ тӗрлӗ принцип сӗнет. Вӗсенчен паллӑраххисем çаксем: пӗлтерӗш, сӑмах пулӑвӗ, морфологи, синтаксис. Тӗслӗхрен, *Лайӑх ача лайӑх вӗренет* предложенире *ача* япала ятне те, *вӗренет* глагола та ӑнлантаракан *лайӑх* сӑмах пур. Вӑл – паллӑ ячӗ, мӗншӗн тесен палла пӗлтерет. Вырӑссем пек, хӑш пуплев пайне пӑхӑннине – синтаксиса шута илместпӗр. Çитменнине, пирӗн чӗлхере наречин те, паллӑ ячӗн те вырӑссенни майлӑ ятарлӑ формӑсем çук. Палласа илме пӗлтерӗш кӑна пулӑшать. Унпа ытти чухне те усӑ куратпӑр. Тӗслӗхрен, *лайӑх, хитре, сарӑ, çутӑ* йышши сӑмахсем паллӑ ячӗсем пулаççӗ, *паян, ыран, ӗнер, пӗлтӗр, кӑçал* сӑмахсем – наречи. *Ача* сӑмах çынна пӗлтерет, япала ячӗ пулать. Ӗçе пӗлтернӗрен *вӗренет* сӑмаха глагол тетпӗр.

Хӑш чух синтаксис принципӗ те кирлӗ пулать. Акӑ *Хастарлӑ, хыт утӑмлӑ пулӑр, хастарлӑ чӑваш ачисем!* (Çеçпӗл Мишши.) предложенире *хыт утӑмлӑ* тенӗ чухне **-лӑ** аффикс *хыт утӑм* сӑмах майлашӑвӗ çумне хушӑнать, *хыт* паллӑ ячӗ *утӑм* япала ятне ӑнлантарать. Апла, предложенире *утӑмлӑ* сӑмах çук. *Хастарлӑ* сӑмаха пӗлтерӗшне кура тата **-рах(-рех)** танлаштару аффиксӗ йышӑннӑран *(хастарлӑрах пул)* паллӑ ячӗ темелле. *Хурӑнлӑ çул* сӑмах майлашӑвӗн пӑхӑнакан компоненчӗ вара япала ячӗ, мӗншӗн тесен япалана пӗлтерет, **-рах(-рех)** танлаштару аффиксне йышӑнмасть. Çапла вара, **-лӑ(-лӗ)** аффикслӑ сӑмах паллӑ ячӗ пулнипе пулманнине пӗлме пӗлтерӗш, морфологи тата синтаксис принципӗсем кирлӗ.

**143. Çыхăну (синтаксис) аффиксĕсене тупăр. Вĕсем хушăнакан сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене калăр, çав сăмахпа сăмах ушкăнĕн юлашки сăмахĕ мĕнле пуплев пайĕ пулнине ăнлантарăр.**

Яланхилле ватăрах çынсем сăрт хĕррине пухăнса лараççĕ те сăмах-юмах тапратаççĕ. Çав хушăра хăшĕсем тĕрлĕрен алă ĕçĕ тăваççĕ. Ачасем вара ваттисем асăрхаттарса чарсан та, çыран хĕрринчех, шыв мĕнле юхнине сăнаççĕ, чупаççĕ, кĕрешеççĕ, пĕр-пĕрне çырантан тĕртсе яма тăрăшнăн ашкăнаççĕ. Хăюллăрах ачасем кĕрлесе юхакан шыв хĕрринех пырса паттăрла хăлаçланаççĕ. *(А. Трофимов.)*

* **Юлашки предложенин пĕрремĕш сăмахĕ хăш пуплев пайне кĕрет – шухăшăра ĕнентерĕр.**

* **Юлашкинчен иккĕмĕш предложенире *çыран хĕрринчех* сăмах ушкăнне чарăну паллисемпе уйрăмлатни мĕнрен килет?**

➤ Пĕлтерĕш тенĕрен, ун çине таянса традицире пуплев пайĕсене икĕ пысăк ушкăна (хай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем, пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем) уйăрас йĕрке пур. Междометисене хăйне майлă ушкăн тесе пăхаççĕ. **Хăй пĕлтерĕшлисем** шутне ним иккĕленмесĕрех япала ячĕсене, паллă ячĕсене, хисеп ячĕсене, местоименисене, наречисене, евĕрлев сăмахĕсене тата глаголсене кĕртеççĕ. Ку ретре междометисене те пăхма юрать, мĕншĕн тесен вĕсем те пĕлтерĕшлĕ – туйăма палăртаççĕ. **Пулăшу пĕлтерĕшлĕ** пулев пайĕсем шутне лексика пĕлтерĕш çук тесе союзсене, хыç сăмахсене, татăксене кĕртеççĕ.

Пулăшу пĕлтерĕшлĕ тени, паллах, союзсемпе хыç сăмахсен тата татăксен лексика пĕлтерĕшĕ пачах çук тенине пĕлтермест. Ку пуплев пайĕсен те пĕлтерĕш пур. Тĕслĕхрен, *пек, евĕр, майлă* хыç сăмахсем танлаштарăва пĕлтереççĕ; *чух (чухне, чухнехи)* хыç сăмах вăхăт пĕлтерĕшлĕ. *Тесе* союз пиркепе тĕллеве, *тесен* союз тĕллевпе

условие пĕлтерет. Танлаштарăр: *Çăлĕн шывĕ куç* ***пек*** *тăрă. Хĕвел пăхнă* ***чух(не)*** *хаваслăх туйăмĕ çĕкленет. Эпĕ сана курма* ***тесе*** *килтĕм. Сывлăх çирĕп пултăр* ***тесен*** *спортпа туслă пулмалла.*

Мĕн каланине пĕтĕмлетсе çак таблицăпа кăтартма пулать:

**Пуплев пайĕсен пĕлтерĕшлĕх ушкăнĕсем**

| Хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем | Пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем |
|---|---|
| япала ячĕсем, паллă ячĕсем, хисеп ячĕсем, местоименисем, наречисем, евĕрлев сăмахĕсем, междометисем; глаголсем | союзсем, хыç сăмахсем, татăксем |

**144. Тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсене пуçламăш формăна лартса çырса илĕр.**

1. Çамрăксен аллинче компьютер, ноутбук тата ытти тем те пĕр. Тӳмисем çине пусма хăратăп – яшсем пĕтĕм тĕнчепе çыхăнаççĕ, килтен тухмасăрах пĕтĕм тĕнчене кураççĕ. *(Н. Захаров.)* 2. Пин те тăхăр çĕр çитмĕл тăваттăмăш çулта Мускавра пĕрремĕш хут Чăваш театрĕн гастролĕ МХАТ сцени çинче пысăк ăнăçупа иртет. Çакă, паллах, искусство пайне те савăнтарнă, малалла тата ăнăçлă ĕçлеме хавхалантарнă. *(Н. Кириллова.)*

**145. Пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсене çырса илĕр.**

Вĕренӳре кашни предмет валли хĕрĕх сакăр листаллă тетрадь пуçлама хăнăхсаттăм эпĕ. Пĕтнĕ тетрадьсене пĕр çĕре пуçтарса хурас умĕн пĕррехинче кашнине уçкаласа пăхрăм. Чăваш литератури тетрачĕ хушшинчен хуçлатнă хут татăкĕ тухса ӳкрĕ. «Светлана, ăна эсĕ кирлĕ!» – тенĕ çырура. Сакăр уйăх каяллахи çыру! Кама кирлĕ пулнă-ха эпĕ? Аса илем-ха. Лешăна-çке! Лешăна ĕнтĕ! Юлташăм ман валли çырусем çырса паратчĕ. Ара, çырусем çав! Упранса юлнă çырусене пуçтартăм та халь тупăннине Лĕшах çырман-и тесе

тӗрӗслерӗм. Ҫук, алли пӗр мар иккен. Чим! Алли ман йӑмӑк алли вӗт! Пасти те симӗс авӑ. Кунашкал пастӑпа Катюша йӑмӑкӑм ҫырнине ӗнер куртӑм мар-и-ха? *(В. Селенина.)*

**146. Предложенисене вуласа тухӑр. Сӑмахсем тулли пӗлтерӗшлӗ е пулӑшу пӗлтерӗшлӗ пулнине кура таблицӑна ҫырса хурӑр.**

Лена, ташлама кӑмӑллаканскер, никам та тухманнине кура ыттисене тӗслӗх парас терӗ, ташланӑ май хаваслӑ куллипе тата хусканӑвӗсемпе ҫамрӑксене чӗнме пикенчӗ. Ытти чух айккинче тӑракансене те тем пулчӗ – пикенсех ташӑ ӑсталӑхне тӗрӗслеме тытӑнчӗҫ. Пуҫланчӗ вара хаваслӑх! *(В. Селенина.)*

| Тулли пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем | Пулӑшу пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем |
|---|---|
| | |

*** Шутласа пӑхӑр: текстра хӑй пӗлтерӗшлӗ сӑмахсемпе пулӑшу пӗлтерӗшлисем миҫешер процент йышӑнаҫҫӗ?**

➤ Хӑй пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен чылайӑшӗн пӗлтерӗшӗ тулли палӑрать, хӑшӗсен тӗксӗмленет. Ак *Аппа вӗренме Шупашкара кайрӗ* предложенире *кайрӗ* сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ кӗрет палӑрать. *Кайӑксем кӑвакалсем кӳлӗ енне вӗҫсе кайрӗҫ; Анне пӗр вӑхӑт шухӑша кайрӗ* предложенисенче *кай* глагол пӗлтерӗшӗ тӗксӗмленет. Унӑн пӗлтерӗшӗ *вӗҫ* тата *шухӑш* сӑмахсенчен килет. Пӗлтерӗш тӗксӗмленесси, паллах, сӑмахсем пуплевре интонаци енчен пӗрлешсе кайнипе те ҫыхӑннӑ: *ҫур аки (*танл. *ҫурхи ака)*, *хӗр ача (ывӑл ача*), *вырсарни кун (вырсарни пасарӗ), ал ҫыру (ал ҫырӑвӗ), мӗн пур (ӗмӗт пур), ӑҫти ҫук (намӑс ҫук).* Ҫын ӑс-тӑнӗнче тӗп вырӑна пӗрлӗх палӑртакан ӑнлав тухса тӑрать. Ҫавнашкал ӑнлавсенчен чылайӑшне вырӑсла пӗр сӑмахпа палӑртатпӑр (*вӗҫсе кай – улететь, шухӑша кай – задуматься)* та, пӗрлешӗве кӗрекен

сăмахсем пушшех сисĕнми пулаççĕ. Сăмахсене çыру кăна усăмлатать.

Анлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем нумай мар, тĕпрен илсен, япала ячĕсенче (*пат, ум, çум, аяк, ай, хыç, пуç, çи, тăрă, вĕç, ăш, варă*), паллă ячĕсенче *(тăрăх, урлă, витĕр)* тата глаголсенче *(кай, кил, тух, те, тытăн, пуçла, пĕт, ту, пул, ил, яр)* тĕл пулаççĕ: *пӳрт умĕ, ял пуçĕ, кукăль ăшĕ; хир тăрăх; чупса кай, вĕçсе кил.*

▲ Анлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ытти сăмахсенчен уйрăм çыраççĕ: *сĕтел çи(йĕ), ĕç çи(йĕ), çурт ту, кĕл(ĕ) ту, ас ту, кăх ту, чуп ту* т. ыт. те.

**147. Тулли мар (анлă) пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине кăтартăр. Тупнă сăмахсем хăш сăмахсемпе пĕрлешӳсем хыççăн тăраççĕ?**

1. Микула амăшĕн йӳçĕ сăмахĕсене çăтса ячĕ те шăлне çыртрĕ. Пĕр-икĕ уйăх пек сĕнксе, супса пурăннă хыççăн, каллех, таçта тухса каяс тесе юрлама пикенчĕ. Çак самантра чĕнекен тупăннă пулсан – амăшĕ хăтăрнине пăхас çукчĕ-ха. Мĕн ĕçпе пурăнмалла-ха кунта? Пур пек вырăнсене тахçанах йышăнса пĕтернĕ. *(Д. Гордеев.)* 2. Вулăсран ÇĕнĕАхпӳрт ялне çитме пилĕк çухрăм çеç. Аллине саквояж тытнă çын васкамасăр çул тăрăх утать. 3. Çак каç Аристарх уйрăмах салху çӳрерĕ. Куçĕ умĕнчен Чĕкеç сăнĕ кайма пĕлмерĕ. Хĕре вăрманта пĕрремĕш хут чуп туни халĕ те тута çинчех пек. *(Л. Сачкова.)* 4. Уçă урайĕнче выртнăран çан-çурăма сивĕ çапса пырать. Сăмса та кăтăклама пуçларĕ. Куçа хупрăм та çине-çине виçĕ хут апчху! терĕм. Никам та илтмĕ тесе кăлăхах шухăшларăм иккен. Самантрах Катюшăн вăрăм çӳçĕпе пуçĕ курăнчĕ. *(В. Селенина.)*

* ***Çак самантра чĕнекен тупăннă пулсан – амăшĕ хăтăрнине пăхас çукчĕ-ха*** **предложенин** ***пулсан*** **сăмахĕ мĕнле пуплев пайĕ пулнине калама пултаратăр-и? Хуравлама сире И.А. Андреев профессор**

**сĕнĕвĕ пулăшĕ. Ученăй каланă тăрăх, *пулсан* сăмах союз чухне икĕ условирен пĕри кирлĕ: *пулсан* сăмах умĕнче глаголăн е кирек хăш сăпат формийĕ, е иртнĕ причасти формийĕ тăмалла.**

*** Шутлăр: тулли мар пĕлтерĕшлĕ сăмахсем йышĕпе кашни сыпăкра миçе процент?**

➤ Пуплев пайĕсене ушкăнланă чухне эпир пĕр пуплев пайĕ тепĕр пуплев пайĕн пĕлтерĕшĕпе çӳреме пултарнине шута илме тивĕçлĕ. Акă япала ячĕ пĕлтерĕшĕпе пирĕн чĕлхере паллă ячĕсем, глаголăн яланхи е хальхи причасти формийĕсем, наречисем, евĕрлев сăмахĕсем çӳреме пултараççĕ: ***Хитрене** кам юратмасть?! **Тăрăшаканшăн** çул уçă. Музыка залĕнчен хут купăс **нăй-найĕ** илтĕнет.*

**148. Урăх пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе каланă сăмахсене тупăр та ку е вăл сăмаха мĕншĕн суйласа илнине ĕнентерĕр.**

1. Аташрăм та пулĕ хам айванăма пула! *(А. Артемьев.)* 2. Эпĕ юрататăп Халăхăн хавас кĕр мĕнтăрне. *(А. Алка.)* 3. Куç шурри сап-сарă, лимон тĕслĕ. *(Тихăн П.)* 4. Анса утатăп тырă пуссипе, Путенесен пĕт-пĕлтĕкне итлетĕп. *(С. Шавли.*) 5. Эсĕ манăн çăлаканăм пулатăн. *(Ю. Скворцов.)* 6 Ку вăл – пирĕн пуянăмăра тапăнни, пирĕн ыранăмăра тапăнни. *(«Хыпар».)* 7. Ман ӳкерчĕксем чылай çынна килĕшнĕ, çав шутра ман вĕрентекене те. *(«Тантăш».)* 8. Кăмака çийĕ аслă вĕсен, анчах кăмакин ăшши сахал çав. *(А. Трофимов.)*

**149. Панă тĕслĕхĕн килĕшӳллĕ янравлăхĕ мĕншĕн çук?**

Пирĕн шкулта çирĕп пĕлӳ паракан вĕрентекен нумай. *(«Тантăш».)*

➤ Пĕлтерĕш тĕксĕмленнипе е пачах çухалнипе, пĕр пуплев пайĕ теприн пĕлтерĕшĕпе çĕрес туртăм пуррипе, хăш чухне, пуплев пайĕсене уйăрма чăрмавлă. Ку чăрмав, тĕпрен илсен, хыç сăмахсемпе союзсене хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен уйăрса илнĕ чух

сиксе тухать. Тĕслĕхрен, *Гуманитари класĕнче вăтăра яхăн ача вĕренет* предложенире *яхăн* сăмах хыҫ сăмах пек туйăнать. Ҫав вăхăтрах калаҫура *Ку яхăнта нимех те ҫыраймарăм. Вăталăх ывăл пире яхăнне те ямасть* тенисене илтме пулать. Ку тĕслĕхсем истори тапхăрĕнче *яхăн* сăмах япала ячĕ пĕлтерĕшĕпе ҫӳренĕ пуль тесе шухăшлаттараҫҫĕ. *Ҫывăх* сăмахпа синономлă пулни *яхăн* сăмахăн чи авал паллă ячĕ пĕлтерĕшĕ те пулнă тесе калама май парать. Хыҫ сăмах пахалăхĕ каярах амаланнă курăнать.

➤ Пуплев пайĕсем сăмах тăвакан тата категорипе форма тăвакан аффиксĕсем расна пулнипе те уйрăлса тăраҫҫĕ. Тĕслĕхрен, нумай япала ячĕ **-лăх(-лĕх), -ҫă(-ҫĕ), -у(-ӳ), -в, -ăм(-ĕм), -ăҫ(-ĕҫ), -ăш(-ĕш)** аффикссемпе пулнă. Глаголсенче вара **-ла(-ле), -лан(-лен), -лаш(-леш), -лат(-лет), тар(-тер), -ттар(-ттер)** тата ытти аффикссем сарăлнă. Ят сăмахсем пурте тенĕ пек падеж аффиксĕсемпе, падеж системине кĕмен аффикссемпе ҫыхăнаҫҫĕ, глаголсем – сăпатсăр формăсемпе.

**150. Аффикс хушăнса пулнă иккĕмĕшле сăмахсем пĕрремĕшлисенчен пĕлтерĕш тата сăмах пулăвĕ енчен расна пуплев пайĕсем пулнине ĕнентерĕр.**

1. Чăвашлăхăн ҫăл куҫĕ те, пуласлăхĕ те чăваш ялĕсемпе ҫыхăннă. Пайтах тăванăм ҫемье ӳстерет, выльăх-чĕрлĕх пăхать. Кашнин хуйхи-савăнăҫне ял пурнăҫĕ пĕтĕмпех тивĕҫтерет. Пурнăҫа ĕҫ ҫех илем кӳмест – халăх мĕнле ĕмĕтпе хавхаланса пурăнни пĕлтерĕшлĕ. *(И. Туманов.)* 2. Укахви кил картине кĕрсе алăка хупнă кăначчĕ – пӳртре такам, ҫинҫерех caслăскер, самаях хыттăн ĕрлешнине илтсе тăпах хытса тăчĕ. Ӳлесе йĕнĕнех туйăнчĕ. *(А. Тарасов.)*

* ***Кашнин хуйхи-савăнăҫне ял пурнăҫĕ пĕтĕмпех тивĕҫтерет*** **предложенире *пĕтĕмпех* сăмах *тивĕҫ* тымарпа ҫыхăннă-и, *тивĕҫтер* сăмахпа-и?**

* **Чи пирвайхи предложенире *чăваш ялĕсем* сăмах майлашăвĕ мĕне пăхăнать: *çых* тымара-и, *çыхăн* тĕпе-и?**

* ***Ӳлесе йĕнĕнех туйăнчĕ* предложенире пăхăнтаракан пай мĕн: *туй* глагол-и,*туйăн* глагол-и? Çыхăну мелĕ мĕн: -ех татăк аффикс-и, -ĕн аффикс-и?**

* ***Çинçерех саслă* сăмах майлашăвĕнче -лă аффикса иккĕмĕшле сăмах тăвать тесе калама май пур-и? Мĕншĕн?**

➤ Хăш-пĕр грамматика формисем глаголсенче те, ят сăмахсенче те пĕрешкел илтĕнеççĕ. Куна, тĕслĕхрен, 2-мĕш сăпатăн нумайлă хисеп аффиксĕ çавнашкал: *ачалăх**ăр**, ĕмĕт**ĕр** – калаçат**ăр**, шӳтлет**ĕр**.* Çав вăхăтрах пĕрешкел илтĕнекен аффиксах пĕр пуплев пайĕнче пĕр çĕрте, тепĕр пуплев пайĕнче тепĕр çĕрте вырнаçма пултарать. Акă çыхăну аффиксĕсем ят сăмахсен тĕпĕ çумне хушăнаяççĕ, анчах глаголсенче – хушăнаймаççĕ: *юлташ – юлташра, юлашл**а**, татăл – татăлас – татăлас**ла**.* Çапла вара, пирĕн чĕлхере пуплев пайĕсен морфема тытăмĕнче расналăхсăр пуçне пĕрешкеллĕх те пур. Пĕр е темиçе критери уйăрсан та хăшĕ те пĕри çывăхлатать.

**151.** Пулас вăхăта шута илсе каланă *Эп**ир** йăрансене тикĕслĕп**ĕр**. Эс**ир** хурлăхансемпе чиесем çине мочевина сирпĕт**ĕр*** предложенисенче паллă тунă аффикссем мĕне пĕлтереççĕ, хăш пуплев пайĕн тытăмне кĕреççĕ, мĕнле морфемăсем хыççăн тăраççĕ? *Тикĕслĕ**п**ĕр* сăмахра усă курнă **-п-** аффикс *сирпĕтĕр* сăмахра мĕншĕн çук? Аффиксĕсене паллă тунă сăмахсем пĕр пуплев пайне мĕншĕн кĕмеççĕ? Куна мĕнле пĕлмелле?

**152. Паллă тунă аффикссем мĕн енчен пĕрешкел? Аффикссем пĕр ушкăна кĕни сăмахсене пĕр пуплев пайне кĕреççĕ тесе калама май парать-и? Мĕншĕн?**

1. Эс**ир**, куратăп та, пĕр-пĕрне палламаст**ăр** та пулмалла. 2. Эп**ир** санран ыйтмарăм**ăр**-çке. 3.Эс**ир**, тем, аташат**ăр** пуль. 4. Итл**ĕр**-ха:

эс**ир** мĕн тума килсе çапăнт**ăр** кунта пĕрре улталаннă хыççăн? 5. Паллаш**ăр**: ку **сир**ĕн тепĕр пуçан**ăр** – Тарас... 6. Эп**ир** ак мĕн шутларăм**ăр** Петĕрпе: полицие евитлемелле. 7. Эс**ир** хăв**ăр** ирĕкпе ултă сотка çĕр парнелесшĕн. 8. Хам**ăр**шăн мар, ыттисемшĕн тăрăшатп**ăр** эп**ир** *(В. Николаев.)*

**153. -П- аффикс сăмахсене пуплев пайĕ енчен мĕншĕн пĕр ушкăна пĕрлештермест?**

1. «Çитменнине илĕ**п**ĕр, ытлашшине сутă**п**ăр!» – тет**п**ĕр э**п**ир Мускавра. 2. Э**п** кайран йăлтах саплаштарă**п**, йăлтах. 3. Э**п**, чăнах та, пӳрт тăрри витетĕ**п** хам бригадăпа. 4. Э**п**ĕ килĕшетĕ**п**. 5. Халь цивилизациллĕ патшалăхра пурăнат**п**ăр э**п**ир: **п**ирĕн патра тĕп вырăна саккуна хунă. *(В. Николаев.)*

**3. Хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем**

➤ Хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсене икĕ ушкăна уйăраççĕ: ят сăмахсем, глаголсем. Уйрăмлăх, тĕпрен илсен, пĕлтерĕшре те мар, грамматика тытăмĕнче курăнать. Акă падеж формисем ят сăмахсенче категори тăваççĕ, глаголсенче – тумаççĕ, вĕсен причасти формийĕсем çумне кăна хушăнаççĕ. Танл.: *хула**ран**, инçет**рен**; ывăннă**ран**, хисепленĕ**рен**.*

Ят сăмахсен пĕтĕмĕшле формисем пур. Сăмахран, падеж аффиксĕ ят сăмахсенче пуринче те тĕл пулать: *çул**па**, лайăх**шăн**, вăтăр**та**, хĕрĕх**ре**, ман**па**, хăйĕн**те**.* Хисеп аффиксне те паллă ячĕсемсĕр пуçне пурте йышăнаççĕ*: çул**сем**, тĕмеске**сем**; çиччĕ**сен**че, хăй**сем**, хам**ăр**.* Хисеп аффиксĕ тенĕрен, **-сем** аффикспа глаголăн сăпатлă формисенче усă курмаççĕ.

Пĕлтерĕшĕпе грамматика уйрăмлăхĕсене пуплев пайĕсене паракан определенисенче кăтартаççĕ.

**Япала ячĕ** – кам? мĕн? ыйтусенчен пĕринче тăрса япалана пĕлтерекен, вĕçленекен, сăпатланакан тата хисепре пулакан сăмах:

*сăн – сăна, сăнпа; сăнăм, сăну, сăнĕ; сăнсем.*

**154. Паллă тунă сăмахсем япала ячĕсем пулнине мĕнрен-мĕнрен пĕлме пулать? Япала ячĕн определенинийĕнче каланă уйрăмлăхсене тупăр.**

Тепĕр вунă минутран **пăрахут** тата тепре кăшкăртрĕ, кăшт тăхтасан виççĕмĕш хут янратрĕ. **Машинăсен** уйрăмĕнче **двигательсем** хăватлăн кĕрлеме тытăнчĕç. Пăрахут пĕтĕм кĕлеткипе чĕтрене-чĕтрене илчĕ. Унтан **çӳлте** умлăн-хыçлăн ик-виçĕ хут ши! ши! туни илтĕнчĕ те, прахут ерипен, майĕпе пристань çумĕнчен уйрăла пуçларĕ. **Пичĕпе** чӳрече çумне çыпçăнсах тăнă Ян Киккас пристань çамки çине çырнине уйрăм сас паллисем тăрăх вуласа тухрĕ:

Г...ор...ки...

Ку сăмаха **мăнукĕн** çурăмĕ хыçĕнче тăрса унăн пуçĕ урлă тулалла пăхакан ватă Пауль пĕтĕмĕшпе вуласа пачĕ. *(Л. Агаков.)*

* **Пĕрремĕш предложенире -ран(-рен) туху падеж аффиксĕ *пăрахут тата тепре кăшкăртрĕ* сăмахсемпе *минут* сăмаха çыхăнтарать-и, *тепĕр вунă минут* сăмах майлашăвне-и? *Янратрĕ* скзуемăйпа *хут* япала ячĕ çыхăнать-и, *пĕрремĕш хут* ят сăмах майлашăвĕ-и?**

* ***Пăрахут пĕтĕм кĕлеткипе чĕтрене-чĕтрене илчĕ* предложенире -пе пĕрлелĕх падеж аффиксĕ хăш сăмахсене çыхăнтарать: -и сăпат аффиксĕллĕ *кĕлетке* япала ятне-и, çав аффикслă *пĕтĕм кĕлетке* сăмах майлашăвне-и? -И сăпат аффиксĕ кĕрсе ларасси мĕнрен килет? -И аффикс хăш сăпата пĕлтерет?**

* ***Чӳрече çумне çыпçăн, пристань çамки çине çыр* сăмах майлашăвĕсен пăхăнакан пайĕнче усă курнă аффикссене тупăр та вĕсем мĕн тума кирлине ăнлантарăр.**

**155. Паллă тунă япала ячĕсене тишкерӳ йĕркине пăхăнса характеристика парăр.**

1. Йăш! турĕ **Калистрат чĕри. Каччă ăшĕнче** пĕрремĕш **хут** кĕвĕç **туйăм** чупса иртрĕ. 2. **Тăхтавсенче Калистрат Зинăна** сăнарĕ. Çаврăнса ларать те **сăлтав** тупса **хĕрпе** калаçать. Пупленĕ вăхăтра хăйĕн хăмăр куçĕпе тĕпчет те тĕпчет. Зина паян – çĕнĕ **çын. Калистрат шухăш-кăмăлĕ** те **пĕтĕмпех** çĕнĕ. *(В. Константинов.)*

* ***Хăйĕн хăмăр куçĕпе тенĕ*** **чухне *(Пупленĕ вăхăтра хăйĕн хăмăр куçĕпе тĕпчет те тĕпчет* предложение пăхăр) -пе аффикс сăмах çумне хушăнать-и, сăмах майлашăвĕ çумне-и? Хăвăр апла е капла шухăшланине ĕнентерĕр.**

* ***Пупленĕ вăхăтра*** **тенĕ чух *пупленĕ* сăмах мĕне пăхăнса тăрать: *вăхăт* пуçламăш формăна-и, *вăхăтра* формăна-и? Шухăшăра мĕншĕн тĕрĕс тетĕр?**

*** *Йăш! турĕ Калистрат чĕри. Каччă ăшĕнче пĕрремĕш хут кĕвĕç туйăм чупса иртрĕ* предложенисенче *чĕре* тата *ăш* сăмахсем -и тата -ĕ аффикссем йышăнасси мĕнрен килет? *Каччă ăшĕ* сăмах майлашăвĕ вырăн падеж аффиксне мĕне пула йышăнать?**

**156. Вуласа тухăр. Япала ячĕсене тупăр. Хушăм ĕçсене тăвăр.**

– Ваттисем шур тăм сапма калаççĕ.

– Хамăр патрах çук – таçта кайса тупмалла?

– Пĕлекенсем пур – шур сухалсенчен ыйтас пулать.

– Çĕр хапхи тăвас. Акă мĕн! *(Л. Сачкова.)*

* ***Ваттисем*** **сăмах мĕншĕн япала ячĕ мар – ăнлантарăр.**

* **Пăхăнакан пайĕ *шур* паллă ятĕнчен пулнă ят сăмах майлашăвĕсене тупăр. Вĕсенчен хăшĕ куçăмлă пĕлтерĕшлĕ? Куçăмлă пĕлтерĕш мĕнле мелпе пулнă: метафрăпа-и, метонипе-и, синекдохăпа-и?**

* ***Шур сухалсенчен ыйт*** **сăмах майлашăвĕнче -сен камăнлăх падеж аффиксĕ мĕн çумне пырса ларнă: *сухал* сăмах çумне-и, *шур сухал* сăмах майлашăвĕ çумне-и?**

### Япала ячĕсен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки

1. Тишкерекен сăмах япала ячĕ пулнине каламалла.
2. Сăмах тĕпне кăтартмалла.
3. Сăмах пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах пулнине каламалла.
4. Иккĕмĕшле сăмах мĕнле майпа пулнă?
5. Ят пайăр-и, пайăр мар-и?
6. Камăнлăх форми, унăн сăпачĕ, хисепĕ.
7. Япала ячĕн хисепĕ.
8. Сăмахсене çыхăнтаракан сăпат мар аффикссем:

а) падеж аффиксĕсем;

ă) падеж системине кĕмен формăсем.

9. Сăмах вĕçне вырнаçнă ытти аффикссем: **-чĕ(-ччĕ)** иртнĕ вăхăт, **-и,- скер, -хи** палăрту*;* **-ах(-ех)** вăйлату.

Япала ячĕсен тишкерӳ йĕркине тытса пыма аффиксĕсен сулахайран сылтăмалла пыракан черетне пăхăнас пулать. Тĕслĕх:

х*иреллерехкисенчен* – япала ячĕ, сăмах тĕпĕ – *хир*, пĕрремĕшле сăмах, пайăр мар ят, пару падежĕнче, сулăну форминче, танлаштару аффксне йышăннă, палăрту форминче, нумайлă хисепре, туху падежĕнче.

**Пĕлетĕр-и эсир?**

Шкула кăтартнă чухне хулапа е ял ячĕсене вырăн падежне лартса усă курмалла мар, тĕп е камăнлăх падежĕнче каламалла: *Мускав университечĕ, Чĕмпĕр чăваш шкулĕ, Вăрнарăн 1-мĕш вăтам шкулĕ.* Шкул ку е вăл хула е ял ăшĕнче мар, ун хĕрринче е пачах урăх хула-ялта вырнаçма пултарать. Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕн Анат Кинер вăтам шкулĕ çак ялта мар, Станьялта вырнаçнă.

**157. Тишкерӳ йĕркин 8-мĕш «ă» тата 9-мĕш пункчĕсенче кăтартнă аффикслă япала ячĕсене тупăр та тулли тишкрӳ тăвăр.**

1. Ялла тумланман çынна урамра чупса çӳрекен ача-пăча чи малтан асăрхарĕ. 2. Çуллахи янкăр хĕвеллĕ кун. 3. Çĕрлесерен

малашне çывăрас мар тетĕп. *(Л. Сачкова.)* 4. Тĕлĕрекен каçхи ял тăрăх çурхи тĕксĕм тĕс сапаланчĕ. 5. Пурнăçăма виçĕ куна пайлатăп. Виçĕм кун эп ачаччĕ. Ĕнер – мăшăрпа киленнĕ ар шутланаттăм. Паян – ырă ĕмĕтлĕ çын. «Манăн çăлтăр тӳпере!» – тесе кăшкăрас, чаракне уямасăр çил çунат тилхепине карăнтарса тăманлă уй-хирте малалла ăнтăлас килет. Эх, çамрăклăхăм!.. Мĕншĕн тĕтреллĕ эсĕ? *(И. Журавлев.)*

* ***Çуллахи янкăр хĕвеллĕ кун*** **предложенире -ллĕ аффикс сăмаха çыхăнтарать-и, сăмах майлашăвне-и? Шухăшăра сăмахсен çыхăнăвне схемăласа ĕнентерĕр.** ***Паян – ырă ĕмĕтлĕ çын*** **предложенире -лĕ аффикс мĕн тăвать?**

**158. Нумай пăнчă вырăнне пĕлтерĕшĕпе килĕшӳллĕ сăпат аффиксĕсем лартса çырăр. Вĕсем хăш сăпатăн пулнине ăнлантарăр.**

ИДА. Кунта эпĕ хамăн телей...шĕн кĕрешме килтĕм. Вăйпа илеймесен шăлпа çĕнтерĕн теççĕ...

ВАРВАРИ. Сăмах...сене каялла илме шутламастăн-и?

ИДА. Мĕн тăвас ман çав сăмахсемпе? Ман тата та пур. Шалккă мар.

ВАРВАРИ. Хальхилле каласан, тăрр... чалăшнă пуль сан?

ИДА. Ара, санăн та тăрр... кайнине курчĕ те ячĕ хыç...нчен. Сана ав тăрă кирлех те мар иккен.

ВАРВАРИ. Тьху санпа! Çуралсан кăвап...на çеç мар, чĕлх...не те çыхмалла пулнă санне! *(Н. Захаров.)*

* **Текста мĕнле стильпе çырнине ĕнентерĕр.**

➤ **Ĕç ячĕ** – япала ятне çывăх, çав вăхăтрах глагол майлă пуплев пайĕ. Вăл глагол çумне **-у(-ӳ)** афффикс хушăннипе пулать. Ку аффикса уйрăм сăмах кăна мар, сăмах майлашăвĕ те, предложени те йышăнма пултарать: *çӳр**ӳ**, çывăр**у**; пулă ыт**у**, лаша çитер**ӳ**, çĕнĕ çĕре куçар**у**, вăрман касма ка**ю**; çар ирт**ӳ**, çын вил**ӳ**, упа тухса ул**у**.*

Ĕç ячĕсем тăрăх чăваш чĕлхинче сăмах тăвакан аффикс сăмах тата сăмах пĕрлешĕвĕсем çумне те авалтанах хушăннине ăнланса илме пулать.

**159. Ĕç ячĕсене тупăр та -у(-ӳ) аффикса йышăнакан сăмахсемпе пĕрлĕхсене кăтартăр та тишкерӳ йĕркине пăхса ăнлантарăр.**

1. Хапха тăрри шатлатать саламатпа çапупа. *(К. Иванов.)* 2. Кунта килсе çӳрӳ тата ан пултăр! *(Я. Ухсай.)* 3. Чĕкеç юрри, хурсен кикакĕ, Ачасемпе аппалану... Вара каллех юпах тиха пек Выля пуçлать хавхалану. *(П. Хусанкай.)* 4. Унта йĕрӳ те, шăл шатăртаттару та пулĕ. *(И. Мучи.)* 5. Лаши вĕçсе пырупа пичĕ-куçĕ пит усал. *(К. Иванов.)* 6. Кĕç машина тăрăлтатрĕ тулăн-шалăн çӳрӳпе *(П. Хусанкай.)*

* ***Кунта килсе çӳрӳ*, *тулăн-шалăн çӳрӳ, çул çӳрев* сăмах ушкăнĕсене мĕн пĕрлештерет, мĕн уйăрать? Кăтартнă рете *аса илӳ, тĕл пулу, хирĕç тăру* пĕрлешӳсем кĕме пултараççĕ-и?**

* ***Никама пăхăнманлăх, пĕчĕк ачалан* йышши сăмах майлашăвĕсен сăмах тăвакан аффиксĕ пуррине ĕç ячĕсен витĕмĕпе ăнлантарма пулать-и?**

**Ĕç ячĕсен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Сăмах ĕç ячĕ çинчен пынине каламалла.
2. Ĕç ячĕ аффиксĕ миçе сăмах çумне хушăнать?
3. Хисеп, падеж (пур пулсан).

**Тишкерӳ тĕслĕхĕ:**

*хăру* – ĕç ячĕ, аффиксĕ пĕр сăмах çумне хушăннă, пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра;

*килсе çӳрӳ* – ĕç ячĕ, аффиксĕ *килсе çӳре* сăмах майлашăвĕ çумне хушăннă, пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра.

*тулӑн-шалӑн ҫӳрӳпе* – ĕҫ ячĕ, аффиксĕ *тулӑн-шалӑн ҫӳре* сӑмах майлашӑвĕ ҫумне хушӑннӑ, пĕрреллĕ хисепре, пĕрлелĕх падежĕнче.

▲ Ĕҫ ячĕн аффиксне йышӑннӑ сӑмах майлашĕвĕпе предложенин сӑмахĕсене пĕр-пĕринчен уйрӑм ҫыраҫҫĕ: *упӑте тыту, укҫа тупу, ҫармӑсла вĕренӳ, ҫул ҫинче хӑрату.*

➤ **Паллӑ ячĕ** – япалан, ĕҫĕн, паллӑн паллине пĕлтерекен, танлаштару, палӑрту, мĕнлелĕх категори аффиксĕсене йышӑнма пултаракан сӑмах: *лайӑх* ҫын, *лайӑх* ĕҫле, *ҫутӑ* кӑвак; *лайӑхрах* пурӑн, *хитререх* ҫыр; *хитри* – *хитрисене* суйла; *ҫӑмӑллӑн* ут.

Япала ячĕ пĕлтерĕшне, палӑрту форми аффиксĕсене йышӑннӑ паллӑ ячĕсем япала ячĕ пек улшӑнма пултараҫҫĕ: *хитрене юрат, хитрескерсене суйласа ил.*

Ытти формӑсем паллӑ ячĕсенче сайра тĕл пулаҫҫĕ: **-лӑ(-лĕ), -ллӑ (-ллĕ)** пурлӑ (*шурӑллӑ* вырӑн); **-ла(-ла), -лла(-лле)** евĕрлев (*пĕчĕкле* вĕрен); **-лла(-лле)** сулӑну (*ҫукалла* пар); **-шар(-шер)** валеҫӳ (*нумайшар* пар); **-чен(-ччен)** тӑсӑмлӑх (*нумайччен* лар, *ҫĕнĕччен* кĕт).

**160**. **Паллӑ ячĕсене тупӑр та вĕсен хаш-хӑш категорийĕ палӑрнине кӑтартӑр.**

Тепĕр ҫултан Йӑкӑнатпа Полина Ивановна Миасс шывĕ хĕрринче шуррӑн та саррӑн ҫуталса ларакан чаплӑ та капмар кермене пурӑнма куҫрĕҫ. Ҫанталӑка кĕр сӑнĕ ҫапнӑ пулсан та – тулта ӑшӑччĕ, тавралӑх илемлĕччĕ. Пĕрле ĕҫлекенсем хӑнана пухӑнсан ҫĕнĕ ҫурт хуҫисене паллӑ кун ячĕпе чун-чĕререн саламларĕҫ, вӑрӑм кун-ҫул сунчĕҫ. *(В. Константинов.)*

**Асра тытӑр!**

Хисеп енчен нумайййине пĕлтерекен *нумай, чылай, пайтах, тĕрлĕ* йышши паллӑ ячĕсем ӑнлантаркан япала ячĕсене пĕрреллĕ

хисепре каламалла: *нумай ыйту, чылай сăмах, пайтах сехет*, *тĕрлĕ халăх.*

**161. Паллă ячĕсене тишкерӳ йĕркине пăхăнса характеристика парăр.**

**Хăрушрах** вăй тĕнчере урса кайнă çыннăннисĕр пуçне нимĕнле **чĕр** чунăн та **çук.** Ун пек çын, малалла, кăпăк кăларса талпăнакан урхамах пек ыткăнать.

Райкка хăйне хăй лăплантарма пултарчĕ, администратора **хирĕç** нимĕн те каламарĕ. Ку вара кермен администраторне пушшех уртарса ячĕ. Хуçа сассине тата та **хытă** хăпартса, тата та **çиллес** калаçма пуçларĕ:

– Кунта хуçа – эпĕ! Керменте кĕнеке сутнăшăн сан укçа тӳлемелле!

Чĕнес темен Райкка текех чăтса тăраймарĕ – тĕп администратора куçĕнчен хăрамасăр **тӳррĕн** пăхрĕ.

Концерт пуçланиччен çур сехет çеç юлчĕ. Çак **кĕске** хушăра май **пур** таран пĕр-ик кĕнеке те пулин сутмалла. *(А. Юрату.)*

* **Кăтартнă паллă ячĕсенчен хăшĕн-хăшĕн ăнлантаракан сăмахсем пур? Тĕп сăмахне кура сăмах майлашăвне хăш ушкăна кĕртмелле?**

* ***Май*** **япала ячĕпе** ***пур*** **паллă ячĕн пĕрлешĕвĕ мĕн пулать – сăмах майлашăвĕ-и, предложени-и? Мĕншĕнне урăх тĕслĕхсемпе танлаштарса ĕнентерĕр.**

* ***Тата та хытăрах, тата та çиллессĕнрех*** **тесен -рах(-рех), -ĕн аффикссем уйрăм сăмахсем çумне хушăнаççĕ-и, сăмах майлашăвĕсем çумне-и?**

* **Текст пуçлмăшĕнчен иккĕмĕш йырăнта тăракан предложенин пунктуаци уйрăмлăхне ăнлантарăр.**

**Паллă ячĕсен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Тишкерекен сӑмах паллӑ ячӗ пулнине каламалла.

2. Сӑмах тӗпне кӑтартмалла.

3. Сӑмах пӗрремӗшле е иккӗмӗшле сӑмах пулнине каламалла.

4. Иккӗмӗшле сӑмах мӗнле майпа пулнӑ?

5. Виҫе (пур пулсан).

6. Падеж (пур пулсан).

7. Палӑрту форми (пур пулсан).

8. Хисеп.

9. Падеж.

➤ Паллӑ ячӗсене тишкернӗ чухне аффикссен черетне асӑрхаса пырсан меллӗ. Тӗслӗх:

*кӑпӑшкараххине* – паллӑ ячӗ, сӑмах тӗпӗ – *кӑпӑшка,* иккӗмӗшле сӑмах, танлаштару форминче, япала ячӗлентерекен палӑрту форминче, пӗрреллӗ хисепре, пару падежӗнче.

**162. Паллӑ ячӗсене морфологи енчен сӑнласа парӑр.**

1. Ҫӗр сӗтел ҫине шур тутӑрпа апат-ҫимӗҫ сарса хучӗҫ.

– Пипик, лар. Акӑ сана пилӗклӗ пӗремӗк. Ҫи. Канихвет те пур. Ҫи-ҫи! Кун пеккине хӑҫан ҫисе куртӑн-ха эсӗ?

– Ас тумастӑп.

Тутлӑ пӗремӗке Пипик малтан чӗлхипе ҫуласа тухрӗ, унтан пӗчӗккӗн ҫыртса ҫисе ячӗ те канихветсене *ҫӑвар тулли* чӑмлама тытӑнчӗ.

2. ...*Халӗчченхилле мар хӗп-хӗрл*ӗ уйӑх ҫӗр ҫинех ӳпӗннӗ те пӗшкӗнсе тем шырать тейӗн. Уйӑх ҫути ҫнче ҫынсен сӑнӗсем синкеррӗн курӑнчӗҫ, этем кӳлеписенчен вӑрӑм мӗлкесем ӳксе тӑсӑлчӗҫ. *(Л. Сачкова.)*

*** Курсивпа ҫырнӑ паллӑ ячӗ синтагмӑсем мӗн пулнине калӑр: сӑмах майлашӑвӗсем-и, предложенисем-и? Мӗншӗн?**

➤ **Хисеп ячӗ** – хисепе кӑтартакан, миҫе? миҫемӗш? миҫешер? миҫен? ыйтусенче тӑракан сӑмах.

**163. Хисеп ячӗн определенине тивӗҫтерекен сӑмахсене тупӑр, ыйтӑвӗсене калӑр.**

**Уйрӑм рабфаксем**

Чӑвашра пин те тӑхӑр ҫӗр вӑтӑрмӗш ҫулта юпа уйӑхӗн вӑтӑрмӗшӗнче ял хуҫалӑх, педагогика тата индустрипе техника рабочи факультечӗсене уйрӑммӑн уҫма йышӑннӑ. Ял хуҫалӑх рабфакне тӑват ҫӗр ҫынна илсе малтанлӑха Чулхула ял хуҫалӑх институчӗ ҫумне ҫирӗплетнӗ. Педагогика рабфакӗнче ҫулталӑкра виҫ ҫӗр ҫамрӑка вӗрентнӗ. Ҫӗмӗрлере индустрипе техника рабочи факультетӗнче ҫӗр ҫирӗм яшпа хӗре вӗрентме палӑртнӑ. Каҫхи уйрӑмра Улатӑрта ҫӗр ҫынна, Шупашкарта ял хуҫалӑх тата педагогика рабфакӗсенче хӗрӗхшер ҫынна вӗрентме тытӑннӑ. («Хыпар».)

* *Пин те тӑхӑр ҫӗр вӑтӑрмӗш ҫул* сӑмах майлашӑвӗн пӑхӑнакан пайне кӑтартӑр, вӑл тӗп пайпа мӗнле мелсемпе ҫыхӑннине ӑнлантарӑр. Кӗрет ҫыхӑну мелӗ уйрӑм сӑмах ҫумне пырса ларнӑ-и, сӑмах ушкӑнӗ ҫумне-и?

* *Пин те тӑхӑр ҫӗр вӑтӑр* пӗрлешӳре хӑш сӑмахсем пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнӑва кӗреҫҫӗ, хӑшӗсем – сыпӑнуллине?

**Асра тытӑр**

▲ Хисеп ячӗ ӑнлантаркан япала ячӗсене пӗрреллӗ хисепе лартса каламалла: *виҫӗ юлташ, вун ик кӗнеке, алӑ-утмӑл ҫын, виҫ ҫӗр салтак.*

**164. Хисеп ячӗсене тишкерӳ йӗркипе пӑхса тухӑр.**

Лидия Васильевна Власова педагогика ӗҫӗнче хӗрӗхрен ытла ҫул вӑй хурать.

Саккӑрмӗш класс хыҫҫӑн Канаш педагогика училищинче пӗлӳ илнӗ. Ачасене пӗлӳ пама тӑван ялӗнчен кӳршӗ яла пилӗк ҫухрӑм ҫуран утнӑ. Ун чухне вун тӑххӑрта пулнӑ. Пирвайхи ачисене аса илсе Лидия Васильевна ҫапла каласа парать: «Манӑн пӗрремӗш класа ачасем ҫирӗмӗн килчӗҫ – шӑп та лӑп вунӑ хӗр те вунӑ ывӑл ача. Ку класра ҫулсерен пилӗк отличник та ҫич-сакӑр ударникчӗ. Ыттисем те тӑрӑшатчӗҫ».

Юратнӑ ачисем ҫинчен каланӑ чухне педагогӑн куҫӗ шывланать, савӑнӑҫ куҫҫулӗ тухать... *(Роза Власова.)*

*** Тытӑмӗнче сыпӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑракан пайсем пуррине шута илӗр те *вунӑ хӗр те вунӑ ывӑл ача* сӑмах майлашӑвӗн схемине ӳкерсе пӑхӑр. Сыпӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑракан сӑмах майлашӑвӗсем *ача* сӑмахпа кашни хӑй тӗллӗн епле ҫыхӑннине кӑтартакан уйрӑм схемӑсем ӳкерӗр те сӑнӑр: *вунӑ* хисеп ячӗ хӑй ҫыхӑнӑвне епле улӑштарать? *Хӗр* тата *ывӑл* сӑмахсене пӗр-пӗринпе ылмаштарсан схемӑсенче улшӑну мӗншӗн пулмасть?**

* ***Ун чухне вун тӑххӑрта пулнӑ*** **предложенин схемине ӳкерсе кӑтартӑр. *Вун* сӑмах патӗнчен *тӑххӑр* сӑмах патне стрелка мӗншӗн туртмалла мар**?

**Хисеп ячӗсен морфологи тишкерӗвӗн йӗрки**

1. Хисеп ятне каламалла.

2. Хисеп ячӗ миҫе сӑмахран тӑнине пӗлтермелле: пӗр сӑмахлӑ-и, нумай сӑмахлӑ-и? Пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнура, сыпӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑракан пайсене каламалла.

3. Аффикс йышӑнман шут хисеп ячӗ. Аффикссӑр хисеп ячӗ – шут хисеп ячӗ. Унӑн тӗсӗ епле: тулли-и, вак-и? Туллилӗхӗ епле: тулли (*иккӗ*), ҫурма тулли-и *(икӗ),* кӗске-и *(ик)?*

4. Аффикс йышӑннӑннӑ хисеп ячӗ. Сӑмах тӗпӗ ҫумне хушӑнакан аффикс синтаксис аффиксӗ-и, синтаксис аффиксӗ

мар-и? 5. Синтаксис аффиксĕ маррисем – хисеп, сăпат тата палăрту аффиксĕсем. Хисепĕ миçемĕш? Сăпачĕ миçемĕш?

6. Синтаксис аффиксĕсем:

а) падеж аффиксĕсем;

ă) падеж системине кĕменнисем.

7. Хисеп, сăпат тата палăрту аффиксĕсем хыçне пырса ларнă аффикссем.

Тĕрĕссипе, тишкерӳ аффикссен йĕркипе пырать.

**Тĕслĕх:** *иксĕмĕршĕн* – хисеп ячĕ, пĕр сăмахлă, камăнлăх формин 1-мĕш сăпатĕнче, сăпачĕ нумайлă хисепре, пирке падежĕнче.

**Асра тытăр!**

Йĕрке аффиксне йышăннă чухне *пĕрре* хисеп ячĕ тулли пулать, умĕнче теçеткене, çĕре, пине т. ыт. пĕлтерекен сăмахсем тăрсан кĕске вариант йышăнать: *пĕрремĕш ача, пĕрремĕш концерт; вун пĕрмĕш эрне, çирĕм пĕрмĕш кун, çĕр пĕрмĕш номер* т. ыт. те.

**165. Хисеп ячĕсене морфологи тишкерĕвĕ тăвăр.**

**Аттракцион çулĕ**

Çу уйăхĕн тăххăрмĕшĕ. Кану кунĕ. Арăмпа иксĕмĕр кăнтăрла çитеспе ачасене атттракциона кайса кăтартма шут тытрăмăр. Ачасене вара (вĕсем пирĕн – иккĕн: асли хĕр, кĕçĕнни – ывăл) çакă çеç кирлĕ.

Савăнăçлă кăмăлпа шавласа тăваттăн утатпăр. Кӳлмек патне çити анаталла утса хăвăрт çитрĕмĕр. Малалла çӳлелле хăпармалла та – ачасене çăмăл пулмарĕ. Арăслана «кутамккалама» тиврĕ. Арăмпа Ира хĕрĕм хăйсемех мĕкĕлтетсе манпа пĕрле талпăнчĕç. Улăхса çитсен пĕр тапхăр канса илес терĕмĕр. Эх, мĕн тери аван уçă сывлăшра кăвак пĕлĕт айĕнче çемьепе калаçса ларма?!..

– Атте, атте теп, пире аттракционра «шуйттан кустăрми» çине лартса çавăрттаратăн-и вара паян?

– Курăпăр унта – çитер-ха.

– Эпир пĕрре те ярăнса курмарăмăр-ха унпа. Ярăнтар ĕнтĕ!

– Аннĕр мĕн калать-ха? – куçа хĕсетĕп эпĕ.

Алена ачасене иккĕшне те ыталаса илчĕ те хаваслăн кулса ячĕ:

– «Шуйттан кустăрми» хăрушă пуль вăл! Эпир ыр каруççелпех ярăнар. Атя утар тата, атту вун иккĕччен те ларăпăр кунта, – терĕ те пире пурсăмăра та ырăнтан хускатрĕ. *(Е. Енглаев.)*

* ***Арăмпа Ира хĕрĕм хăйсемех мĕкĕлтетсе манпа пĕрле талпăнчĕç* предложенире *манпа* местоимени *пĕр* хисеп ячĕпе çыхăнать-и, *пĕрле талпăн* глагол майлашăвĕпе-и?**

*** Юлашки тӳрĕ пуплевре тĕл пулакан *вун иккĕччен те ларăпăр* сăмах майлашăвĕнче çыхăну induce черечĕ епле – схема ӳкерсе кăтартăр. *Вун* тата *иккĕ* хисеп ячĕсем мĕнле çыхăнаççĕ: пăхăнуллă-и, сыпăнуллă-и? -Ччен аффикс уйрăм сăмах çумне хушăнать-и, сăмах пĕрлĕхĕ çумне-и?**

**166. Падеж системине кĕмен аффикслă хисеп ячĕсене тупăр, аффиксĕсем мĕне пĕлтернине ăнлантарăр. Сăпат аффикĕ йышăннă хисеп ячĕсем пур-и?**

Хĕвел питтинче вылякан хĕр ачасем тăван килĕн ырлăхлă сăпкинче ярăнаççĕ.

– Атя тата вылятпăр апла! – йăмăкне ыталаса илчĕ аппăшĕ.

– Атя. Халь мĕнле? – тринкки-тринкки сиккелет лешĕ.

– Путекле. Эсĕ – путекĕ, эпĕ – кĕтӳçи. Кĕтӳçе пушă кирлĕ. Эп сӳс илсе пушă явам-ха.

Сарайне чупса кайса пĕр ывăç сӳс илсе килчĕç те иккĕшĕ пĕрле сӳс явма пуçларĕç.

– Миçелле явар? Çиччĕлле-и, виççĕлле-и? – ыйтать Васса.

– Ҫиччӗлле пӗлместӗп – виҫҫӗллех явар, – сӳс сӗвемӗсене пайлать Виркка. – Эс тытса тăр-ха пӗр вӗҫӗнчен.

Вăйӑи пӗтиччен хӗр ачасене амăшӗ пӳрте йыхăрчӗ. *(Л. Сачкова.)*

*** Текста тимлӗ вулăр та калăр: хисеп ячӗсен падеж системне кӗмен аффиксӗ тата хăш-хăш сăмах ҫумӗнче тӗл пулать? Вӗсем хăш пуплев пайне кӗреҫҫӗ?**

➤ **Местоименисем** – япала ячӗ, паллă ячӗ, хисеп ячӗ вырăнӗнче ҫӳрекен, хисеп тата падеж тăрăх улшăнакан, евӗрлӗх аффиксне йышăнакан сăмахсем. Тӗслӗх: *Шупашкарта* ***пирӗн*** *аслă аппа пурăнать.* ***Вăл*** *ача-пăча врачӗ.* ***Ку*** *профессие* ***эпӗ*** *те вӗренесшӗн.*

**167. Местоименисене тупăр та вӗсен определенире кăтартнă паллисене калăр.**

Чиркӳ хуралҫи сиксе-ташласа чан ҫапать. Пысăк чанӗн йывăр тукмакне сулмаклăн сулла-сулла танлаттарать, пӗчӗк чанӗсене тӗнкӗлтеттерет. Кăшт итлесе тăрсан хăлха лапах питӗрӗнсе ларать. Вара чиркӳ тăрринчен хăвăртрах анса таратпăр.

Ҫак чиркӳ тăррине пӗррехинче пирӗн Урине те хӗр пуҫпа ывăл ачасемпе пӗрле хăпарса кайнă. Лешсем ҫӳлте ашкăнма, тӗрткелешме тапратнă. Тахăшӗ Уринене асăрханмасăр тӗксе янă та, хайхискер пуҫӗпе аялалла кӗмсӗртетсе аннă, суранланса пӗтнӗ. Ҫакнашкал ăнсăрт хыҫҫăн Урине те, эпӗ те качакаланма пăрахрăмăр. *(Уйăп М.)*

*** Чи юлашки предложенире *качакаланма* сăмах форми пур. Вăл лексика енчен мӗне пӗлтерет, мӗнле морфемăсенчен тăрать?**

**168. Таблицăна тишкерӗр. Местоименисен мӗнле ушкăнӗсем пур? Вӗсене мӗне кура уйăрнă: пӗлтерӗшне пăхса-и, грамматика тытăмне шута илсе-и? Местоименисен пулăвӗ пирки мӗн калама пулать?**

**Местоимени ушкăнӗсем**

| №№ | Местоимени ушкăнӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сăпат | эп(ӗ), эс(ӗ), вăл; эпир (эпӗр), эсир (эсӗр), вӗсем |

| | | |
|---|---|---|
| 2. | Таврăну | хам, ху, хăй; хамăр, хăвăр, хăйсем |
| 3. | Кăтарту | ку, çак(ă), çав(ă), леш(ĕ) |
| 4. | Ыйту | кам, мĕн, хăш, епле, мĕнле, миçе |
| 5. | Çуклăх | **ни**кам, **ни**м(ĕн), **ни**м(ĕн)ле, **ни**епле, **ни**хăш |
| 6. | Паллă мар | **та**кам, **те**м(ĕн), **те**м(ĕн)ле, **те**пле, **та**хăш(ĕ), **те**миçе |
| 7. | Паллă | пур, пур**те**, кашни, пĕт**ĕм**, **те**пĕр, харпăр |

➤ *Ытти, урăххи* сăмахсем местоимени пулаççĕ тесе çирĕппĕн калама йывăр, мĕншĕн тесен вĕсен **-и** палăрту аффиксĕ умĕнче паллă ятне çывăх тĕп тăни курăнать. Танлаштарăр: *ытла, ыт-тĕкел; урăхрах, урăхла.*

Практикăра паллă ятне япала ятĕнчен уйăрас пирки час-час иккĕленӳ тухать. Вăл, тĕпрен илсен, **-лă(-лĕ), -сăр(-сĕр)** аффикслă сăмахсенчен килет. Кун пек чух сăмаха танлаштару аффиксне йышăнтарса тĕрĕслеççĕ. Танлаштару аффиксне йышăнакан сăмаха паллă ячĕ теме килĕшнĕ: *вăйлă – вăйлăрах, вăйсăр – вăйсăртарах.* Танлаштару аффиксĕ йышăнтарма çук сăмаха япала ячĕ тесе пăхмалла: *кĕрĕклĕ, кĕрĕксĕр, пӳртлĕ, пӳртсĕр.*

**169. Местоименисене тупăр та морфологи енчен тишкерĕр.**

Аманнă танкиста операци тунă та питне-куçне, алли-урине йăлтах бинтласа, чĕркесе пĕтернĕ. Пичĕ курăнмасть.

Тепĕр виçĕ эрнерен ăнсăртран эпĕ суран çыхакан пӳлĕмĕн уçă алăкĕ умне пырса тухрăм. Шалта шăпах çав танкиста бинтлатчĕç. Унăн сылтăм алли пӳрнисем çинче хам тахçан курнă, палланă сас паллисене асăрхарăм. Сисмерĕм те: «Ку вăл – эпĕ палланă Аркадий Ильин танкист вĕт!» – тесе кăшкăрса ятăм. Унран юлмасăр палата патне çити утрăм. Койки çине выртгарсан ыталаса чуп турăм. Вăл та мана ыталарĕ, йĕме тытăнчĕ.

Эпĕ танкиста куриччен ун чир историйĕ çине ятне те, хушаматне те çырманччĕ. Кирлĕ сведенисене тухтăрсем манран ыйтса çырчĕç. *(Ю. Николаева.)*

**Местоимениссен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Сăмах местоимени пулнине каламалла.
2. Сăмах тĕпĕ.
3. Пĕрремĕшле сăмах-и, ikkкĕмĕшле сăмах-и?
4. Хăш ушкăна кĕрет?
5. Хăш пуплев пайĕ вырăнне усă курнă?
6. Сăпачĕ. Хисепĕ. Падежĕ.

Вĕçленĕ чухне морфемăсем сулахайран сылтăмалла епле йĕркепе вырнаçса пынине шута илмелле. Местоимениссен палăрту, евĕрлев аффиксĕсем пулма пултараççĕ. Вĕсене кăтартса хăвармалла.

**Тĕслĕх:**

*кунашкал* – местомени, сăмах тĕпĕ – **ку**, пĕрремĕшле сăмах, кăтарту местоименийĕ, паллă ячĕ вырăнне каланă, пĕрреллĕ хисепре, камăнлăх падежĕнче, евĕрлĕх (категорийĕн) аффиксне йышăннă.

**Пĕлетĕр-и?**

Сыпăнчăклă текст тăвакан предложенисенчен иккĕмĕшĕн пуçламăшĕнче вырнаçнă *çавăнпа* сăмаха союз тесе пăхни йăнăш. Местоимени темелле, пысăкран пуçламалла: *Асамлă вăй хăйне кӳрентернине пире хуйхă-суйхăпа тавăрать.* ***Çавăнпа*** *йывăрлăхшăн кӳренмелле мар.* (Е. Нарпи.)

➤ **Наречи** – ĕçĕн, паллăн, хăш чух япалан паллине пĕлтерекен, туллин вĕçленмен, хисеп тăрăх улшăнман, сăпатланман, хушăран палăрту тата танлаштару формисенче пулакан пуплев пайĕ.

Наречисем шучĕпе сахал, çавăнпа асра тытма меллĕ. Ушкăнĕсем таблицăра курăнаççĕ.

**Наречисен пĕлтерĕш ушкăнĕсем**

| Ушкăнсем | Ыйтусем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Мĕнлелĕх | мĕнле? епле? | апла, апла-капла, аран, вăрах, епле, ерипен, капла, сасартăк, çапла, çарран, тăрук, тăтăш, харăс, хăвăрт, хуллен, чĕвен, шав |

| | | |
|---|---|---|
| **2.** Вăхăт | хăçан? хăçанччен? хăçантанпа? | авал, анчах, вара, виçмине, тăватмине, ултмине, ĕлĕк, ĕнер, ĕнтĕ, кăçал, кĕç, кĕç-вĕç, кĕçĕр, куллен, нихçан, паçăр, паян, пĕлтĕр, пирвай, çуллен, тăтăш, тин, ӳлĕм, халь, час, ыран, ялан |
| **3.** Вырăн | ăçта? ăçтан? ăçталла? | ăçта, ăçтан, кунта, кунтан, лере, лерен, ниçта, ниçтан, унта, унтан, |
| **4.** Виçе | мĕн чухлĕ? мĕн таран? мĕн тери? | вуç, йăлт, кăшт, пайтах, пач, пăртак, пит(ĕ), пушшĕ, самай, тӳпеми, шăлами, ытла |
| 5.Пирке, тĕллев | мĕн пирки? мĕншĕн? | ахаль, ахальтен, кăлăхах, юри, ятне |

**170. Наречисене тупса морфологи паллисене тишкерӳ йĕркипе кăтартăр.**

Ĕнер тикĕслесе пулăхлатнă çĕре Миккуль çемйи паян пĕр хутчен сӳрелесе тухрĕ. Сухаличчен ана çине суха пуçпе çич-сакăр хăлаç леккесем çырчĕç, унтан майран кунтăк çакса вăрлăх акма пикенчĕç. Кашни хăлаç çĕре хăйсен аллипе йывăç касса, тунката вăтăрса пулăхлатнăскерсем халь савăнса утăмлаççĕ, кунта пĕрчĕ пăрахаççĕ. Миккуль пуçĕнче тĕрлĕ шухăш. Кăçал çĕнĕ тырра тухайĕç-ши? Ăнса пулĕ-ши кунта тухăç? Ял халăхĕ кулмалăхне чĕл-чĕл çеç шăткалĕ-ши? Хăйсем хыççăн хускатса килнисем мĕн тейĕç тата? *(Л. Скачкова.)* 2. Пач шутлама пултарайманни те сике-сике тухать. *(Д. Гордеев.)* 3. Санькка вара ăна-кăна чухлаймасть: пĕчĕккĕ-ха вăл хальлĕхе. 4. Ватă çынсем яланхилле сăрт хĕррине пухăнса лараççĕ те сăмах-юмах тапратаççĕ. *(А.Трофимов.)*

**▲ Наречисен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Сăмах наречи пулнине каламалла.
2. Сăмах тĕпĕ.
3. Наречи пĕлтерĕшĕ.
4. Танлаштару виçи (пур пулсан).

**Тĕслĕх:**

*паçăрччĕ* – наречи, сăмах тĕпĕ - *паçăр*, вăхăт пĕлтерĕшлĕ, иртнĕ вăхăтра **(-ччĕ** аффикс кăтартать). Танлаштару виçи çук.

*часрах* – наречи, сăмах тĕпĕ – *час*, вăхăт пĕлтерĕшлĕ, танлаштару виçинче.

➤ **Евĕрлев сăмахĕ** – сас-чĕве е хусканусене евĕрлесе кăтартакан, мĕнле? ыйтура тăракан пуплев пайĕ.

Евĕрлев сăмахĕсене икĕ ушкăна уйăраççĕ. Вĕсене çак таблицăра курма пулать:

**Евĕрлев сăмах ушкăнĕсем**

| №№ | Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сас-чĕве евĕрлекеннисем | шăнкăр-шăнкăр, шат, шарт, нарт, нарт-нарт, кăчăрт-кăчăрт, чĕвĕл-чĕвĕл, ши-и-и, вăр-р-р, пăш-ш-ш |
| 2. | Хусканусене евĕрлекеннисем | йăлтăр, мăч-мăч, яри, йăлтăр, йăлтăр-ялтăр, йăл-йăл, кăн-н, чу-у-у |

Евĕрлев сăмах*ĕсем* вăйлату тата танлаштару формисенче пулаççĕ *(вăшăл-вăшăлччĕ),* пурлă аффикса *(лăпăр-лапăрлă)*, нумайлă хисеп аффиксне *(лăпăр-лапăрсенче)*, **-и, -скер** палăрту аффиксне (вăрт-вартскер, вăрт-вартти), **-ах(-ех, -х)** вăйлату аффиксне *(панках. янкăрах*) йышăнма пултараççĕ.

Евĕрлев сăмахне, ытти пуплев пайĕсем пекех, япала ячĕ пĕлтерĕшĕпе калама пулать: *кӳршĕсен мяв-мявĕ, кӳршĕсен мяв-мявне, кӳршĕсен мяв-мявĕшĕн.*

**171. Евĕрлев сăмахĕсене тишкерӳ йĕркипе ăнлантарăр.**

1. Ау-у-у! Епле ахрăмланса каять сасă йывăçсем хушшипе?! «Тук-тук-тук!» – сасă парать ула такка Чĕкеçе хирĕç. «Чак-чак-чак! Эпĕ те кунтах!» – хĕр çумне йывăç турачĕ çине вĕçсе пырса ларчĕ чакак. Хӯрипе пăлтăр-пăлтăр тутарать. «Чиув-чиув-чив-чив-чив!» – çинçе сасăпа хавассăн юрлать шăкăлчи. Чепчен кайăк сасси тата

чечеңрех: «Цс-сеи-исс, цесс-цс-с!» Шăпчăкĕ тата мĕнле кăна сасăпа, мĕн тĕрлĕ кăна çаврăмсем туса хăй сассипе таврана янратать: «Чиу-чиу-чи-чи-чр-р-р, чок-чок-чок!» – тет. Кăвак сăмсаллă вĕлтрен кайăк сассине те итлесе тăранма çук: «Чи-чи-чиу! Чив-чив-чив!» Аякра-аякра куккук сасси илтĕнчĕ: «Ку-кук, ку-кук!» 2. Вăштăр кăна уçă çил вĕрет. 3.Чĕкеç çунаттине уснă кайăк евĕр хутланса тăчĕ, тăр-тăр чĕтрерĕ. 4. Сахвине йăлтăр çеç кулса илчĕ. 5. Шăрчăксем пĕр вĕçсĕр чăрлатаççĕ, чалт та чалт сиксе тухаççĕ ума. *(Л. Сачкова.)* 6. Лăш усăнчĕ Микула. *(Д. Гордеев.)* 7. Тем каласшăн пек, хĕрарăм çăварне уçрĕ те çаплипех шанк хытса ларчĕ. *(О.Туркай.)* 8.Энтри Энтипĕ чӳлмек хĕррипе каснă хура çи-пуçне салатса янă. Пичĕ çине пăтăм-пăтăм хĕрлĕ тухнă. 9. Арăмĕн кăвак куçĕ хăранипе мăч-мăч уçăла-уçăла хупăнма тытăнчĕ. *(И. Мучи.)* 10. Алăк яриех уçăлса кайрĕ. 11. Пӳртре лăк тулли салтак. *(А. Трофимов.)*

**Евĕрлев сăмахĕсен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Пуплев пайĕ.
2. Мĕне пĕлтерет?
3. Мĕнле морфологи паллисем пур?
4. Çыру уйрăмлăхĕ.

**Тĕслĕх:**

*кĕр-р* – евĕрлев сăмахĕ, сасса евĕрлет; сасă вăрăмланнине кăтартма **р** сас паллисем хушшине дефис лартнă;

*вăртах* (çаврăнчĕ) – евĕрлев сăмахĕ, пулăма евĕрлет, вăйлату аффиксне йышăннă;

*шăпăл-шапăлскер* – евĕрлев сăмахĕ, пулăма евĕрлет, палăрту форминче, пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра. Мăшăр сăмах пулнăран дефиспа çырнă.

➤ **Междометисем** – туйăма, кăмăла, хистеве пĕлтерекен сăмахсем: *ах, эх, ух, ых, уф* т. ыт. те.

**Междометисен пĕлтерĕш ушкăнĕсем**

| №№ | Пĕлтерĕшĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Туйăм | эх, ах, ай, фу-у-у, ур-ра, хурах, ых, уф, ай-тур-тур |
| 2. | Хистев | атя, (атьăр), ну, эй, вĕси, хас, чух-чух, кăшша, хаç, на, ме(йĕр), прис, чим(ĕр), чип-чип-чип, тс-с, кĕс-кĕс |

**172. Междометисене тупса морфологи енчен тишкерĕр.**

Палюкка айăкне тыткаласа аран-аран ура çине тăркаларĕ.

1. –Ы-ых! Юрать-ха: вĕлерсе хăвармарĕ, – пилĕкне, урине хыпашласа пăхрĕ хайхискер.

– Атя, атя тăрса утса пăх, – хуллен çĕклерĕ Палюккана Алтынке. – Атьсем, килĕр-ха: пулăшар ăна! Эп теприне кайса пăхам.

Иккер хускалмасть.

– Эй-яй-яй... Эй-хай-хай... Мĕн курса тăтăмăр? Çĕнĕ çĕре куçассисем пирĕн çаплалла пулса тăчĕç иккен-ха.

2. Хреççук инкĕшĕ ахлатса ячĕ.

– Ах! Ах! Мĕн хытса кайса тăратăн, Чĕкеç? Тăхăнса кăтарт, е хам тăхăнса пăхам акă!

Çĕнĕ кăçатăпа савăнмалăхне алăкăн-тĕпелĕн уткаласа кăтартрĕ хĕр. Ай, çăмăл та-çке, ай ырă та-çке. *(Л.Скачкова.)*

3. – Ну, мĕнле унта? Анализ хатĕр-и?

– Хатĕр... мар... *(О.Туркай.)*

**Междометисен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Междомети пулнине каламалла.
2. Пĕлтерĕш ушкăнне кăтартмалла.
3. Çыру уйрăмлăхĕ.

**Тĕслĕх:**

*ай-уй* – междомети, туйăма пĕлтерет,мăшăр сăмах пулнăран дефиспа çырмалла.

➤ **Глагол** – ĕç тăрăмне, куçăмне, пулăвне пĕлтерекен, сăпат тата сăпат мар формăсенче пулакан пуплев пайĕ.

Сăпат форми йышăнакан глаголсем пĕр-пĕр наклонени, вăхăт фоминче пулаççĕ, сăпатпа хисеп тăрăх улшăнаççĕ: *выляттăмăр, чĕвĕлтетеççĕ, калĕçин, кĕрĕр.* Сăпатсăр фрмăсем вĕсем – причасти, деепричасти тата инфинитив формисем: *канакан, чиперленнĕ, тăхтас, иртен, кури-курми, кĕтсе, сыхлама.*

Глаголсем, тĕпрен илсен, пăхăнакан сăмахсемсĕр сахал çӳреççĕ: *Сивĕтет. Йĕклентерет. Çитĕнекен ача. Иртен ĕмĕр. Шухăшласа калаç.* Пăхăнакан сăмахсем час-час пулаççĕ. Тĕслĕхрен, *Шывра(1) пурăнакан (2) чĕр(3) чунсемпе(4) паллашатпăр(5)* предложенире сăмах *пурăнакан* уйрăм сăмах çинчен мар, *шывра пурăн* глагол майлашăвĕ **-акан(-екен)** аффикслă причасти формине йышăнни çинчен пымалла. *Паллашатпăр* глагол та пĕччен мар – умĕнчи *шывра пурăнакан чĕр чун* сăмахсемпе пĕрле арканми предложени тăвать. Предложенин схеми çакнашкал:




**173. Глаголсене тупăр та вĕем пĕччен е пăхăнакан сăмахсемпе пĕрле пулнине кăтартăр. Форми сăпатлă е сăпатсăр пулнине палăртăр.**

1. Кӳршĕ-аршă мана та ыттисенчен юлтарасшăн марччĕ. Эпĕ хирĕçлерĕм. Ултавпа аппаланни – çывăх çынсен ятне çĕре ӳкерниех, пурнăçăн чăн çулне çухатниех. 2. Çырмалла. Тĕрĕссине çырмалла... Суйса çырни хăçан та пулсан çиеле тухать. Манăн хамăрăн йăх пирки

хаҫатра пичетлеттерес килет. Мухтанма, мăнаҫланма мар. Хальхи тата килес ăру тĕрĕслĕхе пĕлтĕр тесе. 3. Кун, чăнах та, вăранса питне ҫунă. Ҫĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ вырăн та хĕвеле кĕтсе хăймаланнă, сарă тутăрне ҫыхнă. Хирĕҫре вăрман ҫийĕн тĕтре йăсăрланать. *(Г. Максимов.)*

**174. Глаголсенче нумай пăнчă вырăнне пĕлтерĕшĕпе килĕшӳллĕ сăпат аффикссем лартса ҫырăр. Вĕсем мĕне пĕлтернине ăнлантарăр.**

Пĕррехинче – ĕҫ кунĕ пĕтес умĕн Людмила кабинетне Марина Михайловна ҫамрăк тухтăр хавaслăн пырса кĕчĕ:

– Людмила Алексеевна, тус-юлташ..., атя ял больницине ĕҫлеме каятп...: унта халь пынисене хваттер, укҫа параҫҫĕ, – терĕ.

– Мариана Михайловна, мĕн калаҫат... эсĕ? Кайнисем каялла таврăна...ĕ те!

– Эпĕ пур пĕрех кайса пăхасшăн. Чăвашла калаҫма пултарат..., ытти тухтăрсемпе пĕр чĕлхе тупат... ах. Качча кайса ҫемьеллĕ пул..., сана хăнана чĕн... акă.

– Юрать. Хаваспах килĕшет...хăнана пыма. Вара сан ачусене тытса ытал..., ĕнӳне суса пар..., кĕркунне пулсан ҫĕр улми кăларма пулăш...та какайпа купăста кукли пĕҫерсе ҫитер..., – шӳтлесе калаҫрĕ Людмила Алексеевна та. *(Ара М.)*

**175. Уйрăм глаголсемпе глагол ушкăнĕсем йышăннă аффикссем морфологи енчен мĕнле аффикссем пулнине тишкерӳ йĕрки тăрăх ăнлантарăр.**

1. Чăваш кĕпи тăхăннă сухаллă старик **Петĕрпе Алюш еннелле ҫаврăнса** пăхрĕ. Вăйă карти **чарăнса** тăчĕ. Илемлĕ кĕвĕ чарăнчĕ. Пурте **шăллĕпе пиччĕшĕ ҫине пăхса** тăраҫҫĕ. Петĕр ним калама **аптрарĕ.**

– **Эсир кунта мĕнле майпа лекрĕр**? – **илтĕнчĕ** сасă.

– Эпир аварие лекрĕмĕр, пулăшу тупас тесе вăрман тăрăх утрăмăр та çутă çине килтĕмĕр...

– **Ахаль çынсем кунта лекме пултараймаççĕ.** Ку ту инкеке лекнисене кăна кĕртет. Инкек пулчĕ терĕн-и-ха?

– Унта **пирĕн кукамай юлчĕ.** Ури **хĕсĕнсе** ларнă. Тата шофер тăнне çухатнă. Эпĕ сирĕнтен пулăшу ыйтăттăм, анчах **ăнланаймастăп**...

– **Хăв ăçта иккенне ăнланаймастăн** пулĕ-ха **эсĕ.** Çапла мар-и? – каласа та пĕтерме памарĕ старик. *(И. Шашкина.)*

* ***Унта пирĕн кукамай юлчĕ. Ури хĕсĕнсе ларнă. Тата шофер тăнне çухатнă* предложенисенче ирнтнĕ вăхăта расна хатĕрпе – сăпатлă тата сăпатсăр формăсемпе палăртни мĕнрен килет?**

**Асра тытăр.**

Иртнĕ вăхăта сăпатлă формăпа кăтартни калаканни мĕн пулнине хăй куçĕпе курнине пĕлтерет. Каласа паракан ĕçе автор хăй курманнине пĕлтерме глаголăн иртнĕ причасти формипе усă кураççĕ: *Асатте час-час чарăнса тăма пуçларĕ. Ун юн пусăмĕ ўснĕ пулнă иккен.* 1-мĕш сăпат хăй çинчен пĕлтернĕ чухне сăпатлă форма кирлĕ: *Эп такăнса ўкрĕм. (Эп таканса ўкнĕ* тени вырăнсăр.)

**Глаголсен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки**

1. Сăмах глагол пулнине каламалла.
2. Глагол тĕпĕ.
3. Пулăвĕ.
4. **-Ай(-ей)** аффикс (пулаю форми) пур-и?
5. Пурлă е çуклă формăра пулни.
6. Сăпатлă форма – наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп.
7. Сăпатсăр форма:

а) причасти (вăхăт, палăрту, тăсăмлăх, хисеп падеж);

ă) деепричати (аффикс, пĕлтерĕшĕ);

б) инфинитив (инфинитив аффиксĕ, ун хыççăнхи аффикс);
в) пули-пулми форма аффиксĕ **-и**, ун хыçне вырнаçнă çителĕклĕх аффиксĕ **-ччен**.

Ку е вăл аффикс хăй вырăнĕнче пулнине сулахайран сылтăмалла шута илсе пымалла.

**Тĕслĕх:**

*ыванниччен* – глагол, сăмах тĕпĕ – *ывăн*, пĕрремĕшле сăмах, пулаю форминче мар, пурлă формăра, сăпатсăр, пули-пулми формăра, **-ччен** тăсăмлăх аффиксне йышăннă;

*пĕр-ик сехет ĕçлемелĕх* – глагол сăмах ушкăнĕ, тĕп сăмахĕн тĕпĕ *ĕçле*, иккĕмĕшле сăмах, сăмах ушкăнĕ пулаю формине йышăнман, пурлă формăра, сăпатсăр, инфинитив, **-лĕх** çителĕклĕх формине йышăннă.

## 4. Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем

➤ **Хыç сăмахсем** – сăмахсене, сăмах ушкăнĕсене, пăхăнуллă преддоженисене ытти сăмахсемпе, сăмах ушкăнĕсемпе тата предложенисемпе çыхăнтаркан сăмахсем. Союзсенчен сăпатлă глаголем хыççăн тăманнипе уйрăлса тăраççĕ. Хăш чух хыç сăмахлă пĕрлĕх глаголсăр предложенисенче предикативлăха хăй çине илет: *Ĕçĕн* *<u>вĕçĕ-хĕрри</u>* ***<u>çук пек</u>***. *Халь ман* *<u>ĕçĕм</u>* ***<u>мăй таран.</u>***

**176. Таблицăна тишкерĕр, хыç сăмахсен ушкăнĕсемпе паллашăр. Хыç сăмахсен кашни ушкăнĕпе пĕрер тĕслĕх тупса çырăр.**

| № | Пĕлтерĕш ушкăнĕсем | Хыç сăмахсем |
|---|---|---|
| 1. | Вăхăт | май, умĕн, хыççăн, хута, чух(не) |
| 2. | Виçе | таран, тери |
| 3. | Танлаштару | пек, евĕр |
| 4. | Пуплев теми | пирки, çинчен |
| 5. | Хирĕçлев | çинче, çĕрте, çĕртен |
| 6. | Валлилĕх | валли |
| **7.** | Пирке | пирки, кура, пула, май |

**177. Хыҫ сӑмахсене тупӑр та вӗсем хӑш сӑмахсемпе пӗрлӗхсене ҫыхӑнтарнине кӑтартӑр.**

1. – Куҫ курнӑ чухне тӗнче пур ҫӗрте те пур вӑл. Суккӑр ҫыншӑн ҫеҫ тӗнче ҫук. Тӗттӗм халӑх та суккӑр ҫын пекех. Тухса пулӗ-и ҫутта?

– Епле тухаҫҫӗ тата ҫутта?

– Вӗренмелле ывӑлӑм. Ялта шкул уҫмалла – сире пурсӑра та шкула ярас тетӗп.

– Эпир те Лявкка тете пек писсӑре тухатпӑр-и вара? *(Л. Сачкова.)* 2. Пиҫсе ҫитнӗ ҫырла пек хитре ҫанталӑк ташлать урамра. Хӗвел качча кайма хатӗрленнӗ сарӑ хӗр евӗр ҫиҫкенсе пӑхать... *(Г. Максимов.)* 3. Калаҫнӑ чух сывлӑш шап-шурӑ тӗтре пек курӑнать. *(А. Торфимов.).* 4. Мӗн ҫитмест пек, мӗн ытлашши пек чӗваш театрӗнче? 5. Эпӗ Казаков валли кӑна ҫыратӑп вӗт-ха, урӑх никам валли те ҫырмастӑп. *(В. Николаев.)* 6. Ӗҫрен таврӑнсан ларса канма вӑхӑт ҫук амӑшӗн: кил-ҫурта тирпейлемелле, анартинче ӗҫлемелле. Ӑна Кенӑ вӑй ҫитнӗ таран пулӑшать-ха. *(А. Трофимов.)* 7. Анатолий ентешӗсене чӑвашла хаҫат тухасси пирки ҫав кунах каласа пачӗ 8. Тӑван чӗлхепе литература учителӗ Анатолие тата пӗр-икӗ ачапа пӗрле тӑтӑшах уроксем хыҫҫӑн класа хӑвара пуҫларӗ. *(Б. Чиндыков.)*

➤ *Ҫӗр* тата *тӗл* япала ячӗсен хӑш-пӗр падеж форминчен пулнӑ хыҫ сӑмахсене вӗсем вырӑна пӗлтерменни тӑрӑх палласа илмелле.

**178. Паллӑ тунӑ сӑмахсем хыҫ сӑмах пулаҫҫӗ-и, япала ячӗ-и?**

1. – Ансӑр иккен *ҫӗр* ҫинче ҫул, – тарӑхса мӑкӑртатрӗ Амиров, унтан машинине хӑвӑрт хускатрӗ те Шупашкар вырӑнне тӑван ялне вӗҫтерчӗ.

Патăрьел енне çитнĕ *çĕре* хĕвел анма пуçланăччĕ. Акă ял хĕрринчен виççĕмĕш кил. Пĕр ват хĕрарăм ларнă *тĕлте* Ринат симĕс курăк çинче канакан хур-кăвакала хăратса машинине чарчĕ. 2. Мускав çулĕ çинчен пăрăнса ката хĕррине канма выртнă Амиров пăрахут сассипе вăранчĕ. Хăпăл-хапăл тумланчĕ те йĕпе курăк çине тухса тăчĕ, пĕшкĕнсе сывлăм пуçтарчĕ, кĕпçе татрĕ.

– Пĕтрĕм! – çухăрчĕ Амиров кĕтмен *çĕртен* тем çине такăнса çӳллĕ те чăнкă çырантан ӳнĕ май. *(И. Вутлан.)* 3. Чӳк вĕçленсе пынă чух сасартăк вырăссем килсе çитеççĕ. Вĕсем пирĕн халăха Христос тĕнне йышăнманшăн, малтанхи тĕнпе пурăннăшăн юратман, чӳк, уяв ирттернĕ *çĕртен* хăваланă. *(Т. Денисова.)* 4. Хĕвел каç енне сулăннă *тĕле* ачасем çĕр улмине кăларса, пуçтарса пĕтерчĕ. *(Л. Ковалюк.)* 5. Пĕренесем хушшинче мăк тĕпренсе темиçе *тĕлте* тухса ӳкнĕ... *(А. Трофимов.)* 5. Эпĕ тăван киле пырса кĕнĕ *çĕре* мачча кашти кăмака çине хуçăлса аннăччĕ. *( Л. Сачкова.)*

* **Тĕрĕслĕр: текстсенче тата мĕнле хыç сăмахсем пур?**

➤ Çыхăну тĕллевне кура хыç сăмахлă пĕрлĕх çумне тĕрлĕрен аффикс хушăнма пултарать. Тĕслĕхрен, *пек, таран* хыç сăмахлисем çакнашкал аффикссене йышăнни паллă:

1) тĕп мар падеж аффиксне: *Оркестр ертӳçи инструмент сассисене **пĕр пеке** килтереççĕ. **Çак тарана** çити пĕр сăмах та çыраймарăм;*

2) **-и, -скер** палăрту аффиксĕсене (çавна май – падеж тата нумайлă хсеп аффиксне те): ***Сан пекки** кам пур-ши? **Сан** пеккин ĕç çук унта. Сан пеккипе нимле ĕç те тăваяс çук. Сан пекки**шĕн** хăть хĕвел ан тух; **Сан пеккисемшĕн** çул уçă;*

3) танлаштару аффиксне: *Аслă ывăлĕ **ашшĕ пекрех;***

4) евĕрлĕх формине: *Ывăлу та ялан **сан пекле** калаçать;*

5) иртнĕ вăхăта пĕлтерекен **-чĕ** аффикса: *Çанталăк **çумăр çуса ярас пекчĕ.***

*Таран* хыççăмахлă пĕрлĕхсем **-ччен, -ччĕ, -ах(-ех, -х)** аффикссемпе çӳреме пултараççĕ, падеж аффиксĕсене йышăнаççĕ: ***Çак таранччен** ăçта çӳретĕн? Шыв **пилĕк таранччĕ.** Асанне чирпе **виçĕ эрне таранах** выртрĕ. **Ку тарана** çитсе кукка никама нимле усал сăмах та каламан.*

Чи кăсăкли – *пек* хыç сăмахлă ушкăн сăмах тăвакан аффикса йышăнма пултарни: *Тренировка спортсменсене вăй-хăват енчен **пĕр пеклентерет.** Ачасен тыткаларăшĕнче **пĕр пеклĕх** пур.* Танлаштарăр: *Тренировка спортсменсене вăй-хăват енчен **пĕр пек** тăвать. Ачасен тыткаларăшĕнче **пĕр пекки** пур.*

**179. Хыç сăмахлă сăмахсемпе пĕрлĕхсем çумне мĕнле аффиксем, хыç сăмахсемпе татăксем хушăннине калăр. Аффиксесем форма аффиксĕсем-и, сăмах тăваканнисем-и?**

1. Элмен Мĕтрийĕнни евĕрлĕ псевдоним илнĕ Улькkапа Ангелина Павловскаян вулаканĕсем пĕр пекрех-тĕр-ха. *(В. Николаев.)* 2. Ырă çынсем пур тĕнчере, сан апаю пеккисем. 3. Степан тете хăй те хут купăс калама пултаратчĕ. Уйрăмах юратнă кĕвви те пурччĕ унăн – «Коробейники». Сасси те уçăччĕ, мухтавлă Георг Отс юрăçăнни евĕрлĕрех. Çемçе баритон. 4. Шел, пĕр кăлтăк пур – чухăн çын ачи. Ашшĕ пур çинчех тăлăххăн ӳсет. *(А. Тарасов.)* 5. Сергей Есенин поэзине Петĕр Хусанкай питĕ юратнă, анчах куçарсах кайман – пĕр вăхăтра ун евĕрлĕрех çеç çырма тытăннă. *(В. Кервен.)* 6. Ара, кам шутланă-ха, тăван салара пĕрле ӳснĕ улпут ывăлне инçет çыран çинче тĕл пуласса? Пулать иккен ун пекки те пурăнан ĕмĕрте! *(И. Вутлан.)* 7. Сăпса сырăннă чухнехи пекех хăлаçланма тытăнчĕ Микула. *(Д. Гордеев.)*

**180. Хыç сăмахлă пĕрлĕхсене тишкерĕр.**

1. Куланай пирки вырӑссемпе ыррӑн калаҫса татӑлӑпӑр Ман сӑмахӑм ҫавӑн пек: вырӑссемпе ан ҫапӑҫӑр. *(К. Турхан.)* 2. Ас тӑватӑп: ҫапла чӑваш хӗрӗ те учительница пулнине курсан калама ҫук савӑнса кайрӗ те хӑй ҫамрӑк чухне шкул пирки мӗн шухӑшланине каласа пачӗ. *(М. Юман.)* 3. Сан пек юлташа кӳрентерме юрамасть! 4. Каҫар мана, Раҫҫейӗм, ҫамрӑк чухнехи ҫылӑхсемшӗн! 5. Мальгин господин – вырӑс эмигранчӗ. Ун пеккисем Европӑра, Азире тата ытти материк ҫинче пин-пин. *(И. Вутлан.)* 6. Фольклорпа литература иккӗшӗ те сӑмах искусствин тӗсӗсем, ҫапах та вӗсем хушшинче пӗр пеклӗхсемпе пӗрлех уйрӑмлӑхсем те пур. 7. Сӑмахлӑхӑн сӑнарлӑ тӗнче курӑм тытӑмӗ, типизаци принципӗсем хӑй евӗрлӗ *(Т. Денисова.)* 8. Хак пирки, тӗрӗссипе, вӑл мӗн чухлине пӗлместӗп, мӗншӗн тесен эпӗ инженер. Ҫавӑнпа та, Махмуд господин пекех, правительство калаҫӑвне хутшӑнмастӑм, анчах араб патшалӑхӗ парӑма май килнӗ таран татнине пӗлетӗп. 9. Эпир кунта ӗҫ ҫинчен калаҫма килтӗмӗр. Ҫапла-и? *(И. Вутлан.)* 10. Пач кӗтмен ҫӗртен ман сасӑ пӗтсе ларчӗ. 11. Педагогика институтне пӗтернӗ хыҫҫӑн мана ҫар куҫаруҫисен курсне вӗренме кайма сӗнчӗҫ. *(А. Тарасов.)*

**Хыҫ сӑмахсен морфологи тишкерӗвӗн йӗрки**

1. Хыҫ сӑмаха каламалла.
2. Хыҫ сӑмах пӗлтерӗшӗпе мӗнле ушкӑна кӗрет?
3. Хыҫ сӑмах хӑй умӗнчи хӑш-хӑш сӑмахпа пӗрлӗх тӑвать?
4. Хыҫ сӑмахлӑ пӗрлӗхӗн аффиксӗсем.
5. Хыҫ сӑмахлӑ пӗрлӗх пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑрать-и, тӑмасть-и? Тӑрать пулсан – шухӑш енчен хӑш сӑмахсене ӑнлантарать?

**Тӗслӗх:**

*Кашӑр пекскерӗн хӳри тукмакла тӑрать.*

*кашкăр пекрехскерĕн*; хыç сăмахĕ – *пек,* танлаштару пĕлтерĕшлĕ, *кашкăр* сăмахпа пĕрлĕх тăвать, çак пĕрлĕх танлаштару, палăрту форисенче, пĕрреллĕ хисепре, камăнлăх падежĕнче; пĕтĕм пĕрлĕх *хӳри тукмакла тăрать* сăмахсене пăхăнать.

➤ **Татăксем** – предложенин ыйтăвне, çуклăхне, модальлĕхне палăртакан, шухăш тытăмне уçăмлатма пулăшакан сăмахсем. Хăш-пĕр татăк иккĕмĕшле сăмах тытăмĕнче тĕл пулать. Татăксен паллăрах ушкăнĕсене çак таблица кăтартать.

**Татăк ушкăнĕсем**

| №№ | Ушкăнсем | Татăксем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | Ыйту татăкĕсем | **-и, -ши, -им, -шим; -а, -е*** | Анне хăçан килет-**ши?** Сан справка пур-**им?** |
| 2. | Çуклăх татăкĕсем | **мар, çук, ан** | Эп тусăмсене манас **çук.** Юлташна **ан** сут. Эсĕ маншăн ют çын **мар.** |
| 3. | Модальлĕх татăкĕсем | **-иç**,-мĕн, имĕш, иккен, эппин, ахăр, ахăртнех, тен, -тăр(-тĕр), ия, ăхă, **ара, -ха, -çке**, **шăп, лăп(лап);** те | Эсĕ манран пĕр шит те уйрăлмастăн-**иç!** **Тен,** водитель курсне вĕренме кĕрĕп. **Те** тухать-ха ĕçӳ, **те** тухмасть? |
| 4. | Тема ушкăнне уйăраканнисем | **ак(ă)**, ав(ă), **вара, ĕнтĕ** | **Акă** ачасем [т/р] ташă ташлаççĕ. Эп **вара** [т/р] видео ӳкеретĕп. |
| 5. | Шухăш тĕшшине уйăраканнисем | анчах, **вара, ĕнтĕ,** кăна, çеç, вĕт, тата; **шăп, лăп(лап); -и, -ши, -им, -шим, -иç, -ха, -çке; мар, çук, ан,** та(те); **ак(ă), тăк(тĕк)** | Вăхăт хăвăрт иртет **вĕт.** Олимпиадăра эп **те** пултăм. Эс ху сăмахна манмастăн **вара.** Сăвăнма сăлтав çук мар-**ха**. Сире ман **акă** мĕн калас килет. Смартфонна илме ан ман **тата.** Калаçть **тĕк** калаçать. |
| 6. | Сăмах тăваканнисем | **та** (такам), **те** (темиçе), ни (никам, нимĕн), | **Ни**кам та **ни**мĕнрен те хăрамасть. **Те**миçе сăмах каласам! |
| 7. | Виçе палăртаканнисем | чи, чăн | Савăнăç **чи** пĕчĕк ĕçре те тупма пулать. Пакша сике-сике чăрăшăн **чăн** тăррине çитрĕ. |

*** Хулăн сас паллисемпе пĕр вырăнтах харăс икĕ функципе çӳрекен татăксене (ыйту татăкĕсем, çуклăх татăкĕсем, *ара, -ха, -çке, шăп, лăп, лап* модальлĕх татăкĕсем) тата пĕр вырăнта пĕр тĕллеве, тепĕр вырăнта тепĕр тĕллеве пурнăçлама май параканнисене *(вара, ĕнтĕ; ак(ă); та, те)* паллă тунă.**

**180. Татăксене тупăр та вĕсем хăш ушкăна кĕнине, хăш сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсем çумĕнче тăнине сăнăр.**

1. Вырăссемпе мăхаметсем, сăмахран, пĕр турра ĕненеççĕ: вĕсемшĕн тĕнчере пĕр турă кăна. Чăваш, çу-ук, пĕр турра ĕненмест. Ыйт-ха эс Тукайран: «Миçе турă сан?» – тесе – вăл хăй те калаймасть, мĕншĕн тесен пĕлмест. Имĕш, пĕлĕт çичĕ хутлă пулсан турри те шутсăр йышлă ĕнтĕ унта. Кашни хутĕнчех асли те, кĕçĕнни те, ырлăх кӳрекенни те, хурлăх кӳрекенни те нумай эппин. *(К. Турхан.)* 2. Халăх йăли-йĕркипе Куçма Турхан сăнарсен хăш-пĕр енне те палăртать. Тĕслĕхрен, Урасметăн куштанлăхĕпе хаярлăхĕ акă ăçта курăнать. Унăн пиччĕшĕ вилсен Эрнепи инкĕшĕ тăван килне таврăнать, Çакна пĕлсен Урасмет инкĕшне халăх умĕнче мăшкăл кăтартма путсĕр пăру пек туртаран кăкарса каялла илсе килет. Ара, кунашкал йăла ваттисен йăли иккен. *(Т. Денисова.)*

➤ Хăш-пĕр татăксем (*çук, мар, тата, иккен*) хăйсен умĕнче тăракан сăмахпа е сăмах ушкăнĕпе пĕрле тĕрлĕрен аффикс йышăнма пултараççĕ: *Кукамай килте çук**чĕ.** Кун пек мăшкăла чăтма çук**ах.** Инçе çула эп кирлĕ мар**шăн** утмастăп. Çилленмелле мар**тарах** калаç. Пĕлмелле мар**ри** кĕнкекере ним те çук. Ĕçре малашне мĕн кирлĕ мар**ри**не виçĕ кунтанах ăнлантăмăр. Санпа тĕл пулмасăр пурăнас мар**ччĕ.** Хамăр укçана пĕтерсен тата**ччĕ.** Пĕччен кайни тат**ах**. Таса мар**лăх**ран яланах сыхланмалла.*

**181. Татăк йышăннă сăмахсемпе пĕрлĕхсем çумне хушăннă аффикссене тупăр. Вĕсем грамматика форми тăваканнисем шутне кĕреççĕ-и, сăмах тăваканнисем шутне-и?**

1. Амиров ватă карчăка çавăтса пыракансенчен пĕри Гюзель иккенне палласа илчĕ. *(И. Вутлан.)* 2. Ырă мараниссе Виркка хăвăртрах Антунипе Çимун тетĕшне чĕнсе илчĕ. *(Л. Сачкова.)* 3. Хăрушă çул пулчĕ вăтăр çиччĕмĕш çул. Çав çул çĕр-шывра темле тĕрĕс марлăх пулса иртнине Анатолий çамрăк пулин те, тинтерех каччă çулне ярса пуснă пулин те сисмерĕ мар. *(Б.Чиндыков.)* 4. – Чăх пуснăшăнах тăкакланма кирлĕ марччĕ, – аван марланчĕ Лева. *(Н. Андреев.)* 5. Каччă руль умĕнче телефон тытакан марччĕ. *(А. Изман.)*

**182. Татăксене тишкерӳ йĕркине пăхăнса ăнлантарăр.**

1. Санпа хирĕçме хăюлăх та, хăватăм та çитмерĕ. *(И. Вутлан.)* 2. Санькка кĕнекене амăшне те вуласа парасшăнччĕ. Вăл ĕçрен таврăнман иккен-ха. Кенă та çук – амăшне пулăшма кайнă пулĕ. Часах тарăнĕç-ха. 3. Амăшĕпе Кенă каç пулттипе тин çитрĕç. 4. Каламаççĕ-им шкулта: «Вĕреннĕ чух тӳрĕ лар, ан шавла, ан хуçкалан», – тесе? *(А. Трофимов.)* 5. Кун пек конспирацие, ман шутпа, Юргансен господин кăна пултарать. 6. Шеф вара сана манран ытларах хаклать. 7. – Рината курасчĕ. – Çук, кураймастăн. *(И. Вутлан.).* 8. Микулан вара, паçăрах, пуçра çуралнă сăнар, тухьяллă Вера, куç умĕнче тăрать. 9. Телее тĕнчере шырамаççĕ те çав... 10. Кунтан пăхсан сăрт пĕрре-иккĕ сикмелĕх кăна пек курăнать *(Д. Гордеев.)*

* **8-мĕш тĕслĕхре сăмахсене запятой лартса уйрăмлатнин сăлтавĕ мĕн?**

### Татăксен морфологи тишкерĕвĕн йĕрки

1. Татăкне кăтартмалла.

2. Татăк хăш сăмахсемпе пĕрлĕх тунине каламалла.

3. Пĕрлĕх аффикс, хыç сăмах е татăк йышăннипе йышăнманнине каламалла, пур пулсан аффиксĕсене, хыç сăмахпа татăкĕсене кăтартмалла.

Примечание [ПЮ4]:

4. Пĕрлĕх пăхăнуллă çыхăнура тăрать-и, тăмасть-и? Тăрать пулсан – хăш сăмахсене ăнлантарнине кăтартмалла.

**Тĕслĕх:**

*Хăш чух эпир хамăра мĕн кирлĕ иккенне те пĕлместпĕр.*

Ку предложенире *иккен* татăк пур. Вăл х*амрăра мĕн кирлĕ икк*ен пăхăнуллă предложение (подлежащи – *мĕн,* сазуемăй – *кирлĕ*) вĕçлет. Пăхăнуллă предложени япала ячĕлентерекен **-и** аффикслă (вăл тухса ӳкнĕ), пару падежĕнче. Падеж аффиксĕ пăхăнуллă –предложение унăн вырăнĕ-йĕркипе пĕрле *пĕлметпĕр* сăмахпа çыхăнтарать. *Те* татăк пăхăнуллă предложени çине шухăш тĕшши ӳкнине вăйлатса палăртать.

**Пĕлетĕр-и эсир?**

Пурлăхпа çуклăхран пĕрне суйласа илнĕ чухне пĕр йышши членсенчен пĕри *çук* татăк пулма пултараймасть. Çавăнпа *Эпир Шупашкара каятпăр-и, çук-и?* йышши предложенисемпе усă курмалла мар – *Эпир Шупашкара каятпăр-и, каймастпăр-и?* майлă предложенисем тумалла. Хирĕçлеме **çук** татăка хăй тĕллĕн кăна калани çителĕксĕр – çуклăха тепĕр хут паллă тумалла: ***Çук,*** *эпĕ усал-тĕселпе çыхлан**мас**тăп.* ***Çук,*** *ĕç-пуç мĕнпе пĕтесси паллă* ***мар.*** ***Çук,*** *туссене эп нихçанта манас* ***çук.***

➤ **Союз – сăмахсемпе пĕрлĕхсене çыхăнтаркан пулăшу сăмахĕ.**

Çыхăну функциййĕ пурри енчен союз – хыç сăмах майлă, анчах унран глаголăн сăпатлă форми хыççăн тăма пултарнипе уйрăлса тăрать. *Пулсан* сăмах союз пулнине ун умĕн глаголăн сăпатлă форми е причасти форми тăни тăрăх пĕлмелле. Çак йĕркепех, саюз

пулнине *пулсан та, пулин те* сăмахсенне пĕлмелле Союз тесе пăхма май пур формăсем *те* глаголăн та пур. Вĕсем – *тесе, тесен.* Вĕсем союз пулнине «кала» пĕлтерĕш тата мĕнле те пулин модальлĕх пĕлтершĕ çукки кăтартать..

**183. Таблицăна тишкерĕр, союзсене аса илĕр.**

| №<br>№ | Союзсен ушкăнĕсем | Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | **Сыпăнуллă союзсем** | | |
| 1.1. | Сыпăнтару | тата, та(те), ни | Атте хут купăсне илет те ташă кĕвви калать.<br>Хĕвел тухать **те**, пĕтĕм тавралăх чĕрĕлет.<br>**Ни** курма çук, **ни** итлеме. |
| 1.2. | Хирĕçлев | анчах, çапах, атту, итту, ахальлĕн, унсăрăн | Пиччĕшĕпе шăллĕ телефонпа час-час калаçаççĕ, **анчах** тĕл пулаймаççĕ.<br>Пиччен ывăлĕ инçетре пурăнать, **итту** ашшĕпе амăшĕ патне уйăхсерен килсе çӳрет.<br>Юлташăмсен пурин те телефон тавраш пур, **ахальлĕн** пĕр-пĕрне çуралнă кун ячĕпе тӳрех саламлаймастăмăрччĕ. |
| 1.3. | Уйăру | е, пĕр–пĕр, пĕрре–тепре | **Е** ачаш çемĕ илтĕнет, **е** джас кĕвви кĕмсĕртетет. **Пĕрре** ăшăтса ярать, **тепр**е шăнтса пăрахать. |
| 2. | **Пăхăнуллă союзсем** | | |
| 2.1. | Пирке | мĕншĕн тесен,<br>ма тесен, тесе | Ĕнер пулла кайса пулмарĕ, **мĕншĕн тесен** çанталăк пăсăлчĕ<br>Пӳлĕмре сивĕ **тесе** мăнука одеалпа икĕ хут витрĕмĕр. |
| 2.2. | Тĕллев | тесе | Сивĕ ан пултăр **тесе** пӳлĕме кислород пĕтермен радиатор лартрăмăр. |
| 2.3. | Тĕллевпе услови | тесен | Пӳлĕмсем хĕлле ăшă тăччăр **тесен** вĕри шыв системине çулсерен тĕрĕслесе тăмалла. |
| 2.4. | Килĕшӳ | пулсан та, пулин те, хуть (хăть) | Вăрлăх сухана марганцовкăра лартрăмăр **пулин те** пуç сухан çĕрĕклĕ тухрĕ. |
| 2.5. | Услови | пулсан, енчен (те), эхер (те), ытах, тăк | **Эхер те** эсĕ компьютер юсакан чăн-чăн ăстана тухас тетĕн **пулсан** тăрăшса вĕренмелле. Тĕллевӳ пур **тăк** куç умĕнчен ан вĕçерт ăна. |

**184. Сюзсене тупса тишкерӗр.**

1. Хӑвна нимӗн те кирлӗ мар тӑк Камилла валли ӗҫле. 2. Уйӑх ҫутинче ҫара йывӑҫсем витӗрех курӑнчӗҫ пулин те хӗр чӑннипех шикленчӗ пулас. 3 Никам та ан кансӗрлетӗр тесе алӑка шалтан питӗрчӗҫ. 4. Суйла: е аннӳ кирлӗ-и, е эпӗ-и? *(Н. Андреев.)* 5. Аҫу, аҫу... Ун ӑшшине эп нихҫан та туйман пулсан, вӑл мӗнле этемне эпӗ пит лайӑх пӗлетӗп пулсан ман вара мӗн тӑвас? *(О. Туркай.)* 6. Хӗр чунӗпе, кӑмӑлӗпе туя хирӗҫ, ҫапах пӗтӗм вӑйӗпе ирӗке туртӑнаймасть. *(Т. Денисова.)* 7. Гена, енчен те Германие пырас теместӗн пулсан эпӗ сан пата кашни уйӑхрах пӗрер эрнелӗхе килсе ҫӳреме пултаратӑп. *(И. Медведев.) 8.* Чӑваш халӑхӗн XXI ӗмӗрте аслисем валли чӑвашла тухакан пӗртен пӗр «Тӑван Атӑлне» литературӑпа культура тата искусство журналӗ тенӗ. *(В. Станьял.)* 9. Хӗрарӑмсем ытларах та, анчах Йынкка ҫулӗнчи арсем те пур-мӗн кунта. *(Е. Нарпи.)* 10. Ытах уйрӑм пурӑнас тесен ашшӗ-амӑшӗ ҫамрӑк ҫемьене хӑйпе юнашар, пӗр картишӗнчех, тепӗр ҫурт ҫавӑрма-хӑпартма пулӑшать. *(Л. Филиппова.)*

### Союзсен морфологи тишкерӗвӗн йӗрки

1. Сӑмах союз пулнине каламалла.
2. Сыпӑнуллӑ-и, пӑхӑнуллӑ-и?
3. Ҫыхӑну пӗлтерӗшӗпе хӑш ушкӑна кӗрет?

**Тӗслӗх:**

*Анне пулнӑ* ***пулсан*** *мана унашкалах хӗнеме парас ҫукчӗ.* (Уйӑп М.)

Союз пулакан сӑмах – *пулсан (*союз теме *пулсан* сӑмах умӗнче *анне пулнӑ* пӑхӑнуллӑ предложенин сказуемӑйӗ глаголӑн иртнӗ причасти форминчен пулни май парать)*,* пӑхӑнуллӑ союз, услови пӗлтерӗшлӗ.

***«Морфологи» темӑна вӗреннине аса илмелли ӗҫсем***

**185. Ыйтусене хуравлăр:**

1. Морфологи ăслăлăхĕ мĕне тĕпчет?

2. Грамматика пĕлтерĕшĕ мĕн? Категори тăвакан грамматика пĕлтерĕшĕсемпе категори туманнисем хушшинче епле уйрăмлăх пур?

3. Грамматика категорийĕ мĕн?

4. Категори аффиксĕсемпе форма аффиксĕсем хушшинче епле уйрăмлăх пур?

5. Грамматика категорийĕ çинчен калаçма мĕн-мĕн кирлĕ?

6. Сăмахсене çыхăнтарман тата çыхăнтаракан аффиксем пурри граммматика мĕнле пайсенчен тăнине кăтартать?

7. Морфологи аффиксĕсемпе синтаксис аффиксĕсем хушшинче епле уйрăмлăх пур?

8. Чăваш чĕлхин пуплев пайĕсене ушкăнланă чухне тĕп вырăна мĕнле пинцип тухса тăрать? Синтаксис принципĕ чăваш морфологийĕшĕн пĕлтерĕшлĕ маррине ĕнентерĕр.

9. Традици тăрăх пуплев пайĕсене миçе пысăк ушкăна уйăраççĕ? Ушкăнĕсем мĕн енчен расна?

10. Пуплев пайĕсене пĕр-пĕринчен уйăрнă чухне сăмахсем ансăр тата анлă пĕлтерĕшлĕ пулнине мĕншĕн шута илмелле?

11. Сăмах пулăвне пĕлни пуплев пайĕсене уйăрма пулăшать-и?

**186. *Йăваш* сăмахăн аффиксĕсем категори пĕлтерĕшлĕ-и, категори пĕлтерĕшлĕ мар-и?**

Йăвашрах, йăвашши, йăвашскер; йăвашăн, йăваша, йăвашра, йăвашран, йăвашпа, йăвашсăр, йăвашшăн; йăвашăм, йăвашу, йăвашĕ.

**187. *Хурăн* сăмах тата ун формисем йышăннă аффикссенчен хăшĕсене категори аффиксĕсем, хăшĕсене форма аффиксĕсем темелле? Вĕсем грамматика енчен мĕнле пĕлтерĕшлĕ?**

Хурăнăн, хурăна, хурăнта, хурăнтан, хурнпа, хурăнсăр, хурăншăн; хурăнсем; хурăнăм, хурăну, хурăнĕ, хурăнăмăр, хурăнăр; хурăнччĕ; хурăнах.

**188. Панă глаголсен аффиксĕсене уйăрăр, вĕсем мĕнле категори аффиксĕ пулнине калăр.**

Киленетпĕр, киленесчĕ, киленесшĕн, киленнĕрен, киленмелĕх.

**189. Текста вуласа тухăр. Пуплев пайĕсене вĕреннĕ йĕркепе ушкăнласа çырса илĕр, кашни ушкăнтан пĕрне морфологи тишкерĕвĕн йĕркипе сăнласа парăр. Ку е вăл сăмах пĕччен е унăн тавра çыхăннă сăмахсемпе пĕрлĕх тунине шута илĕр.**

НАТО шкулĕнчен вĕренсе тухсан тӳрех тăван çĕрне янипе Амиров Дора çинчен нимĕн те пĕлмерĕ, Мальгинпа та, Чернейкăпа та тĕл пулаймарĕ. Кăмăлсăррăн, чирлĕ чĕрине аллипе тытса Вăтам Ази çĕрĕ çине ярса пусрĕ. Уйăха яхăн пансионатра тусем хушшинче вăрттăн пурăнчĕ, Совет çыннисен шухăш-кăмăлне, йăли-йĕркине тимлĕн сăнарĕ, ăнланма тăрăшрĕ.

Чĕри хытăран та хытă ыратма тытăнчĕ те, тутар чăтаймарĕ – хăй Раççейĕн чикки урлă каçас умĕн шутланă ĕмĕт-шухăшне пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Çĕпĕре тухса тарчĕ, Хĕвел анăçĕнче юлнă хуçисемпе çыхăнма пăрахрĕ.

Çулталăка яхăн пĕр пысăк хулара такси шоферĕнче ĕçлерĕ. Отпуск вăхăтĕнче çĕнĕ машина туянчĕ те Чăваш ене тухса вĕçтерчĕ. Мĕн ачаран юратнă Хусан хулинче темиçе сехетлĕхе чарăнчĕ, паллань выранĕсене тупрĕ, лавккасене кĕрсе арăмĕпе ачисем валли парнесем шырарĕ. *(И. Вутлан.)*

**190. Илемлĕ литературăран е публицистика текстĕнчен 7–8 сăмахлă пĕр-пĕр предложени илĕр те ун тăрăх, 10-мĕш класра вĕреннине пĕтĕмлетекен тишкерӳ тăвăр.**

## 11-МĔШ КЛАСС

## Синтаксис тата пунктуаци

### 1. Синтакис – сăмах майлашăвĕпе предложени тытăмне тĕпчекен ăслăлăх

➤ **Синтаксис** (грек сăмахĕ: syntaxis «пĕрлешӳ, çыхăну») – чĕлхен хăйне майлă шайне тĕпчекен ăслăлăх, çавăнпа лексикăпа, фонетикăпа, сăмах пулăвĕпе, морфологипе пĕр ретре тăрать, морфологипе пĕрле грамматика ăслăлăхне тăвать.

Ăслăлăх çыннисем синтаксис сăмах майлашăвĕпе предложение тĕпчет теме йышăнă, мĕншĕн тесен сăмахсен çыхăнăвĕ сăмах майлашăвĕнче те, предложенире те пĕрешкел: пăхăнуллă та сыпăнуллă та. Танлаштарăр: *Тимук(1)* ***лăпкă****(2) та* ***тарăн****(3)* ***ыйха****(4) путрĕ(5).* (Н. Ишентей.)




Ку предложенире *лăпкă та тарăн ыйхă* ят сăмах майлашăвĕ пур. Унăн пăхăнакан пайĕнче *лăпкă* тата *тарăн* паллă ячĕсем пĕр-пĕринпе сыпăнуллă çыхăнура тăраççĕ.

Çакнашкал сыпăнуллă çыхăнăва *Валя(1)* ***çул****(2)* ***варрине****(3)* ***чупса****(4)* ***тухать****(5),* ***алă****(6)* ***сулать****(7)* (Л. Сарине.) предложенире *çул варрине чупса тух* тата *алă сул* сăмах майлашăвĕсем кĕреççĕ, çапах вĕсене иккĕшне те *Валя* сăмах пăхăнать, мĕншĕн тесен *тухать* тата *сулать* сказуемайсем хăйсен умне вырнаçнă кирек мĕнле сăмаха та, вăл шутра подлежащие те, пăхăнтараса тăраççĕ, кашнине

çывахраххисенчен пуçласа инçетре вырнаçнисем таран черетпе çыхăнтараççĕ:




Çапла вара, сыпăнуллă çыхăнура тăракан сăмахсем юлашкинчен çав-çавах пăхăнуллă çыхăнăва кĕреççĕ. Сыпăнуллă çыхăнусене пула пăхăнуллисен йышĕ ӳсет.

Пайĕсем пăхăнуллă çыхăнура тăракан пĕрлĕхсене ăслăлăхра ***синтагмăсем*** (грек сăмахĕ: *syntagma* – пĕрлешӳ) теççĕ.

Мĕнле тĕллевпе усă курнине кура синтагмăсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: сăмах майлашăвĕ синтагмăсем, предложени синтагмăсем. ***Сăмах майлашăвĕсем ăнлавсене ят параççĕ, предложенисем шухăша пĕлтереççĕ.***

Синтагмăсене кăтартнă чух тĕп пайăн юлашки сăмахне пуçламăш формăра калаççĕ. Предложени синтагма çумне вăхăтпа наклонени формисене тата сăпат аффиксне хушса хума юрать.

Синтагмăсем икĕ пайран тăраççĕ: тĕп пайран тата пăхăнуллинчен. Пăхăнуллă пай, тĕпрен илсен, тĕп пай умĕнче тăрать: *тип(1) / çу(2); шартлама(1) / сивĕ(2); калаçма(1) / тытăн(2); шăпăрт(1) / пул(2)* т. ыт. те. Ку пĕрлешӳсен схеми пурин те пĕрешкел:



Пăхăнуллă пай тĕп пай умĕн тăрас йĕрке предложенисенче те сыхланать: *Рамаш(1) | тăван(2) амăшĕнчен(3) çиччĕре(4) юлнă(5)* (В. Паймен.)




Ку йĕрке шухăш тытăмне кура предложенире кăна улшăнма пултарать: *Мĕншĕн(1) илсе(2) кăтартрăм(3) / ку(4) тĕслĕхе(5)?* (Н. Максимов.)




Ку предложенире *ку тĕслĕх* сăмахсем *мĕншĕн илсе кăтарт* сăмахсене пăхăнса тăраççĕ пулин те, вĕсем хыççăн тăраççĕ, мĕншĕн тесен тема ушканĕ рема хыçне вырнаçнă.

**191. Предложенисене вуласа тухăр, вĕсенче тĕл пулакан синтагмăсене черетпе çырса илĕр.**

1. Ав тантăшсем алăкран шаккаççĕ. Пите сивĕ шывпа çăватăп та урама тухса чупатăп. Унта купăс сасси илтĕнет. *(Л. Сарине.)* 2. Пурнăçа пĕлсе çитмесĕр çыравçă пулаймастăн. Мĕн чухлĕ пирĕн пурнăç курмасăр, ниçта ĕçлемесĕр тӳрех литературăна кĕрсе кайнисем?! Çавăнпа та эпĕ район хаçачĕсенче ĕçлеме тӳр килнĕшĕн шăпама тав тăватăп. *(Н. Максимов.)*

➤ Пăхăнуллă çыхăнура тăракан сăмахсемпе пĕрлĕхсем хутсăр предложенисенче кăна мар, хутлисенче те тĕл пулаççĕ. Пăхăнуллă предложени яланах синтагмăн пăхăнуллă пайĕ пулать: *Çак вăхăтра*

*алăк яриех уçăлса кайрĕ те, пӳлĕме Галя кĕрсе тăчĕ* (Н. Петровская.) предложени сыпануллă хутлă. Унăн I пайĕнче сăмахсемпе синтагмăсем çак йĕркепе çыхăнаççĕ: 1) *уçăлса / кай;* 2) *яриех / уçăлса кай;* 3) *алăк / яриех уçăлса кайрĕ;* 4) *çак / вăхăт;* 5) *çак вăхăтра / алăк яриех уçăлса кайрĕ.* II пайра пĕтĕмпе 3 синтагма: 1) *кĕрсе / тăр;* 2) *Галя / кĕрсе тăчĕ;* 3) *пӳлĕме / Галя кĕрсе тăчĕ.*

*Сатай эпĕ тин çеç илсе килнĕ калава вуласа тухрĕ* (А. Юман.) предложенире акă мĕнле синтагмăсем пур: 1) *вуласа / тух;* 2) *илсе / кил;* 3) *тин çеç / илсе кил;* 4) *эпĕ / тин çеç илсе килнĕ;* 5) *эпĕ тин çеç илсе килнĕ / калав;* 6) *эпĕ тин çеç илсе килнĕ калава / вуласа тух;* 7) *Сатай / эпĕ тин çеç илсе килнĕ калава вуласа тухрĕ.* 7 синтагмăран 4-мĕшĕ – пăхăнуллă предложени.

**192. Таблицăна тишкерĕр: синтагмĕсен пайĕсене мĕн-мĕн çыхăнтарма пултарать?**

<table>
<tr><th colspan="4">Сăмах майлашăвĕпе предложени<br>Синтагмăсен пайĕсене çыхăнтаракан хатĕрсем</th></tr>
<tr><th colspan="3">Тĕп ушкăнсемпе<br>вак ушкăнсем</th><td>Тĕслĕхсем</td></tr>
<tr><th colspan="3">Пайсен вырăнĕ-йĕрки</th><td>хут купăс, вĕрене йывăç, шăмат кун, космонавт летчик, чĕвĕл-чĕвĕл сас, çыру çыр, çирĕм миллион, шак хытă, ас ту, хыпар ту, палт ӳк, юр çăвать т. ыт. те</td></tr>
<tr><th rowspan="2">Аффикссем</th><td rowspan="2">Ят сăмахсен аффиксĕсем</td><td>падеж аффиксĕсем</td><td>пирĕн килес, санăн ĕçӳ, вăрмана кай, Çĕнĕ Шупашкарта пурăн, ĕçрен таврăн, çывăх юлташпа калаç, юлташсăр ан çӳре, Çĕнтерӳшĕн çапăç, çиçĕмрен хăвăрт, çанталăк лайăланасса кĕт т. ыт. те</td></tr>
<tr><td>падеж системине кĕмен аффиксем</td><td>салтакри пичче, хирти ĕç, вăрçă вăхăтĕнчи пурнăç, ирхи сывлăм, уяв</td></tr>
</table>

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | *умĕн**хи** хĕвĕшӳ; ҫирĕм лаша вăй**лă** пĕчĕк мотор, темĕн чух**лĕ** ҫыру, аслă ҫул енне**лле** ут, пурте илтме**лле** калаҫ, ҫĕнĕ ҫурт**лăх** укҫа пух, апат ҫиме**лĕх** ĕҫле, ир**ччен** хуралта лар, хĕлле**ччен** пурăн, ывăни**ччен** ĕҫле, каҫ**серен,** ир**тенпе** лар, каҫ**серен** репетици ирттер, вăрах**хăн** калаҫ, ҫумăр ҫунă**ҫемĕн** кӳлĕ тулса пырать* т. ыт. те |
| | | сăпат аффиксĕсем | *манăн ту**сăм,** санăн ĕҫтеш**ӳ,** шăллăмăн ĕмĕч**ĕ,** ҫăл куҫ**ĕ,** аслати сасс**и,** ал лапп**и*** т. ыт. те |
| | Глагол аффиксĕсем | инфинитив аффиксĕ | *кала**ҫма** пуҫла, ут**ма** тытăн, вĕрен**ме** кай* т. ыт. те |
| | | причасти аффиксĕсем | *утса ывăн**нă** кукамай, ирт**нĕ** ĕмĕр; пурăн**ан** пурнăҫ, ирт**ен** ĕмĕр; каланине ăнлан**акан** сын, чăваш халăх юррине юрл**акан** артист, вĕрен**екен** ача, тĕрлĕ чиртен сипл**екен** санатори; тахҫан ман**нă** ĕҫ-пуҫ, фольгапа чĕрк**енĕ** какай; пул**ас** экзамен, ҫит**ес** ҫул; сывл**и-**сывлам**и** **лар,** (куҫ) кур**ми** пул(чĕ), хĕвел ан**нă** вăхăт* т. ыт. те |
| | | деепричасти аффиксĕсем | *ман**а** пуҫла, калаҫ**са** татăл, сочинени ҫыр**сан** тепĕр хут вула, кам та пулин ывăн**сассăн** пĕтĕм отряд канма чарăнать* т. ыт. те |
| **Хыҫ сăмахсем** | | | *ĕҫленĕ **хыҫҫăн** ҫителĕклĕ кан, экзамен ăнăҫлă тытас **пирки** шухăшла, ҫумăр сахал ҫунине **пула** ҫĕр типсе ҫурăлмах пуҫланă* т. ыт. те |
| **Союзсем** | | | *аккордеонпа калама вĕренме **тесе** музыка шкулне ҫӳре, сывлăш* |

| | |
|---|---|
| | *температури нультен чакнă* ***пулин те*** *çĕр çийĕ шăнман-ха* т. ыт. те |

**193. Синтагмăсенене çырса илĕр те вĕсен çыхăну мелĕсене паллă тăвăр.**

1. Пан улмине ав паянхи кунчченех çиетпĕр. «Семеренко» ака-çу уйăхĕчченех упранать. Иçĕм çырлинчен, ытти çырларан расна сĕткен хатĕрлетĕп. Унччен вĕлле хурчĕ те усраттăм. Вунă çемье таран та пулатчĕ. 2. Ирсерен хĕвел çутине курнăшăн савăнатăп. 3. Пирĕн патра чăвашсем чăвашлах калаçаççĕ, тăван чĕлхерен писмеççĕ *(Р. Власова.)* 4. Пирĕн енче çĕр пӳрт мар, хура пӳрт те çук. 5. Çу кунĕсем иртиччен чупкаласа юл – кайран ытлах чупаймăн. 6. Вара хĕр Нюра пирки хăй мĕн пĕлнине каласа пачĕ. 7. Вăйă каç пулас умĕн тин саланчĕ. 8. Назара ăсатнă хыççăн тепĕр эрнерен Çимун килсе çитрĕ. 9. Çимун килнĕренпе икĕ эрне иртрĕ. 10.Час-часах хирте çĕр выртмалла пулать. Киле таврăннă хушăра та вăхăт чăлăм куç хупса илмелĕх кăна юлать. 11. Чурăс кăмăллă та хăравçă чунлă йĕкĕт вăл, Васька. *(В. Паймен.)*

**Асра тытăр**

Шкула кăтартнă чухне хулапа е ял ячĕсене вырăн падежне лартса усă курмалла мар, тĕп е камăнлăх падежĕнче каламалла: *Мускав университечĕ, Чĕмпĕр чăваш шкулĕ, Вăрнарăн 1-мĕш вăтам шкулĕ.* Шкул ку е вăл хула е ял ăшĕнче мар, ун хĕрринче е пачах урăх хула-ялта вырнаçма пултарать. Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕн Анат Кинер вăтам шкулĕ çак ялта мар, Станьялта вырнаçнă. Шкул е мĕнле те пулин предприяти, организаци ятне вĕсем ку е вăл географи объекчĕпе (ялпа, хулапа, районпа т. ыт. те) çыхăннине кăтартса каламалла.

➤ Пăхăнуллă çыхăнура тăракан синтагмăсен ăнлантаракан пайĕ тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать: 1) япала палли *(хура çĕр, çамрăк çын, çур аки, вăрăм çул, вĕренекен ача, юхан шыв, иртен ĕмĕр);* 2) харпăрлăх *(аттен çурчĕ, Мускав университечĕ);* 3) япала хăш ушкăна кĕни *(спорт шкулĕ, математика шкулĕ, хут çĕлен, çĕр улми, çĕр çырли);* 4) япалана мĕнле материалтан туни (*хут çĕлен, полиэтилен пленка, полихронил пленка,* 4) вăхăт сыпăкĕ тата вăхăтлăх вырăн *(пĕлтĕрхи суйлав, командировкăри инженер);* 5) ĕçĕн палли *(хăвăрт чуп, васкаса ĕçле, шăппăн калаç);* 5) *ĕç вăхăчĕ, вырăнĕ, сăлтавĕ, тĕллевĕ, условийĕ, виçи, объекчĕ (ирпе калаç, ялта пурăн, пĕлменнипе йăнăш, веренме кĕр, тăрăшсан пулать, ыванăччен ĕçле, ташă ташла);* 6) ĕçпе е паллăппа çыхăннă субъект *(хĕвел анни, мĕн пур, ним çук, ăçти çук, пур пĕр, вăй питти, сĕтел тулли)* т. ыт. те.

**194. Ансăр синтагмăсене çырса илĕр те вĕсен пăхăнуллă пайĕн грамматика пĕлтерĕшне скобкăра кăтартăр.**

1. Çапла пуян ывăлĕ чухăн хĕртен çупкă çисе курчĕ. 2. Апла тăк эп халь каятăп. Кăшт тăрсан эсир пулă йăтса пырăр. 3. Вăйă каç пулас умĕн тин саланачĕ. 4. Кĕрхи каç вĕçĕмсĕр вăрăм. Кăçал тата вăрăмрах пек туйăнать. Чӳречесем лампа çутипе çуталми пулчĕç. Хăйă çутипе нумаях ĕçлесе лараймăн. 5. Майра хĕр Чул çырма урлă каçса хирĕç вăрмана кайнине куракансем чылайччен тĕлĕнсе тăчĕç. 6. Тĕнче пĕтнĕ кун Саххаршăн чăн телейлĕ кун пулчĕ. *(В. Паймен.)* 7. Пур пĕрех манăн телейлĕ кун-çул пулмасть *(Р. Ярантай.)* 8. Мĕн пур асапне те, телейне те пĕрле чăтмалла пулнă та... *(Н. Ишентей.)* 9. Турă пире хăех енчĕк тулли укçа пăрахса пачĕ-и? *(Е. Нарпи.)* 10. Пур пĕрех – Эдгар хăйĕн ашшĕпе амăшне юратать. *(А. Мышкина.)* 11. Ку вара – вăй питти çын. *(В. Кервен).* 12. Ку карчăк та ăçти çук Тухатмăшчĕ таврара. *(К. Иванов.)*

➤ Предложени синтагмăсем ахаль синтагмăсенчен шухăша пĕлтернипе уйрăлса тăраççĕ. Шухăша пĕлтерме – каланин содержанине чăнлăхпа çыхăнтармалла. Чăнлăхпа çыхăнтарма вăхăтпа наклонени формисем кирлĕ. Тĕслĕхрен, иртнĕ вăхăта пĕлтерекен ***-атт-*** тата ***-ччĕ*** аффикссем *çамрăк чухне Илпек Микулайне вилсе кайса юрат* тата *ача чухне Илпек Микулайне вилсе кайса юрат* синтагмăсене *Ача чухне, çамрăк чухне Илпек Микулайне вилсе кайса юрататтăмччĕ. (Н. Максимов.)* предложени шайне çĕклеççĕ.

**195. Ахаль синтагмăсенчен предложени синтагма тăвакан хатĕрсене кăтартăр.**

1. Алена каччăсене аллипе сирчĕ те клуба васкарĕ. Таня та юлмарĕ. *(В. Тарават.)* 2. Таçал ялĕ сăртсем çинчи ăшă ыйхăпа çывăрать. Ялăн сылтăм енче çырма тăсăлса выртать. Çырма урлă кăçал пĕве тунă. Пĕве пуçĕнче вĕлтрен шăтса тухнă. Вĕсем те енчен еннелле сулăнаççĕ, темскер итленĕ пек, калама çук шăп лараççĕ. *(В. Рсай.)* 3. Петĕрĕн алли ылтăнччĕ. Нумай япала ăсталатчĕ ял-йыш валли. *(В. Тарават.)* 4. Хамăр ялта пирĕн шкул çичĕ класс вĕренмеллискер анчахчĕ. Эпĕ çиччĕмĕшне çитсессĕн вара вăтам шкул туса хучĕç. *(Ю. Артемьев.)*

➤ Вăхăтпа наклонени формисем, паллах, синтагмăсем çумне кăна мар, уйрăм сăмах çумне те хушăнма пултараççĕ: *Çуллаччĕ. Пăчăхтаратчĕ.* Синтагмăн е сăмахăн предложени тăвакан кĕрет аффикс çукки каланин содержанийĕ хальхи вăхăтпа çыхăннине пĕлтерет: *Саврăш тавраш**ĕ**... Çак тăрăхра мĕн чуль юрă-кĕвĕ, юмах-халап, легенда çӳремест-ши?!* (М. Сениел.) *Пурте чӳрече патне чупса пырса урамалла тинкерчĕç. Темле ЧП!* (Ю. Исаев.)

**196. Предложенисен ку е вăл пайĕ сăмах майлашăвĕ е уйрăм сăмах пулнине ĕнентерĕр. Сăмах е сăмах майлашăвĕ хăй тĕллĕн**

**предложени тунӑ тӗслӗхсем пур-и? Сӑмахсемпе сӑмах ушкӑнӗсем мӗнле мелпе ҫыхӑннине калӑр.**

1. Эпӗ сан пата кашни кун пӗрер ҫыру ҫыратӑп. Ҫыру ҫырни вӑхӑта шутсӑр лайӑх кӗскетет. *(Хв. Коновалов.)* 2. Кенук. Ҫапла чӗнеттӗмӗр Мулендеев Генӑна. *(Ю. Исаев.)* 3. Мӑн кимӗ. Каллех халӑх лӑк тулли. *(Юма М.)* 4. Ванюша калаҫтарас! *(В. Ухли.)*

5. – Итемри! Итемри!

Мана чӗнеҫҫӗ. Кӗтӗм. *(В. Элпи.)* 6. Ҫулла. Шӑрӑх. Пӗрре мана кукамай пахчана чӗнет. *(Ю. Исаев.)* 7. Ҫу вӑхӑчӗ. Хӗвеллӗ ҫутӑ кун. Мӗн пур япала ҫуталса тӑрать. *(И. Яковлев.)* 8. Алӑк хӑех уҫӑлчӗ. Кӗтӗмӗр. *(М. Калашникова.)*

➤ Хӑй пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен шутне кура синтагмӑсем 4 тӗрлӗ пулаҫҫӗ:

| **Ушкӑнсем** | | **Компонентсем** | | **Тӗслӗхсем** |
|---|---|---|---|---|
| **Ушкӑн №** | **Анлӑх** | **Пӑхӑнакан** | **Тӗп** | |
| 1 | Ансӑр | пӗр сӑмахлӑ | пӗр сӑмахлӑ | *кӗске / пушӑ; Миккуль / тете; ҫутӑ / кӑвак; ик / ҫӗр; аса / ил; кӑмӑл / ту; Хӗвел / анать* |
| 2 | Анлӑ | нумай сӑмахлӑ | пӗр сӑмахлӑ | *пӗр ушкӑн / ача; вӑтам шкулта вӗренекен / каччӑ; тӑршшӗ чи вӑрӑм / кун; анне нумай ҫул юрлама ҫӳрекен / ансамбль; кӗске вӑхӑтрах нумай ӗҫ тума / васка; Виҫӗ-тӑватӑ уйӑх / иртрӗ; Витресем чӑкӑртатни / илтӗнчӗ* |
| 3 | | пӗр сӑмахлӑ | нумай сӑмахлӑ | *пӗр / ҫамрӑк ҫын; васкамасӑр / питӗ тӗплӗ ҫыру ҫыр; манӑн–/ пурте йӗркеллӗ пулсан ҫар юристне вӗренес килет; Урамра / лапка-лапка юр ҫӑвать* |
| 4 | | нумай сӑмахлӑ | нумай сӑмахлӑ | *вӑтам шкулта вӗренекен / пултаруллӑ ҫамрӑк чӑваш ачи; атте лайӑх паллӑсемпе пӗтернӗ / ял хуҫалӑх академийӗ; Альбина куҫне / урӑх нимӗн те курӑнмасть* |

Пайĕсем пĕр сăмахлă пĕрлĕхсене ансăр синтагмăсем шутне кĕртеççĕ, ытттисене анлă синтагмăсем теççĕ.

**197. Синтагмăсене тупăр та пайĕсем миçе сăмахлă пулнине кура ансăр е анлă пулнине ĕнентерĕр.**

1. Виçĕ каç виçĕ ĕмĕре тăсăлса виçĕ самант пек вĕлт-вĕлт иртсе кайрĕ. Виçĕ çăлтăр сӳнмерĕ-и тӳпере, виçĕ хĕвел çутатмарĕ-и тĕнчене?! 2. Каччă куçĕ чăнахах хăмăр, хĕршĕн чие тĕслĕ курăнать. Хĕр куçĕ кăвак, каччăшăн пĕлĕт тĕслĕ курăнать. 3. Тем пирки те калаçрĕç паян варлă туссем. Унтан Илюш юлташне ешĕл курăк çулса тултарнă урапа çине выртса каçчен канма хушрĕ. 4. Рамашпа Оля Тук çыранĕ хĕрринче курăк çинче ларатчĕç, вĕтĕ хăмăш юррине итлетчĕç. Сасартăк виçĕ енчен виçĕ мĕлке килсе тухрĕç. Шăппăн çывхарчĕç. *(В. Паймен.)* 5. Авă лере – трактор тин çеç çулса кайнă курăк çинче Галя тăрать. *(Н. Петровская.)*

* **Тупнă синтагмăсен пайĕсене çыхăнтаракан мелсене кăтартăр та хăш ушкăна кĕнине ĕнентерĕр.**

➤ Шухăша пĕлтермен синтагмăн **интонацийĕ** чăваш пуплевĕнче вырăссенни пек мар: çӳлтен пуçланса аялалла анмасть – аялтан пуçланса çӳлелле çĕкленет:



кĕр аки    юр пĕрчи

Пăхăнакан компонентпа тĕп компонент хушшинче **чарăну** (пауза) епле пуласси синтагмăн вăрăмăшĕнчен килет: пайсен сыпăк сасă шучĕ мĕн чухлĕ сахал, чарăну çавăн чухлĕ кĕске пулать е, тĕпрен илсен, пачах çухалать, вăрăм синтагмăн пайĕсем хушшинче уççăн палăрать. Акă *çул пуçĕ, çур аки, чĕр çитти, сар кайăк, хĕр ача, юн кун, шăмат кун, мĕн пур, чуп ту, сыв пул* йышши синтагмăсен

пайĕсем интонаци енче тачă пĕрлешеҫҫĕ. *Ҫул тăваткалĕ, ҫур хĕвелĕ, сĕтел ҫитти, сарă кайăк, ывăл ача, кĕҫнерни пасарĕ, телей пур, чăпăрт ту, сывă пул* синтагмăсен пайĕсем уҫҫăн уйрăлса тăраҫҫĕ. Чрăну тума пайсем хушшинче кĕрет ҫыхăну мелĕ пурри те хистет. Танлаштарăр: *каҫ кӳлĕм – ка**ҫхи** кӳлĕм; ас ту – ас**а** ил, ас**ра** тыт; тĕл пул – тĕл**е** лек; укҫа шутла – укҫ**аллă** пул; пулă тыт – пулă**лла** иш; канăҫ кур – канă**ҫа** ҫухат.* Чарăну пуррипе ҫукки ансат ӳкернĕ схемăсенче ҫакнашкал курăнать:

кĕр тырри кĕрхи тырă



Чарăну кĕске пулни синтагмăн пайĕсем ытти синтагмăсенче сахал е пачах тĕл пулманнинчен те килет. Тĕслĕхрен, *ар* сăмах чăваш пуплевĕнче час-часах *ҫын* сăмахпа кăна ҫыхăнса тĕл пулать, ҫитменнине, формине улăштармасть. Сайра тĕл пулакан *ар ача, чăваш арĕ, арлă-арăмлă пурăн* сăмах майлашăвĕсен, *Арĕ пур – йышĕ ҫук* евĕр ваттисен сăмахĕсен *ар* сăмаха асра хăваракан витĕмĕ вăйлă мар, ҫапах ку чăваш чĕлхинче *ар* сăмах ҫук тенине пĕлтермест.

Интонаци енчен вырăспа чăвашла пуплевре сăмах майлашăвĕсем расна: вырăссем сăмахсене паузăпа уйăраҫҫĕ – эпир уйăрмастпăр; сасă ҫуллĕшĕ вырăсла пуплевре пăхăнакан компонент ҫинче пысăк пулать, чăвашла калаҫура – тĕп компонент ҫинче:



хĕрлĕ чечек красный цветок

Предложени синтагмăн интонацийĕ чăвашла пуплевре сăмахсен йĕрки мĕнле пулнипе ҫыхăннă. Прогрессиллĕ йĕркере

(Т|Р) сасӑ тема ҫинче ҫӗкленет, регрессиллӗ йӗркере (Р|Т) – анать. Рема ҫинче сасӑ прогресиллӗ йӗркере те, регрессиллинче те пӗрешкел – майӗпен ҫӗкленсе майӗпен анать. Темӑпа рема хушшинче чарӑну пулать. Шухӑш тӗшши чӑвашла пуплевре, вырӑссенни пек, пусӑмпа палӑрмасть, мӗншӗн тесен шухӑш тӗшши ӳкекен сӑмахсемпе сӑмах ушкӑнӗсем, тӗпрен илсен, сказуемӑй умӗн унпа юнашар вырнаҫаҫҫӗ. Пусӑм ҫуккипе чӑвашла пуплев тикӗссӗн илтӗнет. Темӑпа рема хушшинче прогресире те, регрессире те чарӑну пулать. *Антун* $^{T|P}$ *тайӑлса* ***пуҫ*** *тайрӗ. Алӑк уҫӑласса кӗтсе ывӑннӑ Антун* $^{T|P}$ ***тавралӑха*** *сӑнарӗ.* ***Тӑкӑнса тӑрать*** *паян* $^{P|T}$*вӑйхалӑм.* (Г. Максимов.) ***Ӑнлантӑм*** $^{P|T}$ *эсӗ ырӑ мар ҫын иккенне.* (Хв. Акивер.)



*Антун* $^{T|P}$ *тайӑлса пуҫ тайрӗ.*



Ӑнлантӑм $^{P|T}$ эсӗ ырӑ мар ҫын иккенне

**2. Синтаксис пунктуацие витӗм кӳни**

➤ Пунктуаци (ҫӗнӗ латин чӗлхин «пӑнчӑ» пӗлтерӗшлӗ *punctuative* сӑмахӗнчен) – чарӑну палли лартмалли правило пуххи, чарӑну паллисемпе текстра усӑ курни, чарӑну паллисем хӑйсем. Чӑваш пунктуацийӗнче виҫӗ принцип палӑрать: 1) грамматика принципӗ, 2) интонаци принципӗ, 3) шухӑш (пӗлтерӗш) принципӗ. ***Грамматика принципӗпе*** чарӑну палли лартнӑ чухне предложенин

епле те пулин грамматика паллине шута илмелле. Ку принцип пĕр йышши членлă хутсăр, пĕр йышши пăхăнуллă предложениллĕ, сыпăнуллă, çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче палăрать: *Енчĕкре икĕ тенкĕ те хĕрĕх пус çеç.* (Н. Мранькка.) *Кирек ăçта кай – çул ирĕк. (*В. Алентей.) ***Интонаци принципĕ*** пуплевре пулакан чарăнусемпе çыхăннă: ***Ахăртнех****, катка-пичке, шетник, çӳпçе, чĕрес тавраш̆ĕ музей экспоначĕсем кăна пулса юлчĕç.* (Р. Власова.) *Çамрăк чухне Савик Илюк Ахванеçĕн хĕрне илесшĕн пулнă тет.* (А. Талвир.) *Янкель, Фроловпа Модестов кăмăлне пĕлнĕрен пулас, нимĕн те шарламарĕ.* (С. Элкер.) ***Шухăш принципĕ*** предложенин пайĕсем еплерех çыхăннине уçăмлатать: *Çĕнтерӳ хыççăн, сывă юлнă фронтовиксем киле таврăнма тытăнчĕç.* (А. Казаков.) – *Çĕнтерӳ хыççăн сывă юлнă фронтовиксем киле таврăнма тытăнчĕç.*

Хăш чухне харăс темиçе прицип пĕрлешет, çапах вĕсенчен пĕри тĕп вырăнта тăрать. Тĕслĕхрен, пĕлтерĕш пĕр йышши членсем, çыхăну паллисĕр тата сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсем хушшинче расна пулма пултарать. Çакă ку е вăл чарăну паллине лартмалли сăлтав пулса тăрать. Танлаштарăр: *Партисем хăйсем те кĕрĕк арки йăваласа лармаççĕ – суйлава хушăнма документсем хатĕрлеççĕ.* («Хыпар».) – *Партисем хăйсем те кĕрĕк арки йăваласа лармаççĕ, суйлава хушăнма документсем хатĕрлеççĕ. Чухлатăп-çке, чĕлхӳ чăтма çук кĕçĕтсе тăрать.* (А. Тарасов.) *Чухлатăп-çке: чĕлхӳ чăтма çук кĕçĕтсе тăрать. Чухлатăп-çке – чĕлхӳ чăтма çук кĕçĕтсе тăрать.* Панă тĕслĕхсенче предложени пайĕсене уйăрнипе пĕрлех шухăш енчен епле çыхăннине те шута илнĕ.

**270. Чарăну паллисене лартасси мĕнле принципа пăхăннине ăнлантарăр.**

1. Миля куланçи пулчĕ, анчах нимĕн те шарламарĕ. *(Л. Маяксем.)* 2. Çумăр хуллен кăна йăскаса тăрать пулин те, тапхăр-тапхăр хытах чашлаттарать. *(В. Алентей.)* 3. Атте эпĕ ăçта кайнине, арман хуçи мана хăйĕн çаранĕ çинче тытнине каласа пачĕ. *(М. Трубина.)* 4. Ахванеçĕн, паллах, çитĕннĕ хĕрне те хăйпе пĕр тан çынна парас килнĕ. *(А. Талвир.)* 5. Икĕ мăшăр çăм атă ларать те, мăнтăр кушак аçи сарăлса выртнă. *(М Трубина.)* 6. Çĕр хута Атăлта чӳхенсе тасалнă пек, тӳпере янкăр тăрă. *(Н. Симунов.)* 7. Пире, фронта тин çеç çитнĕ çамрăк салтаксене, пĕр çĕре пухса тăратрĕç. *(Ç. Элкер.)* 8. Акă Хурла тепĕр енче, аякра, кĕтӳ çӳрет. *(Н. Петровская.)* 9. Эльвира – каччи аллине сăмахсăрах сирчĕ. *(Ю. Скворцов.)*

Пуплев культури çинчен калаçу пуçлансан чи мала чĕрĕ пуплев тухса тăрать пек. Апла пулин те пуплев культури чĕрĕ калаçура пулакан текстпа та, çыру тексчĕпе те çыхăннă.

### 3. Сăмах майлашăвĕ: пĕлтерĕшĕ, тытăмĕ

➤ Сăмах майлашăвĕ – ăнлавсене ят паракан синтагма: *чул / çурт; чӳрече / карри; шыв / юххи; тăхăр /вуннă; ик / çĕр; тĕл / пул; шăппăн / кала; тĕксĕм / кăвак; питĕ / авал* т. ыт. те. Çавăнпа та çыхăнăва юнашар тăракан сăмахсемпе пĕрлĕхсем кĕреççĕ, мăшăрлăхсем тăваççĕ. Малта пăхăнакан пай (пăхăнакан компонент), ун хыççăн тĕп пай (тĕп компонент) тăрать:

*Матви(1) ятлă(2) питĕ(3) йăваш(4) çын(5)*

1 2 3 4 5



Ку сăмах майлашăвĕнче çыхăну черечĕ çакнашкал: 1) *питĕ / йăваш;* 2) *питĕ йăваш / çын;* 3) *Матви / ят;* 4) *Матви ятлă / питĕ*

*йăваш çын.* Юнашарлăх правилине пула *ятлă çын* сăмах майлашăвĕ çук, мĕншĕн тесен, пĕрремĕшĕнчен, *ят* сăмахăн хăйĕн *Матви* пăхăнакан пайĕ пур, иккĕмĕшĕнчен, *питĕ йăваш* пăхăнакан компонент хăйне пăхăнтарса тăракан *çын* тĕп компонентран уйрăлаймасть.

**198. Сăмах майлашĕвĕн пайĕсене çыхăну черетне кура çырса илĕр, сăмахсен çыхăнăвне схемăсем ўкерсе кăтартăр.**

1) тĕрлĕ ал ĕçĕ; 2) икĕ хутлă чул çурт; 3) вĕри юнлă хастар чăваш; 4) ют чĕлхене çăмăл вĕренекен ача; 5) тăр кăнтăрла хĕртсе пăхакан ырă хĕвел; 6) пысăк мар вулăллă кăчкă йывăççи

➤ Сăмах майлашăвĕ синтагмăсене тĕп компоненчĕ е ун юлашки сăмахĕ мĕнле пуплев пайĕ пулни тăрăх тата ку е вăл компонентра хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем миçе пулни тăрăх ушкăнлаççĕ.

Сăмах майлашăвĕн юлашки сăмахĕ хăй пĕлтерĕшлĕ кирек хăш пуплев пайĕ те пулма пултарать: *çутă кăвак* / ***тĕс,*** *тин кăна тухнă* / ***хĕвел,*** *пысăк мар вулăллă* / *кăчкă* ***йывăçĕ*** (япала ячĕ), *ятарласа якатнă пек* / ***çутă*** (паллă ячĕ); *тăхăр вунă* / ***пин,*** *пĕрререн* / ***пĕрре*** (хисеп ячĕ); *ачасенчен* / ***тахăшĕ*** (местоимени); *çĕр çул* / ***ĕлĕк,*** *самолетран* / ***хăвăрт*** (наречи); *пулă пек* / ***сывла***, *хутаçа* / *вăчăра пытарса* ***хур*** (глагол).

Тăтăш усă куракан сăмах майлашăвĕсем вĕсем япала ячĕ сăмах майлашăвĕсем тата глагол сăмах майлашăвĕсем. «Япала ячĕ сăмах майлашăвĕ» термин вырăнне «ят сăмах майлашăвĕ» терминпа усă курма юрать.

**199. Тĕп сăмаха кура мĕнле сăмах майлашăвĕсене кăтартма пултаратăр? Вĕсене çырса илĕр те хăш ушкăна кĕнине (скобкăра палăртăр).**

***Асăрхăр:*** сăмах майлашăвĕ тунă чухне сказуемăй глагола пуçламăш формăна лартамалла. Тĕслĕхрен, *Европăра сарăлнă каврăç*

*хĕрĕх метра ҫити ӳсет* предложенире *Европăра сарăл* глагол сăмах майлашăвĕсĕр пуҫне *хĕрĕх метра ҫити ӳс* глагол майлашăвĕ те пур.

Пĕр ҫĕрте сукмак хĕрринчех пысăк ҫĕрĕк вулă выртать. Ун айккинче эпĕ, асăрханса пуртăпа чавса, шала кĕрсе выртмалăх хушăк турăм. Йывăҫ хуппине ҫĕмĕрмерĕм. Кайран – типнĕ вĕрене туратĕнчен сăнă шĕвĕртрĕм, пушăт касрăм, чылай вăрăм кантра яврăм, ăна тăпрапа сăтăрса хуратрăм. *(В. Степанов.)*

**200. Ансăр сăмах майлашăвĕсене тупăр та сăмахĕсен ҫыхăнăвне схемăласа кăтартăр.**

1. Оля чăваш хĕрĕсен уяв тумне мухтарĕ. Чăнах та, епле хитре ҫав тум! Чăлт шурă пир. Хăмач ярăмĕсем. 2. Акă Оля пуҫ тавра тутăр ҫавăрса вырăнтан хускалчĕ. Чăвашла тумланнă хĕр майралла ташлани питĕ хитре пулчĕ. *(В. Паймен.)* 3. Улăп вăл пĕлĕт ҫӳллĕш калама ҫук вăйлă ҫын пулнă. 4. Вут кайăк тăмана тĕслĕ, шăнкăрчран пысăкрах. 5. Масар пуҫĕ – вилесен пуҫлăхĕ. Вил пуҫлăхĕ иккĕмĕш вырăнта, Алпасти виҫҫĕмĕш вырăнта тăрать. *(Ч. х. с.)*

*** Тĕп компонентне кура ансăр сăмах майлашăвĕсене хăш ушкăна кĕртмелле?**

*** Ансăр сăмах майлашăвĕсен пайĕсене ҫыхăнтаркан мелсене тупăр.**

**Асра тытăр**

Вырăссен дефиспа ҫыракан приложениллĕ пĕрлĕхĕсене чăваша куҫарнă чухне кайри сăмаха мала лартмалла: *инженер-строитель* (вырăсла) – *строитель инженер* (чăвашла); писатель-фантаст (вырăсла) – *фантаст писатель* (чăвашла); *роман-этнофентези* (вырăсла) – *этнофентези роман* (чăвашла) т. ыт. те.

Вырăсла тĕслĕх приложениллĕ пулнине икĕ пайĕ те улшăнни тăрăх пĕлме май пур: *девушка-официантка – у девушки-официантки, девушке-официантке, с девушкой-официанткой.*

**201. Паллă тунă анлă сăмах майлашăвĕсен сăмахĕсем епле йĕркепе çыхăннине схемăласа кăтартăр. Компонентсен сăмах йышĕ тăрăх сăмах майлашăвĕсем мĕнле пулнине ăнлантарăр.**

1. **Шурă халатлă тухтăр**а эпĕ чĕререн тав турăм. **Ытлашши савăннипе хыпăнса ӳк**нĕрен хамăн сассăм та чĕтрет. (*Ю. Николаева.)*

2. **Виçĕ хутлă капмар çурт тавра тытса çавăрнă çӳллĕ хӳме ум**не çитсе тăрсан Надьăн чĕри **кăкăртан сиксе тухасла тапма пуçла**рĕ. Шалта **хулăн саслă йытă** вĕрнине илтсен хĕр **каялла тарма та пикен**нĕччĕ, анчах ăна Света тусĕ **çанăран туртса хăй çумне çыпăçтарсахларт**рĕ. Алăкран **кăвак çӳçлĕ патвар ар çын** тухрĕ те **туссене ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпи таранах пăхса тух**рĕ. *(О. Куликова.)* 3. **Пĕркеленчĕк питлĕ, кăвакарнă çӳçлĕ ырханкка арăм** сывлăх сунса типшĕм аллине тăсрĕ. *(Н.Андреев.)*

*** Тĕп компонентне кура анлă сăмах майлашăвĕсене хăш ушкăна кĕртмелле?**

*** Паллă тунă сăмах майлашăвĕсен пайĕсемпе сăмахĕсене çыхăнтаркан мелсене кăтартăр.**

**202. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕсене тупăр та схемисене ӳкерĕр.**

1. Кунĕпе ĕçлесе ывăннă шăм-шак мамăк тӳшек çинче канса вăй илет. 2. Хуллен харлаттарса çывăракан амăшне, тĕлĕкре тем аташса çуйхашакан арăмне тата урайĕнче йĕркипе выртакан юлташĕсене вăратас мар тесе чĕрне вĕççĕн утса пӳртрен тухрĕ Хветĕр. 3. Уçă чӳречерен вĕçсе кĕнĕ çĕрлхи кĕвĕ çепĕççĕн-çепĕççĕн ачашласа Хветĕрĕн чунне лăплантарчĕ. 4. Уйăх тӳпене хирсе саркаланчĕ те, кĕвентеллĕ хĕрĕн витринчен уçланка кĕмĕл шывĕ шапăртатрĕ. *(В. Кузьмин.)* 5. Йăпшак питлĕ, хыткан кĕлеткеллĕ Сергей ытла йăваш кăмăллăччĕ çав. *(Н. Андреев.)*

## 4. Хутсăр предложени

### 4.1. Хутсăр предложенин хутшăнуран килекен тытăмĕ

➤ Шухăш икĕ пайран тăрать: палли тата çĕнни. Çакă предложени тытăмне витĕм кӳрет. Предложенин шухăш мĕн çинчен пынипе тӳр килекен пайне **тема** (Т) теççĕ, çĕннине пĕлтерекеннине **рема** (Р) теме йышăннă. Шухăш енчен пысăк пĕлтерĕшлĕ сăмаха е сăмах ушкăнне **шухăш тĕшши** теççĕ: *Çеçен хир варринче* $^{T/P}$ ***ылтăн туя*** *выртать.* (Г. Тимофеев.) *Эпĕ* $^{T/P}$ *çак симĕс те лăпкăн чӳхенсе ларакан уй çине* ***куç тулли телейпе пăхса*** *тăтăм.* (Н. Петровская.) Темăпа ремăна тата шухăш тĕшшине уйăрмалли ятарлă мелсем пур.

**203. Таблицăна пăхăр та 7-мĕш класра вĕреннине аса илĕр: чăваш чĕлхипе пуплевĕнче темăна ремăран уйăрмалли мĕнле мелсем пур?**

**Темăпа рема ушкăнĕсене уйăрмалли мелсем**

| Темăна ремăран уйăракан мелсем | | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Чĕлхе мелĕсем | Сăмахсен вырăнĕ-йĕрки | *Вăхăт* $^{T/P}$ *ир еннелле сулăнать.*<br>*Сехетрен* $^{T/P}$ *тепĕр пуйăс çитрĕ*<br>*Мачча çинче* $^{T/P}$ *хĕрĕх çăкăр выртать.*<br>*Юлашки çул ĕçлет Эльгеев* $^{P/T}$ *клиникăра.*<br>*Каласам* $^{P/T}$ *мĕн те пулин.* |
| | Ятарлă татăксем: *ак(ă), ав(ă), вара, ĕнтĕ* | ***Акă*** *сĕтел çине* $^{T/P}$ *юлашки тенкĕ выртать.*<br>*Урок ларсан* ***вара*** $^{T/P}$ *Тамара ачасене татах тĕлĕнтерчĕ.*<br>*Эпир* ***ĕнтĕ*** $^{T/P}$ *йывăрлăха хăнăхрăмăр.* |
| | Ятарлă сăмахсем: *вăл, вĕсем, пур, тени, тенĕскер, тесен, пулсан* | *Çемен* ***вăл*** $^{T/P}$ *пĕр тухса кайсан  çур-çур уйăх киле таврăмасть.*<br>*Петĕр* ***пур*** $^{T/P}$ *сетел хушшинче шăпăрт ларать..*<br>*Эс* ***тесен*** $^{T/P}$ *пахча ĕçĕпе пурăнатăн.*<br>*Пурнăç* ***тени*** $^{T/P}$ *çамрăксен вĕресе тăрать.*<br>*Эп* ***тесен*** $^{T/P}$ *сцена çине хăпарма хăяяс çук.* |
| | Сăмаха икĕ хут калани | ***Эсĕ, эсĕ...*** $^{T/P}$ *мана тăван килтех хăртса хăварасшăн-и?* |
| Пуплев мелĕ | Чарăну | *Ывăл* $^{T/P}$ *– ача амăшне шырать.*<br>*Ывăл ача* $^{T/P}$ *– амăшне шырать.* |

➤ Сказуемăй предлжени пуçламăшĕнче е иккĕмĕш вырăнта чухне, тĕпрен илсен, тема малта, рема ун хыççăн вырнаçать те, сăмахсен

**йĕрки прогрессиллĕ** пулать. Ытти чухне сăмахсем **регрессиллĕ** йĕркепе вырнаçаççĕ. Шухăшăн пайĕсем сăмахран е пĕр сăмах ушкăнĕнчен тăрсан темăпа ремăн контекста кура уйăрмалла: 1) *Билет çук. 2) Ялтан эпĕ.* (В. Погильдяков). 3) *Мĕн çитмест? Очерк çитмест.* (В. Пушкин,)

**204. Темăна, ăна уйăракан мелсене тупăр.**

1. Çакăн хыççăн вара кăкăрăмран ăшă чун тухса кайрĕ пуль çав. *(Н. Терентьев.)* 2. Акă эпир кинотеатр тĕлне çитрĕмĕр. *(Н. Петровская.)* 3. Стаканĕ виçĕ тенкĕ. *(В. Погильдяков.)* 4. Этем тени пĕр-пĕр килпетсĕр ĕç тусассăн малтан кăна шикленет. *(Аскольд де Герсо.)* 5. Вĕçленнĕ ĕçе çĕнĕрен тума тивнĕ самантсем те пулкаларĕç малтанхи тапхăрта *(Ю. Исаев.)* 6. Шăпа вăл пĕриншĕн капла, тепиншĕн апла тухать. *(Н. Терентьев.)* 7. Мĕлке пек пытăм эпĕ. *(В. Сепанов.)* 8. Халĕ ĕнтĕ арчана тултарма вак-тĕвек тавар кирлĕ. *(В. Паймен.)* 9. Эпĕ вара куççульленсех каçару ыйтрăм. 10. Манăн эсĕ пур. *(В. Тарават.)* 10. Эсĕ вара эсĕ ху ăна чăвашла пĕр сăмах та пулин калама пултарăн-и? *(Р. Арти.)*

➤ Предложени схемине ÿкернĕ чухне чи малтан рема ушкăнĕнче вырнаçнă сăмахсене, кайран тема ушкăнĕнче вырнаçнисене çыхăнтармалла. Чи юлашки стрелка тема енчен рема енне пырать. Рема тытăмĕнче хăйĕнче çыхăну черечĕ пур: малтан сказуемăй пулакан сăмахсем, унтан скзуемăй умĕнчисем, кайран сказуемăй хыçĕнчисем пĕрлешеççĕ. Кирек епле сăмаха е сăмах ушкăнне хăй енне сказуемăй туртса тăрать:

*Урăх(1)* T|P*ун(2) пек çăмăлттай(3) пулмастăп(4) нихçан(5) та.* (Н. Петровская.)

1 2 3 4 5



*Хамăн(1) опыта(2) илсе(3) уçса(4) памалла(5) пуль* $^{P/T}$ *ку(6) ыйтăва(7).* (В. Степанов.)

1 2 3 4 5 6 7



**205. Сăмахсен йĕрки прогрессиллĕ-и, регрессиллĕ-и? Мĕншĕн? Сăмахсем епле йĕркепе çыхăннине схемăсем ўкерсе ĕнентерĕр.**

1. Ял канлĕ ыйхă ытамĕнче тĕлĕрет. 2. Эпĕ куллен кўлĕ хĕрринелле утрăм. 3. Тепĕр кунне эпир Гальăпа кўлĕ хĕрринче тĕл пултăмăр. 4. Каçхине клуба васкарĕç хĕр туссем. 5. Ик эрне пĕрле пулчĕç çамрăксем. 6. Общежитире пĕр пĕчĕк пўлĕм уйăрса пачĕç çамрăксене. *(Н. Петровская.)* 7. Кĕреймерĕ института ывăлĕ. 9. Ванюш пĕрре анчах тухрĕ ташлама. *(В. Тарават.)* 10. Эпĕ шĕшкĕ тĕмĕсене сирсе шаларан шала кĕретĕп вăрмана. *(Хв. Акивер.)*

➤ Пуплев лару-тăрăвне, контеста кура темăпа рема чикки куçма пултарать:

*Журналистăн(1) çăкăрĕ(2)* $^{T/P}$ *çăмăл(3) та, йывăр(4) та.* (Р. Власова.)

1 2 3 4



*Журналистăн(1)* $^{T/P}$ *– çăкăрĕ(2) çăмăл(3) та, йывăр(4) та.*

1 2 3 4



*Таллеровпа(1) ĕçлеме(2)* $^{Т/Р}$ *çăмăлччĕ(3), кăмăллăччĕ(4).* (В. Кузьмин.)

1 2 3 4



*Таллеровпа(1)* $^{Т/Р}$ *– ĕçлеме(2) çăмăлччĕ(3), кăмăллăччĕ(4).*

1 2 3 4



**206. Педложенисене темăпа рема ушкăнĕсене чалăш йĕрсемпе уйăрса çырса илĕр. Сăмах е сăмах ушкăнĕ юнашар сăмахсемпе мар, хыçалта тăракан сăмахсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине чарăну паллисем лартса кăтартăр.**

1. Журналистăн, писателĕн ĕç сĕтелĕ сăнарлăхпа, çĕнĕ геройсемпе пуян. *(В. Кузьмин.)* 2. Кĕркунне тыр-пула сортланă хыççăн каяш-хывăх юлать. *(Р. Власова.)* 3. Хĕр ача пуçне минтер çине чиксе ĕсĕклесе макăрса ячĕ. *(Ю.Скорцов.)* 4. Поэтăн чылай сăвви çут çанталăкпа тачă çыхăннă. *(В.Кервен.)* 5. Савăк кăмăлпа юрă ĕнĕрлесе çăмăллăн утать Анюта. *(В. Тарават.)*

**207. Таблицăна тишкерĕр, шухăш тĕшшине уйăракан мелсене аса илĕр. Шухăш тĕшшине уйăракан чĕлхе мелĕсенчен пиллĕкĕшĕпе пĕрер тĕслĕх тупса çырăр.**

**Шухăш тĕшши ўкекен сăмахсене уйăракан мелсем**

| Мелсем | | | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| Кирек мĕнле сăмаха е сăмах ушкăнне уйăракан мелсем | Сăмахсен вырăнĕ-йĕрки | | *Ирхине* Т/Р *Вадим Маруçа çавăтса* ***Илюш патне*** *утрĕ.*<br>*Ирхине* Т/Р *Вадим Илюш патне* ***Маруçа çавăтса*** *утрĕ.*<br>*Ирхине* Т/Р *Маруçа çавăтса Илюш патне* ***Вадим*** *утрĕ.*<br>***Утрĕ*** *ирхине Вадим Маруçа çавăтса* Т/Р *Илюш патне.* |
| | ***Акă(ă), ав(ă)*** татăксем | | *Кил хуралçин* ***ак мĕн*** *пĕлмелле.*<br>***Ав çавăнта*** *кĕт эс* Р/Т*мана.* |
| | ***Та(те), кăна, çеç (çех), анчах*** татăксем | | *Мускаврва* Т/Р *экскурсире* ***эп те*** *пултăм.*<br>*Ĕç пирки* Т/Р ***манпа анчах*** *калаç.* |
| | Татăк пĕлтерĕшлĕ ***-ах(-ех)*** аффикс | | *Анне* Т/Р *болницăран сывалса тухат**ех**.*<br>*Хĕллехи кун вăл* Т/Р ***часах*** *тĕттĕмленет.* |
| | Сăмаха темиçе хут калани, сасса вăрăмлатни | | *Çав вăхăтра* Т/Р *ял варринче чăрăш* ***мĕлт-мĕлт*** *çуталчĕ.*<br>*Хăранипе* Т/Р *ўтĕм* ***сў-ў-ў*** *сўлесе илчĕ.* |
| Пĕр-пĕр сăмаха кăна уйăракан мелсем | Пĕлтерĕше кура уйăраканни | Вăхăт пĕлтерĕшлисене уйăракан **-тин** татăк | *Купăстана* Т/Р *кăçал* ***юпа уйăхĕнче тин*** *касрăмăр.* |
| | Сказуемăя кăна уйăракан мелсем | Сказуемăй çумĕнче кăна пулма тивĕçлĕ **-çке, -иç(-ĕç,-ç), -ха, -и(м), -ши(м), çав, ара, вара, çак, вĕт, ĕнтĕ** татăксем | *Концерта хатĕрленме* Т/Р *вăхăт нумай* ***юлмарĕ-çке.***<br>*Эсир* Т/Р *пире пулăшма* ***сăмах патăр-иç!***<br>*Шăллăм* Т/Р *хăйĕн юратнă ĕçĕпе* ***пурăнать-ха.***<br>*Паян* Т/Р *кунĕпе сивĕ* ***тăрать вара.*** |
| | | Çуклă форма | *Сивĕ* Т/Р *кăçал вăраха* ***пырас çук.*** |
| | | **-Ччĕ** аффикслă килĕшў наклоненийĕн форми | *Автобус* Т/Р *чарăнура тата пĕр минут кĕтсе* ***тăринччĕ.*** |
| | | Глаголсене пĕрешкел формăна лартни | *Юнашар чăтлăхран* Т/Р *темле хура йытă* ***сикрĕ тухрĕ.*** |

➤ Шухăш тĕшшине уйăракан чĕлхе мелĕ предложенире пĕрре мар, харăс темиçе те пулма пултарать. Ун пек чухне шухăш тĕшшин вырăнне мелсен шучĕ тăрăх пĕлмелле. Хăш сăмаха е сăмах ушкăнне чи нумай хут палăртнă, шухăш тĕшши ун çине ўкет. Акă *Аннўпе ма йĕркеллĕ калаçаймастăн ара?* (Ю. Скворцов.) предложенире

*йĕркеллĕ* сăмаха сказуемăй умне юнашар лартнипе (пĕр хут) палăртнă, *калаçаймастăн* сказуемăя – çуклă форма аффиксĕпе тата *ара* татăкпа (икĕ хут). Апла, шухăш тĕшши *калаçаймастăн* сăмах çине ӳкет. Енчен те чĕлхе мелĕсен шучĕ пĕрешкел пулсан шухăш тĕшшине интонаципе уйăрса кăтартма тивет. Тĕслĕхрен, *Мĕнрен килет-ши çакă?* (В. Пушкин.) предложенире пусарах каласа е *мĕнрен* сăмаха, е *килет* сăмаха кăтартатмалла.

**208. Предложенисене вуласа тухăр, шухăш тĕшшине уйăракан мелсене тупăр. Вĕсем хăш сăмахсене палăртаççĕ? Палăртнă сăмахсем чăннипех шухăш тĕшши пулаççĕ-и? Мĕншĕн пулнипе пулманнине ĕнентерĕр.**

1. Эпир ыран каятпăр ĕнтĕ. *(В. Трифонова.)* 2. Вĕçрĕ вара çыру Ленинград облаçне. *(В. Тарават.)* 3. Хăвасен хыçĕнче нумай ларса тĕлĕрса кайса тĕлĕк çеç курмастăп-ши эпĕ? *(И. Кошкина.)* 4. Эп сан пайна тĕкĕнместĕп. Ман пай та пур вĕт-ха кунта. *(В. Тарават.)* 5. Урине хăй те ял хĕрарăмĕ пекех тăранса пурăнать-çке. *(Р. Арти.)* 6. Вăрман çулĕ темиçе çухрăмран юпленчĕ. *(В. Степанов.)* 7. Ман умра атте... атте тăрать. *(И. Кошкина.)* 8. Лару-тăру маншăн йăлт ăнланмалла. *(В. Степанов.)* 9. Авăнăн пĕрремĕшĕнче мана шкула ăсатма анне кăна пычĕ. Унччен атте леçекенччĕ. *(И. Кошкина.)*

**209. Хăйсен вырăнĕче тăман татăксене тупăр та предложенисене тӳрлетсе çырăр.**

1. Этем вара хăй мĕн-ха тăвĕ? 2. Мĕншĕн-ха Çеçпĕл Мишши паян кун та халăха хăй пирки аса илтерсех тăрать? 3. Çак сăвва эп санах-çке пиллерĕм. 4. Атя-ха шутласа пăхар. 5. Пуç пӳрне темшĕн-çке ăшăннă-ăшăнман каллех пуç каçăртма пуçлать. 6. Кача пӳрне мĕншĕн-ха хăвăртах ăшăнать? 7. Кун йышши преступление мĕншĕн-ха ирĕксĕрлени теес мар? 8. Ман вĕт-ха пĕтĕмпех типтерлĕ

те йĕркеллĕ пулмалла. 9. Эпир вĕт-ха шкул кĕнекисем ачасен веренес кăмалне çĕклеччĕр тесе тăрăшатпăр.

➤ Шухăш тĕшши ӳкекен сăмахсем, вăл шутра сказуемăй, ялан тенĕ пек, рема тытăмĕнче пулаççĕ. Хăш чух сказуемăй тема тытăмне кĕме пултарать, мĕншĕн тесен шухăш тĕшши тесе ятарлă палăртнă сăмахсем предложени умне тухаççĕ: *Тӳлек*$^{Р/Т}$ *– атте. Анне* ***те***$^{Р/Т}$ *йĕмест.* (В. Погильдяков.) Апла пулин те сăмахсем сказуемăй енне туртăнаççĕ:

*Анне те йĕмест.*

**210. Сказуемăй тема тытăмĕнче юлнă предложенисен рема ушкăнне тупăр, ăна мĕнле мелпе уйăрнине ăнлантарăр.**

1. Вăрçă пуçланчĕ. Яшсене салтака ăсатма пуçларĕç. Аттен те фронта кайма ят тухрĕ. *(«Хресчен сасси».)* 2. 1967 çулта, çурла уйăхĕн вĕçĕнче, Чăваш патшалăх университетне уçассине пĕлтĕмĕр. Эпĕ те ытти çамрăкпа пĕрле университетăн пĕрремĕш студенчĕ пулса тăтăм. *(В. Васильев.)* 3. Пӳрлешкесенчен хăтăлма купăста сĕткенĕ аван. Маска та витĕмлĕ пулăшать. 4. Пилĕке хускатсан пахча ĕçĕ хыççăн компресс тума ан манăр. Ăшăтнă тăварпа та халăхра çĕр-çĕр çул усă кураççĕ. («Хыпар».)

### 4.2. Хутсăр предложенин грамматика тытăмĕ

#### 4.2.1. Предикацилĕх, ăна палăртмалли мелсем

➤ Хутшăну хатĕрĕ пулнă май предложени каланин содержанине чăнлăхпа çыхăнтарать, урăхла каласан, предикаци тăвать: *Эп мотоцикла чартăм* (Н. Петровская.) предложени каланин содержанине иртнĕ вăхăтпа çыхăнтарать. Вăхăтпа çыхăнтаркан мелсем шутне, тĕпрен илсен, вăхăтпа наклонени аффиксĕсем кĕреççĕ. Ку аффиксем çукки предложенин содержанийĕ хальхи вăхăтпа çыхăннине пĕлтерет е контекст вăхăчĕпе тӳр килет: *Ку –*

*хура тул пусси.* (Н. Петровская.) *Эппин, пĕлĕшсем пек пултăмăр эпир. Эсĕ те, эпĕ те.* (В. Сатай.) Чăнлăхпа çыхăну пуррине предикацилĕх теççĕ.

**211. Вуласа тухăр, предложенисен предикацилĕхĕ епле палăрнине ăнлантарăр.**

1. Алена Ульяновскран Шупашкара каякан автобус çине ĕлкĕрчĕ. Янкăр уяр кун. Чун-чĕрере ырă-ырă. Чÿречерен пăхса пынă май, хăйсен чарăнăвне çитнине те сисмерĕ хĕр. Халĕ ĕнтĕ тăван ялне çуран танккамалла. *(В. Тарават.)* 2. Автанассинчен Пурташа тÿррĕн çÿреме сукмак пур. Вăл пысăках мар вĕтлĕх урлă каçать. Вĕтлĕх хĕрринче Герасим Федотович чарăнса тăчĕ. *(Н Мартынов.)* 3. Геогий... Ырă, анчах кăра каччă. Çырать, çырать Тамара патне çырусем, анчах хĕр хыпарне ниепле те кĕтсе илймест. 4. Утă уйăхĕн 17-мĕшĕ. Аннен черетлĕ çуралнă кунĕ. Июлĕн 17-мĕшĕ вырсарни кунччĕ. Çав кун урлă каçса тепĕр çулталăка ярса пусас темен ĕнтĕ аннем. *(Хв. Коновалов.)*

**212. Паян куна сăнлакан 5–6 предложениллĕ текст çырăр та предикацилĕнĕх мĕнле мелсемпе палăрнине ăнлантарăр.**

### 4.2.2. Предложени членĕсем

➤ Грамматика тытăмне уçса панă май предложение членсем тăрăх пăхса тухас йăла çирĕпленнĕ.

**213. Таблицăна пăхса тухăр та хутсăр предложенире мĕнле-мĕнле членсем уйăрнине аса илĕр.**

**Предложени членĕсем**

| Ушкăн | | Çыхăну | Пĕл-терĕш | Ыйту | Тĕслĕх |
|---|---|---|---|---|---|
| Тĕп членсем | Под-ле-жа-щи | Сказуемăй ушкăнĕпе çыхăнать | Пĕр-пĕр ĕçĕн е паллăн субъекчĕ | Кам калаçать (çырать)? Мĕн курă-нать (ÿсет)? | ***Ача*** *калаçать.* *Пĕчĕк* ***ача*** *чăвашла калаçать.* *Паян кунĕпех* ***хĕвел*** *пăхать.* ***Хĕвел*** *паян кунĕпех пăхать* *Ăшă* ***хĕвел*** *паян кунĕпех пăхать.* ***Çанталăк*** *сивĕ мар.* |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Сказуемай | Сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене пăхăнтарать | Предикацилĕх | Çын мĕн тăвать? Япала мĕн тăвать? | *Манăн пичче ялта* ***пурăнать.***<br>*Эпĕ вун пĕрмĕш класра* ***вĕренетĕп.***<br>*Тăван ен малалла* ***аталанать****.*<br>*Çӳçĕ аннен* ***вăрăмччĕ.*** |
| Кĕçĕн членсем | Определени | Япала ятне пăхăнать | Япала палли | Мĕнле çын (япала)? | *Смартфона* ***смс*** *çыру килчĕ.*<br>*Эп* ***сирĕн*** *пата* ***пĕр*** *ĕçпе çитрĕм.*<br>***Минсулу*** *пике ултава чăтайми пулса çитет. Юлан ут сасси илтĕнсе кайрĕ.* |
| | Дополнени | Япала ячĕсĕр пуçне ытти пуплев пайĕсем | Ĕç объекчĕ | Мĕн вулать? Мĕн ӳкерет? | ***Пире*** *уява йышăнсамăр.*<br>*Эс* ***мĕн*** *калаçатăн?*<br>*Наçтук* ***вĕрӳ-сурупа*** *аппаланнă.*<br>*Художник пысăк* ***картина*** *ӳкерет.*<br>*Коля* ***самолетпа*** *вĕçме ĕмĕтленет.* |
| | | | Ĕç е пахалăх палли | Мĕнле ӳсет? Мĕнле лайăх? | *Çĕр çырли* ***хăвăрт*** *пиçет.*<br>*Пичче* ***шухăшласа*** *калаçать.*<br>*Эпĕ хама* ***ача пек*** *туйрăм.*<br>*Лида –* ***питĕ*** *лайăх хĕр.* |
| | Обстоятельство | Япала ячĕсĕр пуçне ытти пуплев пайĕсем | Вăхăт | Хăçан килет (ӳсет)? | ***Каçхине*** *хирург сан чӗречӗ умĕнче тăчĕ. Çумăр* ***чылайранпа*** *çумарĕ.* ***Кино хыççăн*** *ташă пуçланчĕ.* |
| | | | Вырăн | Ăçта пурăнать (ӳсет)**?** | *Эпĕ çĕрĕпех курăк* ***çинче*** *лартăм.*<br>*Мотоцикла* ***гаража*** *лартрăм.*<br>*Эпир кил* ***еннелле*** *утрăмăр.* |
| | | | Пирке | Мĕн пирки (мĕне пула) чирленĕ (ӳсмест)? | *Çынна* ***вĕреннĕшĕн*** *çеç юратаççĕ-и?*<br>*Сивĕ шыв* ***ĕçнипе*** *пыр шыçрĕ.*<br>***Йывăр пирки*** *мишука илмерĕм.*<br>*Кунĕпе ĕçлесе* ***ывăннăран*** *ура утайми пулчĕ.* |
| | | | Тĕллев | Мĕн тĕллевпе килет (тĕпчет)? | *Йăмăк парикмахерские çӳç* ***кăтралатма*** *кайрĕ.*<br>*Эп сăмах* ***тапратасшăн*** *çăвар уçрăм.* |
| | | | Услови | Мĕнле условире пулать? | ***Пулăшсан*** *– тем тума та пудать* ***Ӳркенмесен*** *ĕçле.* |
| | | | Хирĕçлев | Мĕне пăхмасăр ӳсет (çӳрет)? | ***Йывăр пулин те*** *мишука хăвармарăм.*<br>***Чăваш пулин те*** *чăвашла калаçаймастăп.* |

➤ Членсем тăрăх пăхса тухни сăмахсен чăн çыхăнăвĕпе тӳр килсен те, килмесен пултарать. Акă *Урамра(1) чашлаттарса(2) çумăр (3) çăвать* (4). (В. Тарават.) предложенире сăмахсен чăн çыхăнăвĕпе *мĕн çăвать?* ыйту анчах тӳр килет, ытти ыйтусем *(мĕнле*

*çăвать? ăçта çăвать?)* – тӳр килмеççĕ. Ыйту парсан *чашлаттарса* сăмах *çăвать* сказуемăйпа *çумăр* сăмах урлă сиксе, *урамра* сăмах *чашлаттарса* тата *çумăр* сăмахсем урлă сиксе каçса çыхăнаççĕ пек туйăнать. Тĕрĕссипе сăмахсем урлă-пирлĕ çыхăнмаççĕ – çыхăнăва çакнашкал черетпе кĕреççĕ:




**214. Вуласа тухăр. Предложенисене членсем тăрăх тишкерни сăмахсен чăн çыхăнăвĕпе килĕшсе тăманнине ĕнентерĕр, тĕп тата кĕçĕн членсене тупса ушкăнне калăр.**

1. Çуллахи çĕр кĕске. Акă хĕвел тухăçĕнчен шурăм çути ӳкрĕ. Эпĕ вара çывăрмасăрах çĕр ирттеретĕп. Шухăшăм çаплах Тансылыу тавра арпашăнса вĕçет. 2. Шурăм çути тӳпене карса илнĕ. Акă шăпчăк пĕр çаврăм юррине шăрантарчĕ. Хирĕç тепри сас пачĕ. Автансем ăмăртмалла авăтма пуçларĕç. *(Николай Иванов.)* 3. Шухăш ĕренкипе чăлханса выртнă хыççăн лĕпленме лартнă чей сивĕнсех кайрĕ. Алăкра шăнкăрав калаçса кайрĕ. Уçса янă-яман Аслан пӳлĕмне Кристинăпа Ирина кĕрсе тăчĕç. (Хв. Коновалов.)

**215. Сăмахсем хушшине тире лартни вырăс чĕлхин витĕмĕпе пулнă грамматика йăнăшĕ иккенне ĕнентерĕр. Предложенисене чăвашла тĕрĕс çырса кăтартăр.**

1. Каярах тин пĕлтĕм: хайхи хĕрарăм–библиотекарь интернат директорĕ патне çитнĕ, ман çинчен каласа панă. 2.Юрий Сементерĕн «Хĕвелле шăраннă хĕлĕх» хайлав–аса илĕвĕ вулакансене

усă пулассăн туйăнать. 3. 2019 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче кăвар чĕреллĕ поэт–ентешĕмĕр Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. 4.Тĕнче вара вăл – Çĕр чăмăрĕ кăна мар, Хĕвел те, Уйăх та, уçлăха вырнаçнă çăлтăр–планетăсем те.

**216. Предложенисен тĕп членĕсене пăхăр. Вĕсем хăш падеж формине йышăннă?**

1. Мускав – Раççей патшалăхĕн тĕп хули. 2. Ман тĕллев – врач специальноçне алла илесси. 3. Эсĕ – 10-мĕш класра вĕренекен. 4. Регина пиччĕшĕ – çар службинче. 5. Украина художникĕсем – Патăрьел районĕнче.

**217. Предложенисен хăш вариантĕ чăн чăвашла? Йăнăш – вырăс чĕлхинче усă куракан мĕнле йышши предложенисен ĕлкипе пулать?**

1. Шупашкар илемĕ – çурчĕсенче. – Шупашкар илемĕ – çурчĕсем. 2. Учитель сăнарĕ – чăваш литературинче. – Учителĕн литература хайлавĕсенче кăтартнă сăнарĕ. 3. Цирк номерĕн вăрттăнлăхĕ мĕнре? – Цирк номерĕн вăрттăнлăхĕ мĕн? 4. Инкек сăлтавĕ газпа усă курмалли йĕркене пĕснинче. – Инкек сăлтавĕ газпа усă курмалли йĕркене пĕсни. 5. Авари сăлтавĕ – çул çӳрев правилисене пăхăнманнинче. – Авари сăлтавĕ – çул çӳрев правилисене пăхăнманни.

**4.2.2.1. Тĕп членсăр предложенисем**

**218. Таблицăна пăхăр та унашкал таблицăпа 8-мĕш класра ĕçленине аса илĕр. Тĕп членсем пуррипе çуккине кура хутсăр предложенисен хăш-хăш ушкăнне уйăрмалла? Уйăрмалли мĕнле паллăсем пур? Тĕп член çуккин сăлтавне пĕлни, сирĕн шухăшăрпа, мĕн тума кирлĕ?**

**Тĕп членсăр предложенисем**

| Предложени | Предложени паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|

| ушкӑнӗсем | Тӗп член ҫукки епле палӑрать | Тӗп член ҫукки, ун сӑлтавӗ, саплашу мелӗ | |
|---|---|---|---|
| Подлежащисӗр предложенисем | Подлежащи ҫук, кирлӗ те мар | Ӗҫ тӑваканни сказуемӑйӑн сӑпатлӑ форминчен паллӑ | *Сарӑ кайӑк пулӑттӑм, ялан вӗҫсе килӗттӗм. Кӑмӑлпа юрайманнине вӑйпа юраймӑн.* |
| | | Ӗҫ тӑваканни чӗнӳрен паллӑ | *Ан кай, кӑвакал, шыв хӗрне.* |
| | | Тӗп вырӑна ӗҫ тухса тӑрать | *Пысӑккинчен пысӑкрах ыйтаҫҫӗ. Васкаканӑн – пырне ларнӑ.* |
| | Подлежащи ҫук, пулма та пултараймасть | Сказуемӑя пӗрлшекен сӑмахсемпе формӑсем: *-ас(-ес) пул* *-ас(-ес) кил* *-ма-лла(-ме-лле) пул* *-са(-се) пул* *-ма(-ме) тив* | *Санӑн сӑвӑ вӗренес пулать. Манӑн – вырӑн ҫинчен тӑрас килмест. Походра икӗ кун ирттермелле пулать. Пӗр вӑхӑтра икӗ ӗҫ туса пулмасть. Ачасен зоопаркран упа ҫури курмасӑрах таврӑнма тиврӗ.* |
| | Подлежащи пулма пултарать, анчах ӑна калама кирлӗ мар | Сказуемӑя пӗрлешекен сӑмахсемпе формӑсем: *-ас(-ес)* *-ас(-ес) ҫук* *- ма-лла(-ме-лле)* *-ма-лла(-ме-лле) мар* *-ма(-ме) ҫук* | *Хушнине вӑхӑтра тӑвасчӗ. Ку ӗҫе виҫ кунта пӗтерес ҫук. Кашнин пуҫарулла пулмалла. Пухура шӑпӑрт лармалла мар. Хитрене турилккепе лартма ҫук.* |
| | Тавралӑх лару-тӑрӑвне уҫса пани | | *Хӑвӑрт ӑшӑтса пӑрахать. Тӗттӗм пула пуҫларӗ. Сивӗтнӗ. Уйра шӑп. Чӑтма ҫук пӑчӑ.* |
| | Ҫын кӑмӑл-туйӑмне уҫса пани | | *Чӗрере лӑпкӑ мар. Ҫӳҫентерет.* |
| Сказуемӑйсӑр предложенисем | Сказуемӑй ҫук, кирлӗ те мар | Предложени содержанийӗ хальхи вӑхӑтпа ҫыхӑнать | *Шурӑ уй. Лупашка. Пӗччен йывӑҫ. Куҫ пек тӑрӑ ҫӑл шывӗ. Шкул умӗнче – паттӑрсене асӑнса лартнӑ палӑк*.* |
| Тӗп членсем | Подлежащи те, | Каланин | *Илеме* Т/Р – |

| | | | |
|---|---|---|---|
| иккĕшĕ те çук предложенисем | сказуемăй та çук, кирлĕ те мар | содержанийĕ хальхи вăхăтпа çыхăнать | *пăхса савăнма, ăса* T/P *– пурнăç пурăнма. Иккĕн* T/P *– ĕçлеме, пĕччен* T/P *– канма.* |

* *Палăк – администраци çурчĕ умĕнче* йышши предложенисене икĕ тĕп членлă предложенисен шутне кĕртмелле: *палăк* – подлежащи, *умĕнче* – сказуемăй.

**219. Тĕп членсăр предложенисене тупăр, хăш ушкăна кĕнине калăр, ку е вăл ушкăна кĕнин сăлтавне ĕнентерĕр.**

1. Çутăлчĕ. Эпĕ чӳрече каррине хăрах алăпа сирсе чӳречерен пăхрăм. 2. Хама вĕрентнĕ учительницăна манăн ăшă сăмахсемпе йăпатас килчĕ. 3 Сирĕн утма юрамасть.

4. Алăка тепĕр хут шаккарĕç. Гена мана пукан çине лартса алăк патне ыткăнчĕ.

– Ăçта каятăн? – персе ятăм эпĕ.

5. Тулă уйĕ. Питĕ анлă вăл. 6. Мотоцикла лаççа лартрăм та кӳлĕ хĕррине çăвăнма утрăм. 7. Салам уй-хир пикине! 8. Çынна вĕреннĕшĕн çеç юратаççĕ-и? 9. Мана питĕ салху пулса кайрĕ. 10. Çынна вăйпа, ӳкĕтленипе савтарма та, сивĕтме те çук. 11. Питĕ ывăнтăн пулĕ, хĕрĕм. 12. Кивĕ комбайнăн юрăхсăр пайĕсене çĕннисемпе улăштармалла. *(Н. Петровская.)* 13. Тулта пăч тĕттĕм. Хунарсем тунсăхлăн çутатаççĕ. *(О.Васильева.)* 14. Пĕррехинче килте сысна пусрĕç. *(Н. Андреев.)* 15. Пирĕн те шыв ĕçес килет. Атя чей вĕретер. *(В. Степанов.)* 16. Чи малтанах – салам. *(Хв. Коновалов.)*

**4.2.2.2. Пĕр йышши членлă предложенисем**

**220. Пĕр йышши членсем пĕр йышши маррисенчен мĕн енчен уйрăлса тăнине аса илĕр. Пĕр йыыши членсене тупăр, хăш ушкăна (тĕп членсем-и, кĕçĕн членсем-и?) кĕнине калăр.**

1. Черешня, абрикос, персик юратса пăхсан çимĕç параççĕ. 2. Садра хура хурлăхан, йĕплĕ хурлăхан, темиçе тĕрлĕ иçĕм çырли, улмуççи, груша ... пур. 3. Ертӳçĕн хăйĕн те тавра курăма, ăс-хакăла ӳстерсех, аталантарсах пымалла. 4. Эпĕ Чĕмпĕр педагогика университетĕнче вĕрентĕм, биолог географ профессине алла илтĕм. *(Р. Власова.)* 5. Тарăху, юратупа ырату – пурте пĕр пулса ман кăкăра тăпăлтарчĕç. *(Н. Петровская.)* 6. Амăшĕ Саххара шкула яман, килте ĕçлеме хистемен, ачаш пăхса ӳстернĕ. 7. Арăмĕ вара çамрăк та, хитре те. 8. *(В. Паймен.)* 8. Сăр тата Хусан хӳтĕлев тăрăхĕсене тăвакансене эп паттăрсем шутне кĕртетĕп. *(В. Краснов.)* 9.Эпĕ те саншăн çавăн пекех пулăп: юлташу та, аçу та, упăшку та, тăвану та, ĕмĕтӳ те – пурте, пурте. *(Хв. Акивер.)*

* **Сыпăнуллă çыхăнура тăракан сăмахсемпе пĕрлĕхсене схемăра епле кăтартмаллине аса илĕр.** ***Эпĕ Чĕмпĕр педагогика университетĕнче вĕрентĕм, биолог географ профессине алла илтĕм*** **предложенин схемине ӳкерсе пăхăр. Членсем тăрăх тишкерĕр. Тишкерӳ сăмахсен чăн çыхăнăвĕпе тӳр килет-и, килмест-и? Мĕншĕн?**

** **Тĕслĕхсенче пĕр йышши членсене кура чарăну палли мĕншĕн лартнипе лартманнине ăнлантарăр.**

**o** ***«Предложени членĕсем» темăна вĕреннĕ хыççăн аса илмелли ыйтусене ĕçсем***

1. Членсем тăрăх тишкерни предложенин чăн тытăмне туллин уçса пама мĕншĕн май памасть?
2. Предложенин мĕнле-мĕнле членĕсене уйăраççĕ?
3. Членсем пĕр йышши пулнине мĕн кăтартать?

**218. Предложенисене членсем тăрăх пăхса тухăр.**

Хапха умне çитсен мана хирĕç Надюша ыткăнса тухрĕ. Ăна курсан эпĕ куçа чарсах пăрахрăм. Сарă пурçăн çӳçне хĕр çутă шăрçапа çыхса лартнă. Пуç тăрринчи çаврака кăшăл ăшĕнчен çӳçĕ

çӳлелле тăрмакаланса тăрать. Вăл мана çӳлтен вырнă ыраш хăмăлне аса илтерчĕ. Хура сăрпа пĕкĕ пек авăнса тăмалла сăрланă куç харшийĕ хĕр çамкине икке пайлать. *(Н. Петровская.)*

***Членсем тăрăх тишкернин тĕслĕхĕ:***

*Сарă кĕпе тăхăннă Надя хĕвел çутинче хĕвел хĕрĕ евĕр курăнать.*

Ку предложени – икĕ тĕп членлă: подлежащи – *Надя* (пайăр ят), сказуемăй – *курăнать* (глаголăн сăпатлă форми).

Мĕнле курăнать? – *хĕрĕ (евĕр)* – обстоятельство, ĕç паллине евĕрлесе пĕлтерет, япала ячĕ (*евĕр* хыç сăмах, член шутланмасть).

Мĕнле хĕр? (мĕн хĕрĕ?) – *хĕвел* – определени, япала хуçине пĕлтерет, япала ячĕ.

Ăçта курăнать? – *çутинче* – обстоятельство, ĕç вырăнне пĕлтерет, япала ячĕ пĕлтерĕшĕпе усă курнă паллă ячĕ.

Мĕн çутинче – *хĕвел* – определени, япала хуçине пĕлтерет, япала ячĕ.

Мĕнле Надя? – *тăхăннă* – определени, япала паллине пĕлтерет, глаголăн иртнĕ причасти форми.

Мĕн тăхăннă? – *кĕпе* – допонени, ĕç объектне пĕлтерет, япала ячĕ.

Мĕнле кĕпе? – *сарă* – определени, япала паллине пĕлтерет, паллă ячĕ.

#### 4.2.3. Тулли мар предложенисем

➤ Тулли мар прдложенисем текст аталаннă май унччченхи сăмахсене каламасăр хăварнипе пулаççĕ. Тĕл пуласса диалогра та, монологра та тĕл пулаççĕ: 1) – *Шăккалатлă канфет кирлĕ-и?* – *Пар.* (Н. Андреев.) 2) Федя, эсĕ миçемĕш числора килетĕн? 30-мĕшĕнче-и, 1-мĕшĕнче-и? *(Хв. Коновалов.)*

**219. Текстсене вуласа тухăр. Предложенисем тулли пулманни мĕнрен килет? Тулли мар предложенисем хутшăнăва йывăрлатаççĕ-и, çăмăллатаççĕ-и?**

1. – Ман вара техникума пăрахма тивет.

– Мĕ-ĕн? Мĕнле пăрахма? Мĕншĕн?

– Йывăр ман пĕр стипендипе пурăнма. Анне чирлерĕ. Аппа ĕçлемест. Ачапа ларать. *(В. Тарават.)* 2. Эпир пĕр-пĕриншĕн текех никам та мар. Ют çынсем. *(Е. Лукина.)* 3. – Мĕн ку? Арча. Шалта мĕн-ши? – Мăйăр-ши? Тĕшшине пĕлме пулĕ-ши? – Флешка мар-ши? – Калаçакан кĕнеке! *(Н. Ишентей.)*

5. – Эсĕ миçе çулта?

– Раштавра çиччĕ тултаратăп.

– Мĕн ятлă?

– Сантăр. *(А. Талвир.)*

*6.* Витере икĕ лаша канăçсăррăн кĕçенсе тăрать. Виççĕмĕшĕ çук. Ăçта хура çĕлен пек хура ăйăр? Ăçта? *(Л. Сачкова.)*

➤ Предложени тулли маррине предложенин иккĕмĕш пайĕнче кăна тире лартса палăртаççĕ: *Çулталăкра цесаркăран çĕре яхăн çăмарта туса илме пулать, шурă пĕсехеоинчен – çĕр çирĕме яхăн.* («Хыпар».) *Куç хитрине юратать, тута – тутлине.* (Н. Андреев.) Пĕрремĕш пай тулли маррине паллă тумаççĕ: *Çулталăкра цесаркăран çĕре яхăн çăмарта, шурă пĕсехеоинчен – çĕр çирĕме яхăн туса илме пулать. Куç хитрине, тута тутлине юратать.*

**220. Предложенисене чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр.**

1. Пахча чăххин аçи пуçне тăвата–ултă ама, тепĕр чухне 8 таранччен усрама пулать. (Пахча чăххин аçи пуçне тăвата–ултă ама усрама пулать, тепĕр чухне 8 таранччен.) 2. Тивĕçлĕ канăва тухиччен Матрена Васильевна ултă çул страховани агентĕнче, 14 çул

ял канашĕн бухгалтерĕнче ĕçленĕ. (Тивĕçлĕ канăва тухиччен Матрена Васильевна ултă çул страховани агентĕнче ĕçленĕ, 14 çул ял канашĕн бухгалтерĕнче.)

### 4.2.4. Уйрăмлатнă сăмахсем

**221. Таблицăсене тишкерĕр. Аса илĕр: сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене мĕн тĕллевпе уйрăмлатаççĕ? Уйрăмлатманни мĕне пĕлтерет?**

**Уйрăмлатнă сăмахсем**

| №№ | Уйрăмлату тĕллевĕ | Тĕслĕхсем | Уйрăмлатманнин тĕллевĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсем хăйсем хыççăн юнашар тăракан сăмахсемпе мар, предложенин ытти сăмахĕсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартасси | *Малтан, атте-анне килĕнче, тĕпкĕче юлнă шăллămпа пурăнтăм. Выляса ывăннăскер, йăмăкăм выртрĕ те часах ыйха путрĕ.* | Сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсем хăйсем хыççăн юнашар тăракан сăмахсемпе çыхăннине кăтартасси. | *Малтан, атте-анне килĕнче тĕпкĕче юлнă шăллămпа пурăнтăм. Выляса ывăннă йăмăкăм выртрĕ те часах ыйха путрĕ.* |
| 2. | Шухăш пусăмĕ сулахаялла куçнине кăтартасси | ***Манăн йăмăк хĕрĕ,*** *Ира, Шупашкарта учителе вĕренет.* ***Манăн йăмăк хĕрĕ*** *(Ира) Шупашкарта учителе вĕренет.* ***Манăн йăмăк хĕрĕ*** *– Ира – Шупашкарта учителе вĕренет.* ***Манăн йăмăк хĕрĕ*** *– Ира Шупашкарта учителе вĕренет. Пĕрремĕш урок* ***ирхине,*** *сакăр сехет çурăра, пуçланать. Пĕрремĕш урок* ***ирхине*** *(сакăр сехет* | Шухăш пусăмĕ сулахайран сылтăмалла куçнине кăтартасси | *Манăн йăмăк хĕрĕ* ***Ира*** *Шупашкарта учителе вĕренет. Пĕрремĕш урок ирхине* ***сакăр сехет çурăра*** *пуçланать.* |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | *çурăра) пуçланать.* *Пĕрремĕш урок ирхине – сакăр сехет çурăра – пуçланать.* *Пĕрремĕш урок* ***ирхине*** *– сакăр сехет çурăра пуçланать.* | | |
| 3. | Сăмахсен çыхăнăвĕ уçăмсăрла-нассинчен асăрхаттару тăвасси | *Иринĕн шăллĕ пур. Вăл, лайăх специалист, пысăк фирмăра ĕçлет.* *Иринĕн шăллĕ пур. Вăл (лайăх специалист) пысăк фирмăра ĕçлет.* *Иринĕн шăллĕ пур. Вăл – лайăх специалист – пысăк фирмăра ĕçлет.* | Сăмахсен гамматика пĕлтерĕшне уăштарасси | *Иринĕн шăллĕ пур. Вăл лайăх специалист, пысăк фирмăра ĕçлет.* *Иринĕн шăллĕ пур. Вăл – лайăх специалист, пысăк фирмăра ĕçлет.* |

➤ Уйрăмлату сăмахсен çыхăнăвне витĕм кӳни, тĕпрен илсен, схемăсенче палăрать:

*Малтан(1), атте-анне(2) килĕнче(3), тĕпкĕче(4) юлнă(5) шăллăмпа(6) пурăнтăм(7)*




*Малтан(1), атте-анне(2) килĕнче(3) тĕпкĕче(4) юлнă(5) шăллăмпа(6) пурăнтăм(7).*




***Манăн(1) йăмăк(2) хĕрĕ(3),*** *Ира(4), Шупашкарта(5) учителе(6) вĕренет(7).*




***Манăн(1) йăмăк(2) хĕрĕ(3) Ира****(4) Шупашкарта(5) учителе(6) вĕренет(7).*




*Пĕрремĕш(1) урок(2)* ***ирхине(3),*** *сакăр(4) сехет(5) çурăра(6), пуçланать(7)* тата *Пĕрремĕш(1) урок(2) ирхине(3)* ***сакăр(4) сехет(5) çурăра(6)*** *пуçланать(7* йышши предложенисен шухăш акценчĕ куçни калаçура кăна палăрать, сăмахсен грамматика çыхăнăвĕ улшăнмасть:




*Вăл, лайăх специалист, пысăк фирмăра ĕçлет* тата *Вăл лайăх специалист, пысăк фирмăра ĕçлет* предложенисен грамматика тытăмĕ пачах расна. Ку схемăсене те витĕм кӳрет:

*Вăл(1), лайăх(2) специалист(3), пысăк(4) фирмăра(5) ĕçлет(6).*




*Вăл(1) лайăх(2) специалист(3), пысăк(4) фирмăра(5) ĕçлет(6).*




**222. Чарăну паллисене тупăр та вĕсенчен хăшне уйрăмлату тĕллевĕпе лартнине ăнлантарăр. Чарăну паллисене лартмасан сăмахсен çыхăнăвĕнче епле улшăну пулассине ĕнентерĕр. Улшăну темăпа рема чиккине витĕм кӳнĕ тĕслĕхсене тишкерĕр.**

1. Ирхине, самаях пысăкланнă ушкăнпа Кăлаткă ялне çул тытрăмăр. *(Н. Ларионов.)* 2. Интернетра, «Энежъ» хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарас тесе пысăк тимлĕх уйăратпăр. *(«Хыпар».)* 3. Апрелĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса, пушара хирĕçле режим кĕртнине пăхмасăр çынсем типĕ курăк, çӳп-çап çунтараççĕ. *(«Хресчен сасси».)* 4. Штабран, таврăнмалли çинчен хушу илтĕмĕр. *(Н. Богданов.)* 5. Леш енче, 30 çухрăмра, нимĕç. 6. Шолоховсен станцине, Вешенскоя, фашистсем бомбăласа çĕмĕрнĕ *(В. Бараев.)* 7. Телефон çывăхнех хĕсĕнсе тăнăскер, Тимук сĕтел хушшинче ларакан врачпа Маринерен маларах сăмах хушма ĕлкĕрчĕ. *(Н. Ишентей.)* 8. Самар хулин пĕр купăсçи, Владимир Левуков, Геннадий Заволокина килĕшсе каять. *(«Тăван Атăл».)* 9. Физик – Владимир Андреевич Христофоров – мана питĕ юрататчĕ. *(Ю. Артемьев.)*

*** 1-мĕшпе 4-мĕш предложенисен чарăну паллиллĕ тата чарăну паллисĕр вариантĕсен схемисене ӳкерĕр.**

### 4.2.5. Чĕнӳсем

➤ Чĕнӳсем вĕсем – калакан çынна кам итлемеллине кăтартакан сăмахсем. Вĕсене е запятой лартса уйрăмлатаççĕ е уйрăм предложени пек кăшкăру палли лартса кăтартаççĕ: *Павăл, мĕншĕн эсĕ хуйхăллă пек паян?* (Г. Комиссаров.) *Хаклă тусăм! Эсир лайăх. Эсир – ман хитре те чаплă чунлă тусăм.* (Çеçпĕл М.)

**223. Чĕнӳсене тупăр та чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.**

1. Эх, анне, анне! Мĕн тума кăна эсĕ капла хăтланатăн-ши? *(И. Юркин.)* 2. – Иванов, тапранатпăр! – хушрĕ Иван Матвеевич çамрăк водителе. *(А. Хмыт.)* 3. Санăн сăмаху тĕрĕс, аслă князь: Хусан княçĕсем кӳрентерме пуçларĕç. *(К. Турхан.)* 4. Общежити пулать, апай. Маншăн ан кулян. *(А. Артемьев.)* 5. – Айван эс,

Тамара, – терĕ Валя. *(Ю. Скворцов.)* 6. Асатте, çенĕхре пушă михĕ выртать. *(Н.Терентьев.)* 7. Ванюк! Ванюк! Ăçта эсĕ? Илтетĕн-и хăвăн юратнă юлташна? *(Ф. Павлов.)*

**4.2.6. Кӳртĕм сăмахлă предложенисемпе кӳртĕм предложенисем**

➤ Кӳртĕм сăмахсемпе кӳртĕм предложенисем, тĕпрен илсен, предложенин содержанине калаканни епле хакланине, текстпа епле çыхăнтарса пынине тата хушма епле хыпар пуррине пĕлтереççĕ: *Çăлтăрсем пирĕн малашлăха çутатма пуçтараннă.* ***Эппин,*** *эпир телейлĕ пулăпăр.* (Е Лукина.) *Армет Рахим ял* ***(ăна Йĕкенпуç çыннисем Мӳçкел теççĕ)*** *ачи Рахман та хăй вăхăтĕнче ун чухнехи чăвашсен илемлĕх тĕнчине курса ӳснĕ ĕнтĕ.* (Н. Иванов.)

**224. Таблицăна пăхса тухăр. Кӳртĕм сăмахсене тупăр, пĕлтерĕш тата интонаци ушкăнĕсене аса илĕр, чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене асăрхăр.**

**Кӳртĕм сăмахсем**

| №<br>№ | Кӳртĕм сăмахсен интонацирен килекен ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сăмахсемпе пĕрлешсе каяканнисем | *Эс мана каçар* ***тархасшăн.***<br>*Пулнă* ***тет*** *Улăп ятлă çын.* |
| 2. | Сăмахсенчен уйрăм тăраканнисем | ***Апла,*** *апатланса илер-ха.*<br>*Ира,* ***ахăртне,*** *пире иртенпе кĕтет.*<br>***Тархасшăн,*** *каçар.* |

**225. Кӳртĕм сăмахсем ăçта тăнине сăнăр, ытти сăмахсемпе интонаци енчен пĕрлешсе кайнипе кайманнине шута илĕр. Сăнани тăрăх пунктуаци правили шухăшласа кăларăр.**

1. Шалтан сасă паракан пулмарĕ пулас. 2. Юлашкинчен хĕрарăм вăйсăрланса, халран кайса çитрĕ пулмалла. 3. Чăнах та, Ванюшка вилнĕ пекех пулнă çав. *(Л. Агаков.)* 4. Çапла, çывăхах çитмелле Миккан амбразура патне. 5. Ара, тĕлли-паллисĕр епле пуплесшĕн-ха? *(В. Алентей.)* 6. Кĕскен каласан, юмахĕсем çапларах.

*(В. Паймен.)* 7. Француз чӗлхи туртӑмӗ, паллах, ыттисенчен вӑйлӑрах. 8. 1967 ҫултаччӗ пулас, Константин Петров наука кандидачӗн дисертацине хӳтӗлерӗ. 9. Хлебников маншӑн тӗлӗнмелле тӗслӗх пулчӗ, ҫав шутра ҫынлӑх енчен те. 10. Писательсен союзӗ, ман шутпа, клуб пек тӑрса юлчӗ. *(Ю. Артемьев.)* 11. Тӗл пулусенче пирӗн калаҫу, тӗпрен илсен, ытларах чӑвашлӑх, чӑваш чунӗн нуши-терчӗ таврахчӗ ӗнтӗ. *(А. Тарасов.)* 12. Шел пулин те, Геогий Ирхи, Анатолий Ыхра йышши поэтсен пултарулӑхне тӗпчеменпе пӗрех. *(В. Кервен.)* 13. Тепӗр тесен, Раҫҫейре, вӗреннӗ ҫынсен (интеллигенцин) сийӗ ҫухе те ҫав тери черченкӗ пулнӑ-ха. *(Ю. Артемьев.)* 14. Ҫывӑрса каяйманнипе нушаланатӑр-и? Апла, сирӗн те ҫу уйӑхӗнче пухнӑ пыла тутанса пӑхмала. *(Р. Власова.)* 15. Концерт тенӗрен, Республика кунне халалланӑ пысӑк концерт Константин Иванов ячӗллӗ драма театрӗ умӗнче пулать. *(«Хыпар».)*

**226. Тӗрӗслӗр: эсир шухӑшласа тупнӑ правилӑсем содержанийӗпе таблицӑра панӑ правилӑсемпе пӗр килеҫҫӗ-и?**

**Кӳртӗм сӑмахсене чарӑну паллисемпе кӑтартасси**

| №№ | Правилӑсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сказуемӑй хыҫҫӑн унпа юнашар тӑракан кӳртӗм сӑмахсене запятойпа уйӑрмлатмалла мар – ыттисене уйӑрмлатмалла. | *Эпӗ хамӑр килте ҫиччӗмӗш ача пулнӑ* ***тет иккен.*** ***Ара,*** *мӗн пулчӗ пире?* *Ҫамрӑк чух ӳкнӗ пулсассӑн,* ***паллах,*** *эп урӑх тӑраяс ҫукчӗ.* |
| 2. | Пӗр-пӗр кӗҫӗн членпа ҫеҫ ҫыхӑнакан кӳртӗм сӑмахсене предложенин | *Мана,* ***пӗчченрен пуль,*** *тӳсме ҫук кичем пула пуҫларӗ.* ***Салтак тенӗрен,*** *кӑҫал ман* |

| | | |
|---|---|---|
| | ытти пайӗнчен ҫав кӗҫӗн членпа пӗрле уйрӑмлатмалла. | *ҫара кайма ят тухать.* ***Ывӑннипе пулас,*** *йӑмӑк выртнӑ-выртман ҫывӑрса кайрӗ* |
| 3. | ***Ак(ӑ), ав(ӑ)*** татӑксем кӳртӗм сӑмахсем мар. Вӗсене чарӑну паллисемпе уйрӑмлатмаҫҫӗ. | ***Акӑ*** *ыраш пӗр тӗлте икӗ пуҫ ҫаврашки пек таптанннӑ.* *Эсир те* ***ав*** *ӳснӗ-ӳсменех тӗнче уҫлӑхне талпӑнатӑр.* |

**227. Таблицӑна пӑхса тухӑр, куртӗм предложенисем ӑҫта-ӑҫта тӗл пунине сӑнӑр. Сирӗн шухӑшӑрпа, кӳртӗм предложение пысӑкран е пӗчӗкрен пуҫласа ҫырасси мӗнрен килет?**

**Кӳртӗм предложенисене чарӑну паллисемпе кӑтартасси**

| №№ | Правилӑсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. | Кӳртӗм предложение икӗ енчен те запятой е тире лартса уйрӑмлатаҫҫӗ, е скобкӑна хупаҫҫӗ. Запятойпа е тирепе усӑ курнӑ чухне кӳртӗм предложение пӗчӗкрен пуҫласа ҫыраҫҫӗ. | *Самантран, тем пулчӗ, кӗтӳ пуҫӗ кашкӑр чарӑнчӗ.* *Эпӗ те – куратӑн – сурӑх кӗтӗвӗ кӗтетӗп.* *Ӑслӑлӑх ӗҫӗ вӑл – кам мӗн калатӑр та – вӑя-хала нумай илет.* |
| 2. | Скобка точка хыҫҫӑн тӑрать пулсан – кӳртӗм предложение пысӑкран пуҫласа ҫыраҫҫӗ, хыҫҫӑн тивӗҫлӗ паллӑ лартаҫҫӗ. | *Хама асла хумастӑп.* ***(Ӑслӑ ҫынсен кӑмӑлӗ ҫапла!)*** *Пӗррехинче чаплӑ ентешӗме тӑнламасӑр кӳрентертӗм.* |

| | | |
|---|---|---|
| | Скобка хыççăнхи предложение пысăкран пуçлаççĕ.. | *Кĕтерук ăнсăрт тĕл пулу çинчен Эвелинăна каласа мухтанчĕ.* ***(Суякан мĕншĕн тĕрĕссине калас?)*** *Художник Кĕтерукпа алла-аллăн тытăнса ирчченех çӳрерĕ имĕш.* |
| 3. | Точка хыçĕнче тăман кӳртĕм предложение скобкăра пĕчĕкрен пуçласа çыраççĕ, тивĕçлĕ кăшкăру е ыйту паллисĕр пуçне хыçалта ним те лартмаççĕ. Скобка хыççăнхи сăмаха пĕчĕкле пуçлаççĕ. | *Çав вăхăтра* ***(темĕн кирлĕ пулнă тата?)*** *Шерпике юмăç Элентейсем патне пĕр кĕтмен çĕртен пычĕ кĕчĕ.* *Пĕрре çапла* ***(аса илсен халĕ те кулас килет)*** *чи ашкăнчăк Макçăм çинчен Верук хаçата карикатура ӳкерсе кăларчĕ.* |

**228. Литературăран илнĕ тĕслĕхсене таблицăна вырнаçтарса çырăр.**

1. Манăн, калатăп вĕт-ха, апат енчен йывăрлăх çукчĕ. 2. Енчен те учитель аччана хисеплет пулсассăн (ăшă сăмах çынна питĕ хавхалантарать-çке) – эпĕ хама хавхалантаракана тем туса пама та хатĕрччĕ. 3. Эксперимент тĕрленчĕксем университетра вĕреннĕ чухнех çырсаттăм. Унта Константин Петров (Константин Константинович Петров – чăвашсен паллă çыравçи тата тĕпчевçи) пурччĕ. Вăл хăй те çыратчĕ. Сĕнӳ паратчĕ. 4. Вара пĕрре

Шупашкара килсен Анатолий Васильевич, вăл ун чухне университета куçнăччĕ ĕнтĕ, Хлебниковпа паллаштарчĕ. *(Ю. Артемьев.)* 5. Базиликăн (хĕрлĕрех кăвак тĕсли те, симĕсси те юрать) темиçе çулçине термоса ямалла, унта пĕр стакан вĕрекен шыв хушмалла. *(Роза Власова.)* 6. Тепĕр паттăр – Ту, пĕтĕм патшалăхра çуралнăскер, çĕленсен аллинче тăракан уйăхпа хĕвеле туртса илсе халăха парать. Çавăнтанпа уйăха хĕвел халăхшăн çутатма тытăннă тет. (Ку юмаха Хĕрлĕ Чутай районĕнче çырса илнĕ.) *(Митта Ваçлейĕ.)* 7. Юлашкинчен, чăнах та, Сатай хăй курăнса кайрĕ. Хул хушшине ал çыру хĕстернĕ. Хуплашкинче «Çунатлă çынсем» ят та курăнать. Ку вăл – «Лечиксем» роман ĕнтĕ. Ăна писатель уйрăм кĕнекен кăларма хатĕрленет. (Кĕнекере ячĕ малтанхи вариантри пекех сыхланса юлнăччĕ-ха.) *(А. Юман.)* 8. Çĕр ĕçĕнче ят илсен тата орден кавалерĕ пулса тăрсан Потёмкин – мĕн пулать те, мĕн килет?! – хăйĕн туйăмне Кĕтерне патша патне янă çырура уçса пама хăюлăх çитерчĕ. *(Н Максимов.)*

**Кўртĕм предложенисем**

| №№ | Мĕнле сас паллинчен пуçланни | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Пĕчĕк сас паллинчен | |
| 2. | Пысăк сас паллинчен | |

### 4.2.7. Предложенин тĕллевне кура уйăракан ушкăнĕсем

**Ыйтуллă предложенисем**

| №№ | Ыйтăва палăртмалли мелсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сказуемăй енне туртăнакан ыйтуллă сăмахсем: ***кам? мĕн? ăçта? хăçан? мĕншĕн? мĕнле? миçе? мĕн-ма?*** | ***Хăçанччен*** *тăсăлмалла-ха ку мыскара сан?* *Сехет* ***мĕншĕн*** *чарăннă?* ***Камран*** *канаш ыйтмалла?* |
| 2. | Сказуемăй тытăмне çеç кĕрекен ыйту татăкĕсем: ***-и(-им). -ши(-шим)*** | *Эсĕ чăнласа калаçатăн-****и****?* *Паян репетици пулмасть-****им****?* *Каникул хăш кун пуçланать-* |

| | | |
|---|---|---|
| | | ***ши?***<br>*Автобус яла кĕмест-**шим?*** |

➤ Тĕллевне кура предложенисем ыйтуллă тата ыйтусăр пулаççĕ. Ыйтуллă предложенисенче *кам? мĕн? ăçта? хăçан? мĕн-ма? мĕншĕн?* йышши ыйту сăмахĕсем тата *и, -им, -ши* татăксемпе усă кураççĕ.

Ыйту сăмахĕсем сказуемăй умне вырнаçни норма пулса тăрать: *Эсĕ **хăш** çулта çуралнă?*

Ыйту татăкĕсем сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăма тивĕçлĕ: *Пире телевизорпа кăтартаççĕ-**и**?* Ку йĕркене пăхăнманни грамматика йăнăшĕ шутланать.

**229. Ыйту палăртассипе тунă йăнăшсене тупса тӳрлетĕр.**

1. Урамра-и ача сасси илтĕнет? 2. Савнă тусăм, маншăн-ши куçу çунать? 3. Автобус кĕтсе каçченех-ши лармалла? 4. Çын телейĕ-и кирлĕ мана? 5. Çав çын кам: критик е редактор? 6. Тĕрĕс-ши, йăнăш-ши эп турăм? 7. Тӳпере пин-пин çут çăлтăр. Кам-ши çутнă вĕсене? 8. Анне çитеймерĕ пулĕ-ха? 9. Мĕн, пирĕн çуртра карт пăхаççĕ? 10. Ăçтан-ши, ăçтан-ши тупам Чи çепĕç сăмах сан валли? 11. Епле-ха лăпкăн пурăнма пулать? 12. Ахальтен-им çамрăксем пирĕн культурăран писсе пыраççĕ?

**230. Предложенисен сказуемăйĕсем хăш наклоненире тата хăш вăхăт форминче пулнине сăнăр. Ку формăсем тăрăх предложенин тĕллев сĕмĕ епле пулнине калама пулать-и?**

1. – Аннӳне тупас килмест-и санăн?

– Халь тин мĕн тума кирлĕ мана анне? Эпир санпа аннесемсĕрех ӳссе çитĕнтĕмĕр. Юратнă çыннăм та – эсĕ çех...

– Анне вăл – аннех. Аннӳ сана пурнăç панă. Эпĕ сан аннӳне сана çуратса чун панăшăнах тав калăттăм.

– Ан ӳкӗтле мана. Аннене мӗншӗн шырамалла ман? Ку ӗҫпе аппаланма ман вăхăт та ҫук. *(Е. Мустаева.)* 2. Писателӗн пурнăҫа пӗлмелле. Эппин, халăхпа час-час хутшăнмалла. *(В. Пушкин.)*

➤ Ыйтусăр тата ыйтуллă предложенисене модальлӗхне кура ҫакнашкал ушкăнлама пулать: 1) калуллă предложенисем *(Вăхăт хăвăрт иртет.);* 2) хистевлӗ предложенисем *(Сӗтел ҫинчи ал ҫырăвӗсене ан тӗкӗнӗр! Ҫул ҫине ытлашши япала илес мар! Ывăнтăн пуль. Кăшт канса илместӗн-и?)* 3) пулмалли предложенисем (*Пирӗн лайăх ҫынсем пулма тăрăшмалла.);* 4) килӗшӳллӗ предложенисем *(Вӗсем калаҫмӗҫин!).* Тишкерӳре вара предложени ыйтуллă е ыйтусăр пулнине кăтартнипе ҫырлахаççӗ.

### 4.2.8. Пурлă тата ҫуклă предложенисем

**231. Таблицăна тишкерӗр. Чăваш чӗлхинче ҫуклăха палăртмалли мӗнле мелсем пур? Вӗсем ăҫта вырнаҫаççӗ?**

**Пурлă тата ҫуклă предложенисем**

| №№ | Ҫуклăх паллисем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сказуемăй пулакан глаголăн ҫуклăх аффиксӗсем: ***-м, -ма, -ме, -мас-мес*** | Ҫул ҫинче аташса кай**м**ăр-и?<br>Ванюк пӳрте кӗ**ме**рӗ.<br>Хирте ӗҫ каççăр та пӗтмерӗ.<br>Уҫăп ăна-кăна шарла**мас**ть.<br>вӗри кăвар час сӳн**мес**т. |
| 2. | Сказуемăй ҫумӗнче кăна тăма тивӗҫлӗ татăксем: ***ан, мар, ҫук*** | *Тӳрӗ хуравран **ан** пăрăн.*<br>*Эпир халех каяс **ҫук.***<br>*Уявра мӗншӗн савăнмалла **мар**?* |
| 3. | ***Ҫук*** татăкпа ытти мелсен пӗрлешӗвӗ | ***Ҫук****, нимех те пул**ма**н.*<br>***Ҫук,*** *каланă сăмаха манас **ҫук.*** |
| 4. | ***Ҫук*** паллă ячӗ | *Ман – йӗс йӗвен **ҫук.***<br>*Урамра лаша **ҫук** та.* |

**232. Ҫуклăхпа пурлăха ăҫта тӗрӗс, ăҫта йăнăш кăтартнине ӗнентерӗр. Йăнăшсене тӳрлетӗр.**

1. Çул хĕррисене масара çавăрни вырăнлă-и? Е çук-и? 2. Çак тахçанах пулнă меле маннă пулĕ теттĕм. Çук иккен, усă кураççĕ. («Хыпар».) 3. Паян пальто тăхăнмалла е çук?

4. − Эсир-и чирлĕ çын? − пырса тăчĕ Константин Кузьмич патне тăваткал чăматан йăтнă врач.

− Çук, − пуçне силлерĕ ку. *(«Хресчен сасси»).*

5. − Какайра белок нумай теççĕ... Тĕрĕс-и?

− Çук, тĕрĕс мар. Сырта белок тата нумайрах пулать, 24 процента çитет. *(«Хыпар».)*

6. − Мишша, санăн урокна яланах аннӳ тăвать-и?

− Çук, вăл ĕçре чухне − атте. *(«Тантăш»)*

7. − Иван Петрович, ача чух ĕмĕтленнинчен мĕн те пулин пурнăçланчĕ-и?

− Çапла. Çӳç каснă чухне кукша пуçлисене ăмсанаттăм. *(«Хресчен сасси».)*

8. Сана мар халаллатăп ку юрра. 9. Паллах, 2000 çулсем хыççăн поэзи никама кирлĕ мар пулса тăчĕ. *(«Тăван Атăл»)* 10. Ахальтен мар ĕнтĕ Гурий Комиссаров-Вантер пĕр хушăрах этнограф историк та, фольклорист литературовед та пулнă.

***Йăнăш тумалла мар***

Вырăссем хирĕçлесе е çирĕплетсе уйрăм предложенисем калаççĕ: *Нет. Да.* Чăвашла *Çук! Çапла!* предложенисемпе усă курни грамматика йăнăшĕ шутланать. *Çук, шăнмастăп, Çук, пĕртте ывăнмастăп* йышши предложенисене илмелле. Çирĕплетсе калама *çапла* сăмах пачах кирлĕ мар. «Çапла-и?» − тесе ыйтсан кăна ĕнентерсе: «Çапла!» теме е хирĕçлесе: «Çук, апла мар!» − теме юрать.

***«Сăмах майлашăвĕпе предложени» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем***

1. Хутсăр предложени сăмах майлашăвĕнчен мĕн енчен уйрăлса тăрать?

2. Хутсăр предложенин хутшăнуран килекен тытăмĕпе грамматика тытăмне уйрăммăн вĕренни мĕнпе çыхăннă? Хутшăну тытăмĕ грамматитикăна пăхăннине тĕслĕх тупса çирĕплетĕр.

3. Предложенин сăмахĕсем прогрессиллĕ йĕркепе е регрессиллĕ йĕркепе вырнаçни мĕнрен килет?

4. Грамматикине пăхса тухнă чухне хутсăр предложенисене мĕне кура ушкăнлаççĕ?

5. Предложение членсем тăрăх тишкерни сăмахсен чăн çыхăнăвĕпе ялан тӳр килет-и? Шухăшăра тĕслĕх тишкерсе ĕнентерĕр.

6. Хутсăр предложенире чарăну паллисене тĕрĕс лартасси мĕнрен-мĕнрен килет? Шухăшăра тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

**233. Паллă тунă çыхăну мелĕсем хăш синтагмăн пайĕсене çыхăнтарнине ăнлантарăр.**

1. Талăк**ра** сахалтан та сакăр сехет çывăрни, ир**серен** душ кĕни организм**а** çирĕплетме пулăшать. *(«Хыпар»)* 2. Виççĕ**мĕш** курсра хĕрпе каччă**лла** тĕл пул**ма** пуçларăмăр. *(Юхма М.)* 3. Хăяр**а** хĕлле**ччен**ех чĕрĕ упрас тесен лайăх çумалла, шăлса типĕтмелле, унтан çăмарта шурр**и** сĕрмелле. *(В. Багадерова.)* 4. Парне**лĕх** япаласем пирки килте калаçăпăр. 5. Пашкаса чупма**лăх** сăлтаву пысăках пулмалла сан. *(Г. Максимов.)*

**234. Анлă ят сăмах майлашăвĕсене çырса илĕр, схемисене ӳкерĕр. Çыхăну мелĕсене тупăр та вĕсем мĕне-мĕне çыхăнтарнине ăнлантарăр.**

1. Пĕр вырăнтан теприне куçакан çар чаçĕпе пĕрлех Игнатий Ивановăн çар биографийĕ те çыраннă. *(В. Бахматов.)* 2. Антун алăк кутĕнче тăракан йывăç кĕреçене илчĕ. Тăпăлкка çуна ăшне

çу кунĕсене аса илтерекен тутлă шăршăллă утă хучĕ. Хыçлă çунана çăмăллăн тĕртекен Антуна хунарлă арăмсем ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. *(Г. Максимов.)*

**235. Предложенисенн схемине ӳкерĕр. Сăмах йĕрки прогрессиллĕ е регрессиллĕ пулнине ĕнентерĕр. Синтагма пайĕсем епле мелсемпе çыхăннине ăнлантарăр.**

1. Çумăр çурт çи виттине халь-халь шăтарас пек çилĕллĕн шапăртаттарать. *(В. Сатай.)* 2. Халĕ акă Саххарăн хăйĕн пуçтахлăхĕ палăрчĕ. *(В. Паймен.)* 3. Тухтăр Кĕтерук суранне темле мазь сĕрчĕ. *(В. Элпи.)* 4. Общежитире пĕр пĕчĕк пӳлĕм уйăрса пачĕç çамрăксене. 5. Чупнă пек васкарĕ ашшĕ ывăлĕ патне. *(В. Тарават.)* 6. Ирхине Вадим Маруçа çавăтса Илюш патне утрĕ. *(А. Тумаланова.)*

**236. Хутсăр предложение тишкермелли йĕркене аса илĕр.**

1. Предложени хутсăр пулнине каламалла та ĕнентерсе тĕп членĕсене кăтартмалла.

2. Предложени тĕп членлă-и, тĕп членсăр-и?

3. Предложени анлă-и, ансăр-и?

4. Тулли-и, тулли мар-и?

5. Предложени ыйтуллă-и, ыйтусăр-и?

6. Пурлăхпа çуклăх енчен епле: пурлă-и, çуклă-и?

7. Туйăм енчен епле: эмоциллĕ-и, эмоцисĕр-и?

8 Чарăну палли лартассипе çыхăннă епле уйрăмлăхсем пур?

**Тишкерӳ тĕслĕхĕ**

*Машинăра* *<u>Якур</u>* *<u>пĕччен</u>* *мар,* *<u>арăмĕпе</u>* *–* *<u>Варукпа</u>.*

Ку предложени хутсăр (подлежащи – *Якур,* сказуемăйсем – *пĕччен* (*мар* –татăк), *арăмĕпе, Верукпа)*, тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, калуллă, пурлă, эмоцисĕр. Союзсăр çыхăннăран пĕр йышши сказуемăйсем хушшине запятой лартнă (хирĕçленине

палăртса калас пулсан – тире лартма юрать). *Арăмĕпе* сăмахăн шухăшри акцентне кăтартма *Варукпа* сăмаха пауза туса уйрăмлатнă, пауза вырăнне тире лартнă. Паузăпа палăртса кăтартнă пулсан *машинăра* сăмах хыççăн тире лартма май пур. Тире çукки палăрту çуккине пĕлтерет.

**237. Хутсăр предложенисене синтакис тишкерĕвĕ тăвăр.**

1. Кирук, эсĕ-и ку? Эх, ачам! Мĕнле шăнса вилмерĕн?! Каçар мана, каçар тархасшăн, ачам. Ухмах вĕт эп, ухмах! Çав Верукран хăраса сана лартмарăм вĕт. Каçар... *(Н. Ларионов.)* 2. Çитрĕм. Малтан, делянка хĕрринче, вăрман касакансене сăнаса тăтăм. Хăшĕнпе сăмахламалла? Пĕрне пăхатăп, теприне. Пурте хĕрсе ĕçлеççĕ. Пуç та çĕклемеççĕ. *(Ю. Исаев.)* 3 Урине аппа (Акăль амăшне çапла чĕнеççĕ) чăх пуснă-мĕн хĕр ятне. Яшка техĕмĕ пĕтĕм пӳрте сарăлнă. *(Хв. Коновалов.)* 4. Антун итлерĕ. Лăстăр-лăстăр силленчĕ. Кĕрĕк аркине лăп-лап çапкаласа юртан тасатрĕ. Çенĕке кĕме ăшталанчĕ. *(Г. Максимов.)* 5. Çапла ĕнтĕ, Таçал ялĕ пĕтĕмĕшпех çывăрмасть. Ун кăçал пĕвеленĕ пĕви çинче никам та çук мар. Унта Санюкпа Петĕр пур. Вĕсем пĕве пуçĕнче пĕве шывĕ çинелле пăхса лараççĕ. *(В. Рсай.)*

**** Малтан, делянка хĕрринче, вăрман касакансене сăнаса тăтăм.Яшка техĕмĕ пĕтĕм пӳрте сарăлнă. Вĕсем пĕве пуçĕнче пĕве шывĕ çинелле пăхса лараççĕ*** **предложенисене членсем тăрăх пăхса тухăр.**

### Тишкерӳ тĕслĕхĕ

*Мĕн тума <u>итлерĕм</u> <u>эпĕ</u> санăн Сашуна?!*

Ку предложени хутсăр, тĕп членлĕ, анлă, тулли, ыйтуллă, пурлă, эмоциллĕ.

Подлежащи – *эпĕ*, сăпат местоименийĕ.

Сказуемăй – *итлерĕм,* глаголăн пĕрре иртнĕ форми.

Мĕн тĕллевпе итлерĕм? – *тума* – тĕллев обстоятельстви, глаголăн инфинитив форми.

Мĕн тума? – *мĕн* –дополнени, ыйту местоименийĕ.

Кама итлерĕм? – *Сашуна* – дополнени, пайăр ят.

Мĕнле (камăн) Сашуна? – *санăн* – определени, сăпат местоименийĕ.

**5. Хутлă предложени**

**238. Предложенисене вуласа тухăр та таблицăн хăш кĕлеткине вырнаçтарма сăлтав пуррине ĕнентерĕр, схемисене ўкерĕр.**

1. 1. Цесарка ами хăй те чĕп кăларма пултарать, çапах çăмартине чăх айне хурса парсан аванрах, мĕншĕн тесен цесаркăсем хайсем пит кая юлса пусма лараççĕ. *(«Хыпар».)* 2. Халь пырса пăхатăп та университет библиотекине – пушăлăх: ĕçлекен пĕр çын ларать. *(Ю. Артемьев.)* 3. Аттепе анне çуккишĕн тăван мар анне айăплă пек туйăнатчĕ мана. *(В. Тарават.)* 4. Хăнасем çур çĕр çитиччен сăйланчĕç, Антоновсен патвар ывăл çуралнăшăн саркаланса савăнчĕç. *(Г. Максимов.)* 5. Вĕрент мана чăвашла калаçма – вара эс чăвашне ĕненĕп. *(В. Паймен.)* 6. Çак вăхăтра эпĕ анне хĕр чухне мĕнле пулнине курма тăрăшрăм та – ман ума йăмăк – Надюша килсе тухрĕ. *(Н. Петровская.)* 7. Пасар кунĕччĕ те – эпĕ те вара пасара каям пек туса унран юлмарăм. *(А. Артемьев.)* 8. Çурла (август) уйăхĕнче çăлтăр çунни – кĕр часах пулассин палли. *(«Хыпар».)*

* ***Вĕрент мана чăвашла калаçма – вара эс чăвашне ĕненĕп*** **тата** ***Çурла уйăхĕнче çăлтăр çунни – кĕр часах пулассин палли*** **предложенисен тытăмне тишкерў йĕркине пăхăнса ăнлантарăр.**

**Хутлă предложенисен тĕсĕсем**

| Предложени тĕсĕсем | Хутлă предложенисем | | |
|---|---|---|---|
| | Çыхăну паллисĕр хутлă | Çыхăну паллиллĕ хутлă | |
| | | Сыпăнуллă хутлă | Пăхăнуллă хутлă |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Предложение ун номерĕ | Паян çĕнĕ троллейбуспа вăтăр пилĕк километр штангăсăрах кайрăмăр[1] – аккумляторсен саппасĕ[2] пур пĕрех[3] юлчĕ[2]. *(Н. Коновалов.)* | Эп пур кун курмасăр çĕрĕн-кунĕн ĕçлетĕп[1], **çавах** хырăм тăраниччен[2] çиме çăкăр çук[3]. *(Уйăп М.)* | **Енчен** те эпĕ кўршĕсем патне çĕр улми лартма каятăп **тăк**[1] – ху лартнă **чух**[2] вĕсем те сана пулăшма пыраççĕ[3]. *(Н. Исемпек.)* |
| Предложени досхеми |  |   |  |

## 5.1. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем

**239. Таблицăна пăхăр, çыхăну паллисĕр хутлă предложеенисен пайĕсем расна тытăмлă пулнине мĕнле паллăсем тăрăх пĕлме пулнине аса илĕр. Панă тĕслĕхсене таблицăн тивĕçлĕ тăваткалĕсене вырнаçтарăр (предложение хăйне çырас вырăнне ун номерне кăтартма юрать).**

**Пайĕсем расна тытăмлă**

**çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем**

| № № | Пайсем расна тытăмлă пулнин паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Шухăш вĕçленменнине пĕлтерекен *та(те), кăна, çеç* татăксем пурри. | |
| 2. | Сказуемăйсем наклонени, вăхăт, пурлăхпа çуклăх, сăпат енчен тĕрлĕ формăра тăни; пĕр пайĕ глаголлă тепри глаголсăр пулни. | |
| 3. | Предложенисем тĕллевĕ енчен | |

| | | |
|---|---|---|
| | расна пулни (пĕри ыйтуллă – тепри ыйтусăр). | |
| 4. | Малтанхи пайра пĕлтерĕшне уçса памалли кăтарту сăмахсем пурри. | |
| 5. | Малтанхи пайра ăнлантару ыйтакан сăмах тăни. | |
| 6. | Пайсенче пĕр-пĕрне хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пурри. | |
| 7. | Предложенисем пĕр-пĕрне содержани енчен хирĕçлени. | |

Предложени ушкăнĕсем

1-мĕш ушкăн

1. Натюш **çакна** ăнланчĕ: ун çулĕ çинче хăрушă çын. 2. Кĕçĕр тата **тепĕр** вут куçĕ хутшăннă-мĕн: Муркаш çырми леш енче тĕмере кĕрлеттерсе вут çунать. 3. Вăртахăн **икĕ** хĕр: пĕри хура, тепри сарă. 4. Тата **акă мĕн**: тĕп вăйсенчен уйрăлса ан кайăр.

2-мĕш ушкăн

1. Паçăр эсĕ тĕрĕс **асăрхарăн:** тăшман çывăрмасть. 2. **Ăнланчĕ** Натоль: çунакан пӳртре – ача. 3. **Пĕлмелле**-çке: мĕнле пурăнать çавăн пек çын? 4. Урипе сăтăрса утнинченех **паллă:** кил хуçи вăраннă.

3-мĕш ушкăн

1. Пырса лек-ха эс вĕсен патне – кăтăкласа вĕлерĕç. 2. Икĕ уйăх иртрĕ – анне çаплах вырăн çинчен тăрай**ма**рĕ. 3. Тен, мана та çăмăлах **мар** пуль – эп чăтатăп-çке. 4. Эпир пиллĕкĕн çулпа пыр**ат**пăр – пĕри аташса юл**чĕ**. 5. Пĕр-пĕр хӳтлĕхе кĕрсе ларса **канасчĕ** – йĕри тавра шакла **уй.**

4-мĕш ушкăн

1. Куратăн-и, Вероника: ку общежитире йĕркеллĕ калаçма та çук. 2. Кала-ха, эсĕ кама хăвăн директору тăвăттăн?

5-мĕш ушкăн

1. Нумай **та** вăхăт иртмерĕ – кӳршĕ Тоня шăнкăравлать. 2. Виççĕмĕш смена хыççăн кăтăш пултăм **кăна** – каллех ахăрма пуçларăр. 3.Пӳрт алăкне уçрăм **çеç** – пĕр ача вĕлт **кăна** сирпĕнчĕ тулалла.

6-мĕш ушкăн

1. Шăркалчă **шап-шурă** – хурама **хуп-хура**. 2. Пĕр тĕнче **пĕтет** – тепĕр тĕнче **тухать.**

7-мĕш ушкăн

1. Пушанкаласа вăрмана чупрĕ Тимĕркке – вĕçкĕн матка пăрахса кайнă пулчĕ.

### 5.1.2. Пайĕсем пĕрешкел тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем

**⊙ 240. Таблицăна тишкерсе аса илĕр: çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсем пĕрешкел тытăмлă иккенне мĕнле паллăсем кăтартаççĕ. Панă тĕслĕхсене таблицăн тивĕçлĕ тăваткалĕсене вырнаçтарăр (предложени вырăнне ун номерне çырма юрать).**

**Пайĕсем пĕрешкел тытăмлă**
**çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем**

| №№ | Пайсем пĕрешкел пулнин паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Пĕр-пĕр сăмах е сăмах ушкăнĕ икĕ пайра та тĕл пулни. | |
| 2. | Икĕ пая пĕрлештерсе тăракан пĕтĕмĕшле сăмах е сăмах ушкăнĕ пурри. | |
| 3. | Подлежащисем иккĕшĕ те пĕрешкел | |

| | | |
|---|---|---|
| | аффикс (е палăрту аффиксĕ, е сăпат аффиксĕ) йышăнни. | |
| 4. | Икĕ пайĕнче те пĕлтерĕшĕпе пĕр евĕрлĕ сăмахсем пурри. | |
| 5. | Харăс темиçе паллă пурри. | |

**Предложени ушкăнĕсем**

1-мĕш ушкăн

1. Вăхăч**ĕ** те çукрахчĕ, сăлтав**ĕ** те тупăнмастчĕ. 2. Хыçал**тисем** тарма тытăнаççĕ, мал**тисем** каялла чакаççĕ.

2-мĕш ушкăн

**Пĕри** савăнчăклă ихĕлтетет, **тепри** йăпанчăклăн калаçать. 2. **Çӳлте** пĕр урам, **аялта** тепре. 3. Ула кайăк **улăхра**, чĕппи чечек **варринче**. 4. Кайăк хитре – **тĕкĕпе,** этем хитре – **ĕçĕпе.**

3-мĕш ушкăн

1. **Ивукăн** пуç**ĕ** çурăлса тухать, ăш**ĕ** пăтранать.

4-мĕш ушкăн

1. Шухăшу **ылтăн**, укçи тата **ылтăнрах.** 2. Тăвайкки **хĕррипе – чалăш çул**, **чалăш çул хĕррипе** – çутă йĕр.

5-мĕш ушкăн

1. **Халь** Лява агроном, эпĕ – инженер. 2. **Хаяр аслатипе** бараксем кисренеççĕ: ура айĕнче çĕр чĕтренет. 3. Уйăх хĕр хăлхинчи алка пек, пыл шăршиллĕ çăкалăх пăçмах пек **туйăнчĕ** мана. 4. Натюк тăваттăмĕш класра **вĕренет,** Урине – иккĕмĕшĕнче.

**241. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче тире тата ыйту палли хăçан лартнине шута илсе тĕслĕхсене хăйсен тăваткăлĕсене вырнаçтарăр (предложенисем вырăнне номерĕсене лартма юрать).**

1. Мĕн пулчĕ – ăнланмарăм. 2. Кала мана: шăпчăк ялан пĕр юрă юрлать-и? 3. Курмастăн-им: çын епле аташать?! 4. Тавçăрса та

ĕлкĕреймерĕм – ампар алăкĕ яр уçăлса кайрĕ. 5. Хуш кăна эс мана – кивĕ çурт вырăнне çĕнни пулĕ. 6. Савтепие кил картине чĕнчĕ Ивук – килĕшмерĕ хĕр. 7. Тĕлĕкре куратпăр-çке çĕре кĕнĕ тăвансене, ма вĕсене çывăрман чух курас мар? 8. Тен, мана та çăмăл мар пуль, эп чăтатăп-çке. 9. Пӳрте малтан Ваçли, ун хыçĕнчен Микула кĕчĕ. 10. Хĕрсем тăвалла утрĕç, Янтулпа Михапар – аналла.

**Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче**
**тире тата ыйту палли лартасси**

| №№ | Правилăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Пĕр ĕç хыççăн тепри хăвăрт пулса иртнине, пĕри теприне хирĕçленине е иккĕмĕшĕ пĕрремĕшĕн следствине е результатне пĕлтернĕ чухне пайсем хушшине тире лартмалла. | |
| 2. | Ĕçсем хăвăрт пулса иртнине, пайсем пĕр-пĕрне хирĕçленине е иккĕмĕшĕ пĕрремĕшĕн результатне е следствине пĕлтернине палăртса каламан чухне тире вырăнне запятой лартма юрать. | |
| 3. | Пайсенчен хăшĕ те пулин е иккĕшĕ те ыйтуллă пулсан ыйту паллине иккĕмĕшĕ хыççăн кăна лартаççĕ. | |
| 4. | Пĕтĕмĕшле скзуемăя пайсенчен хăшĕнче те пулин сиктерсе хăварнă пулсан – тулли маррине иккĕмĕшĕнне кăна кăтартаççĕ. | |

**242. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче запятой, точкăпа запятой тата точкăпа запятой хăçан лартнине аса илĕр те панă тĕслĕхсене таблицăн пушă тăваткăлĕсене вырнаçтарăр.**

1. Чăнласах калатăп: хăвăн патна ан илештер çак çынна. 2. Пĕлмелле-çке – мĕнле пурăнать тĕлĕнтермĕш çын? 3. Кур, Салаватăн хĕçĕ пек, Шур Атăл кукăрĕ çап-çут. 4. Хаваслă вăхăтра та мана сасартăк тунсăх пулсан, тем çитмен пек туйăннă пулсан – Тамара çитмен; хампа юнашар чуна çывăх çыннăм çукки сисĕннĕ пулсан – Тамара çукки сисĕннĕ. 5. Кахалшăн çĕр кĕске, ĕçченшĕн кун кĕске. 6. Сисетĕп, пирĕн кунта ăслă этемсем тупăнчĕç. 7. Упа ташлама вĕренсен те вĕçме пултараймасть: упан çунат çук. 8. Янтулăн çӳçĕ йăшăл! хускалчĕ, чунĕ сӳ! турĕ. 9. Чуна пĕр ĕмĕт ыталать – курас килет мăн Атăла!

**Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче**
**запятой, точкăпа запятой тата икĕ точка лартасси**

| №№ | Правилăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пĕр вăхăтри ĕçĕсене пĕлтерекен пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ. | |
| 2. | Пайсен калăпăшĕ пысăк тата ăшĕнче чарăну паллисем пулсан е шалта вырнаçнă предложенисене ушкăнласа тухмалла пулсан – çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсем хушшине точкăпа запятой лартаççĕ. | |
| 3. | Иккĕмĕшĕ пĕрремĕшне мĕн енчен те пулин ăнлантарса панă чухне предложенин пайĕсем хушшине икĕ | |

| | | |
|---|---|---|
| | точка лартаççĕ. | |
| 4. | Иккĕмĕш пай пĕрремĕшне ăлантарнă чухне икĕ точка вырăнне тире те лартма юрать. | |
| 5. | Ăнлантару пĕлтерĕшĕ пулмасан – икĕ точка е тире вырăнне запятой лартни те çителĕклĕ. | |

**✪✪✪ 243. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр. Чарăну палли лартас енчен хăш-хăш тĕслĕхре вариантлăх пур?**

1. Мороз хресчене мала хурать, Кăяш – рабочие. *(В. Паймен.)* 2. Тĕнче ырă çынсăр мар – аппăшĕпе пĕр тетĕшне тăванĕсем хăйсен çуртне кĕртнĕ. *(Н. Смирнова.)* 3. Икĕ тĕнче – икĕ пуç, икĕ чĕлхе – икĕ ăс. *(Н. Егоров.)* 4. Писателĕ хăй хĕрĕх улттăрах çĕре кĕчĕ – геройĕсем пурăнаççĕ. *(А. Васан.)* 5. Сармантейĕн пĕр сехри иртсе ĕлкĕреймест – тепри (е вăрçă, е тĕрме) килсе çапать. *(В. Станьял.)* 6. Манăн чун çемçелчĕ, шанăçпа тулма ĕлкĕрнĕ чĕре хыттăн тапрĕ. *(Н. Петровская.)* 7. Гимнастеркăна тирпейлесе пĕтертĕм кăна – Гаврилов аслă сержанта командир патне чĕнчĕç. *(В. Степанов.)* 8. Каламасан ирччен çакăнта тытатăп – кала. 9. Акă мĕн калам сана, Мария, хĕрарăмăн пурнăçра вăйлă та чăтăмлă пулмалла. *(В. Трифонова.)* 10. Надя мана каллех тем каларĕ... эпĕ хальхинче те нимĕн те ăнланмарăм. 11. Манăн пуç хулен çаврăнчĕ, ăш пăтранчĕ. *(Н. Петровская.)* 12. Раççей вăл вырăссем çеç мар иккен – унта тем тĕрлĕ халăх пур: тутарсем, чăвашсем, çармăссем, ирçесем, вутексем. *(Н. Максимов.)*

➤ Запятой е урăх паллă пурри хутлă предложенин палли мар. Хулă предложени пулакан тĕслĕх шухăш тăрăх икĕ пая

пайланмалла: *Иртни – вилĕмĕн, пуласси – пирĕн (Н. Петровская.)* Шухăш тăрăх икĕ пая пайланман тĕслĕхсем е предложенисен яданхи пĕрлехне е пĕр йышши предложенисен ярăмне тăваççĕ: *1) Мана пуçран такам çапнă пек пулчĕ – эпĕ сулăнса кайрăм. 2) Хурăнсем хăйсен çулçипе шĕпĕлтетеççĕ, чечексем тĕсĕпе илĕртеççĕ, кӳлĕ нӳрĕкĕ туйăнать.* Танлаштарăр: *1) Мана пуçран такам çапнă пек пулчĕ. Эпĕ сулăнса кайрăм. 2) Хурăнсем хăйсен çулçисемпе шĕпĕлтетеççĕ. Чечексем расна тĕсĕпе илĕртеççĕ. Кӳлĕ нӳрĕкĕ туйăнать.*

**245. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсем хушшинче шухăш тата грамматика енчен епле çыхăну пуррине шута илĕр те нумай точкăллă вырăнсене хăвăр лартас тенĕ паллăсене лартса çырса илĕр.**

1. Чăнах та, редактор хăй сăмахне çирĕп тытрĕ... сăввăмсем кĕçех кун çути курчĕç. *(Ю. Сементер.)* 2. Ас тăватăн-и... анне мĕнле хитре юрлатчĕ пирĕн...3. Ун чух сана хулара çӳреме çĕлĕк кирлĕччĕ,.. аттен вара туянма укçа пулмарĕ. (*А.Тарасов.)* 4. Эсĕ ӳнерçĕ... картина ӳкерес шухăш çук-и... *(«Тăван Атăл».)* 5. Тĕлĕкре те ялан... Валя, хăлхара та... унăн сасси. 6. Хăвăнне ху пĕл, ачам... эпир сана ăс пама аптратпăр. 7. Пĕр кĕпе çире... тепри шывра пулса çитет. 8. Кукаçипе кукамай Юдинăра пурăнаççĕ... аттепе асанне... Çĕрпӳ районĕнче. 9. Мĕн вăл çу кунĕ...туххăм авăн уйăхĕ çитрĕ. *(А. Павловская)* 10. Шурă Шупашкар урамĕсенче... Çĕнĕ çул умĕнхи тӳлеклĕх, таçтан çӳлтен вĕçсе анакан уявлăх... кашни çын кăмăлĕнче... чуна çунатлантаракан сапăрлăх. *(Ю. Сементер.)* 11. Пурнăç йĕрки çапла...куççулĕпе савăнăç пĕрлех çӳреççĕ. 12. Сехете пăхрăм... çиччĕ çитсе килет. *(Н. Иванов.)*

* ***Сăввăмсем кĕçех кун çути курчĕç*** **тенинче *кур* глагола эсир мĕнле ăнланатăр – ĕнентерĕр. *Кун çути кур* синтагма мĕне пĕлтерет?**

**246. Предложенисен тытăмне ăнлантарăр.**

1. Манăн апат анми пулчĕ, ыйхă вĕçрĕ. *(Н. Петровская.)* 2. Икĕ кун та иртмерĕ – Костьăн телефонне çыру килчĕ. *(А. де Герсо.)* 3. Юр ирех çăватчĕ – халĕ вара тăман тухасшăн курăнать. 4. Аттене кала-ха: хăвăртрах килтĕр. *(Н. Ларионов.)* 5 Яла кĕрсен Мшша тете хăй килне кайрĕ, эпĕ – хамăр пата. Пăхатăп – мĕн курăнать-ха куçа? *(Ю. Исаев.)* 6. Эппин, эпĕ кăшт çывăрса илем-ха – халех ан вăрат мана. *(А. Павловская.)* 7. Пĕрин ячĕ Катюша, теприн – Анюта. *(В. Алентей.)* 8. Эсĕ леш çырантан, эпĕ ку çырантан пĕве пуçне чупаттăмăр. *(В. Кузьмин.)* 9. Кĕсйинче укçи те пур, те çук унăн – паллă мар. *(Уйăп М.)* 10. Сăмаварĕ пăхăр, чашăк-кашăкĕ кĕмĕл. *(Н. Максимов.)*

**Çыхăну паллисĕр хутлă предложение тишкермелли йĕрке**

1. Панă тĕслĕх çыхăну паллисĕр хутлă предложени пулнине каламалла. 2. Хутлă предложенин пайĕсене кăтартмалла. 3 Пайсем пĕрешкел тытăмлă-и, расна тытăмлă-и? 4. Пайсем хушшинче палăракан шухăш çыхăнăвĕ: пĕрешкел лару-тăрура пулса иртекен ĕçсене пĕлтерни; иккĕмĕш пай пĕрремĕшне ăнлантарни; пайсем пĕр-пĕринпе пиркепе следстви, условипе следстви, ĕçпе результат çыхăнăвĕнче тăни, пĕр-пĕрне хирĕçлени, хăвăрт улшăнакан ĕçсене кăтартни тата ытти те. 5. Панă тĕслĕхре хутсăр предложенисем виççĕ е ытларах пулсан – кашни пая, хăйне уйрăммăн, хутсăр предложени таран вакласа ăнлантармалла. Пайсенчен хăшĕ те пулин хутсăр предложени пулсан – ăна уйрăм çӳрекен предложени пек пăхса тухмалла. 6. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

***Тĕслĕх:***

*Кайăксем те чĕвĕлтетме*[1][I]*, пăвансем те сĕрлеме пăрахрĕç сасартăк*[2][II]*.* (В. Степанов.)

Панӑ тӗслӗх – ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложени. Вӑл икӗ пайран тӑрать: пӗрремӗш пайне 1-мӗш предложени кӗрет, иккӗмӗшне – 2-мӗш предложени. Пайсем пӗрешкел тытӑмлӑ, мӗншӗн тесен скзауемӑй тытӑмне *пӑрах* глагол икӗ пайӗнне кӗрет.

Шухӑш енчен пайсем пӗр вӑхӑтри ӗҫсене пӗлтереҫҫӗ. Хутлӑ предложенин пӗрремӗш пайӗ – хутсӑр предложени (подлежащийӗ – *кайӑксем*; сказуемӑйӗ – *чӗвӗлтетме пӑрахрӗ,* икӗ тӗп членлӑ, ансӑр, тулли мар (*пӑрахрӗҫ* сӑмаха каламасӑр хӑварнӑ), ыйтусӑр, пурлӑ, эмоцисӗр. Иккӗмӗш пайӗ те – хутсӑр предложени (подлежащийӗ – *пӑвансем*; сказуемӑйӗ – *сӗрлеме пӑрахрӗҫ),* икӗ тӗп членлӑ, ансӑр, тулли, ыйтусӑр, пурлӑ, эмоцисӗр.

Пӗр вӑхӑтри ӗҫсене пӗлтернӗрен пайсем хушшине запятой лартнӑ.

Предложенин схеми:



**5.2. Ҫыхӑну паллиллӗ хутлӑ предложенисем**

**5.2.1. Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем**

**247. Панӑ предложенисене хӑш ушкӑна кӗнине кура таблицӑн кӗлеткисене вырнаҫтарӑр (предложенин номерне ҫырнипе те ҫырлахма юрать). Ку е вӑл ушкӑна тивӗҫтерекен икӗ тӗслӗх хӑвӑр тупса ҫырӑр.** 1. Урайне те сивӗ ан пултӑр, атту ура пӗрмаях шӑвать. *(А. Тарасов.)* 2. Шӑпланчӗ пӳрт, анчах ыйхӑ ватӑсен вырӑнӗ патне пыма васкамарӗ. *(А. Павловская.)* 3. Кӑмакине шуратнӑ, типсе ҫитичченех хутнӑ та, тӗл-тӗл ҫуркалашнӑ. *(А. Тарасов.)* 4. Килте пӗр шӑпӑр ҫеҫ тытмалла, ахальлӗн укҫа хӑвӑрт тӑкакланӗ.

*(«Чăваш хĕрарăмĕ»)* 5. Тĕтĕм те тухатчĕ пикировщикăн, çапах та аэродромне çитмелле марах сиенленменччĕ çав. *(В. Степанов.)*

*** Пĕр союз вырăнне тепĕр союз лартма май пур предложенисене кăтартăр.**

| №№ | Сыпăнуллă хутлă предложени н тĕсĕсем | Пайсене çыхантаркан союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | Сыпăнтарак ан сюзлă | та(те), тата | |
| 2. | Хирĕçлекен союзлă | анчах, çапах, атту, итту, ахальлĕн | |
| 3. | Уйăракан союзлă | е — е, пĕрре — тепре, те — те | |

**248. Нумай точка вырăнне правило тăрăх кирлĕ чарăну палли лартса çырса илĕр. Урăхла чарăну палли лартма ирĕк пур çĕрте вариант паллăсене скобкăра кăтартăр.**

1. Калама та кирлĕ марччĕ сана... анчах темшĕн санпа чĕре уçса калаçас килет. *(В. Паймен.)* 2. Çак вăхăтра алăк уçăлса кайрĕ те... пӳлĕме Галя кĕрсе тăчĕ. *(Н. Петровская.)* 3. Чун-кăмăл культури вăл, оазис пек, провинцире те пулма пултарать ăнсăртран...анчах шанăç пысăк мар. *(Ю. Артемьев.)* 4. Çутта тухăн та, пĕчĕкскерĕм, çын пулăн та... çак çутă ĕмĕтӳ, шухăшу манăçа тухмĕç-ши? *(А. Тарасов.)* 5. Хамăр çыравçăсен хайлавĕсене вулатăн та... авторĕсем чăваш паллисене, нацилĕх паллисене, аваллăхра шыраççĕ. *(П. Яккусен.)* 6. Йĕри-тавралла пăхатăн та... таçта çити курăнать. *(Уйăп Мишши.)* 7. Çула юсанă та... çатма тĕпĕ пек яка. *(Ю. Михайлов.)* 8.Эсĕ ăна хытах юратрăн-и... е сана унăн пуянлăхĕ илĕртрĕ-и? *(В.Трифонова.)*

**Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси**

| Правилăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|

| | |
|---|---|
| Сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсене **та(те)** союз çыхăнтарнă чухне запятой союз хыççăн лартаççĕ, ытти чухне – союз умĕн. | *Клавье аппа йынăшма тытăнать* ***те****, йысна кулли лап! сӳнет.* *Чарлансем пулă тытаççĕ, тата вĕршĕнсем вăр-р вĕçсе иртеççĕ.* ***Е*** *Ĕнчĕпек пултăр Янтула,* **е** *никам та кирлĕ мар.* *Хĕвел аннă ĕнтĕ,* ***анчах*** *тавралăх тĕттĕмленмен-ха.* |
| Предложенин пайĕсем пĕр-пĕрне хирĕçленине, ĕçсем хăвăрт пулса иртнине, кайранхи ĕç малтанхин результачĕ е следствийĕ пулнине кăтартма **та(те)** союз хыыççăн тире лартма юрать. | *Явăнать-явăнать* ***те*** *вĕрен – вĕçĕ пулатех.* *Черет номерне кăлартăм* ***та*** *– ман пĕрремĕш тухмалла иккен!* *Кирек мĕн кала* ***та*** *– больницăра пулмасăр киле таврăнмастăп!* *Такамсем енчĕк кăларса ӳкернĕ* ***те*** *– эпир тупрăмăр.* |

**249. Панă предложенисен тытăмне ăнлантарăр.**

1. Кăштах çыркалас тесе ручка тытрăм та – унта пĕр тумлам чернил та юлман. 2. Чунра тем вĕресе хăпарчĕ те, эпĕ качча хытах çапса ятăм пулас. 3. Çав вăхăтра шăнкăрав иккĕмĕш хут янăраса кайрĕ те, эпир зала кĕтĕмĕр. 4. Эпĕ хам пӳлĕме каяс тесе пĕр утăм чакнăччĕ те ĕнтĕ, анчах Надя çаплах кĕме васкамарĕ-ха. 5. Гена, эс тĕрĕс те калатăн пулĕ те, анчах çырăнни ĕмĕр пĕрле пурăнма çыхса лартни мар вĕт-ха. *(Н. Петровская.)* 6. Сережа, эсĕ мана каçар та – санпа пĕрле пыраймастăп. 7. Манăн малтан Марийăпа хăйĕнпе курнăçса илмеллеччĕ пулĕ те – курма пулать-и ăна? *(В.*

*Трифонова.)* 8. Вĕренес килетчĕ манăн, анчах ку шухăша эпĕ сухан măялана пек шутласа-тирпейлсе хутăм. *(Ю. Артемьев.)*

**Сыпăнуллă хутлă предложенисене тишкермелли йĕрке**

1. Панă тĕслĕх сыпăнуллă хутлă предложени пулнине каламалла.

2. Хутлă предложенин пайĕсне кăтартмалла.

3. Пайсене çыхăнтаракан союз.

4.Союзне кура сыпăнуллă хутлă предложени хăш ушкăна кĕрет?

5. Пайсем хушшинче палăракан шухăш çыхăнăвĕ: умлăн-хыçлăн е пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартни, пайсем пĕр-пĕринпе пиркепе следстви, ĕçпе результат çыхăнăвĕнче тăни, пĕр-пĕрне хирĕçлени, хăвăрт улшăнакан ĕçсене кăтартни тата ытти те.

6. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

**Тишкерӳ тĕслĕхĕ**

*Ярса ил-ха ăна, вăрăç пăртак*[1] [I]*, атту нимле те май çук*[2] [II]*.* (Хв. Коновалов.)

Ку тĕслĕх – сыпăнуллă хутлă предложени. Унăн I пайĕ – 1-мĕш предложени, II пайĕ – 2-мĕш предложени. Пайсем хирĕçлекен *атту* союзпа çыхăнаççĕ, çавăнпа хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени тăваççĕ. Шухăш енчен II пайĕ I пая хирĕçлет. I пайра калани II пайра каланишĕн хăйне майлă услови пулса тăрать.

I пайĕ – хутсăр предложени (подлежащийĕ çук, кирлĕ те мар; сказуемăйĕсем – *ярса ил, вăрăç*), тĕп членсăр, подлежащисĕр (ĕç тăваканни сказуемăйăн сăпат форминчен паллă), анлă, тулли, ыйтусăр, хистевлĕ, пурлă. II пайĕ те хутсăр предложени (подлежащийĕ – *май,* сказуемăйĕ – *çук),* икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, формипе пурлă, содержанийĕпе çуклă, калуллă.

Хутлă предложенин пайĕсем *атту* союзпа çыхăннăран союз умĕн запятой лартнă. Созсăр çыхăннăран *ярса ил* тата *вăрăç* пĕр йышши сказуемайсене запятой лартса уйăрнă.

Схема:




**5.2.2. Пăхăнуллă хутлă предложенисем**

**250. Тĕп тата пăхăнуллă предложенисен чиккисене цифрăсемпе кăтартăр, тĕп членсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Çыхăну мелне çаврашкана илĕр Хутлă предложенин схемине ўкерĕр.**

1. Ыраш çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăр вар хытсан усăллă. *(«Хыпар».)* 2. Хĕрсем калани тĕрĕсех иккен. *(Н. Ишентей.)* 3. Мана анне каçсерен макăрнăн туйăнатчĕ. *(И. Кошкина.)* 3. Хĕл ăшă пулнин лайăх енĕ те пур. *(Р. Власова.)* 4. Атте купăс каланă чух анне чўхенсе кăна тăратчĕ. *(А. Тарасов.)* 5. Енчен те утаман упа сиксе тухсан ирĕксĕрех шавласа илме тивет. *(В. Степанов.)* 6. Итле Тимкка пиччўне, вăл каланă пек пурăн. *(В. Паймен.)* 7. Панин граф вырăнне путлĕ генерал пулас тăк эпир çав крепоçе тахçанах, çавăн чухлĕ юн тăкмасăрах илмеллеччĕ. *(Н. Максимов.)*

**Тĕслĕхсем:**

Степан[1] хăй ача чухне юрла**нă**[2] юрăсене аса илесшĕн пулчĕ[1]. *(А. Тарасов.)*



Чунтан ăмсанатăп[1] пурнăçу ăнасс**а**[2] *(В. Таракат.)*



**251. Панӑ предложенисене пӑхӑнуллӑ хутлӑ тесе пӑхма мӗнле сӑлтав пур?**

1. Утӑ вӑхӑчӗ пулин те ирхи сывлӑш самай уçӑ. *(А. Волков.)* 2. Авӑн уйӑхӗ пулин те пӗр кунхине лапка-лапка юр çурӗ. *(Н. Мартынов.)* 3. Çу кунӗсем пулин те çӗрле çанталӑк чылай сулхӑн. *(З. Нестерова.)* 4. Августӑн юлашки кунӗсем пулин те çанталӑк уяр та ӑшӑ. *(В. Ермолаев.)*

**252. Пӑхӑнуллӑ предложенин тӗп членӑсем хӑш пулев пайӗ иккенне калӑр.**

1. Мӗн тери лайӑх ӑнлантӑм ӗнтӗ эпӗ юрату мӗнне, унӑн асамлӑ вӑйне. *(Н. Петровская.)* 2. Пирӗн çӑкӑр-тӑвартан аслӑ ан пулӑр, мӗн пуррипе çырлахӑр. *(Г. Максимов.)* 3. Арман умӗнче тӑракан кӗсрене шӑлӗ çук кашкӑр çиесшӗн пулнӑ. *(Ч. х. с.)* 4. Никам чарайман вӑрçӑ тӑруках лӑпланчӗ. *(Л. Сачкова.)* 5. Кӗр парни – нӳхреп тулли *(«Тантӑш».)* 6. Виççӗмӗш çул пыракан вӑрçӑ вӑй питти ар çынсене хирнӗçем хирет. *(В. Паймен.)* 7. Мӗн кирлине эпир пурне те туянӑпӑр. *(А. Тарасов.)* 8. Май пур таран пулӑшма та тӑрӑшӑттӑм. *(Н. Иванов.)* 9. Килте никам çуккине курса эпӗ хам валли çӗнӗ пиççи тума шутларӑм. *(Уйӑп М.)* 10. Художник пулаймарӑм, çавах сан сӑнна, Оля, пур пӗрех ӳкеретӗп. *(В. Трифонова.)*

**253. Панӑ тӗслӗхсене хӑйсен тӑваткалне лартса çырӑр (предложение хӑйне çырас вырӑнне номерне кӑтартма юрать). Пӗр-пӗр предложение суйласа илӗр те унӑн тытӑмне синтаксис тишкерӗвӗ йӗркипе ӑнлантарӑр.**

1. Мĕн ыйтатăн – çавă пулать. 2. Пĕтĕмпех эпĕ сĕннĕ пек пулĕ. 3. Çăварнинче ватти-вĕтти курмалла катаччи чуптарăп, Каншел тавра виççĕ çаврăнăп. *(Г. Максимов.)* 4. Вĕренӳ шайĕ анса ларчĕ пулин те аттестат илейрĕ Денис. 5. Пике именекен йышши марри куç кĕретех. *(В. Тараватӳ.)* 6. Эпĕ Ĕпхĕве çитсе университета пур пĕр кĕретĕп. («Хыпар».) 7. Çемйи пысăк пиччене çăкăр нумай кирлĕ. (Ч. х. с.) 8. Пахча çимĕç çулçисем çитĕннĕçемĕн çĕр улми çулçи яшки, хĕрлĕ кăшман çулçи яшки, сухан яшки çиетпĕр. 9. Пĕррехинче, хама тивнĕ турам пĕчĕкрех пек туййăнса кайрĕ мана. 10. Эпĕ çăвар çурăласла çухăрса ятăм. *(Уйăп М.)* 11. Хапха юписем – виçĕ çын хăлаçланса та ыталаса çитейми хулăн юманран. *(А. Талвир.)* 12. Эпир   çын илтмелле мар сас кăларса çеç ташлатпăр. *(В. Элпи.)* 13. Хунчăкам, атя хамăртан култарса тăрар мар çак ăçти çуксене. *(В. Николаев.)* 14. Ача мĕн чухлĕ ытларах чĕлхе пĕлет, унăн тавра курăмĕ çавăн чухлĕ анлăланать. 14. Ача тăван чĕлхинчен сивĕнсе пынин сăлтавĕ темĕн чухлех. *(Н. Егоров.)* 15. Налук парăмĕ пурри-çуккине çын хăйĕнне кăна тĕрĕслеет. *(«Хыпар».)* 16. Мĕн пур çимĕçе ӳсермелле, çумламалла, шăвармалла. *(«Тăван Атăл»)* 17. Кăкăр тулли орден-медаль çакнă фрнтовика комендант патне кĕме йывăр пулмарĕ. *(В. Степанов.)* 18. Арăмĕ çĕре кĕрсен йыш пурнăçĕ пушшех япăхланать, юхăнма пуçлать. *(М. Егоров.)* 19. Апрель уйăхĕ иртиччен – кăмака ватма ан васка. (*«Хресчен сасси»)* 20. Юрий Скворцов эпĕ Шупашкартан кайнă çул институт пĕтерчĕ те издательствăра ĕçлеме пуçларĕ. *(А. Васан.)* 21. Кăнтăрла иртнĕ çĕре атăллă пултăмăр. *(А. Павловская.)* 22. Больницăна пилĕк çул кайман Зойăшăн уяр кун аça çапнăн туйăнчĕ. *(«Хыпар».)*

| № № | Пăхăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем | Тĕслĕх номерĕ |
|---|---|---|
| 1. | Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем (1) | |
| 2. | Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем (2) | |

<table>
<tr><td>3.</td><td colspan="3">Хыҫ сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем (3)</td><td></td></tr>
<tr><td rowspan="6">4.</td><td rowspan="6">Пайĕсене аффикссемпе ҫыхăнтакакан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1)</td><td rowspan="3">Пайĕсене ят сăмахсен аффиксĕсемпе ҫыхăнтакакан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.1)</td><td>пайĕсене-и аффикспа ҫыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.1.1)</td><td></td></tr>
<tr><td>пайĕсене падеж аффиксĕпе ҫыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.1.2)</td><td></td></tr>
<tr><td>пайĕсене падеж системине кĕмен аффикссемпе ҫыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.1.3)</td><td></td></tr>
<tr><td rowspan="3">Пайĕсене глагол аффиксĕсемпе ҫыхăнтакакан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.2)</td><td>пайĕсене глаголăн причасти аффикссемпе ҫыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.2.1)</td><td></td></tr>
<tr><td>пайĕсене глаголăн деепричасти аффикссемпе ҫыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.2.2)</td><td></td></tr>
<tr><td>пайĕсене глаголăн ытти сăпат мар аффиксĕсемпе ҫыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем (4.1.2.3)</td><td></td></tr>
<tr><td>5.</td><td colspan="3">Пайĕсем вырăнĕ-йĕркипе ҫыхăнтакакан пăхăнуллă хутлă предложенисем (5)</td><td></td></tr>
</table>

* ***Пахча ҫимĕҫ ҫулҫисем ҫитĕннĕҫемĕн ҫĕр улми ҫулҫи яшки, хĕрлĕ кăшман ҫулҫи яшки, сухан яшки ҫиетпĕр*** **предложенирен чи анлă ят сăмах майлашăвĕсене ҫырса илĕр те схемисене ӳкерĕр. Схемисем пĕр пек-и, пĕр пек мар-и?**

**Тишкерӳ тĕслĕхĕ:**

Мĕн кирли[1] пурте пур[2] *(В. Степанов.)*

Панă тĕслĕх – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ – *пурте пур,* пăхăнулли – *мĕн кирли.* Пăхăнуллă пай тĕп пай умĕнче тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать, ĕҫ субъектне пĕлтерет, подлежащи ушкăнне кĕрет, *мĕн пур?* ыйтура тăрать.

Тĕп пай – хутсăр предложени (подлежащи ҫук, мĕншĕн тесен пăхăнуллă пай подлежащи ушкăнне кĕрет; подлежащи пек курăнакан *пурте* ĕҫ (паллă) паллине пĕлтерет). Пăхăнуллă пай та хутсăр предложени (подлежащи – *мĕн*, сказуемăй – *кирли*).

Палăртса уйăрман пирки пăхăнуллă пайпа тĕп пай хушшине тире лартман.

Предложенин схеми:



**254. Пăхăнуллă хутлă предложенисен схемисене ӳкерĕр, кăткăслану уйрăмлăхне ăнлантарăр.**

1. Эпир сирĕнпе тĕл пулнăранпа вун çичĕ çул иртрĕ пулсан та эсир ытлашши улшăнман. *(В. Трифонова.)* 2. Тăван культура шайĕ малашлăхра мĕнле пуласси эпир паян мĕнле ĕçленинчен, çитĕнекен ăрăва мĕнле майпа çывăхлатнинчен килет. *(«Хыпар».)* 3. Ака уйăхĕнче çĕр йăсăрлансан, уйăхĕ çумăрлă пулсан уйра пусăсем пахаланса юлаççĕ. *(«Хресчен сасси»)* 4. Эпĕ ăнлнман пек ун-кун пăхкаласа илтĕм, сехре хăпса тухнăн хăтланса каялла темиçе утăм чакрăм та ураран ура чăлханса такăнса ӳкрĕм. *(В. Степанов.)*

***Тĕслĕх:***

*<u>Упăшки</u> <u>вилсен</u>[1] Круни <u>карчăк</u> вун пĕрти ывăлне[2] çын <u>пултăр</u> тесе[3] хăйĕн тăванĕсем патне Якальне леçсе <u>хăварнă</u>[2].* (В. Паймен)



Ку предложени пăхăнуллă хутлă. Унăн тĕп пайне 2-мĕшпе 3-мĕш предложенисем кĕреççĕ. Пăхăнуллă пай – 1-мĕш предложени. Вăл хутсăр предложени (подлежащийĕ – *упăшки*, сказуемăйĕ – *вилсен*). Тĕп пай хăй – пăхăнуллă хутлă

предложени. Унӑн тӗп пайӗ – 2-мӗш предложени (подлежащи – *карчӑк*, сказуемӑйӗ – *хӑварнӑ),* пӑхӑнулли – 3-мӗш предложени (подлежащи ҫук, мӗншӗн тесен ӗҫ тӑваканни сказуемӑйӑн 3-мӗш сӑпат форминченех (*пултӑр*) паллӑ).

**255. Панӑ предложенисене схемӑн тивӗҫлӗ тӑваткалне вырнаҫтарӑр. (Пӗтӗм предложение ҫырса хурас вырӑнне номерне – кодне кӑтартсан та ҫитет.)**

1-мӗш ушкӑн

1. Пуринчен япӑххи – Осман империйӗ Вырӑс патшалӑхне хирӗҫ вӑрҫӑпа тухни. (1.1.)

2-мӗш ушкӑн

1. Ҫыннӑн чунӗ варалансан – юнӗ те вараланать. (2.1.) 2. Чӗре хушсан – кам паттӑр пулмӗ, кам тӑван ҫӗре чап кӳмӗ? (2.2.)

3-мӗш ушкӑн

1. Ача чухнехи хаваслӑх тарнӑшӑн та, ҫанталӑк тӗксӗмленнӗшӗн те – пуриншӗн те, пуриншӗн те пӗр ҫын айӑплӑ. (3.1.)

4-мӗш ушкӑн

1. Эпӗ пӗртен пӗр япаларан ҫеҫ – Мишша каллех каяссинчен – хӑрарӑм. (4.1.)

5-мӗш ушкӑн

1. Кӑнтӑрла иртсен, Шупашкартан килекен автобусран Идельмесов тухса юлчӗ. (5.1.) (*Танлаштарӑр:* Кӑнтӑрла иртсен Шупашкартан килекен автобусран Идельмесов тухса юлчӗ.)

6-мӗш ушкӑн

1. Йӗп ӑҫта, ҫип унта. (6.1.) 2. Утӑ кӑҫал сахалтарах пуҫтарӑнӗ, мӗншӗн тесен курӑк имшер ҫитӗнет. (6.2.) 3. Хуҫа сире йышӑнмарӗ тӗк унӑн вӑхӑт чӑнах та ҫук-и тен? (6.3.)

*(Танлаштарӑр:* Алӑра аттестат пулсан пур еннелле те ҫул уҫӑ.)

7-мӗш ушкӑн

1. Тулли залра хӗрпе каччӑ хӑйсен вырӑнне тупнӑ ҫӗре, ҫутӑ сӳнчӗ те, кино пуҫланчӗ. (7.1.)

8-мӗш ушкӑн

1. Каҫалапа, ачасем шкултан салансан эпӗ Катя патне кайрӑм. (8.1.)

(*Танлаштарӑр:* Каҫалапа ачасем шкултан салансан эпӗ Катя патне кайрӑм.)

2. Эпӗ, паян, эсир мӗн калаҫнине пӗтӗмпех илтрӗм. (8.2.)

*(Танлаштарӑр:* Эпӗ паян эсир мӗн калаҫнине пӗтӗмпех илтрӗм.)

9-мӗш ушкӑн

1. Ача чухнехи хаваслӑх тарнӑшӑн та, ҫанталӑк тӗксӗмленнӗшӗн те – пуриншӗн те, пуриншӗн те пӗр ҫын айӑплӑ. (9.1.)

**Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисене грамматикӑна, сӑмахсен ҫыхӑнӑвне тата ҫыхӑну пӗлтерӗшне кура лартасси**

| №№ | Правилӑсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. | Союзла сӑмахсемпе тата **мӗншӗн тесен (мӗн-ма тесен, ма тесен)** союзпа ҫыхӑннисемсӗр пуҫне ытти пӑхӑнуллӑ предложенисене чарӑну паллисемпе уйрӑмлатмаҫҫӗ. | |
| | Пайӗсем созсемпе тата союзла сӑмахсемпе ҫыхӑнман пӑхӑнуллӑ | |

| | | |
|---|---|---|
| | предложение сăмахсен ҫыхăнăвне уҫăмлатас тĕллевпе кăна уйрăмлатмалла. | |
| | Сăмахсен ҫыхăнăвне хăш чухне чарăну паллисем кăна уҫăмлатаҫҫĕ. | |
| | Шухăш тăрăх харăс темиҫе предложение ăнлантаракан пăхăнуллă предложени хыҫҫăн запятой лартмалла. | |
| | Сăмах е сăмах ушкăнĕ пăхăнуллă предложение мар, тĕп предложение кĕнине кăтартма ҫав сăмахсене запятойпа уйрăмлатмалла, анчах пăхăнуллă предложени хыҫҫăн запятой лартмалла мар. | |
| | Пăхăнуллă предложенисем пĕр йышши пулсан – чарăну паллисем хутсăр предложенири пекех. | |
| | Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисенче – икĕ пая та ăнлантаракан сăмахсене уйрăмлатмаҫҫĕ. | |
| | Тĕп пай следстви е результат пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртма пăхăнулли хыҫҫăн тире лартма | |

| | | |
|---|---|---|
| | юрать. | |
| | Шухăш уçăмлăхĕшĕн, палăртулăхĕшĕн, подлежащи е сказуемăй пулакан пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине тире лартмалла. | |

**256. Пăхăнуллă хутлă предложенисене тĕрĕс паузăсем туса вулăр, чарăну паллисене мĕншĕн лартнипе лартманнине ăнлантарăр. Ку е вăл предложени пунктуацин хăш правилипе (255-мĕш хăнăхтару) килĕшсе тăнине унăн код номерĕпе палăртăр.**

1. Хăш енчен çăлтăрсем пит çутă, çав енчен çил тухать. *(Халăх сăмахлăхĕ.)* 2. Вĕренӳре кам тăрăшать, унăн çитĕнĕвĕ те пулать. 3. Элмен ертсе пынипе, граждан вăрçи пуçланиччен Чăваш пайĕн сотрудникĕсем автономи тăвассипе ĕçленĕ. *(Ю. Михайлов.)* 4. Иван Николаевич, халĕ, пушă вăхăт тупăннипе «çуран урапа» çинче вун-вун çухрăм «çăмхалать» *(Г. Васильев.)* – Иван Николаевич халĕ пушă вăхăт тупăннипе «çуран урапа» çинче вун-вун çухрăм «çăмхалать». 5. Ун чухне хам çамрăк пулнипе эпĕ Том Сойерпа Гек Финн çинчен вулаттăм. *(Г. Вихров.)* – Ун чухне, хам çамрăк пулнипе эпĕ Том Сойерпа Гек Финн çинчен вулаттăм. 6. 1942 çулта, нимĕçсем Сталинград патнелле çывхарнă чухне пирĕн çемьене Вăтам Азие Тимертау хулине эвакуацилерĕç. («Хыпар») – 1942 çулта нимĕçсем Сталинград патнелле çывхарнă чухне пирĕн çемьене Вăтам Азие Тимертау хулине эвакуацилерĕç. 7. Тепĕр кунне, йăмрасем Лапшу Çтаппанĕ пек вăрăм мĕлкесем ӳкерсен урама тухрăм. *(Н. Мартынов.)* – Тепĕр кунне йăмрасем Лапшу Çтаппанĕ пек вăрăм мĕлкесем ӳкерсен урама тухрăм. 8. Кăнтăрла иртсен хулана уçăлма тухнă çын пек пулса Меринова çурчĕ

патӗнчен темиҫе хут каялла-малалла утса иртрӗм. *(М. Кипек.)* – Кӑнтӑрла иртсен, хулана уҫӑлма тухнӑ ҫын пек пулса Меринова ҫурчӗ патӗнчен темиҫе хут каялла-малалла утса иртрӗм. 9. Нарӑс уйӑхӗн варринче, чунра ӑшӑ туйӑм хуҫаланасса кашни чӑтӑмсӑррӑн кӗтет. *(«Тантӑш».)* – Нарӑс уйӑхӗн варринче чунра ӑшӑ туйӑм хуҫаланасса кашни чӑтӑмсӑррӑн кӗтет. 10. Шупашкар Ӗсмӗл лапамӗнче тиха кӗҫеннӗ сасӑ илтӗнмест. *(*А. *Максимов.)* – Шупашкар Ӗсмӗл лапамӗнче, тиха кӗҫеннӗ сасӑ илтӗнмест. 11. Пурнӑҫра хамӑн ачасем пулманнипе яланах ҫут ҫанталӑка ҫывӑх пулма тӑрӑшаттӑм. *(И. Пахомов.)* – Пурнӑҫра, хамӑн ачасем пулманнипе яланах ҫут ҫанталӑка ҫывӑх пулма тӑрӑшаттӑм. 12. Енчен те кӑвакарчӑн ӑмӑртура ҫӗнтерет пулсан ун ҫине хуҫи урӑхларах пӑхма пуҫлать. *(А. Сокова.)* 13. Вӗсем усал тӑк эпир те усал *(Л. Таллеров.)* 14. Кӑн-кӑвак тӳпе тӗслӗ чаршав Уҫӑлсассӑн хуллен ик енне, Ҫил лӑпланчӗ, путланчӗ шӑв-шав, Пӗчӗк Минь тухрӗ сцена ҫине. *(В. Кондратьев.)* 15. Хальхинче татӑклӑ тытӑҫу пуласса, унта ҫак ҫамрӑк лейтенантпа иккӗшӗ ҫӗнтерессе Иван Тимофеевич пӗтӗм чунӗпе ӗненме пуҫларӗ. (*В. Синичкин.)* – Хальхинче, татӑклӑ тытӑҫу пуласса, унта ҫак ҫамрӑк лейтенантпа иккӗшӗ ҫӗнтерессе Иван Тимофеевич пӗтӗм чунӗпе ӗненме пуҫларӗ. 16. Тӗтре карсан тата эрешмен картисем вӑраммӑн вӗҫсен, кӗр вӑраха каять, юр час ҫумасть. *(Халӑх сӑмахлӑхӗ.)*

**257. Пӑхӑнуллӑ предложение (пая) мӗн тӗллевпе уйрӑмлатнине ӗнентерӗр. Запятой лартмасан пӗтӗм тӗслӗх пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пулаять-и? Мӗншӗн? Предложенисен схемисене ӳкерсе пӑхӑр, ушкӑнпа сӳтсе явса тӗрӗслӗр.**

1. **Кӳтсе ҫитнӗ чунӗ мӗн калас тенине каланӑ хыҫҫӑн,** Кӗркури кӑшт лӑпланнӑ пек пулать, унӑн пӑлхавлӑ шухӑш-кӑмӑлӗ самаях пусӑрӑнать. *(М. Егоров.)* 2. **Шкул ҫук тӑк,** каять вара ҫын

юхăм майĕпе, шывĕ юхтарать те юхтарать. *(Ю. Артемьев.)* 3. **Вулав референдумĕ иртсен,** «Салампие» тепĕр хут вулакансем йышлăн тупăнчĕç, çамрăксем библитекăсене ушкăн-ушкăнпа çӳреме тытăнчĕç. *(«Тăван Атăл».)* 4. **Уй-хир пушансан, пӳлме «сарă ылтăнпа» тулсан,** кăмăл та савăк, юрлас-ташлас та килет. *(«Хресчен сасси».)*

* **Тире лартса çырни *(Уй-хир пушансан, пӳлме «сарă ылтăнпа» тулсан — кăмăл та савăк, юрлас-ташлас та килет.)* мĕне пĕлтерет?**

**258. Паллă тунă сăмаха, сăмахсене чарăну палли лартса уйрăмлатнине мĕнле ăнланмалла? Чарăну палли çукки мĕне пĕлтерет? Пăхăнуллă педложени (пай) хыççăн запятой мĕншĕн лартмалла мар? Паллă тунă сăмахсем предложенире ăçта тăраççĕ? Ăçта тăнипе пунктуаци хушшинче епле çыхăну пур?**

**Педложенисен чарăну паллиллĕ варианчĕн тата чарăну паллисĕр варианчĕн схемисене ӳкерĕр. Чарăну палли пуррипе çукки схемăсенче епле курăнать?**

1. **Халĕ**, çулсем иртнĕçемĕн кичемлĕх туйăмĕ çавăрса илмерĕ-и? *(«Хыпар».)* — Халĕ **çулсем иртнĕçемĕн** кичемлĕх туйăмĕ çавăрса илмерĕ-и? 2. **Пĕррехинче**, ĕç кунĕ пĕтес умĕн Людмила кабинетне Мирина Михайловна çамрăк тухтăр хаваслăн пырса кĕчĕ. *(Ара М.)* — Пĕррехинче **ĕç кунĕ пĕтес** умĕн Людмила кабинетне Мирина Михайловна çамрăк тухтăр хаваслăн пырса кĕчĕ. 3. **Кăçал,** вице-адмирал çуралнăранпа çĕр вунă çул çитнĕ май палăк çĕкленчĕ. *(Н. Смирнова.)* 4. **Хуçалăхра**, ар алли çукки сисĕнет çав. *(Ю. Исаев.)* — **Хуçалăхра ар алли çукки** сисĕнет çав. 5. **Çулла**, типĕ çилсем вĕре пуçласан хула урамĕсене хăйăр çуса каять. *(В. Паймен.)* — **Çулла типĕ çилсем вĕре пуçласан** хула урамĕсене хăйăр çуса каять. 6. **Юлашки вăхăтра,** Петĕр Санюкпа

çӳренине юратмасăр пуръннă каччăсем те Петĕр çине тăрăнма пăрахрĕç ĕнтĕ. *(В. Рсай.)* – **Юлашки вăхăтра Петĕр Санюкпа çӳренине** юратмасăр пуръннă каччăсем те Петĕр çине тăрăнма пăрахрĕç ĕнтĕ. 7. **Пĕррехинче**, килте атте-анне çук чухне пирĕн пата пĕр хĕр пырса кĕчĕ. – **Пĕррехинче килте атте-анне çук** чухне пирĕн пата пĕр хĕр пырса кĕчĕ. *(«Хресчен сасси».)*

* ***Çулла, типĕ çилсем вĕре пуçласан хула урамĕсене хăйăр çуса каять*** **педложенин сăмахĕсем запятой пур тата çук чухне епле çыхăннине стрелкăсенчен тăракан схемăсем ӳкерсе кăтартăр.**

**259. Чарăну паллипе уйрăмлатнă сăмахсем предложенире хăш вырăнта тăраççĕ? Уйрăмлату паллисем сăмахăн (сăмах майлашăвĕн) миçе? Ку мĕнрен килет? Пăхăнуллă предложени хыççăн запятой мĕншĕн лартмалла мар? Чарăну паллисем лартманни сăмахсен çыхăнăвĕнчен килнине (е ăна витĕм кӳнине) ĕнентерĕр. Пăхăнуллă предложени хыççĕнче чарăну паллисем çукки мĕнрен килет?**

1. Тасатнă йăрансем çинче, **кайран**, пахча çимĕçĕ ӳснĕ чухне çум курăк сахалрах тухать. *(В. Багадерова.)* – Тасатнă йăрансем çинче **кайран пахча çимĕçĕ ӳснĕ** чухне çум курăк сахалрах тухать. 2. Тавлашу-хирлешӳ, **пиллĕкмĕш кун**, депутатсем хăйсен наказĕсене сĕне пуçласан тапранса кайрĕ. *(Н. Максимов.)* – Тавлашу-хирлешӳ **пиллĕкмĕш кун депутатсем хăйсен наказĕсене сĕне пуçласан** тапранса кайрĕ. 3. Эпĕ, **виç эрне хушши**, пилĕк сурнипе аптраса пурăнтăм. *(Уйăп М.)* – Эпĕ **виç эрне хушши пилĕк сурнипе** аптраса пурăнтăм. 4. Сентиер пулла пит ухутах мар, **вырсарнисенче,** виц-вахмистр ирĕк парсан хула курса çӳреме тухать. *(Н. Максимов.)* – Сентиер пулла пит ухутах мар, **вырсарнисенче виц-вахмистр ирĕк парсан** хула курса çӳреме тухать. 5. Хĕвел анннă çĕрелле, **ирхине,** сывлăм типиччен шыв йăтатпăр çимĕç шăварма. *(В. Элпи.)* – Хĕвел анннă çĕрелле, **ирхине сывлăм типиччен** шыв йăтатпăр çимĕç шăварма. 6. Аннене,

**уяв ячĕпе,** патша панӑ парнене парнелерĕм. *(Г. Аркадьева.)* – Аннене **уяв ячĕпе патша панӑ** парнене парнелерĕм. 7. Кайран аттепе анне, **утарта,** ĕç нумай тесе юлчĕç. – Кайран аттепе анне **утарта ĕç нумай** тесе юлчĕç. 8. Сак çине ларсан, **сасартӑк,** хам ывӑннине туйса илтĕм. *(Ю. Исаев.)* – Сак çине ларсан **сасартӑк хам ывӑннине** туйса илтĕм. 9. Хĕр, ***Рамаш пекех,*** çыру килменнипе тарӑхать иккен. *(В. Паймен.)*

* ***Эпĕ, виç эрне хушши, пилĕк сурнипе аптраса пурӑнтӑм. Сак çине ларсан, сасартӑк, хам ывӑннине туйса илтĕм*** **предложнисен сӑмахĕсем *виç эрне хушши, сасартӑк* сӑмахасене уйрӑмлатнӑ чух тата уйрӑмлатман чух епле çыхӑннине стрелкӑллӑ схемӑсем ӳкерсе кӑтартӑр.**

**260. Пӑхӑнуллӑ предложение (пая) вӑл предложени пуçламӑшĕнче тӑнӑран уйрӑмлатнӑ-и, урӑх сӑлтавпа-и? Уйрӑмлатмасан сӑмахсен çыхӑнӑвне епле ӑнланмалла? Уйрӑмлату пуррипе çукки предложенин содержанине епле улӑштарнине схемӑсем ӳкерсе ӑнлантарӑр.**

1. **Юрӑ пĕтсенех**, кӑвайт таврa пуçтарӑннӑ çамрӑксем савӑнӑçлӑн шавлама тытӑнчĕç. *(Н. Андреев.)* – Юрӑ пĕтсенех кӑвайт таврa пуçтарӑннӑ çамрӑксем савӑнӑçлӑн шавлама тытӑнчĕç. 2. **Хӑвӑр кĕтнĕ пекех**, ывӑл çуратрӑн. *(Г. Максимов.)* – Хӑвӑр кĕтнĕ пекех ывӑл çуратрӑн. 3. **Пандеми пуçлансанах**, вакцина шухӑшласа кӑларасса кĕтрĕм. *(«Хыпар»)* – Пандеми пуçлансанах вакцина шухӑшласа кӑларасса кĕтрĕм. 4. **Ури начар утать пулин те**, курава уçма Иван Павлович хай те пынӑ. *(Ю. Михайлов.)* – **Ури начар утать пулин те** курава уçма Иван Павлович хай те пынӑ. 5. **Диверсант тĕм айне йывӑр кутамккине хывса пытарса хӑварсан**, вӑл каялла çак сукмакпах таврӑнасса ӑнлантӑм-ĕнентĕм. *(В. Степанов.)* – Диверсант тĕм айне йывӑр кутамккине хывса пытарса хӑварсан

вăл каялла çак сукмакпах таврăнасса ăнлантăм-ĕнентĕм. 6. **Шăрăх аптратнипе,** çил варкăшĕ хуятăр тесе, пахчана тата урама тухакан чӳречесене яри! уçса янă. *(Е. Енглаев.)* – Шăрăх аптратнипе çил варкăшĕ хуятăр тесе, пахчана тата урама тухакан чӳречесене яри! уçса янă.

**261. Предложени ăшне вырнаçнă пăхăнуллă предложение мĕн тĕлевпе уйрăмлатнă? Уйрăмлатмасан сăмахсен çыхăнăвне епле ăнланмалла – схемăсем ӳкерĕр. Çыхăну варианчĕсем нумаййине шута илĕр.**

1. Каçсан, эс вĕрентнĕ пек, пӳрнене çăвара чиксе шăхăрăп. (В. Паймен.) – Каçсан, **эс вĕрентнĕ пек пӳрнене çăвара чиксе** шăхăрăп. 2. Ирсерен, хĕвел тухсанах, çынсем калаçнипе, тĕрлĕрен урăх сасăпа вăранатăп. *(Г. Луч.)* – Ирсерен, **хĕвел тухсанах çынсем калаçнипе**, тĕрлĕрен урăх сасăпа вăранатăп. – **Ирсерен хĕвел тухсанах**, çынсем калаçнипе, тĕрлĕрен урăх сасăпа вăранатăп. 3. Тепĕр кунне эпĕ час-часах пĕрремĕш курс аудиторийĕ умне пыра-пыра тăтăм, алăк уçăлмассерен, Надя тухасса кĕтрĕм, анчах кураймарăм. *(Н. Петровская.)* - Тепĕр кунне эпĕ час-часах пĕрремĕш курс аудиторийĕ умне пыра-пыра тăтăм, **алăк уçăлмассерен Надя тухасса** кĕтрĕм, анчах кураймарăм. 4. Тĕрĕссипе, атте килтен тухса кайнă хыççăн, вăл ман çинчен манса кайнăнах туйăнатчĕ. *(И. Кошкина.)* – Тĕрĕссипе, **атте килтен тухса кайнă хыççăн вăл ман çинчен манса кайнăнах** туйăнатчĕ. 5. Васьки, йăнăш ан пултăр тесе, ларакан çынсем патне ыттисенчен çывăхарах пычĕ. *(В. Паймен.)* – Васьки **йăнăш ан пултăр тесе ларакан** çынсем патне ыттисенчен çывăхарах пычĕ.

* **Каçсан, эс вĕрентнĕ пек, пӳрнене çăвара чиксе шăхăрăп. – Каçсан, эс вĕрентнĕ пек пӳрнене çăвара чиксе шăхăрăп**

**предложенисен сăмахĕсем епле çыхăннине стрелкăсемпе схемăласа кăтартăр. Схемăсенче епле уйрăмлăх пур – ĕнентерĕр.**

**5.3. Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем**

➤ Хутлă предложенисен икĕ пайĕнчен пĕри е иккĕшĕ те мĕнле те пулин хутлă предложени е пĕр йышши предложенисен ярăмĕ пулма пултарать. Çавна май пĕтĕм хутлă предложени кăткăсланать. Кăткăс тытăмлă хутлă предложение тишкернĕ чухне кашни пайне вăл мĕнле предложени пулнине шута илеççĕ, ăна хăйĕн тишкерӳ йĕркине пăхăнса ăнлантараççĕ. Схема паллисем икĕ хутсăр предложениллĕ хутлă предложенисенни пекех. Ярăма кĕрекен хутсăр предложенисене виç кĕтеслĕхсемпе кăтартаççĕ.

**262. Предложенисем мĕншĕн çыхăну паллисĕр хутлă? Предложенисен тытăмне ăнлантарăр, схемисене ӳкерĕр.**

1. Афзал агай паçăрах çывăрма кĕчĕ-ха – пирĕн вара çав-çавах ыйхă килмерĕ, сăмах çине сăмах хушăнса пычĕ. *(Н. Иванов.)* 2. Халĕ атя Чернышева кала: çарăçсемпе тарçă-тĕрçе хăвăрт кăна апатлантартăр та, çула тухăпăр. 3. Калаçсан-калаçсан Канаш çак шухăш патне çитрĕ: енчен вăрçă ăнăçлă вĕçленет тĕк султана вырăс карапĕсене Хура тинĕсре ирĕклĕн çӳреттерме хушмалла. *(Н. Максимов).* 4. Степан хăй хулана тухса кайнă куна куç умне кăларма тăрăшать – нимĕн те асне килмест. *(А. Тарасов.)* 5. Кăмăл пурри кăна çителĕксĕр – халăх шанăçне çĕнсе илмелле. *(А. Изман.)* 6. Вĕренӳ çулĕ вĕçленесси нумаях та юлмарĕ – тепĕр виçĕ уйăх пĕлӳ пухмалла та ун хыççăн экзаменсене хатĕрленмелле. *(Ара М.)*

***Тĕслĕх:***

Эх, еплерех илемлĕ-çке каçхи вăрман[1] [I]: йĕри-тавра техĕмлĕ шăршă тăрать[2], кайăк сасси илтĕнет[3], çӳлте тӳпере кăтра пĕлĕтсем витĕр çавра уйăх вăтанчăклăн пăхать[4] [II]. *(Ара М.)*

Ку предложени кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă. I пайĕ – 1-мĕш предложени, II пайĕ – 2-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ. Пайсем расна тытăмлă, мĕншĕн тесен I пайăн тымĕнче риторикăллă ыйтуллă, глаголсăр предложени, II пайăн предложенийĕсем пурте ыйтусăр, глаголлă. Шухăш тăрăх II пай I пайăн содержанине уçăмлатать.

I пай – хутсăр предложени (подлежащи – *вăрма*, сказуемăй – *илемлĕ),* икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтуллă, пурлă.

II пай – пĕр йышши предложенисен ярăмĕ. Ярăмăн 1-мĕш предложенийĕ хутсăр (подлежащи – *шăршă*, сказуемăй – *тăрать),* икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă. 2-мĕш предложени хутсăр (подлежащи – *сасси*, сказуемăй – *илтĕнет),* икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă. 3-мĕш предложени те хутсăр (подлежащи – *уйăх*, сказуемăй – *пăхать),* икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă.

II пай I пайăн содержанине ăнлантарнă пирки пайсем хушшине икĕ точка лартнă (правило тире лартма та ирĕк парать). II пайра ярăма кĕнĕ (союзсăр çыхăннă) виçĕ хутсăр предложение пĕр-пĕринчен запятойсем лартса уйăрнă. Хутсăр предложеманисен пайĕсене интонаципе палăртса уйăрман пирки ниçта та тире лартман. *Эх* междометие (1-мĕш предложени) запятой лартса кăтартнă.

Предложенин схеми çакнашкал:



**263. Предложенисен схемисене ўкрĕр. Схема тăрăх хутсăр предложенисем миçе тухаççĕ?**

1. Ăçтан пĕлес: сăртпа сăрт  хирĕç пулмаççĕ – çынпа çын тĕл пуласси часах. *(А. Павловкая.)* 2 Канаш хыççăнах, Кĕтерне патша сăмахпа хушнине хут çине çырса хучĕç: çапăçакан Пĕрремĕш çара ертсе пыма Петр Румянцев аншеф генерала, Иккĕмĕмш çара ертсе пыма Петр Панин аншеф генерала хушас. *(Н. Максимов.)* 3. Те иртни çинчен аса илни кăштах хурлантарчĕ, те иккĕшĕ те пĕрле арпашăнса кайрĕç – ман куçран хам ӳссе çитĕннĕ хыççăн пĕрремĕш хут куç шывĕ тумламĕсем юхса анчĕç... *(Н. Петровская.)* 4. Эпĕ хушнине Григорий Григорьевич ан пĕлтĕр: темскер вăл инородецене килĕштерсех кайман пек туйăнчĕ. *(Н. Максимов.)*

**264. Предложенисем çыхăну паллиллĕ сыпăнуллă хутлă иккенне ĕнентерĕр. Вĕсене синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр, схемисене ӳкерĕр.**

1. Унтанпа темиçе çул та иртрĕ ĕнтĕ, анчах имератрица Орлова качча тухас пирки калаçу тапрансанах сăмаха урăх енне пăрать. *(Н. Максимов.)* 2. Кукаçу килĕшсен кĕркуннех туй туса пĕрлешĕпĕр, анчах вĕренмелле-çке санăн. *(Н. Иванов.)* 3. Ĕнтĕ хĕл те иртет, сивĕсем те чакаççĕ, çавах пальто илейместĕп. *(А. Павловская.)* 4. Пысăк та вара Хусан, анчах нимех те курса ĕлкĕрейместĕн: хытă пырать автобус. *(А. Павловская.)* 5. Улпут апачĕ мар та – мĕн пурри пĕтĕмпех сирĕн умăрта пулĕ. *(Н. Максимов.)*

***Тишкерӳ тĕслĕхĕ:***

*Кунта çынсене хура çĕр аван тăрантарать[1 I], тата унăн чикки-хĕрри çук[2] – мĕн чухлĕ сухалаятăн, çавăн чухлĕ йышăнма пултаратăн[3 II].* (Н. Максимов.)

Ку предложени кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложени. Унăн I пайне 1-мĕш предложени кĕрет, II пайне – 2-мĕшпе 3-

мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ. Пайсем *тата* сыпăнтаракан союзпа çыхăнаççĕ. Шухăш енчен II пай I пайра калани çумне çĕнĕ информаци хушса хурать.

I пай – хутсăр предложени (подлежащийĕ – *çĕр,* сказуемăйĕ – *тăрантарать*), икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă.

II пай – çыхăну паллисĕр хутлă предложени. Унăн I пайĕ – 2-мĕш предложени, II пайĕ – 3-мĕш предложени. Пайсем расна тытăмлă, мĕншĕн тесен малтанхи пайĕ глаголсăр, ун хыççĕнхи глаголлă. Шухăш енчен пайсем пиркепе следстви çыхăнăвĕнче тăраççĕ. I пай – хутсăр предлоени (подлежащи – *чикки-хĕрри,* сказуемăй – *çук*), икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, грамматикипе пурлă, содержанийĕпе çуклă, анлă, тулли. II пай та хутсăр предложени (подлежащи çук, мĕншĕн тесен ĕç тăваканни сказуемăйсен 2-мĕш сăпат форминчен паллă; сказумйĕсем – *сухалаятăн, пултаратăн),* пĕр тĕп членлă, подлежащисĕр, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă.

Пĕтĕм тĕслĕхĕн пайĕсем *тата* союзпа çыхăннă. Çавăнпа союз умĕн запятой лартнă. Пиркепе следстви çыхăнăвне палăртса каланă пирки çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсене тире лартса уйăрнă. Ĕçсене танлаштрса кăна кăтартнăран *сухалаятăн, пултаратăн* пĕр йышши сказуемăйсем хушшине запятой лартнипе çырлахнă.

***Схема:***




**265. Предложенин схемине укрĕр. Унта хутсăр предложенисем пĕтĕмпех палăрчĕç-и?**

Пур пĕрех халĕ хамăн чĕрене кĕнĕ туйăма нимĕн юлми уçса кăтартма сăмах тупăнмастчĕ, тата ăна пĕтĕмпех уçса кăтартма сăмахсем те вăйсăр. *(Н. Петровская.)*

**266. Пăхăнуллă хутлă предложенисем мĕншĕн кăткăс тытăмлă пулнине синтаксис тишкерĕвĕ туса тата схемăсем ӳкерсе ĕнентерĕр.**

1. Класс шавласран кашни урок умĕн мĕн пур ача валли вĕренӳ материалĕ хатĕрлетĕп. *(«Хыпар».)* 2. Урок вĕçленнине пĕлтерсе шăнкăрав янăраса кайиччен учитель килте тумалли ĕç çинчен каларĕ. *(Ара М.)* 3. Хама турă пӳрни шурăм пуç пики пулсан сывлăм тумламĕ пулăттăм эпĕ, ниçта уйрăлмасăр çӳрĕттĕм. *(Н. Иванов.)* 4. Пурнăç урапи кăлтăртатса ăçта çитессине, шăпа еплерех килсе тухассине никам та пĕлмест. *(Р. Власова.)* 5. Ишĕлчĕк хĕсĕкрен тата хапха уçăлманран вырăссем крепость стени çине унта та кунта пусмапа хăпарса кайрĕç. *(Н. Максимов.)* 6. Круни карчăк хĕвел вупăра çĕнтерни çинчен хурлăхлă та савăнăçлă юрă юрланă чух Таймансен пӳрчĕ умне Мăрсапай Тимушĕ пырса тăнă. *(В.Паймен.)*. 7. Эпĕ хама ăш хыпнă çын типсе ларнă çăл куçĕ умĕнче тăнăн туятăп. *(Н. Петровская.)* 8. Александр Михайлович Голицын граф ертсе пыракан çар штабне Потёмкин кăнтăрла пуласпа пырса çитрĕ. *(Н. Максимов.)*

***Тĕслĕхсем:***

*Экскурсире пулас <u>ĕмĕт</u> канăç <u>паманнипе</u>[1], шкула кайма пуçтарăнас <u>вăхăт</u> <u>çитесрен</u>[2] çав тери пăшăрхантă<u>м</u>[3].* (А. Казаков.)

Ку тĕслĕх – кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ - 2-шпе 3-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ, пăхăнулли – 1-мĕш предложени.

Пăхăнуллă пайĕ тĕп пай умĕнче тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать, **-пе** пĕрлелĕх падеж аффиксĕпе çыхăнать, пиркене

пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет, мĕн пирки... кĕтрĕм? ыйтуллă.

Пăхăнуллă пай – хутсăр предложени (подлежащи – *ĕмĕт*, сказуемăй – *паманнипе*).

Тĕп пай – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ - 3-мĕш предложени, пăхăнулли- 2-мĕшĕ. Пăхăнуллă пай тĕп умĕнче тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать, **-рен** туху падеж аффиксĕпе çыхăнать, ĕç объектне пĕлтерет, дополнени ушкăнне кĕрет, мĕнрен пăшăрхантăм? ыйтуллă.

Тĕп пай – хутсăр предложени (подлежащи  çук, кирлĕ те мар, мĕншĕн тесен ĕç субъекчĕ сказуемăй форминчен паллă; сказуемăй – *пăшăрхантăм*). Пăхăнуллă пай – хутсăр предложени (подлежащи – *вăхăт,* сказуемăй – *çитесрен*).

2-мĕш предложенипе мар, 2-мĕшпе 3-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартма 1-мĕш предложение хыçала запятой лартса уйрăмлатнă.

***Схема:***



*Ахтупай*[1] *хăйне мăрса чĕнтерессе*[2] *кĕтсе тăмарĕ*[1] – *хăех кайма*[3] *шутларĕ*[1]. (К. Турхан.)

Ку предложени пăхăнуллă хутлă. Унăн тĕп пайĕ – 1-мĕшпе 3-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ, пăхăнулли – 2-мĕш предложени.

Пăхăнуллă пай тĕп пай ăшĕнче тăрать, унăн *кĕтсе* сăмахне ăнлантарать, унпа **-е** пару падеж аффиксĕпе çыхăнать, ĕç объектне пĕлтерет, дополнени ушкăнне кĕрет, *мĕн кĕтсе?* ыйтуллă.

Пăхăнуллă пай – хутсăр предложени (подлежащи – *мăрса,* сказуемăй – *чĕнтерессе*)

Тĕп пай – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ -1-мĕш предложени, пăхăнулли – 3-мĕш предложени.

Тĕп пай – хутсăр предложени (подлежащи – *Ахтупай,* сказуемăйсем – *тăмарĕ, шутларĕ*).

Пăхăнуллă пай та хутсăр предложени (подлежащи – *хăех,* сказуемăй – *кайма*).

Шухăш енчен хирĕçленине палăртса калама 1-мĕш предложенин пĕр йышши сказуемăйĕсем *(тăмарĕ, шутларĕ)* хушшине тире лартнă. Тире çукки хирĕçлеве палăртса кăтартманнине пĕлтерет.

***Схема:***



***<u>Хутлă предложени» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем</u>***

1. Хутлă предложенисем хутсăррисенчен мĕн енчен уйрăлса тăраççĕ?

2. Хутлă предложенисем çыхăну паллисĕр тата çыхăну паллиллĕ пулни мĕнпе çыхăннă?

3. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисене пĕрешкел тытăмлă тата расна тытăмлă пулаççĕ тесе ушкăнлани мĕн тума кирлĕ?

4. Сыхăну паллиллĕ хутлă предложенисенчен хăшĕсем çыхăну паллисĕррисене, хăшĕсем хутсăр предложенисене аса илтереççĕ?

5. Сыпăнуллă хутлă предложенисен мĕнле-мĕнле ушкăнĕсем пур?

6. Пăхăнуллă хутлă предложенисен ушкăнĕ нумаййи мĕнрен килет?

7. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисен пайĕсем хушшине ку е вăл чарăну палли лартасси мĕнрен килет?

8. Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартас енчен епле вариантлăх пур?

9. Пăхăнуллă хутлă предложенсен пунктуацийĕ предложенисен грамматикипе тата сăмахсен çыхăнăвĕпе çыхăннине мĕнле тĕслĕхсемпе ĕнентерме пулать?

**267. Текстсенче тĕл пулакан хутлă предложенисене тупăр та тытăмне ăнлантарăр, схемисене ӳкерĕр.**

1.

Эс ас тăватăн-и: атте купăс калатчĕ, анне юрлатчĕ. Атте купăс каланă чух куçĕ вĕçĕмех хупăнатчĕ унăн. *(А.Тарасов.)*

2.

Анне, эс пĕçернĕ апатран тутли нимĕн те çук çĕр çинче. Таçта та çитсе куртăм, темле халăх апатне те тутанса пăхрăм – эс пĕçернине çитекенни çуках. *(А. Павловская.)*

3.

Денис амăшне пульницана вырнаçтарса килнĕ çĕре хваттерте Дюймовочка çукчĕ. Каччă хăй пӳлĕмĕнче шкап уçрĕ те Каринăн

япалисем çуккине асăрхарĕ. Çул çӳремелли пысăк сумка та «ураланнă». *(В. Тарават.)*

4.

Кăнтăрла иртсе икĕ сехет çитнĕ çĕре тутлă шăршăллă сип-симĕс утă лупас тăррине хăпарса та выртрĕ. Пысăк ĕç пулчĕ. Ĕнтĕ кăшт канса илме те юрать. *(А. Павловская.)*

5.

Пур çĕрте те хăйне евĕрлĕ илем пур, анчах Пушкăрт çĕрĕнчен илемлĕреххине тĕл пулмарăм. Кунта сывлăшĕ те уçăрах, шывĕ те тутлăрах. *(Н. Иванов.)*

6.

Нумай пулăшрĕ вăрман халăха. Кашăк çавăрăнми вĕлтĕрен, серте, пултăран, ут кăшкарĕ, пиçен, кăшман çулçи, купăста тултарнă яшкана тутă кĕме пĕр çăмарта, пĕр стакан сĕт, çур стакан кĕрпе – е вир кĕрпи, е пăри кĕрпи (е пĕр-икĕ кашăк çăнăх) – ярса çичĕ çын валли пĕр хуран пĕçернĕ. *(«Тăван Атăл»)*

*** Хăвăрт пăхса тухăр: хăш-хăш текстра тĕп членсăр хутсăр предложенисем пур? Хутлă предложенисен тытăмне кĕрекеннисем çук-и?**

## Чĕлхепе пуплев

### 1. Чĕлхепе пуплев: пĕрешкеллĕх, уйрăмлăх

➤ Чĕлхе ку е вăл информацие пама, йышăнма тата упрама усă куракан паллăсемпе вĕсене çыхăнтарма кирлĕ система пулса тăрать. Пуплев вăл – чĕлхепе ку е вăл лару-тăрура усă курни. Чĕлхере фонемăсем, морфемăсем, сăмахсем, сăмах майлашăвĕсем тата предложенисем пур. Вĕсемпе усă курса çын хăй шухăшне калать е çырать. Калаçнă тата çырнă май ку е вăл текст пулать.

### 2. Чĕлхепе пуплевĕн перекетлĕх законĕ

Текст туса мĕн чухлĕ те пулин вăхăт иртет. Ку вăхăт текст тума мĕн чухлĕ сахалрах каять, чĕлхе çавăн чухлĕ перекетлĕрех шутланать.

Пирĕн чĕлхере текста кĕскетмелли тĕрлĕ перекет мелĕ сарăлнă: 1) сахал сăмахпа усă курни, 2) пĕр пуплев пайне тепĕр пуплев пайĕ ырăнне калани, 3) сăмах тăвакан аффикссем сахал, нумайлă хисеп аффиксĕ пĕрре кăна пулни, 4) сăмахсем сасă енчен кĕскелни, 5) ят сăмах майлашăвĕсен сăпат аффиксĕ тухса ӳкни.

Сахал сăмахпа усă курнине вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхи ăнлавсене еплерех палăртни кăтартать. Танаштарăр:

| Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|
| конь (лошадь) | лаша |
| корова | ĕне |
| свинья | сысна |
| гусь | хур |
| утка | кăвакал |
| курица | чăх |
| мясо | аш (какай) |
| конина | лаша какайĕ (лаша ашĕ) |
| говядина | ĕне какайĕ (ĕне ашĕ) |
| свинина | сысна какайĕ (сысна ашĕ) |
| гусятина | хур какайĕ (хур ашĕ) |
| утятина | кăвакал какайĕ (кăвакал ашĕ) |
| курятина | чăх какайĕ (чăх ашĕ) |

Кун пекки глагол ушкăнăсемпе усă курнă чух пушшех нумай:

| Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|
| лететь | вĕç |
| прилететь, придумать | вĕçсе кил, шухăшласа туп |
| улететь, уйти | вĕçсе кай,  тухса кай |
| пролететь, продумать | вĕçсе ирт, тĕплĕн шухăшла |
| облететь, обойти | вĕçсе çаврăн, утса çаврăн |
| перелететь, переписать | урлă вĕçсе каç, çĕнĕрен çыр |
| вылететь, выписать | вĕçсе тух, çырса ил |

Вырăссеем хăш вăхăтра апатланнине кура *завтрак, обед, ужин* сăмахсемпе усă кураççĕ – эпир сăмах майлашăвĕем калатпăр: *ирхи апат, кăнтăрлахи апат, каçхи апат. Завтракать, обедать, ужинать* тенине эпир *ирхи апат çи, кăнтăрлахи апат çи, каçхи апат çи* тетпĕр. Тата танлаштарăр: *обочина – çул хĕрри, развилка – çул юпленчĕкĕ, перекресток – çул тăваткалĕ, попутчик – çул юлташĕ, путешествовать – çул çӳре, тропинка – утма çул* т. ыт. те.

Вырăссем кашни ăнлавшăн уйрăм сăмахпа усă курни, эпир ятарлă сăмах каламанни пирĕн чĕлхе лексика енчен перекетлĕ пулнине пĕлтерет. Ку лексикăна асра тытма çăмăл, анчах практикăра кашни ăнлав валли сăмахĕсене суйласа илме пĕлес пулать.

**268. М.И Скворцов профессор хатĕрленĕ «Вырăсла-чăвашла» словаре илĕр те вырăс сăмахне сăмах майлашăвĕпе куçарнă пилĕк тĕслĕх тупса çырăр.**

**269. Паллă тунă сăмахсем хăш пуплев пай пулнине, предложенире хăш пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳренине калăр.**

**Чĕлхе – чун уççи, чĕлхе – çул уççи**

Вырăссем: «Чĕлхе Киева çитерет», – теççĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче вара: «Чĕлхе Мускава çитерĕ», – тени тĕл пулать.

Чĕлхе – чи вăйлă хатĕр. Çынна çĕклеме те пултарать, çапса хуçма та. Калаçса хутшăнса çын **ырра** нумай илет. **Усал** та юнашарах çӳрет **паллах** – асăрхан кăна!

Чĕлхесене пĕлни çынна пурнăçра, ĕçре пулăшнине эпĕ пĕр-ик тĕслĕхпе çирĕплетесшĕн.

Пĕр вăтăр çул каярах Комсомольскин «Сельхозтехинкинче» ирçе çынни Александр Никифорович Кузьмин ĕçлетчĕ. Вăл тĕрлĕ чĕлхе пĕлетчĕ.

– Нумай чӗлхе пӗлнин усси пур-и? – тесе ыйтатӑп Александр Никифоровичран пӗррехинче.

– Ревокат Прохорович! Темӗнле хуравлам ӗнтӗ... Чӗлхе пӗлни мана пурнӑҫра, ӗҫре яланах пулӑшса пычӗ. Запас пайсем, строительство материалӗ шырама таҫта та кайма лекетчӗ. Ун пек-кун пек япала совет саманинче яланах дефицитчӗ те-ха. **Ҫукран пур** тӑваймастӑн.

Пӗррехинче пуҫлӑх Йошкар-Олана ячӗ. Ҫитрӗм. Завод директорӗпе вырӑсла калаҫатӑп. «**Ҫук,** пулмасть: фонд пӗтрӗ», – тет пуҫлӑх. Ту ен мари чӗлхипе калаҫса тархаслама пуҫларӑм хайхи. Директор йӑл! кулса ячӗ. «Тӑванӑм, пирӗн чӗлхене лайӑх пӗлетӗн-мӗн. Тавах хисепшӗн. Пулӑшӑпӑр: Эсир – хамӑр ҫын», – терӗ.

Мӗн кирлине хапӑлласах парса ячӗҫ.

Тепрехинче Мордва Республикине цемент **патне** кайма тиврӗ. Цемент, ҫуллахи вӑхӑтра, ҫиес ҫӑкӑр пекех вӗт. Пурне те кирлӗ. Завод директорӗпе калаҫрӑм – **ҫывӑха** та ямасть.

Вырӑсла пуҫланӑ калаҫӑва малалла ирҫелле тӑсрӑм: «Цементсӑр таврӑнсан мана директор ӗҫрен кӑларать вӗт, – терӗм, унтан аптранӑ енне тутарла: – Кунтан цементсӑр каймастӑп», – тесе ҫаптартӑм хайхи. Хуҫа ман **ҫине** кӑн-кан пӑхрӗ. Тутарла калаҫма пуҫларӗ: «Эсӗ тутар-им?» – тет.

Ҫапла виҫӗ чӗлхепе калаҫса цемент кӳрсе таврӑнтӑм вӗт! Директор преми те ҫырса пачӗ. *(Ревокат Моисеев.)*

* ***Мӗн кирлине хапӑлласах парса ячӗҫ*** **предложени хутлӑ предложени пулнине ӗнентерӗр.**

* **Падеж аффиксесен ретне кӗмен ҫыхӑну аффиксӗсене тупӑр та вӗсем ҫыхӑнтаракан сӑмахсене кӑтартӑр. Шухӑшӑра ӗнентерӗр.**

* **Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисен пунктуацине ӑнлантарӑр.**

➤ Перекетлĕх сăмах тăвакан тата нумайлăха палăртакан аффикссем сахал пулнинчен те паллă. Танлаштарăр:

**Сăмах тăвакан аффикссем**

| Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|
| ко**сарь** | утă**çă** |
| печн**ик** | кăмака**çă** |
| гармон**ист** | купăс**çă** |
| воз**чик** | лав**çă** |
| избира**тель** | суйлав**çă** |
| вр**ун** | суе**çĕ** |
| бор**ец** | кĕ**решӳçĕ** |
| победи**тель** | çĕнтерӳ**çĕ** |
| | |

**Нумайлă хисеп аффиксĕсем**

| Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|
| дом**а** | çурт**сем** |
| стол**ы** | сĕтел**сем** |
| кон**и** | ут**сем** |
| неб**еса** | пĕлĕт**сем** |
| матер**и** | анне**сем** |
| | |

Сăмахсем сасă енчен ытлаах чух чĕрĕ пуплевре кĕскелеççĕ. Ку кĕскелӳ çырура палăрсан та, палăрмасан та пултарать. Тĕслĕхрен, *эпĕ (эп), эсĕ (эс), пулăçă (пулăç), пурăнăç (пурнăç), типĕ (тип)* вариантсем клаçура та, çырура та тĕл пулаççĕ. Çав вăхăтрах яланхи хутшăнура *каламап, пĕлмеп, каламаппăр пĕлмеппĕр* тесе каласан та норма тесе *каламастăп, пĕлместĕп, каламастпăр, пĕлместпĕр* тесе çыраççĕ.

Камăнлăха пĕлтерекен сăпат аффикссем тухса ӳкни халь калаçура кăна мар, çырура та нумай тĕл пулать: *манăн юлташăм (ман юлташ), сан кĕнекӳ (сан кĕнеке), сан патна (сан пата), алса*

*тулĕ (алса туль), пилеш куракĕ (пилеш курак), йывăç çăвĕ (йывăç çу)* т. ыт. те.

**262. Орфографи словарьне илĕр те тĕп сăмахĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ тухса ӳкнипе пулнă вариантлă ят сăмах майлашăвĕсене (*вут чулĕ е вутчуль, вут чуль*) 5 тĕслĕх тупса çырса илĕр. Перекетлĕх пуплевре палăрнине ĕнентерĕр.**

**3. Текст – пуплев продукчĕ**

**3.1. Текст тытăмĕ**

➤ Текст вăл – калаçу тата çыру продукчĕ. Унта калаçаканнипе çыраканнин шухăшлав манерĕ те, текст, предложенисем тăвас ăсталăхĕ те, сăмахсемпе вĕсен формисемпе тĕрĕс усă курас хăнăхăвĕ те палăрать. Текст мĕнне эсир кĕçĕн классенченех пĕлетĕр, аслăрах классенче текстăн ку е вăл енĕпе паллашрăр, ку е вăл темăпа калаçма тата çырма вĕрентĕр. Мĕн пĕлнипе пултарнине халь тепĕр хут тĕрлĕ ĕç туса аса илер.

**263. Текст виç пысăк пайран тăнине ĕнентерĕр.**

**Ырă шанăç пиллекен чечек**

Çулсеренех ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче чылай çĕр-шывра çеçпĕл чечекĕн кунне паллă тăваççĕ. Ку уяв пуçламăшне Англире шырамалла, мĕншĕн тесен унта, 1984 çулта, уяв irttерес пирки пирвайхи йышăну тунă.

Хăш климатра ӳснине кура çеçпĕл кăрлач – ака уйăхĕсенче çурăлать. Чечек çурăлăвĕ çеçпĕлĕн Англире шăпах ака уйăхĕнваррине лекет. Çавăнпа уява ăшă кунсемпе тата çуркуннен пуçламăшĕпе çыхăнтарнă.

Акăлчан халăх сăмахлăхĕ тăрăх, кил-çурт тавра лартнă çеçпĕл чечекĕсем хуçисене усал-тĕселтен сыхлаççĕ. Кирек мĕн тесен те, çеçпĕл чĕрĕлӳпе çĕнтерӳ символĕ шутланать. Хĕллехи сивĕсем

хыççăн тухаканскер, çеçпĕл çуркунне çитнине систерет, ырă шанăç пиллет.

Çеçпĕлĕн латинла ячĕ – «галянтус». *Галянтус* сăмах сĕт чечекĕ тенине пĕлтерет. Тасалăх палли тесе çеçпĕле вăтам ĕмĕрсенче ахальтен хакламан курăнать.

Примечание [ПЮ5]: а

Çеçпĕлĕн çирĕм тĕсĕ пуррине палăртаççĕ. Шел те, чылай тĕсĕ çут çанталăкра сахалланса юлнă. Çавăнпа çеçпĕл чечекне Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ. Апла пулин те чылай çын çеçпĕл хăрушлăха кĕрсе ӳкнине ăнланасшăн мар – вăрмана кайса татать, сутлăха кăларать. Кун пеккине пирĕн сивлес пулать. Çын çеçпĕле пĕтме памалла мар.

Çапла вара, çеçпĕл – халăх юраткан чечек. Вăл, çĕнĕлĕхе, çĕнтерĕве, тасалăха пĕлтерет, çавна май çынна ырă пулма хавхалантарать. Ыр чечекпе киленме те, ăна упрама та пĕлмелле. *(О. Австрийская.)*

**3.2. Текстăн пуплев кĕвви ушкăнĕсем**

**264. Панă текстсем пуплев кĕввине кура хăш ушкăна кĕреççĕ?**

| № № | Текст ушкăнĕсем | Текст ячĕсем |
| --- | --- | --- |
| 1. | Калав | |
| 2. | Сăнлав | |
| 3. | Ăслав | |

1

**Чуна уçнă тĕл пулу**

Вăрмана çӳреме мĕн пĕчĕкренех юрататăп. Пĕлекене çут çанталăкăн иксĕлми çӳпçи ялан ырă кăмăлпа хăналать. Йывăç çине улăхсан – вăрманăм аякка-аякка тăсăлакан уй-хир тăрăх карап евĕр шăватчĕ, тĕнче вĕçне ăнтăлатчĕ. Ачалăх иртрĕ – вăрман вара çывăх тус-юлташ пулса тăчĕ те мана итлеме, пăшăрханчăк чунăма

ăплантарма пĕлет. Çулçăсен ал çупăвĕ чĕреме ачашлать, çупăрлать.

Паян кун та вăрман ытамне васкарăм. Каç сĕмĕ çывхарнинчен те шикленмерĕм.

Вăрман çимĕçĕ кăçал аван тухнă. Килтисем пушă алăпа таврăнатăн тесе пите хăртмĕç-ха. Тимлĕнрех сăна кăна – авă пĕри курăк çулçи айĕнче пытаннă, тепри тунката çумне тĕршĕннĕ.

Шухăш пăтранăвне çулçă чăштăртатни татрĕ. Сиксе тăрса сасă енне çаврăнтăм – вăрман хуралçи иккен. Ватă утарçă. Асăрханмасăр туртăннипе пластмасса витре тӳнсе кайрĕ.

– Ай-ай, кун пек, килне епле çитĕн-ха? – тесе ватă çума пырса тăчĕ.

Картуна çитсен вăрман хуралçи мана вĕр çĕнĕ карçынкка тыттарчĕ.

– Тавтапуç, Ванькка мучи! – теме пĕлейрĕм-ха.

– Ларса кан, тăванăм, – хӳме çумĕнчи сак еннелле кăтартрĕ ватă. – Вăрманта çӳресе ывăнтăн пулĕ.

Ыр кăмăллă старике кӳрентерес мар тесе карта çумне тĕршĕнтĕм. Йĕри-тавра сăмахпа каласа парайми илем хуçаланать.

– Тыткăнларĕ-им? – сисрĕ пулас мучи манăн туйăма.

– Йывăççен хушшипе çӳремесен ăш вăркать. Йывăç вăл – этем мар. Нихçан та кӳрентермест. Хăйне этем кӳрентерсен те нимĕн те каламасть.

– Тĕрĕсех ĕнтĕ, çапах та лайăхрах сăна-ха: йывăç та этем евĕрлех пулнине асăрхаман-и?

– Пĕлместĕп, – теме çеç пултартăм вăрман хуралçине. – Тайма пуç сана, Иван тете. Кантăм. Киле кайма вăхăт.

Яла илсе тухакан çул хĕрринех ăсатма пычĕ вăрманçă. Чĕнмесĕр утрăмăр. Иван пичче хăйĕн шухăш юххинче çаврăнчĕ

пулас, эпĕ чун пăлханăвĕн тăкăрлăкĕнче çĕтсе çӳрерĕм. Хевтесĕр-и е хăватлă-и эпĕ? Пур йывăрлăхран та пытанса пурăнакан-и е тĕреклĕ йывăç пек çирĕп тăракан-и?

Ял çулĕ патне çитнĕ çĕре таврана каç сĕмлĕхĕ çапнăччĕ ĕнтĕ. Пуçра çиçĕм пек шухăш ялтлатса илчĕ:

– Тайăлнă хурама эпĕ! – тесе хутăм хыттăнах.

Хыçра пыракан шур сухал енне çаврăнтăм – мучи картун сукмакĕпе кĕрсе çухалнă. Çул хĕррине çитнĕрен каялла утнă-ши ват çын? Мана шухăшлама чăрмантарас мар тесе сăмах чĕнмесĕр уйрăлнă-ши?

Шăппăн тав сăмахĕ каласа ял енне утрăм. Чуна канăçсăрлатакан ыйтусем вăрманта юлчĕç. Киле çывхарнăçемĕн, таврара тĕттĕмлĕх çуталса пынăн туйăнчĕ. *(А. Исакова.)*

* ***Тĕрĕсех ĕнтĕ, çапах та лайăхрах сăна-ха: йывăç та этем евĕрлех пулнине асăрхаман-и?*** **предложени мĕнле хутлă – схемине ӳкерĕр.**

* ***Киле çывхарнăçемĕн, таврара тĕттĕмлĕх çуталса пынăн туйăнчĕ*** **предложенире запятой лартмасан пулать-и? Ку мĕне пĕлтерет?**

2

**Киревсĕр сăмахсем**

***Киревсĕр сăмахсем*** *(вульгарные слова)* литература чĕлхи тулашĕнче тăраççĕ. Тăшманла ĕçе сивлекен, ăна тăвакансене питлекен, намăслантаракан сатира хайлавĕсенче тĕл пулаççĕ*: кавле* – илемсĕр, вĕçĕмсĕр çи; *тĕр* – нумай, çăтăхса çи. Ку ушкăна çывăх – ятлаçмалли сăмахсем тăраççĕ: *тăмсай, анра-сухра, тунката, киремет.*

Киревсĕр сăмахсем вырăс чĕлхинче те пур: *хапуга, клевый, хам, балбес, подхалим. (Т. Денисова.)*

3

**Тăван чĕлхе – ăс-хакăл çăл куçĕ**

Паянхи кун мана виçĕ ыйту шухăшлаттарать. Çав ыйтусене эпĕ вулакан умне тăратса хуравĕсене пĕрле шырасшăн.

1. *Мĕне вĕрентмелле?*

Чи кирли – ачасем хăйсен тăван чĕлхине чуна хывни. Пирĕн – тĕрлĕ халăх ачине пĕр-пĕрин тăван чĕлхине хисеплеме хăнăхтармалла.

2. *Мĕнле вĕрентмелле?*

Калаçса вĕрентмелле. Тин çуралнă ача нимле чĕлхепе те калаçмасть. Çавăнпа пĕчĕк пепкене кирек епле чĕлхене те вĕрентме пулать.

3. *Мĕн валли вĕрентмелле?*

Малашлăх валли вĕрентмелле. Пире ăрусен çыхăнăвне тăсма çут çанталăк тĕлĕнмелле хăват – чĕлхе – пилленĕ. Чĕлхе ламран лама куçса пымалла. *(А. Игнатьева.)*

4

**Сусăр ачасен пурнăçĕпе паллаштаракан литература**

Эпир шкул чăваш литератури программинче сусăр ачасем çинчен çырнă хайлавсене тупрăмăр. Вĕсем çаксем: Иван Лисаевăн «Чире парăнма çуралман», Юрий Скворцовăн «Пушмак йĕрĕ», Людмила Сачковăн «Оля–Улькка» тата Ева Лисинăн «Çăкăр чĕлли» клавĕсем. Надежда Ильина çыравçăн «Турăсăр тупнă телей» калавĕпе те паллашрăмăр.

Эпир тишкернĕ хайлавсенче сусăр ачасем пуринче те ырă кăмăллă. Шăпа кӳрентернĕ пулин те малалла пурăнма ăнтăлаççĕ, çавна май хăйсем пек ачасем валли çеç мар, сыввисем валли те лайăх тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Акă Людмила Сачковăн Ульки, машина çапса хăварнипе сусăрланнăскер, тантăшĕсем хăйĕнчен кулнине ăша хумасть, вĕчĕх тытмасть, вĕсен кăмăлне çырлахтарса ташласа кăтартать. Тĕп сăнара шеллес, хӳтĕлес килсе каять.

Чăваш литератури сусăр ачасем çинчен çырнă хайлавсемпе малашне пуянланасса, вĕсене шкул программине кĕртсе пырасса шанас килет. Çавăнпа та çыравçăн пурнăçпа тан, тен, маларах та пымалла. *(Т.А. Васильева, А. В. Васильева.)*

5

**Çĕленсен вăрттăнлăхĕ**

Çут çанталăк çĕленсене апат туртса илмелли ку е вăл мел панă.

Акă калтасемпе тăранса пурăнакан çĕленсене илер. Çĕленсен каварлăхне лайăх пĕлекен калтасем çĕр каçма тесе туратсен вĕçне е пысăк йывăçăн чи тăрринех хăпарса çыпçăнаççĕ. Çĕлен çывхарнипе турат силленсенех калта çĕре ӳкет. Çĕленсем вара тата та чеерех мел шыраса тупнă: калта вырнаçнă туратпа кӳршĕллĕ турат çине шуса хăпараççĕ те хăйсен пиçĕ кĕлеткипе усă курса юнашар турат çинчи калтана кап хыпса çăтаççĕ. Çĕлен хăйĕн сывлăшра çакăнса тăракан çур кĕлеткине тӳррĕн тытса тăма пултарать

Çĕленсен чĕр чунсене вĕлермелли чи вăйлă хатĕрĕ вăл – наркăмăшлă секрет. Вăл тĕрлĕрен пулать: пĕри нерв системине ĕçлеми тăвать, тепри юна кĕвелме чăрмантарать, юнăн шурă тата хĕрлĕ пайĕсене аркатать. Тинĕс çĕленĕсенчен чылайăшĕн наркăмăшĕ калама çук хăватлă. Наркăмăшăн пĕр грамĕ пилĕк çĕр çыннăн пурнăçне татма пултарать, пулла темиçе çеккунт хушшинчех вĕлерет.

Çĕленсене, тулаш енчен тискеррине кура пулас, çынсем юратмаççĕ. Апла пулин те акă мĕн асра тытмалла: çĕленсемшĕн эпир сунар объекчĕ мар. *(«Çут çанталăк кĕлечĕ».)*

### 3.3. Текстсен предложенисен шухăш тытăмĕнчен килекен ушкăнĕсем

**265. Текстсенчен хăшĕ сыпăнчăклă, хăшĕ параллельлĕ, хăшĕ хутăш – таблицăна тултарса кăтартăр. Текста ку е вăл тăваткала вырнаçтарнине сăлтавлăр.**

| № № | Текст тĕсĕ | Текст номерĕсем |
|---|---|---|
| | Сыпăнчăклă текст | |
| | Параллельлĕ текст | |
| | Хутăш текст | |

1

Кайăк пусĕ пек лапка-лапка юр çăвать. Кăнтăрла кăна кăваккăн курăннă урам çĕнĕ тум тăхăнать. Çил вăйлă мар. Çанталăк ăшă. *(В.Рсай.)*

2

Виктор Рсайăн тус-юлташ нумай пулнă. Вĕсем писателе инкекрен хăтарса пынă, ӳксен тăма пулăшнă. *(В. Станьял.)*

3

Шупашкартан килекен автобус, Шарпаш ялне кăнтăр тĕлĕнче çитнĕскер, столовăй умĕнче чарăнчĕ. Кунта Шупашкара тата район центрне тухма кайнă çынсем йышлăн пуçтараннă. Шарпашран Автанкассине сахалтан та вунă çухрăм. Машина тавраш тупăнасса шанма йывăр. *(Н. Мартынов.)*

4

Пирĕн ентеш Василий Иванович Чапаев – граждан вăрçи геройĕ. Вăл 1887-мĕш çулта чăваш çĕрĕнче Будайка ятлă ялта çуралнă. *(В. Трифонова.)*

**266. Сыпăнчăклă текст тунă чухнехи йăнăша тупса тӳрлетĕр.**

1. Ӳсен-тăрансенчен чи таса çимĕçсен шутне хура тул, урпа, ыраш, сĕлĕ кĕрет. Хальлĕхе **вĕсене** ăсчахсем модификацилесе ĕлкĕреймен-ха. *(«Хресчен сасси»).* 2. Поселокра тĕп урам Алексей Маресьев ячĕпе хисепленсе тăрать. Паттăрсен аллейинче **ăна** сума суса палăк лартнă. 3. Юрий Сементер хăйĕн патне килекенсем валли хăна кĕнеки уçнă. **Вăл ăна** ĕмĕр тăршшĕпех тытса пырать. *(«Хыпар»).* 4. Халь эп кăвар туртса кăларатăп. Пуçа сĕлтсенех ăна мăлатукпа çап. 5. Тăххăрмĕш классем пирĕн виççĕ. Пурте **вĕсем** иккĕмĕш хутра вырнаçнă. *(В. Трифонова.)* 6. Анне... Ку сăмахран çепĕçреххи мĕн пур-ши? **Ун** çумĕнче хăтлă, лăпкă та ăшă. *(«Тантăш»)* 7. Сойккин амăшĕ чирлесе ӳкнĕ, ура çинче çӳрейми пулнă. Çавăнпа ĕçе пăрахсах **вăл** тăван килне таврăннă. *(«Хыпар».)*

**Шута илĕр**

Текстра уйрăм предложение союзпа пуçлани йăнăш шутланать: *Патшалăх пулăшăвĕн порталĕнче çĕнĕ электрон сервис ĕçлеме тытăнчĕ. Анчах унпа, хальлĕхе, электрон майпа алă пусма пултаракансем çеç усă кураççĕ.*

Тӳрлетме икĕ май пур. Пĕрремĕшĕ – малтанхи предложени хыççăн запятой лартса малалла пĕчĕкрен çырмалла: *Патшалăх пулăшăвĕн порталĕнче çĕнĕ электрон сервис ĕçлеме тытăнчĕ, анчах унпа, хальлĕхе, электрон майпа алă пусма пултаракансем çеç усă кураççĕ.* Иккĕмĕшĕ – союза катертмелле: *Патшалăх пулăшăвĕн порталĕнче çĕнĕ электрон сервис ĕçлеме тытăнчĕ. Унпа, хальлĕхе, электрон майпа алă пусма пултаракансем çеç усă кураççĕ.*

## 3.4. Текстăн стилĕсем

**267. Çырса хурăр: хăш стилĕн паллисене кăтартнă?**

| №№ | Паллăсем | Стиль |
|---|---|---|
| 1. | ***Тĕллевĕ*** – ăслăлăх факчĕсене пĕлтересси, | |

| | | |
|---|---|---|
| | ăнлантарасси, ку е вăл ыйтăвăн хуравĕ ăслăлăх енчен епле пулнине ĕнентересси. ***Чĕлхе материалĕ:*** ăслăлăх терминĕсем, шухăш йĕркине тытса пыракан сăмахсемпе пĕрлĕхсем, пиркепе следстви, пиркепе результат çыхăнăвне, хирĕçлеве пĕлтерекен çыхăну мелĕсем, ыйтуллă предложенисем, мĕне те пулин шута илме хистекен сăмахсем. | |
| 2. | ***Тĕллевĕ*** – кирлĕ информацие тĕп-тĕрĕс пĕлтересси. ***Чĕлхе материалĕ:*** штампсем, глаголăн ***-ас (-ес), -ма(-лла), -ме(-лле)*** аффикслă формисем. Сăмахсем тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ. | |
| 3. | ***Тĕллевĕ*** – паян кун пулса иртекен ĕçсем çинчен информаци парасси, çынсен кăмăл-туйăмне витĕм кӳресси, обществăн шухăшне кирлĕ енне çавăрасси. ***Чĕлхе материалĕ:*** ыйтуллă предложенисем, риторикăллă ыйтусем, ăнлантару тата туйăм пĕлтерĕшлĕ кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем. | |
| 4. | ***Тĕллевĕ*** – вулакана илемлĕх тĕнчине кĕртсе, туйăма вăратса ырăлăх патне туртасси. ***Чĕлхе материалĕ:*** сăнарлă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсем, ятарлă илемлĕх мелĕсем | |
| 5. | ***Тĕллевĕ*** – шухăша, кăмăл туйăма пĕр-пĕрне пĕлтересси, пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлесси. ***Чĕлхе материалĕ:*** ку е вăл персонажăн пуплевне кăтартуллă сăмахсемпе формăсем, ансат пуплев элеменчĕсем. | |

**268. Текстсемпе паллашăр. Стильне кура хăш ушкăна кĕнине таблицăра кăтартăр. Ку е вăл стиль палăрса тăнине текстра тĕл пулакан фактсемпе усă курса ĕнентерĕр.**

| №№ | Стильсем | | Текст ячĕ е номерĕ |
|---|---|---|---|
| 1. | Калаçу стилĕ | | |
| 2. | Кĕнеке | Илемлĕ стиль | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | стилĕ | Ăслăлăх стилĕ | |
| | | Ĕçлĕ стиль | |
| | | Публицистика стилĕ | |

1

Указ пур

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2021 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче кăларнă 100-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин промышлнноçĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн Шупашкар хулин акционерсен «Строймаш» обществине Чăваш Республикин Хисеп хучĕпе наградăланă. («Хыпар», 2021. 07. 21. − 1 С.)

2

**Ывăл пурăнакан çурт умĕнче**

Акă вăл, ывăлĕ пурăнакан пилĕк хутлă чул çурт. Хула шавĕ çĕмĕрсе кĕреймест кунта, машин тавраш кĕрлени те илтĕнмест. Тăршшĕпех – тĕм йывăç чие, хăмла çырли, улмуççи, хура пилеш... Пахчасăр тунсăхлаççĕ пуль çав.

Ахлаткаласа кинемей резина аттине хыврĕ, çăм чăлхине тытса пăхрĕ: тарланипе чылай нӳрленнĕ. «Эккеç, çăмăл пушмак тăхăнмаллаччĕ, – шуралса пĕрмекленнĕ пӳрнисене выляткаларĕ карчăк. – Каплах ывăнтарас çукчĕ...»

Ывăнăн та ывăнăн ир тухса каç енне тин хулана çитсен. Хĕвел ав часах Йăлăм вăрманне чăмать. Килес çулĕ – чĕр нуша. Вун икĕ çухрăм ут-ха Шăмата çити, кайран тата автобус кĕтсе лар. Паян питĕ ăнмарĕ: тӳрех ларса килмелли автобус сăмса умĕнчех иртсе кайрĕ. Шофĕрĕ алă тăратнине курмăша печĕ-ши? Çулĕ тата ват çыншăн лăкăш-лакăш. Асфальт çине çитиччен чун тухать.

Пăнтă-пăнтă тултарнă сăран сумккине чавсипе тĕртсе пăхрĕ кинемей. Вара лӳчĕркеннĕ симĕс плащне, çамрăксемшĕн тахçанах пăрахăçа юлнă болонья плаща, шăлкаласа якатрĕ те аттине тăхăнса ури çине тăчĕ: «Çитет канса – кĕрес».

Ывăлĕ икĕмĕш хутра пурăнать. Икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте. Çĕнни пулас пек калаçать те – тепле?

Тахçанах килсе курман. Епле пурăнкалаççĕ-ши ĕнтĕ? Пыркалать-ха ĕнтĕ Кенать, çулталăкра иккĕ-виççĕ те пырса каять яла. Нихçан та пушă алăпа мар. Кулач, кăлпасси, пулă консерви тем тĕрли...

Ывăлĕ паян çитет-и, ыран-и тесе пурăннипех çула тухрĕ Лисок. Кĕтсе илеймесĕр. Тунсăхланипе. Ывăлне тата мăнукне курас килнипе. Ара, тăпăртатса чупакан мăнукне аса илчĕ те кинемей, ăшне, чĕрине чĕрĕ вăй кӳрекен ăшă хум килсе сĕртĕнчĕ. Тӳсеймерĕ вара карчăк – çула пуçтарăнчĕ.

Подъезд пусми картлашкин пĕр тăрăхне улăхнипех кăкăрĕ пӳлĕннĕ кинемей аран-аран сылăш çавăрса ячĕ. Вара урайне лартнă сăран сумкине илсе каллех чун хавалĕпе васкамасăр çӳлелле утрĕ. Карлăкран тытса. Çитес хваттерĕ çӳлте марри хавхалантарчĕ. Иккĕмĕш хутра çеç. Варринчи алăк. Куç умĕнчех. Хăмăр сăранпа ашăкласа, хитре пăтасемпе эрешлесе çапнă та – илемлĕ.

Çепĕç кĕвĕллĕ шăнкăрав темиçе хутчен тăнкăлтатрĕ пулин те алăк уçăлмарĕ. «Ай-уй, шăмат кун та ĕçлемеççĕ пуль те – пăшăрханса илчĕ кинемей. – Ку таранччен килмелле ĕнтĕ ĕçрен те. Хăна таврашне çӳрекен мар-ха вĕсем...»

Сасартăках ăшăрхаттарса килчĕ. Çамки çине капланнă кăвак çӳçне вĕр çĕн тутăрĕ айне тирпейлесе вырттарчĕ те Лисок алăк умне сарнă çĕтĕке асăрхаса унпа резин аттине тусанран шăлса тасатрĕ. Тӳрленсе тăрса шăнкăрав кнопкине тепĕр хут пусрĕ.

Юлашки хут тесе. Ăнăçсăр килсе тухнăшăн пăшăрханса. Çепĕç кĕвĕллĕ шăнкăрав тăнкăлтатни хальхинче ахаль пулмарĕ. Шăппăн, çăмăллăн уçăлчĕ сăран сăрнă алăк. *(А. Волков.)*

3

**Кăркăс тата вырăс чĕлхисен**

**каçхи вăхăта пĕлтерекен фразеологизмĕсем**

**Аннотаци:** кӳртĕм. Танлаштаруллă чĕлхе вĕрентĕвĕн паянхи тапхăрĕнче хальхи чĕлхеçĕсене тĕпчеме фразеологизмсен чĕлхе культурине витĕм кӳрекен уйрăмлăхĕ илĕртет. Çавна май юлашки вăхăтра ăслăлăха чĕлхе культурине халалланă нумай ĕç килчĕ. Тĕрлĕ енпе ĕçлекен ученăйсем юлашки вунă çул хушшинче, тимлесех, культура ăнлавĕсем уйрăмах фразеологизмсенче мĕнле вырăн йышăннине тĕпчерĕç. Апла пулин те вырăс тата кăркăс чĕлхисен вăхăт пĕтерĕшлĕ фразеологизмĕсене танлаштарса пăхса тухман-ха.

Тĕпчев меслечĕсем. Статьяра вырăс тата кăркăс чĕлхисен каçхи вăхăта пĕлтерекен фразеологизмĕсене танлаштарса пăхса тухнă. Тĕслĕхрен, вырăспа кăркăс чĕлхе культурисенче фразеологизмсемпе усă курни талăкăн каçхи вăхăтне сăнарлă кăтартма май парать. Тĕпчекен чĕлхесен пĕрешкел тата расна енне тупас тĕллевпе танлаштаруллă тишкерӳ ирттернĕ. Тĕслĕх шучĕпе словарьсенчен кăркăс тата вырăс фразеологизмĕсене («каш карайганда», «иңир талаш», көз байлаган кез», «вечер жизни», «еще не вечер» евĕррисене) суйласа илнĕ тата тишкернĕ.

Тишкерӳ результачĕсем. Кăркăс чĕлхинче талăкăн каçхи вăхăтне палăртакан фразеологизмсем питĕ нумай тĕл пулаççĕ, мĕншĕн тесен кăркăс халăхĕ мĕн авлатанах куçса çӳренĕ; сехет е календарь пулмасан та тусем хушшинче тавралăх енĕсене хĕвел тăрăх пĕлнĕ, хĕвел календарĕпе усă курнă. Пухнă

фразеологизмсене тишкерни тĕпчевçе вырăс чĕлхи кăркăс чĕлхипе танлаштарсан вăхăта анлăрах, кăркăс чĕлхи талăкăн вакрах пайĕсене пайăррăн палăртма май парать тесе пĕтĕмлетӳ тума хистет. Çакă пĕтĕмпе пурнăç йăли-йĕркипе чĕлхе хушшинче хăйне майлă çыхăну пуррине ĕнентерет.

**Тĕп сăмахсем:** вăхăт, каç, каç ĕнтрĕкĕ (каç пултти), хĕвел, культура, фразеологизмсем, пайрăсем (компонентсем). *(Н.Э. Эркинбек кызы.)*

4

*ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ*

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АЧАСЕНЕ СОЦИАЛЛĂ ПУЛĂШУ ПАРАССИ ÇИНЧЕН» САККУĔН $10^1$ СТАТЙИНЕ
УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*

*2021 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче ачасене социаллă пулăшу парасси çинчен» 2004 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче йышăннă 48 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 61 №; 2005, 62, 65 №-сем; 2007, 73 №; 2008, 75–77 №-сем; 2009, 79 №; 2010, 85 №; 2012, 92 ( I том), 94 №-сем; «Республика» хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014 3, 6, 12 №-сем; 2015 , 6 №; 2016, 10 №; 2017, 2 №; «Республика» хаçат , 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2021, пуш уйăхĕн 24-мĕшĕ) $10^1$ статйин 4-мĕш пайĕн виççĕмĕш абзацне улшăну кĕртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

«Раççей саккунĕсемпе килĕшӳллĕн договорсем мĕнлерех витĕм кӳме пултарнине хак парассси çинчен çак пайăн пĕрремĕш абзацĕнче кăтартнă требовани Федерацин «Раççей Федерацийĕн вĕренӳ çинчен» 2012 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 273-ФЗ3-лĕ саккунĕн 41 статйин 1-мĕш пайĕн 2-мĕш, 5-мĕш (вĕренекенсен физкультурăпа спорт занятийĕсем валли условисем йĕркелес тата тăвас пайра) тата 8-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă тĕллевсемпе професси паракан патшалăх е муниципалитет вĕренӳ организацийĕсемпе, аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсемпе çакнашкал договорсем тунă тĕслĕхсене, çавăн пекех, асăннă Федераци саккунĕн 41 статйин 3-мĕш пайĕнче палăртнă тĕслĕхе пырса тивмест».**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ О. Николаев**

Шупашкар хули, 2021 çулхи çу уйхĕн 20-мĕшĕ

41 № *(«Хыпар»)*

5

Хваспатиех! Таптасах каять вĕт! Ай турух! Эс, Крахьян, ăçта каплах васкан? Ман кĕленчесем алăран чутах тухса ӳкмерĕç вĕт. Ватса пăрахнă пулсан... Чим, макăран тем? Мĕн пулчĕ тата? *(А. Ырпи.)*

6

– Ял ачисем хăвăртрах çитĕнеççĕ тенипе килĕшетĕр-и?

– Килĕшетĕп. Хам туйса куртăм.

– Шалта аталанакан вăйсенчен хăшĕ йывăрлăх кӳрет: пĕчĕк вăй-и е пысăк вăй-и?

– Пĕчĕк вăй йывăр мар.

– Çыннăн тĕп вăйĕ ăçта тесе шухăшлатăр?

– Чĕрере. *(Г. Максимов.)*

**269. Ансат калаçу сăмахсен пĕлтерĕшĕпе çыхăннине кăтартăр.**

1. Травматологипе ортопеди тата эндопртезировани центрĕнче, 2020 çулăн çу уйăхĕ тĕлне, коронавирус инфекцийĕпе чирленисене сиплеме 90 койка йĕркеленĕ. *(«Хыпар».)* 2. Ĕçе пурнăçлама вăхăт та, тăрăшулăх та нумай кирлĕ пулнă. *(В. Петров.)* 3. Спортсменсем хушшинче те паллă çынсем питĕ нумай. 4. Çӳхе тимĕр листи çинче шăтăк тумалла-и? Çакна пăрапа е дрельпе пурнăçлама хĕн. *(«Чăваш хĕрарăмĕ».)*

**270. Ансат калаçу сĕмĕ сăмахсен форминчен килнине ĕнентерĕр.**

1

«Эсир Оля вĕт. Мана Игорь каланăччĕ. Тен, вăл сире ман çинчен нимĕн те каламан. Эпир унпа хĕлле çеç паллашнă. Эпĕ – Аня.»

«Каланă. Сан пирки вăл эпĕ Май уявне килсен kаларĕ. Юлашки хут хăçан курнă эс ăна, Аня?» *(Н. Петровская.)*

2

Кăçал çур аки ир пуçланчĕ пулин те, вăраха кайрĕ. Сăлтавĕ – çумăр çунинче. *(Радио.)*

3

Сăмах май, гвоздикăра, чапăр курăкĕнче, импĕрте, корицăра, пĕтнĕкре антиоксидант йышĕ пахча çимĕçрен, улма-çырларан чылай пысăк. *(«Хыпар».)*

4

Лирикăлла герой вăл – сăвăра кăтартнă ĕç-пуçа хутшăнакан персонаж.

5

Республикăри районсене, ытти региона тухса çӳренĕ май, çынсем мана паллани савăнтарать. *(«Хыпар».)*

6

Тирпейлĕ хуçалăхра икĕ ал шăллирен кая мар тытаççĕ, эрнере пĕрре улăштараççĕ. *(«Хыпар».)*

**271. Калаçу сĕмĕ вырăс грамматикин витĕмĕпе пулнине ĕнентерĕр.**

1

Амăшĕ ачине çывăрма вырттарать:

– Ырă каç, ывăлăм. Тен, тĕлĕкре мулкач çинчен юмах та курма пуçларăн пуль.

– Çук, анне. Хальлĕхе реклама-ха.

2

– Çĕр çавракa-и?

– Çапла. *(«Хыпар».)*

3

Чăваш Республикин Наци библиотеки хăйĕн проекчĕсемсĕр пуçне тĕрлĕ учрежденисемпе пĕрле чылай проектсем пурнăçлать. *(«Тăван Атăл».)*

4

Çамрăк чухне эпĕ Атăл урлă пĕрре мар ишсе каçнă. *(«Хыпар».)*

### 3.5. Текст тата пуплев культури

➤Пуплев культури çинчен ăслăлăхра сăмах пуплев нормисем улшăннине кура пуçланнă. Лайăх тесе çирĕплетме, пупев культурин ăслăлăхĕ вĕрентнĕ тăрăх, пуплев **тĕрĕс, асра юлмалла, тирпейлĕ** тата **ырăнлă** пулмалла. Вĕсене кирлĕ пек тытса пыма чĕлхе тытăмĕ пулăшать.

Пуплев культурин виçĕ енне кăтартаççĕ: **хутшăну, норма** тата **этика** (калаçнă чухнехи тыткаларăш).

Пуплевĕн ***хутшăну*** енне пăхнă чухне пуплевĕн нумай енлĕхне, пуянлăхне, асра юлмалăхпа тирпейлĕхне тĕпе хураççĕ. Калаçу пуян та илĕртӳллĕ пултăр тесен синонимсемпе, фроазеологизмсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе усă курма тăрăшмалла, пĕрешкел сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсенчен хăтăлма пĕлмелле. Чăваш сăмахĕ пур çинче вырăс сăмахĕпе е сăмах майлашăвĕпе усă курни лайăх мар.

***Норма*** вăл – пуплев тĕрĕслĕхĕ, литература чĕлхин картинчен тухманни. Куна пуплев культури ăслăлăхĕ чĕлхе тытăмне тĕпе хурса çирĕплетет, тĕрĕслесе тăрать, мĕнле-мĕнле улшăну пулнине сăнаса пырать, ку е вăл тӳрлетӳ тăвать. Йăнăш ан кайтăр тесе тăрăшакан çын тăван чĕлхен тытăмне лайăх пĕлме тивĕç. Ăна ăслăлăх тĕпчевĕсенче тата вăтампа аслă шкулăн вĕренӳ кĕнекисенче çырса кăтартаççĕ.

***Этика*** – пуплевĕн тулашĕ, çыннăн пупленĕ чухнехи тыткаларăшĕ тата сăмахсемпе усă курнă чухне вĕсен стильне шута илме пĕлни. Тĕслĕхрен, эмоциллĕ сăмахсем ăслăлăх тата ĕçлĕ стильсенче пулмалла мар. Культурăллă калаçу вăл – сасса хăпартмасăр калаçни, лăпкă пулни, çынна кӳрентермен сăмахсемпе усă курни.

Тĕрĕс тата ăнланма çăмăл текстсем калаçура та, çырура та пулмалла. Пуплевпе çыру культуришĕн пурте явапллă: шул ачисем те, вĕсене вĕрентекенсем те, артистсем те, радиопа телевидени ĕçченĕсем те, писательсемпе поэтсем те, хаçат-журнал, кĕнеке редакторĕсем те. Вĕсен пĕлĕвĕнчен, тăрăшулăхĕнчен пуплев культурин мĕн пур енĕ килет. Çавăнпа кашниех нумай вуламалла, словарьсемпе, грамматика кĕнекисемпе час-час усă курмалла, çынсен калаçăвне итлемелле. «Мĕнле каласан тĕрĕс пулать-ши?» – текен ыйту кашни самантра канăçсăрлантарсан – усă пулатех. Майĕпен çыннăн чĕлхе туйăмĕ аталанать, хăйĕн стилĕ йĕркеленет.

**272. Чаваш халăхĕ авал пуплев культурин хăш енĕсене асăрханă – ваттисен сăмахĕсене таблицăн тивĕçлĕ лаптăкне вырнаçтарăр.**

| №№ | Пуплев культурин 3 енĕ | Ваттисен сăмахĕсем |
|---|---|---|
| 1. | Хутшăну | |
| 2. | Норма | |
| 3. | Этика | |

1. Калаçакан – чĕлхепе, итлекен – хăлхапа. 2. Калама пĕлмен сăмах пите вăраннă. 3. Ăшă сăмах та, сивĕ сăмах та ăшран тухать. 4. Калаçнă пĕр сăмах вырăна килмест çав. 5. Пĕр сăваплă сăмах пин те пĕр шухăш çуратать. 6. Сахал сăмах сахăр пек. 7. Пуклак чĕлхе – чутламан пĕрене. 8 Сăмаха каличчен пуç тавра виççĕ çавăрса шухăшла. 8 Çынна йывăр ан кала – ху та çавна курăн. 9. Çип çинçе пултăр, калаçу карă пултăр. 10. Ыр сăмах чуна ăшăтать. 11. Чĕлхеллĕ çын Чĕмпĕрте те вилмен. 12. Чĕлхе таçта та çитерĕ. 13. Хыпар-хăнар ламран лама каять. 14. Юмах ăсти сăмах шырамасть. 15. Кайăка – пĕрчĕпе, этеме – сăмахпа.

**273. Ваттисем мĕншĕн: «Халап яма та хал кирлĕ», – тенĕ?**

**274. Вырăс сăмахĕсене чăвашла куçарнă чухне тунă йăнăшсене тупса тӳрлетĕр.**

1. Билет пирки ан хумханăр: хакне хула администрацийĕ саплаштарать. 2. Усал хыпар илтсен анне пăлханса кайрĕ. 3. Халь кăна хута янă ача сатĕнче ĕç пуçланă çынсем хăйсен савăнăçне Министрсен Кабинечĕн Председателĕпе пайланă. 4. Прогулка тăвас терĕм-ха: воздух лайăх. 5. Кăмăл лайăх чухне ĕçе тĕплĕ, чуна парса пурнăçлатăн. 6. Власть органĕсем «тӳрĕ лини» йĕркелеççĕ. 7. Эпĕ оркестрта хут купăс çинче вылятăп.

**275. Тĕслĕхсенче панă вариантсенчен грамматика енчен тĕрĕссисене суйласа илĕр.**

1. Мĕн тумалла: çăрана çĕмĕрсе уçмалла е ял советне каймалла? – Мĕн тумалла: çăрана çĕмĕрсе уçмалла-и е ял советне каймалла-и? 2. Саша, сирĕн çемйĕр пысăк е пĕчĕк? – Саша, сирĕн çемйĕр пысăк-и, пĕчĕк-и? 3. Ӳкерчĕксенче сăнланă вĕçен кайăксенчен хăшĕ йăва çавăрмасть: ӳхĕ, кăвакал, куккук, кăйкăр? – Ӳкерчĕксенче сăнланă вĕçен кайăксенчен хăшĕ йăва çавăрмасть: ӳхĕ-и, кăвакал-и, куккук-и, кăйкăр-и?

**276. Тĕслĕхсенче панă вариантсенчен тĕрĕссисене суйласа илĕр. Йăнăш мĕнпе çыхăнннине ăнлантарăр.**

1. Кунта эпĕ пĕрре мар пултăм.–Кунта эпĕ пĕрре кăна мар, темиçе те пултăм. Кунта эпĕ нумай (чылай, пайтах, чылай хут та) пултăм. 2. Ман çăкăра çинĕ чух карланкуна ларчĕ-и? Çу-у-ук, йăкăрт! кăна çăтса ятăн манăн çирĕм «лимона». – Çу-у-ук, лармарĕ – йăкăрт! кăна çăтса ятăн манăн çирĕм «лимона». 3. Çук-çук, эсĕ пулман пулсассăн мана йывăр лекетчĕ. – Çук-çук, ыррине кĕтсе илейместĕм: эсĕ пулман пулсассăн мана йывăр лекетчĕ. 4. – Эсĕ Кириллова-и? – Çапла.

**277. Нумайлăхпа çыхăннă йăнăшсене тӳрлетсе çырса илĕр.**

1. Варнар районĕнчен çĕршер ученăй тухнă. 2. Вуз пĕтернисен çурри хăйсен специальноçĕпе ĕçлемеççĕ. 3. Геннадий Никандрович Волков мĕн чухлĕ калавсем çырнă? 4. Хĕрарăмсен уявне мĕн пур кукамайсемпе асаннесем çитрĕç. 5. – Асанне, асанне, сан куçу мĕншĕн пысăк? – Сана лайăхрах курмашкăн. – Хăлхусем вара? – Сана лайăхрах илтмешкĕн.

**278. Паллă тунă сăмах формисенчен хăшĕ тĕрĕс?**

1. Савелий пĕчĕкрен **шахматла** выляма юрататчĕ. – Савелий пĕчĕкрен **шахмат** вăййи выляма юрататчĕ. 2. Тĕлĕкре те фашистсене **пăшалтан** перettĕм. – Тĕлĕкре те фашистсене **пăшалпа** переттĕм.

***«Чĕлхепе пуплев» темăна вĕреннине аса илмелли ĕçсем***

**279. Текста вуласа тухăр, тытăмне ăнлантарăр, пуплев кĕвви енчен хăш ушкăна кĕнине, мĕнлерех стильпе палăрса тăнине калăр. Хайлав калав-и, очерк-и, репортаж-и? Хайлав темиçе жанр паллине пĕрлештермест-и? Мĕншĕн? Чарăну паллисене мĕнле-мĕнле принципа пăхăнса лартнă?**

**Чăваш ятне çĕртмен**

Паянхи хула çыннисенчен чылайăшĕ, уйрăмах çамрăксем, Семён Матвеевич Ислюков кам пулнине, ăна мĕншĕн пысăка хурса хакланине пĕлсех каймаççĕ.

С.М. Ислюкова Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ. Унта çырнă тăрăх, Семён Матвеевич пирĕн республикăна ертсе пынă май халăх хуçалăхĕн мĕн пур отрасельне, наукине, искусствине, культурине малалла хăвăрт аталантарма çав тери пысăк вăй хунă.

Семён Матвеевич Тутар Республикин Теччĕ районĕнче нумай ачаллă çемьере çуралнă. Пурнăç тути-масине çамрăкранах тутанса пăхнă. Шкултан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан Семён Матвеевича тӳрех шкула математика вĕрентме хăвараççĕ.

Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн 1941 çулта С.М. Ислюкова ĕçлеме пирĕн республикăна яраççĕ. Вăрçă пуçланать. Семён Матвеевич Шупашкарпа республикăна пурăнма тата малалла аталанма май пултăр тесе пĕтĕм вăйне хурать, çынсене пуласлăха шанса хавхалантарма май тупать.

Семён Матвеевич пысăк ăслă политик, стратег тата тактик, талантлă экономист, юрист, учĕнăй пулнă. Çав вăхăтрах тĕлĕнмелле уçă кăмăллă, сăпайлă çынччĕ. Унпа юнашар, пĕрле ĕçлеме тӳр килнĕшĕн эпĕ хам шăпама тав тăватăп.

Пĕр самант аса килет.

Пĕррехинче ирхине Семён Матвеевич телефонпа шăнкăравласа çапала ыйтрĕ:

– Иван Яковлевич çуралса ӳснĕ тăрăха кайса курас килмест-и? Икĕ куна каймалла. Килĕшетĕн-и?– Хаваспах, Семён Матвеевич, – терĕм хĕпĕртесе.

Тепĕр кунне Елчĕк урлă Тутар Республикин Теччĕ районне тухса кайрăмăр. Çул çинче вăхăт чылай иртрĕ. Семён Матвеевич хăй тахçан лайăх пĕлнĕ вырăнсене, тăван кĕтесне тимлĕн сăнаса пырать. Хăйне айăплать: чылай хушă пулса курман кунта. Патшалăх ĕçĕ çавăн пек вĕт – хăвăн валли вăхăт яланах çитмест.

– Çакăнта пĕчĕк ял пурччĕ, халĕ – çук. Кунта çырма пулнă, халĕ – тӳрем вырăн, – тет Семён Матвеевич.

Теччĕ урамĕсемпе иртрĕмĕр. Района ертсе пыракансем хулапа паллаштарчĕç, Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе çыхăннă вырăнсене кăтартса çӳрерĕç.

Пуринпе те кăсăкланчĕ Семён Матвеевич. Ыйту хыççăн ыйту пачĕ. Хуравĕ те нумай пулчĕ. Иртни куç умĕнчен каймарĕ пулас.

– Атя çула май Ивановка ялне кайса килетпĕр, – терĕ ман аслă çыннăм Кăнна Кушкине кайма пуçтарăнсан.

Ивановка. Пысăках мар ял. Кунта шкулта ĕçленĕ чухне Семён Матвеевич çын патĕнче пурăннă. Çуртне тӳрех тупрăмăр. Кил хуçи арăмĕ вилнĕ иккен. Ачисем пурăнаççĕ. Палларĕç.

– Сывлăх сунатпăр, Семён Матвеевич. Килĕр. Иртĕр, – терĕç.

Унччен те пулмарĕ – ял çыннисем пуçтарăнма пуçларĕç. Пĕри те тепри пырать. Хăна хăшне-пĕрне палласа илет. Çынсен

сăнĕ улшăннă вĕт. Семён Матвеевич вĕрентнĕ икĕ çын тупăнчĕ. Вăрахчен пычĕ калаçу.

Кăнна Кушки – чăвашсене çутта кăларнă Иван Яковлевич Яковлев çуралнă ял. Илемлĕ вырăнта. Çуртсем йăлтах ватă йăмрасемпе хупланнă. Вăрман тейĕн. Иван Яковлевич çуралнă çурт вырăнĕ пур. Пушă. Ашкăрса ӳсекен мăянпа вĕлтĕрене çулса тăкнă. – Çук, капла юрамасть, – терĕ Семён Матвеевич пăшăрханса. – Кунта палăк е Яковлевпа çыхăнни мĕн те пулин пулмалла...

Шкул умне халăх пухăнчĕ. Çуллахи каникул вăхăчĕ пулин те шкулта ачасем те, учительсем те пур. Вĕсем çăкăр-тăварпа, юрă-ташăпа кĕтсе илчĕç. Хăна пирки мухтаса та мухтанса калаçрĕç. Семён Матвеевич тӳрех kаларĕ:

– Ахалех ырлатăр. Тӳрех калăр: «Тăван вырăна сайра хутра килсе çӳретĕр», – тейĕр. Авă яла кĕме тӳрĕ çул халĕ те çук. Пушă кил вырăнĕсене армути пусса илнĕ.

Семён Матвеевич чăвашла калаçрĕ. Çак ялтан тухнă Иоаким Максимов-Кошкинские, Александр Кăлкана, Тихăн Петĕрккине аса илчĕ, вĕсен наци литературине хывнă пайти пысăк пулнине палăртрĕ. Паллă çынсем ячĕпе асăну хăмисем тутарма тата вĕсене уçмашкăн пулăшма шантарчĕ. Асăну хăмисене çав çулах кĕркунне уçрĕç.

Кăнна Кушкинчен тухас умĕн Семён Матвеевич ыйтуллăн пăхса çапла kаларĕ:

– Çакăнтан çывăхрах ман аттепе аннен вил тăприсем. Çитсе курар-ха.

Иван Козлов хуçалăхĕ витĕр кайса пĕр çырма-çатраллă вырăна пырса тухрăмăр. Çакăнта хăй вăхăтĕнче Ислюковсен хутор хуçалăхĕ вырнаçнă. Кунта вун улттăри Семён Ислюков проекчĕпе

пӗве тунӑ пулнӑ. Ҫакӑнтан иртсен тарӑн ҫырма курӑнать. Унта анатӑн та кӑштах хысак вырӑна лекетӗн. Икӗ мрамор плита. Вӗсен айӗнче Семён Матвеевичӑн ашшӗпе амӑшӗ выртаҫҫӗ.

Чӗрӗ чечек хунӑ хыҫҫӑн эп кӑшт айккинерех кайса тӑтӑм. Семён Матвеевич пӗр хушӑ ним чӗнмесӗр шӑп тӑчӗ, ҫӑра куҫ харшине тӳрлетнӗ пек туса, шывланннӑ куҫне шӑлса илчӗ.

Теччӗре сунарҫӑсен ҫуртӗнче ҫӗр каҫнӑ чухне ҫитмӗл улттӑри Семён Матвеевич чунне уҫса чылайччен калаҫрӗ. Темӗнле йывӑр лару-тӑрура та пулса курма тивнӗ ӑна, анчах хӑй чысне, ятне-сумне яман. Чыса ҫамрӑклах упрамаллине питӗ лайӑх пӗлнӗ. Чӑваш ятне ҫӗртмен! *(Демьян Семенов.)*

* ***Ҫуллахи каникул вӑхӑчӗ пулин те шкулта ачасем те, учительсем те пур*** **предложени пӑхӑнуллӑ хутлӑ пулнине ӗнентерӗр.**

* ***Семён Матвеевич пысӑк ӑслӑ политик, стратег тата тактик, талантлӑ экономист, юрист, учӗнӑй пулнӑ. Ҫав вӑхӑтрах тӗлӗнмелле уҫӑ кӑмӑллӑ, сӑпайлӑ ҫынччӗ. Унпа юнашар, пӗрле ӗҫлеме тӳр килнӗшӗн эпӗ хам шӑпама тав тӑватӑп*** **предложенисен сказуемӑйӗсем мӗншӗн пӗр вӑхӑта пӗлтермеҫҫӗ – ӗнентерӗр.**

* **Юлашкинчен виҫҫӗмӗш абзацра хӑш предложенисем сыпӑнчӑклӑ текст тӑваҫҫӗ? Сыпӑнчӑклӑх мӗн енчен палӑрать? Сыпӑнчӑклӑ текст мӗнле предложенипе татӑлать? Мӗншӗн?**

***10–11-мӗш классенче вӗреннине аса илмелли ыйтусемпе ӗҫсем***

**279. Тест ыйтӑвӗсен хуравӗсене ушкӑнпа шыраса тупӑр. Шухӑшӑра ӗнентерӗр.**

**1-мӗш пай**

А1. ***Анчăк*** сăмахри 2-мĕш сасă, И.А.Андреев профессор ăнлантарнă тăрăх, мĕнле сасă пулмалла?

1) шавлă çемçе хупă сасă

2) шавлă хытă хупă сасă

3) ялан янăравлă хытă хупă сасă

4) ялан янăравлă çемçе хупă сасă

А2. ***Магнитофон*** сăмаха чăвашсем хăш чĕлхерен тата мĕнле майпа йышăннă?

1) тутар чĕлхинчен çыру урлă

2) мари чĕлхинчен калаçу урлă

3) вырăс чĕлхинчен калаçу урлă

4) вырăс чĕлхинчен çыру урлă

А3. Япала ячĕ çумне аффикс хушăннипе пулнă иккĕмĕшле сăмах хăшĕ?

1) йĕпен

2) йышăн

3) сивĕн

4) лӳчĕркен

А4. Хăй пĕлтерĕшлĕ тепĕр пуплев пайĕ вырăнне усă курнă сăмах хăш предложенире пур?

1) Уй урлă каçсан ут та ĕшенет.

2) Уру ăçталла утнине куçу курса тăтăр.

3) Çырни çырлан курăнать.

4) Хăй йăвине юратман кайăка тăмана тытнă.

А5. Паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

Çулăма улăм ***ăшĕнче*** пытарса усраймăн.

1) япала ячĕ

2) хыç сăмах

3) наречи

4) паллă ячĕ

А6. Йăнăш тупăр.

1) Куккук хыр лăссисене пĕтерекен хуртсене çиет.

2) Вĕлтрен çулçине чечеке ларсан пухăр.

3) Улине инке хăйне уйăрса панă пушмак пăруна Куçмана пăхма хушса хăварчĕ.

4) Полина мăкланса пĕтнĕ каска çине пырса ларчĕ.

А7. Сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне хăй пĕлтерĕшлĕ миçе сăмах кĕрет?

çыран хĕррипе ашкăрса ӳсекен хăва çулçисем

1) 1

2) 2

3) 3

4) 4

А8. Шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

Алăкран кĕрсен ачасем пĕччен тĕмсĕлсе ларакан ват çынна ăшшăн саламларĕç.

1) шухăш тĕшши вырăнне интонаци уçăмлатать

2) пĕччен тĕмсĕлсе ларакан ват çынна

3) ват çынна

4) ăшшăн

А9. Пăхăнуллă предложени тĕппипе мĕнле мелпе çыхăнать?

Станувуй мĕн каласса Мошков кĕтсе илеймерĕ.

1) глаголăн деепричасти аффиксĕпе

2) глаголăн причасти аффиксĕпе

3) падеж аффиксĕпе

4) хăйĕн вырăнĕ-йĕркипе

А10. ***Дегустатор*** сăмахăн юлашки сыпăкĕнче [ă] сасă илтĕнсен те ***о*** сас палли çыратпăр. Мĕншĕн?

1) вырăсларан çырупа йышăннă сăмахсене вырăссем пекех çырма килĕшнĕ пирки

2) тури диалектра **о** сасă пур пирки

3) алфавитра **о** сас палли пур пирки

4) **ă** сасса яланах **о** сас паллипе палăртнă пирки

А11. Запятоя мĕншĕн лартнă?

Колхозран тухса кайнисенчен Павăл пĕрремĕш те, юлашки те пулмарĕ.

1) пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене уйăрма

2) сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсене уйăрма

3) союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен уйăрма

4) çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсене уйăрма

А12. Хăш предложенире йăнăш çук?

1) Ан йĕр инкем, ан йĕрсем, тутăрупа шăл куçна.

2) Ахăртнех, хĕрарăмсем упăшкисемпе ачисем валли апат хатĕрлеççĕ пулмалла.

3) Паллă ĕнтĕ хуçалăхри ăнăçлăх чи малтан кадрсенчен килет.

4) Паллах ял çынни хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче килте ларас çук.

**Предложенисене вуласа тухăр та А13 – А16 ĕççене тăвăр.**

А. Вĕсем ыйхăран вăраннă ача тăван амăшне пăхса кулнă пекех туйăнаççĕ.

Ă. Ирхи вăрманта куккук авăтни ян каять, терлĕ кайăкăн илемлĕ юрри таçта çитиех янăрать.

Б. Тин кăна тухса сарăлнă хĕвел çуттинче уçланкăри чечексем тухăçалла пăхса йăлкăшаççĕ.

В. Чечексем çинче сывлăм тумламĕ ахахăн-мерченĕн йăлтăртататъ.

А13. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) АБВĂ

2) ĂАБВ

3) ВĂАБ

4) БАВĂ

А14. Хăш предложени тĕсне йăнăш кăтартнă?

1) А предложени пăхăнуллă хутлă предложени

2) Ă предложени çыхăну паллисĕр хутлă предложени

3) Б предложени пăхăнуллă хутлă предложени

4) В предложени хутсăр предложени

А15. Хăш тишкерӳ йăнăш?

1) ***амăшне*** – камăнлăх форминчи япала ячĕ

2) ***тухăçалла*** – япала ячĕ

3) ***çинче*** (**В** предложенире) – хыç сăмах

4) ***çуттинче*** – япала ячĕ пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕ

A16. ***Уçланкăри*** сăмахăн 3-мĕш сыпăкĕ хăш ушкăна кĕрет?

1) витĕнтермен хупă сыпăк

2) витĕнтермен уçă сыпăк

3) витĕнтернĕ уçă сыпăк

4) витĕнтернĕ хупă сыпăк

A17. ***Инверсиллĕ*** сăмахра пусăм (ударени) хăш сыпăк çине ӳкет?

1) 1

2) 2

3) 3

4) 4

A18. Пăхăнакан компоненчĕ синонимлă сăмах майлашăвĕсем хăш мăшăрта тĕл пулаççĕ?

1) уçă сывлăш, кĕмĕл сывлăм

2) мăнтăр кĕр, самăр йытă

3) çӳле кармаш, хăвăрт ӳс

4) çăм арла, кĕпе çĕле

A19. Пĕр тымартан, сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан икшер аффиксран тăракан сăмах(сем) ăçта?

1) Тавралăх сасартăк вăхăтлăха шăпланать.

2) Шуртан иртсе чăтлăхалла кĕтĕмĕр.

3) Иван Петрович ал çырăвне редакцие çĕнĕ тӳрлетӳсемпе кĕртсе пачĕ.

4) Укçа тенине тăм чӳлмекре лартса ӳстерейĕмĕн.

A20. Паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

Пӳлĕмĕ пысăках мар, виçĕ ***чӳречеллĕ*** кăна.

1) паллă ячĕ

2) наречи

3) хыç сăмах

4) япала ячĕ

A21. Паллă тунă сăмах хăш пуплев пайĕ?

Çырма леш енне каçрăм çеç кĕтмен ***çĕртен*** мулкач çурипе тĕл пултăм.

1) наречи

2) япала ячĕ

3) хыç сăмах

4) паллă ячĕ

A22. Йăнăш хăш предложенире пур?

1) Ват лашана шанса кӳлеççĕ.

2) Пӳртсемпе хуралтăсем тăррине тимĕр витнĕ.

3) Алă тунине пӳ çĕклет.

4) Мĕтринчен юлас мар тесе ун хыççăн çамрăксем пĕр утăм кая юлмасăр утрĕç.

A23. Схема хăш сăмах майлашăвĕн тытăмĕпе тӳр килет?

1 2 3 4 5 6



1) çӳлтен палт татăлса анакан кушак çури

2602) Энĕш шывĕнче пăсланакан каçхи шĕвĕ тĕтре

3) вăрттăн вунă сар чĕп кăларнă чăх

4) кунсерен илемленсе пыракан тăван хуламăр Шупашкар

А24. Схемăна хăш предложение пăхса ӳкернĕ?




1) Пĕр çавра сăмахласан Ануккан уçăлма тухас килчĕ.

2) Кинĕ кун каçиччен пӳрт урайне шăлса кайман.

3) Арăмне тискеррĕн хĕненĕшĕн пилĕк çул пачĕç Арсентие.

4) Кăкăрти пĕрченнĕ сывлăш Ануккана тĕрĕссине калама чăрмантарчĕ.

А25. Схемăна хăш предложени тăрăх ӳкернĕ?



1) Хам ватăлнине эпĕ ăшри кăмăл-туйăм тĕксĕмленсе пынинчен кăна мар, сăн-пит тĕссĕрленнинчен те сисме тытăнтăм.

2) Çан-çурăма чир-чĕр ан çулăхтăр тесен çынсен Çинçе çитиччен çичĕ хут шыва кĕрсе тухма ĕлкĕрмелле.

3) Акаçăн чунĕ тухсанах Ыраш Ванеркки патне çитсе килтĕм – вăл та таçта тухса кайнă.

4) Ытах та Андрей тепре авланма вăхăт çитнĕ чухне ман пата пырас пулсассăн – эпĕ ăна каçару ыйтмасăр та каçарăттăм.

А26. Йăнăш хăш предложенире пур?

1) Сĕткен кĕмен çăкана касма ан васка.

2) Суккăр çын сукмакĕ такăр мар.

3) Çынсене сивĕ яшка мар сивĕтет, сивĕ сăмах сивĕтет.

4) Çулман курăк утă мар.

А27. Йăнăш ăçта пур?

1) вут сыппи, çурма-финал, тăр палтай, тĕтĕм-сĕрĕм

2) асар-писер, вăр çавракa, вăй çемми, хурт-кăпшанкă

3) йыт пулли, майра арăм, тискер кайăк, кутăн-пуçăн

4) çул пӳлен, тĕш тырă, тимĕр-бетон, тип шар

А28. Запятоя мĕн тĕллевпе лартнă?

Ахаль те çивĕчскер, Елен халь пушшех вăрт-варт çаврăнкаларĕ.

1) кӳртĕм сăмахсене уйрăмлатма

2) ***ахаль те çивĕчскер*** сăмахсем нимле сăмахпа та çыхăнманнине кăтартма

3) ***ахаль те çивĕчскер*** сăмахсем ***Елен халь пушшех*** сăмахсен туртăмĕнче тăнине кăтартма

4) ***ахаль те çивĕчскер*** сăмахсем хыçалти мĕн пур сăмахпа пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартма

**Текста вуласа тухăр та А29 – А32, В1 – В8 ĕçсене тăвăр.**

(1)Пирĕн ялтан тухсан тĕрлĕ еннелле тĕрлĕ сумак тăсăла-тăсăла каять. (2)Çак сукмаксенчен пурте

хисеплекен, йӗрӗ çулталăкӗпех çухалман сукмака куç тӳрех курать. (3)Ку сукмак, çуркунне, хӗвел хӗртме пуçланă-пуçламан хӗрлӗрех хăмăр курпунне кăтартать. (4)Çулла вара хăй çине ик енчен те усăннă салтак тӳмисемпе савăнать. (5)Кӗркунне, çумăрсем вăраха кайнипе хăйӗн пылчăкне ată-пушмак çумне çыпăçтарать. (6)Хӗлле те юр айне пулса çухалмасть. (7)Ку сукмака Полинăн çухалман сукмакӗ теççӗ.

(8)Пирӗн ял пӗр урамлă çеç. (9)Çакăнта, ял хӗрринче, Поля çурчӗ ларать. (10)Вăл юсаса çӗнетнӗ хыççăн пысăк чӳречисемпе хӗвеле хирӗç пăхса ларакан пулчӗ. (11)Çак чӳречесем пăхнă еннелле утсан пысăках мар хурăнлăха çитсе тухатăн. (12)Кунта – выльăх-чӗрлӗх ферми. (13)Ун патнелле Поля сукмакӗ тӳрех тăсăлать.

(14)Сукмакӗ, малтан, пӗчӗк кукăр-макăр туса урама çаврăнса тухать. (15)Кунта, ахăртнех, Якур скотника васкама чӗнет. (16)Айлăмран каçсан çырма хӗррине çитет те кăшт чарăнса тăрать. (17)Çак вăхăтра, варри çӗрӗшнӗ ватă хурама çулçисемпе шӗпӗл-шӗпӗл туса çилпе калаçать. (18)Эпӗ çакна пӗлетӗп: вăл, ватă хурама, вун сакăр çулхи Поля хăйӗн савнă тусӗпе Петӗрпе мӗн клаçнине итлесе ларатчӗ. (19)Нумай çул иртрӗ унтанпа. (20)Çак çулсенче Поля тăнлавӗнче шурă çӳç пӗрчисем палăра пуçларӗç, хурама варри те çӗрсе йышрӗ. (21)Полинăпа хурама хушшинчи калаçу та улшăнчӗ.

(22)– Çаплах упăшкуна кӗтетӗн-и?

(23) – Кӗтетӗп!

(24) – Кӗт, кӗт. (25)Вилнӗ çырăва ан ӗнен.

(26)Сукмак çырманалла анать. (27) Хӗрарăм куçӗ шывланать. (28)Çырма тӗпӗнче, шурă, ешӗл чулсем хушшипе, шăнкăртатса шыв юхать.

(29) – Поля аппа, питне çу-ха, – тет шыв юхăмӗ. – (30)Çăмăлрах пулӗ.

(31)Сукмак ак çырана хăпарчӗ. (32)Кунта, сукмак хӗррипе, тӳп-тӳрӗ ретӗн хурăнсем ӳсеççӗ. (33)Вăтăр хурăн. (34)Вӗсене Поля аппа лартнă. (35)Кашни çул пӗрре.

(33)Вăтăр хурăн. (34)Вӗсене Поля аппа лартнă. (35)Кашни çул пӗрре.

(36)Поля аппа вилчӗ. (37)Çакăн хыççăн эпӗ Поля аппа сукмакне çум пусса илесрен шикленеттӗм. (38)Эпӗ йăнăшнă иккен. (39)Такам, пӗлместӗп, Поля аппан хурăнӗсен йӗрӗпе кашни çулах çӗнӗ хурăн лартать. (*Г.Пласкин çырни тăрăх.*)

А29. Текст содержанине кăтартман предложени хăшӗ?

1) Вилнӗ çынна чӗртеймӗн.

2) Ӳт çинчи суран тӳрленет – чун суранӗ тӳрленмест.

3) Çынна ӗç типӗтмест – хуйхă типӗтет.

4) Ача-пăча пӳрт тултарать.

А30. Текста мӗнле стильпе çырнă?

1) публицистика стилӗпе

2) наука стилӗпе

3) илемлӗх стилӗпе

4) ĕçлĕ стильпе

А31. Калаçупа çыру манерĕ енчен текста, тĕпрен илсен, мĕнле мелпе çырнă?
1) ăслав мелĕпе
2) сăнлавпа калав мелĕпе
3) калав мелĕпе
4) ăславпа калав мелĕпе

А32. 14-17-мĕш предложенисенче мĕнле троп палăрать?
1) сăпатлантару
2) танлаштару
3) ирони
4) эпитет

## 2-мĕш пай

В1. Малтанхи 4 педложенире аффикс хушăннипе пулнă сăмаха(сене) тупăр та текстра мĕнле формăра, çавăн пек çырса илĕр.

В2. 26−38-мĕш предложенисенче тĕл пулакан татăксене (темиçе хут тĕл пулаканнисене пĕр хут çеç кăтартса) черетпе çырса илĕр.

В3. 37-мĕш предложенири чи ансăр ят сăмах майлашăв(ĕсе)не пуçламăш формăна лартса çырса илĕр.

В4. 1−23 предложенисенчен тăракан сыпăкри тĕп членсăр предложенисем ăçта-ăçта иккенне текстри номерсемпе кăтартăр.

В5. 1−21-мĕш предложенисенче пăхăнуллă предложенисене тупăр та вĕсем ăçта-ĕçта иккенне текстра панă номерсемпе çырса кăтартрăр.

В6. Сăмахсен çыхăнăвне уçăмлатма лартнă чарăну паллисем 1−21-мĕш предложенисенчен хăшĕнче-хăшĕнче тĕл пулаççĕ?

В7. 1−13-мĕш предложенисене вуласа тухăр. Кăтарту местоименийĕ ăнлантаракан япала ятне тепĕр хут каланипе (повторпа) çыхăнакан предложенисен номерĕсене çырăр.

В8. Текстăн пĕтмĕш пайĕ хăш предложенипе пуçланать?

**Хуравсем**

| | |
|---|---|
| А1 – 3 | А21 – 3 |
| А2 – 4 | А22 – 4 |
| А3 – 2 | А23 – 2 |
| А4 – 3 | А24 – 4 |
| А5 – 1 | А25 – 3 |
| А6 – 3 | А26 – 3 |
| А7 – 1 | А27 – 1 |
| А8 – 4 | А28 – 4 |
| А9 – 3 | А29 – 4 |
| А10 – 1 | А30 – 3 |
| А11 – 3 | А31 – 2 |
| А12 – 2 | А32 – 1 |
| А13 – 4 | В1 – хисеплекен |
| А14 – 3 | В2 – -ха, ак, иккен |
| А15 – 3 | В3 – Поля аппа |
| А16 – 3 | В4 – 7, 11, 12, 22, 23 |
| А17 – 2 | В5 – 2, 3, 5, 11, 17, 18 |
| А18 – 2 | В6 – 3, 5, 9, 14, 17, 18 |
| А19 – 3 | В7 – 2, 3, 7, 11 |
| А20 – 4 | В8 – 36 |

**280. Умĕнхи хăнăхтарура панă текст тăрăх ăслав мелĕпе сочинени çырăр.**

Ăнлантарăр: текстра сăмах мĕн çинчен пырать, автор позицийĕ мĕнле?

Эсир автор шухăшĕпе килĕшетĕр-и? Хăвăр шухăшăра сахалтан та 3 аргументпа ĕнентерĕр.

Текстра чи кăтартуллă сăнарлăх мелĕсене тупăр та вĕсен илемлĕх уйрăмлăхĕсене уçса парăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

**281. Тест ыйтăвĕсен хуравĕсене тупăр. Шухăшăра ĕнентерĕр.**

## 1-мĕш пай

А1. ***Шăркалчă*** сăмахри 6-мĕш сасă, И.А.Андреев профессор ăнлантарнă тăрăх, мĕнле сасă пулмалла?

1) ялан янăравлă хытă хупă сасă

2) ялан янăравлă çемçе уçă сасă

3) шавлă хытă хупă сасă

4) шавлă çемçе хупă сасă

А2. ***Канцеляри*** сăмаха чăвашсем хăш чĕлхерен тата мĕнле майпа йышăннă?

1) вырăс чĕлхинчен калаçу урлă

2) удмурт чĕлхинчен çыру урлă

3) вырăс чĕлхинчен çыру урлă

4) тутар чĕлхинчен калаçу урлă

А3. Япала ячĕ çумне аффикс хушăннипе пулнă иккĕмĕшле сăмах хăшĕ?

1) ăшăхлат

2) илемлĕх

3) чĕвĕлти

4) шуçлак

А4. Хăй пĕлтерĕшлĕ тепĕр пуплев пайĕ вырăнне усă курнă сăмах хăш предложенире пур?

1) Çанă тавăрмасăр çарăк та çитĕнмест.

2) Тус вăл ĕмĕрлĕх пултăр.

3) Тытман кайăкăн тĕкне ан тат.

4) Хаярăн ури саккăр теççĕ.

А5. Паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

Лашана карта ***çумнех*** илсе пытăм.

1) наречи

2) хыç сăмах

3) япала ячĕ

4) паллă ячĕ

А6. Йăнăш тупăр.

1) Çумăр хыççăн хĕвел каллех ăшшăн кулса ярать.

2) Хими им-çамĕпе никама юрăхсăр кăпшанкăна хăвăртах пĕтерме пулать.

3) Шыв пăрăçĕн тути питĕ йӳçĕ.

4) Ял çывăхĕнче вăрманта эпĕ чылайччен çӳрерĕм.

А7. Сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне хăй пĕлтерĕшлĕ миçе сăмах кĕрет?

алфавит йĕркипе çумăн-çумăн тăратса тухнă кĕнекесем

1) 1

2) 2

3) 3

4) 4

А8. Шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

Кĕшĕл-кĕшĕл симĕс каю, çăра сухал пек, тапса хăпарать.

1) симĕс каю

2) çăра сухал пек

3) тапса

4) шухăш тĕшши вырăнне интонации уçăмлатать

А9. Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе мĕнле мелпе çыхăнать?

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланасса ачасемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ те кĕтрĕ.

1) глаголăн причасти аффиксĕпе

2) падеж аффиксĕпе

3) глаголăн деепричасти аффиксĕпе

4) хăйĕн вырăнĕ-йĕркипе

А10. ***Буйвол*** сăмахăн юлашки сыпăкĕнче [ă] сасă илтĕнсен те ***о*** сас палли çыратпăр. Мĕншĕн?

1) **ă** сасса яланах **о** сас паллипе палăртнă пирки

2) тури диалектра ***о*** сасă пур пирки

3) вырăсларан çырупа йышăннă сăмахсене вырăссем пекех çырма килĕшнĕ пирки

4) алфавитра ***о*** сас палли пур пирки

А11. Запятоя мĕншĕн лартнă?

Вăрманьялсем çĕнĕ çынна шанмасăр итлекелесе тăчĕç пулин те, кучченеçне тутанса пăхма килĕшрĕç.

1) сыпăнуллă союзпа çыхăнман пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен уйăрма

2) çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсене уйăрма

3) пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене уйăрма

4) сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсене уйăрма

А12. Хăш предложенире йăнăш çук?

1) Эпĕ тупата хам пек салтака суймăп ĕнтĕ.

2) Укол тунă хыççăн пулас аманнă çын вăрăммăн сывласа ячĕ.

3) Пухăва пурте пухăннă тет.

4) Тем тесен те çав вĕтлĕхре кашкăр пур.

**Предложенисене вуласа тухăр та А13 – А16 ĕçсене тăвăр.**

А. Хырла улăхне тухрăм та çӳллех мар тĕмсем хушшине канма лартăм.

Ă. Вăрăм хӳреллĕ чее тилĕ мана асăрхаман пулас.

Б. Сасартăк мал енче, Хырла шывĕ еннерех, тилĕ курах кайрăм.

В. Пĕррехинче вăрмана эпĕ пĕчченех кайрăм.

А13. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) АĂВБ

2) ВĂБА

3) БВĂА

4) ВАБĂ

А14. Хăш предложени тĕсне йăнăш кăтартнă?

1) А предложени хутсăр предложени

2) Ă предложени хутсăр предложени

3) Б предложени çыхăну паллисĕр хутлă предложени

4) В предложени хутсăр предложени

А15. Хăш тишкерӳ тĕрĕс мар?

1) ***хушшине*** (**А** предложенире) – япала ячĕ

2) ***хӳреллĕ*** (Ă предложенире) – япала ячĕ

3) ***асăрхаман*** (Ă предложенире) – глаголăн инфинитив форми

4) ***сасартăк*** (В предложенире) – наречи

А16. ***Пĕррехинче*** сăмахăн юлашки сыпăкĕ хăш ушкăна кĕрет?

1) витĕнтернĕ хупă сыпăк

2) витĕнтермен хупă сыпăк

3) витĕнтернĕ уçă сыпăк

4) витĕнтермен уçă сыпăк

А17. ***Инвестицишĕн*** сăмахра пусăм (ударени) хăш сыпăк çине ӳкет?

1) 1

2) 2

3) 3

4) 4

А18. Пăхăнакан компоненчĕ синонимлă сăмах майлашăвĕсем хăш мăшăрта тĕл пулаççĕ?

1) тăван кил, хăнана кил

2) кĕске кун, уçă сывлăш

3) ырхан лаша, имшер ача

4) уяр çанталăк, таса тӳпе

А19. Пĕр тымартан, сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан икшер аффиксран тăракан сăмах(сем) ăçта?

1) Манăн сăвăçпа питĕ паллашас килет.

2) Эсĕ манпа ахаль çеç пуплетĕн.

3) Иван малтанлăха оператор помощникĕнче ĕçлерĕ.

4) Ачасен тавлашăвĕн сăлтавне тупма йывăр пулмарĕ.

А20. Паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

Çамрăк сад пахчинчен пӳлĕме тăри ***сассиллĕ*** уçă сывлăш вăркăнса кĕчĕ.

1) хыç сăмах

2) наречи

3) япала ячĕ

4) паллă ячĕ

А21. Паллă тунă сăмах хăш пуплев пайĕ?

Тумтир тăхăннă чух кĕтмен ***çĕртен*** пĕр йĕкĕт калаçни хăлхана пырса кĕчĕ.

1) наречи

2) паллă ячĕ

3) япала ячĕ

4) хыç сăмах

А22. Йăнăш хăш предложенире пур?

1) Хăрах туртана мăшăр тевĕш карма кирлĕ мар.

2) Каснă çăкăр чĕллине тепĕр хут çыпăçтарас çук.

3) Ватă çерçине хывăхпа улталаймăн

4) Ăста сунарçă ухă йĕппине сая ярас çук.

А23. Схема хăш сăмах майлашăвĕн тытăмĕпе тӳр килет?




1) аманнă чĕппе чĕререн хĕрхенекен пĕчĕк Петĕр

2) кунсерен хăюланса пыракан шур чăх чĕппи

3) шывваррипе юхакан пысăк пăр лаптăкĕ

4) пирĕн отряд умĕнче чупакан Хураçка йытă

А24. Схемăна хăш предложение пăхса ӳкернĕ?




1) Сылтăм кĕтесри кравате çитмĕлелле çитекен хĕрарăм йышăннă.

2) Çирахви аппан сăмахĕсем мана та шутсăр хурлантарса ячĕç.
3) Тин туса лартнă çĕнĕ пӳрте аça çапрĕ.
4) Кунĕн-çĕрĕн шăпланмасăр çихĕрекен музыка хăлхана çĕртекен пулчĕ.

А25. Схемăна хăш предложени тăрăх ӳкернĕ?



1) Мĕтри вакуна пырса кайнă хыççăн Павăл çывăрма выртрĕ, анчах ыйхă килменнипе нумайччен çаврăнкаласа выртрĕ.

2) Сывлăм типичен курăка çулса пĕтермелле, атту ыран вăхăт пулмасть: рейса каймалла.

3) Калăпсăр чĕлхе персе янă тăрлавсăр сăмаха каçару ыйтса тӳрлетме пулать, анчах пуçра тĕвĕленнĕ усал шухăша супăнь хăмпине сӳнтернĕ евĕр сӳнтерсе лартаймастăн-çке.

4) Семенов аллинчи сехетне пăхса илчĕ: тăххăр иртни вунă минут.

А26. Йăнăш хăш предложенире пур?

1) Телей чечек мар – çаран çинче çитĕнмест.

2) Ыр туни харама каяс çук.

3) Тĕрĕсне калакан тăванне юрайман.

4) Хиртине мар мухта, кĕлетрине мухта.

А27. Йăнăш ăçта пур?

1) ал лаппи, ăш çунтармăш, вар-хырăм, пуç ватмăш

2) ирпе ирех, йĕкĕр ывăç, çил армань, тайм-аут

3) вăрăм туна, ветеран-салтак, ку тăруçăн, тăм писмен

4) куçран куça, майра йĕппи, сĕм ĕлĕк, çурма тăлăх

А28. Запятоя мĕн тĕллевпе лартнă?

Ирхине, тухăçра çĕкленекен хĕвелтен тавралăха ачаш çутă саланать.

1) ***ирхине*** сăмах хыçалти пĕтĕм сăмахпа çыхăннине кăтартма

2) ***Ирхине*** тата ***тухăçра*** пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннине кăтартма

3) ***ирхине*** сăмах нимле сăмахсемпе те çыхăнманнине кăтартма

4) ***ирхине*** сăмах ***тухăçра çĕкленекен*** сăмахсен туртăмĕнче тăнине кăтартма

**Текста вуласа тухăр та А29 – А32, В1 – В8 тăвăр.**

(1)Чăвашсен авал уявсем чылай пулнă, анчах чылайăшĕ халь манăçа тухнă ĕнтĕ. (2)Çавнашкал уявсенчен пĕри вăл – Сурхури.

(3)Сурхури уявĕ пирĕн тăрăхра яланах чаплă иртетчĕ. (4)Виçĕ каçа тăсăлатчĕ уяв хаваслăхĕ.

(5)Сурхурине, каçхине, сакăр-тăхăр сехет çитеспе çамрăксем хăйсем палăртнă киле пухăнатчĕç. (6)Кунта ют ял хĕрĕсемпе каччисене те курма пулатчĕ. (7)Малтанхи каç Сурхурине тинтерех пĕрлешнĕ мăшăрсем те пырса ларатчĕç. (8)Вĕсем кĕрекене

пуҫланӑ май Турра сӑх сӑхатчӗҫ те пил сӑмахӗ калатчӗҫ. (9)Ҫамрӑк мӑшӑр тухса пушанакан вырӑнсене каччӑсем кӗрсе ларатчӗҫ. (10)Кусем те сӑра виҫшер курка ӗҫетчӗҫ те, черет курки алӑран алла малалла куҫатчӗ.

(11)Сурхурине, паллах, эпир те, вӗт-шакӑр ача-пӑча, пыраттӑмӑр. (12)Тӗрлӗ ҫӗре ларса тухаттӑмӑр та килтен аннесем парса янӑ мӑйӑрпа хӗвел ҫаврӑнӑшне шӗкӗлчеттӗмӗр.

(13)Пӗр кана ӗҫсе ҫисен юрӑ пуҫланатчӗ. (14)Ҫамрӑксем, тӗпрен илсен, юрату, савни, юрату тӑшманӗ ҫинчен, ҫамрӑк ӗмӗр хӑвӑрт иртни ҫинчен юрлатчӗҫ. (15)Юрӑ хыҫҫӑн ташӑ пуҫланатчӗ. (16)Ташласса пурин те ташламаллаччӗ, мӗн пултарнине кӑтартмаллаччӗ. (17)Эх, мӗнле илемлӗччӗ ташшисем! (18)Халӗ те куҫ умӗнче!

(19)Уяв хавасӗ пӗр килте пӗтет те, пӗтӗм ушкӑн тепӗр ушкӑн пухӑннӑ киле куҫать. (20)Уяв килӗсене пурне те ҫитсе ҫаврӑнмаллаччӗ. (21) Кашни килте пултару ӑмӑртӑвӗ пулса иртет. (22)Акӑ каллех малтанхи кил. (23)Каччӑсем, малтан, хӗрсем кӑмакара тутлӑ пӗҫерннӗ шарккӑва ҫиеҫҫӗ. (24)Шаркку ҫисе сӑра ӗҫеҫҫӗ те каччӑсем тӑхӑнма васкаҫҫӗ: пурин те хӗр ӑсатас пулать-ҫке.

(25)Иккӗмӗш каҫ пӗрремӗш пекех иртет. (26)Виҫҫӗмӗшӗнче вара, тӗпрен илсен, пӗр-пӗринпе варлӑ мӑшӑрсем пуҫтарӑнаҫҫӗ. (27)Ачасен халь уяв килӗ енне пӗр утӑм та тӑвас ҫук.

(28)Ҫӳлтен кӑтартнипе пулас, 1930-мӗш ҫулта халӑх йӑли-йӗркине хирӗҫ кӗрешӳ пуҫланчӗ. (29)Уявҫӑсене расна майпа айӑплама тытӑнчӗҫ. (30)Итлеменсене администраци вӑйӗпе е урӑх мелпе хӗсӗрлеме пикенчӗҫ. (31)Пӑтӑрмах аваӑрне, тӗслӗхрен, манӑн пичче Санькка купӑсҫӑ та, уявсене яланхилле илемлетекенскер, пӗр айӑпсӑрах ҫакланчӗ. (32)Ӑна Атӑл леш еннне вӑрман касма вӑйпах янӑччӗ. (33)Авалтан пынӑ йӑла-йӗркепе пӗрле майӗпен ял илемӗ те, пурнӑҫ техӗмӗ те ҫухалчӗ. (34)Ҫамрӑксем хулана тапса сикрӗҫ. (35)Ял шӑплӑха путрӗ. (36)Ҫынсем пӗр-пӗрне чысласа хисеплеме, хуйхӑ-суйхӑра пулӑшма манчӗҫ. (37)Тӑван-пӗтене паллами пулчӗҫ. (38)Каҫ пулать те, кашни хӑй килӗнче хупӑнса ларать. (39)Кашнин умӗнче телевизор. (40)Телевиденире те савӑнмалли сахал. (41)Кашни программӑрах ҫапӑҫу та ӑнланма ҫук тӗркешӳ. (42)Калаҫаканӗсен пуплевӗ пӑсӑк. (43)Йӑнӑш ҫине йӑнӑш. (44)Культура ҫурчӗсенче йӗркеллӗ канма ҫук.

(45)Ҫын патне ҫынлӑх, чыслӑх, совеҫлӗх туйӑмӗ мӗнле тавӑрӑпӑр? (46)Ӗлӗкхи ырӑ йӑла-йӗркене чӗртсе тӑратмалла мар-и? *(И.Павлов 1992 ҫулта ҫырни тӑрӑх.)*

А29. Авторӑн тӗп шухӑшне хӑш предложени уҫса парать?

1) 1
2) 46
3) 17
4) 42

А30.Текста мӗнле стильпе ҫырнӑ?

1) илемлӗ стильпе
2) наука стилӗпе
3) публицистика стилӗпе
4) ӗҫлӗ стильпе

А31. Калаçупа çыру манерĕ енчен текста мĕнле мелпе çырнă?

1) сăнлавпа калав
2) калав
3) ăслав
4) сăнлавпа ăслав

А32.31-мĕш предложенири ***авăрне*** сăмахра мĕнле троп палăрать?

1) танлаштару
2) иронии
3) эпитет
4) метафора

## 2-мĕш пай

В1. 9-мĕш предложенирен аффикс хушăннипе пулнă сăмаха(сене) текстра мĕнле формăра, çавăн пекех çырса илĕр.

В2. Текстри союзсене (темиçе хут тĕл пулаканнисене пĕр хут çеç кăтартса) йĕркипе çырса илĕр.

В3. 6-мĕш предложенирен чи ансăр ят сăмах майлашăв(ĕсе)не çырса илĕр.

В4. 13 – 27-мĕш предложенисенчен тăракан сыпăкра тĕп членсăр предложенисене тупăр та вĕсем ăçта-ăçта иккенне текстри номерсемпе кăтартăр.

В5. Глаголăн причасти аффиксĕпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тупăр та вĕсем ăçта-ăçта иккенне текстри номерсемпе кăтартăр.

В6. Сăмахсен çыхăнăвне уçăмлатма лартнă чарăну паллисем ăçта-ăçта тĕл пулаççĕ.

В7. 5 – 10 предложенисенчен тăракан сыпăка вуласа тухăр. Умĕнчи предложени(сем)пе местоимени çыхăнтаракан предложенисене кăтартăр.

В8. Текстăн пуçламăш пайне хăш-хăш предложени кĕрет?

**Хуравсем**

| | |
|---|---|
| А1 – 1 | А21 – 4 |
| А2 – 3 | А22 – 3 |
| А3 – 2 | А23 – 1 |
| А4 – 4 | А24 – 2 |
| А5 – 3 | А25 – 3 |
| А6 – 2 | А26 – 4 |
| А7 – 1 | А27 – 3 |
| А8 – 3 | А28 – 1 |
| А9 – 2 | А29 – 2 |
| А10 –3 | А30 – 3 |
| А11 – 1 | А31 – 1 |
| А12 – 3 | А32 – 4 |
| А13 – 4 | В1 – пушанакан |
| А14 – 3 | В2 – анчах, те, е |
| А15 – 3 | В3 – ют ял |
| А16 – 3 | В4 – 16, 20, 22, 24, 27 |
| А17 – 3 | В5 – 5, 9, 12, 19, 23 |
| А18 – 3 | В6 – 5, 11, 23, 31 |
| А19 – 4 | В7 – 6, 8, 10 |
| А20 – 3 | В8 – 1, 2 |

**282. Умĕнхи хăнăхтарура панă текст тăрăх ăслав мелĕпе сочинени çырăр.**

Ăнлантарăр: текстра сăмах мĕн çинчен пырать, автор позицийĕ мĕнле?

Эсир автор шухăшĕпе килĕшетĕр-и? Хăвăр шухăшăра сахалтан та 3 аргументпа ĕнентерĕр.

Текстра чи кăтартуллă сăнарлăх мелĕсене тупăр та вĕсен илемлĕх уйрăмлăхĕсене уçса парăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

**Тупмалли**

**10-МĔШ КЛАСС**

**Чĕлхе çинчен пĕтĕмĕшлĕн калани. Чăваш чĕлхи расна шайра тăракан хатĕрсен системи пулни**............................................................ 3

1. Чĕлхе тата общество.................................................. ........ –

2. Чĕлхе тата культура. Халăхсен хутшăнăвĕ чĕлхере палăрни.................................................................... 4

**Фонетикăпа орфоэпи. Графикăпа орфографи**......................... 15

1. «Фонема» ăнлав. Чăваш чĕлхин фонемисем........................ –

2. «Сыпăк» ăнлав. Сыпăк тĕсĕсем............................................ 22

3. Чăваш пуплевĕн орфоэпийĕ................................................. 23

4. Графика.......................................................................... 24

5. Чăваш орфографийĕн тĕп пайĕсем, вĕсен принципĕсем .............26

*«Фонеткăпа орфоэпи. Графикăпа орфографи» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем* ................................................... 38

**Лексика. Фразеологи лексики. Лексикографи**............................ 41

1. Чăваш чĕлхин лексика тытăмĕ............................... –

2. Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ. Пĕр пĕлтерĕшлĕх, нумай пĕлтерĕшлĕх. Сăмахăн тӳрĕ тата кумлă пĕлтерĕшĕ.................. 43

3. Омонимсем, синонимсем, антонимсем,паронимсем............. 49

4. Чăваш лексикине пулса кайни енчен ушкăнлани................. 56

5. Чăваш лексикине халăх йышĕ усă курни тăрăх ушкăнлани.. ............................................................................................ 63

6. Чăваш лексикине усă курас тăтăшлăха кура ушкăнлани....... 70

7. Фразеологи лексики........................................................... 73
8. Лексикографи ........................................................................ 75
*«Лексика. Фразеологи лексики. Лексикографи» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем* ................................................. 80
**Сăмах тытăмĕ тата сăмах пулăвĕ** ................................................ 83
1. Чăваш сăмахĕсен тытăмĕ .............................................. ........ –
2. Сăмах пулăвĕ ..................................................................... 96
*«Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем* ..................................................................... 112
**Морфологи** ................................................................... ........ 115
1. «Морфологи» ăнлавăн содержанийĕ .......................... –
2. Чăваш сăмахĕсене пуплев пайĕсем тăрăх ушкăнласси........... 121
3. Хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем............................................. 129
4. Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем....................................... 152
*«Морфологи» темăна вĕреннине аса илмелли ĕçсем*.................. 162

## 11-МĔШ КЛАСС

**Синтаксис тата пунктуаци**.................................................... 164
1. Синтаксис- сăмах майлашăвĕпе предложени тытăмне тĕпчекен ăслăлăх......................................................................... –
2. Синтаксис пунктуацие витĕм кӳни.................................... 175
3. Сăмах майлашăвĕ: пĕлтерĕшĕ, тытăмĕ ................................ 177
4. Хутсăр предложени........................................................... 180
4.1. Хутсăр предложенин хутшăнуран килекен тытăмĕ....... –
4.2. Хутсăр предложенин грамматика тытăмĕ................ 187

4.2.1. Предикацилĕх, ăна палăртмалли мелсем................. –
4.2.2. Предложени членĕсем............................................. 188
4.2.2.1. Тĕп членсăр предложенисем........................... 191
4.2.2.2. Пĕр йышши членлă предложенисем.................... 193
*Предложени членĕсем» темăна вĕреннĕ хыççăн аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем*............................................ 194
4.2.3. Тулли мар предложенисем................................ 195
4.2.4. Уйрăмлатнă сăмахсем............................................ 196
4.2.5. Чĕнӳсем.................................................................... 200
4.2.6. Кӳртĕм сăмахлă предложенисем, кӳртĕм предложенисем......................................................
201
4.2.7. Предложенин тĕллевне кура уйăракан ушкăнĕсем......... 207
4.2.8. Пурлă тата çуклă предложенисем........................ 208
*«Сăмах майлашăвĕпе предложени» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем*..................................... 209
5. Хутлă предложени............................................................ ... 212
5.1.Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем......................... 213
5.2.Çыхăну паллиллĕ хутлă предложением...................... 223
5.2.1. Сыпăнуллă хутлă предложенисем.......................... –
5.2.2.Пăхăнуллă хутлă предложенисем............................ 226
5.3. Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем....................... 240
*«Хутлă предложени» темăна вĕреннине аса илмелли ыйтусемпе ĕçсем*............................................................... 246
**Чĕлхепе пуплев**............................................................ 248
1. Чĕлхепе пуплев: пĕрешкеллĕхĕ, уйрăмлăхĕ................. –
2. Чĕлхепе пуплевĕн перекет законĕ............................. 249
3. Текст – пуплев продукчĕ........................................... 253
3.1. Текст тытăмĕ...................................................... –

3.2. Текстӑн пуплев кӗвви ушкӑнӗсем................... 254
3.3. Текстсен предложенисен шухӑш тытӑмӗнчен
килекен ушкӑнӗсем................................................. 259
3.4 Текст стилӗсем......................................................... 260
3.5. Текст тата пуплев культури........................................ 268
*«Чӗлхепе пуплев» темӑна вӗреннине аса илмелли ӗҫсем....* 271
*10—11 классенче вӗреннине аса илмелли ӗҫсем..................* 275